К82.3Ч(=Чув)
Т33
Ч-45294

Иван ТЕНЮШЕВ

# ПĂЛХАР ЧĂВАШ ПАТТĂРĔСЕМ



Национальная библиотека ЧР
4-045294

К 82.39(=чув)
Т 33

Иван ТЕНЮШЕВ

# ТĂХĂР ЧĂВАШ ТĂТĂРĔСЕМ



Истори халапĕсем

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ БЕСПЛАТНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР

Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
2013

УДК 821.512.111
ББК 84 (2Рос=Чув) 6-4
Т 33

**Тенюшев И.Я.**
Т 33 Пӑлхар-чӑваш паттӑрӗсем: истори халапӗсем / И.Я. Тенюшев. — Шупашкар: Чӑваш кӗнеке изд-ви, 2013. — 239 с.
ISBN 978-5-7670-2063-8

«Пӑлхар-чӑваш паттӑрӗсем» кӗнекере ҫыравҫӑ Атӑлҫи Пӑлхара аркатнӑ хыҫҫӑн хастар чӑвашсем халӑхӑн ҫӗнӗ те хӑтлӑ тӗнчине мӗнле йывӑрлӑхсенче никӗсленине ҫутатса парать. Сӑнарланӑ ӗҫ-пуҫ хальхи Чӑваш Республики тӑрӑхӗнче пулса иртет пулсан та мӑнаҫлӑ Атӑлҫи Пӑлхарӑн ахрӑмӗ кашни халапӗнчех тунсӑх кӗвӗллӗн илтӗнсе тӑрать. Чун юратнӑ тӑрӑха чӑваш чӗмӗ кӗртекен паттӑрсен пурнӑҫне сӑнланӑ чух автор сӑмахлӑх еккипе ҫырнӑ сӑвӑ-юрӑпа анлӑн усӑ курать, юмах илӗртӳлӗхне те манмасть. Пуҫа усман, пурнӑҫпа вилӗм вылявӗнче шӑпа яма хӑраман пӑлхар-чӑваш паттӑрӗсене халалланӑ кӗнеке вулакан кӑмӑлне хӑй майлӑ ҫавӑрать.

**УДК 821.512.111**
**ББК 84 (2Рос=Чув) 6-4**

Проверено 21 МАР 2017
И-45294

**ISBN 978-5-7670-2063-8**

© Тенюшев И.Я., 2013
© Чӑваш кӗнеке издательстви, 2013



# Истори урхамахӗ малалла талпӑнать

Ваттисене сума сӑвасси — чӑваш халӑхӗн сӗм авалтан килекен ырӑ йӑли. Эпир ӑна XXI ӗмӗрте пӑрахӑҫа кӑларсан хамӑра хамӑр хисеплеме пӗлмен юрӑхсӑр этемсем пулса тӑрӑпӑр.

Чӑваш тӗнчинче халӑхӑн историлле астӑвӑмӗ пысӑкланса пырать. Ваттисем, яш-кӗрӗм, шкул ачисем тӑван халӑх аваллӑхне, тӑван тавралӑх историне, паллӑ ҫынсен ӗҫ-хӗлне тарӑнрах пӗлесшӗн тӑрӑшаҫҫӗ. Ача сачӗсемпе шкулсенче хамӑрӑн чаплӑ паттӑрсем, чапа тухнӑ пӑхаттирсем ҫинчен каласа параҫҫӗ, вӗрентӳҫӗсем ача-пӑчана паллӑ вырӑнсем тӑрӑх экскурсие илсе ҫӳреҫҫӗ. Аслӑ ӑру ӗҫне асран кӑлармӑпӑр теҫҫӗ педагогсем.

Пурнӑҫ сиккипех малалла каять, ӑна каялла илсе каясшӑн мекӗрленни никама та чыс тумасть. Истори урхамахӗ малалла талпӑнать. Ку урхамах малалла вирхӗннӗ хушӑра тимлӗн каялла ҫаврӑнса пӑхать: паянхи пурнӑҫ, ыранхи малашлӑх авалхипе еплерех ҫыхӑнура?

Истори темисемпе, халӑх хушшинче ҫӳрекен легендӑсемпе халапсене ку кӗнеке авторӗ чылайранпа пуҫтарать ӗнтӗ. Кӗлӗмкасси ялӗ епле пулса кайни ҫинчен ҫырнӑ легендӑна вӑл Йӗпреҫ район хаҫатӗнче 1961 ҫулта пичетленӗччӗ. Ҫавӑн хыҫҫӑн автор истори легендисемпе халапӗсене хамӑр республикӑри хаҫат-журналта пӗрин хыҫҫӑн тепӗрне кун ҫути кӑтартрӗ. Историк пулнӑ май вӗсене кӑсӑклансах вуларӑм.

Ку произведенисем пурте тенӗ пекех авалхи пурнӑҫпа, халӑх пурнӑҫӗнчи манӑҫа тухнӑ пулӑмсемпе ҫыхӑннӑ. Чӑнлӑхпа тӗрӗслӗхе вара ун чухнехи шур сухалсем — асаттесемпе асаннесем, аттесемпе аннесем, тетесемпе аппасем — еплерех ӑнкарнӑ пек кӑтартнӑ. Тӗпрен илсен, кӗнекери легендӑсемпе хайлавсем ӗлӗкхи пурнӑҫа тӗрӗс кӑтартакан ӳкерчӗксемпе пуян, историн нумай пулӑмӗсемпе

факчĕсене мĕнле пулнă çапла, йăнăшмасăр çутатаççĕ. Пытармасăр каласан, ваттисем каласа кăтартни çумне хайлавçă хăй хушса çырни те çук мар. Пирĕн шутпа, çакă та легендăсемпе халапсен пахалăхне иксĕлтермест, пуянлатма пулăшать.

Кĕнеке чĕлхине вулакан тиркемессе шанас килет. Кунти произведенисене халăх сăмахлăхĕпе эрешленĕ, персонажсен юррисем те пур. Ăнланмалла ĕнтĕ, чуна çывăх юрă-сăвă савăнма та пулăшать, хуйха-суйха та сирсе ярать.

Иртнĕ кунăн çути çук текелеççĕ. Тĕрĕсех-ши? Чăн ĕнтĕ, ыранхи кун мĕнле пуласси пĕтĕмпех хамăртан килет. Çапах ĕнерхи кун çутин ĕмĕлки паянхи çине те, ыранхи çине те ӳкет. Вăл паянхи пурнăçа тĕплĕнрех ăнкарма, ыранхине тĕрĕс палăртма пулăшать. Эппин, сӳннĕ çутă та усăсăр мар. Вăл та пурнăçра тивĕçлĕ йĕр хăварать. Истори легендипе халап та çавах. Вĕсем иртсе кайнă пурнăçа ӳкерсе кăтартаççĕ, ун чухнехи çынсене куç умне кăлараççĕ, вĕсен тĕллевĕсемпе ĕмĕчĕсене уçса параççĕ. Çакăнпа пĕрлех ĕлĕкхине хальхипе, иртнине пулассипе танлаштарма, ырăран ырă пулма, усалтан писме, паттăрсенчен паттăр пулма вĕрентеççĕ те, хистеççĕ те.

Çапла ĕнтĕ пире валли аслă аттемĕрсемпе аннемĕрсем хăварнă хайлавсем ватăлмаççĕ, манăçа тухмаççĕ. Пĕлӳ çăлкуçĕ те, чун ăшши те пулса тăраççĕ. Вĕсем пурнăça хаклама тата пурăнма вĕрентеççĕ.

Паллах, халăх упракан халапсемпе легендăсем пурнăç чăнлăхĕ, тĕрĕслĕх çинче никĕсленнĕ. Çав чăнлăхпа тĕрĕслĕхе шур сухалсем хăйсем курнă-илтнĕ пек е ăнланнă-ăнкарнă пек каласа-ӳкерсе панă. Нумай легендăпа халап несĕлтен несĕле куçнă. Ашшĕнчен-аслашшĕнчен илтнине тепĕр хут каласа паракансем хăш-пĕр фактсемпе пулăмсене, ятсене урăхлатма е пăтраштарма пултарнă. Иккĕленмелли çук — тĕп шухăша пăсмасăр.

Халапсемпе легендăсем, хавха хайлавĕсем чăнлăха пур енчен те документ тĕрĕслĕхĕпе кăтартасса кĕтме çук. Халапçă хăй пĕлнĕ пек, хăй ăнкарăвĕн еккипе хушса хунине асăрхатăн. Тĕслĕхрен, Пичке сăртĕнчи çапăçусем çинчен истори докуменчĕсем нимĕн те каламаççĕ. Кăнар улăп та халапçă шухăшласа кăларнă персонаж кăна. Вăл тăшман эшкерĕпе çапăçнине те халап çеç темелле. Анчах халап ун чухнехи пурнăça чылай енчен тĕрĕсех кăтартать, пăлхар-сăвассем çинчен кăсăклантаруллă шухăшсем калать.

Пичке сăртĕнчен Чулхулана кайнă енче улăп тăприсем ăçта-ăçта пуррине автор тĕрĕсех кăтартнă. Кунсăр пуçне, халапçă асăннă пайтах çынсем чăннипех те историе кĕрсе юлнă. Çав шутра, сăмахран, пăлхарсен ханĕ Купрат, унăн ывăлĕ Кăтрак.

«Çулăмпи — ытарайми чăваш пики» хавха чăваш халăхĕнче тахçантанпах çӳрет. Истори документсем тăрăх, Сююмбеки ханум чăваш пики мар, нухайсен ханĕн Юсуфăн тăван хĕрĕ пулни паллă. Мĕншĕн чăвашсем Сююмбекине хăйсен хĕрĕ тесе шутлаççĕ? Мĕншĕн тесен унăн турулне чăвашсем туса лартнă. Ку ăслă-тăнлă хĕрарăма чăвашсем те сума сунă.

Автор хăйĕн хайлавĕсене прессăра «Халăхри хавхаран» рубрикăпа пичетлерĕ. Мĕн вăл хавха? Халăх хушшинчи халап, сăмах-юмах, пĕр çын тепĕрне каласа пани. Тĕрĕслĕхне çирĕплетмен хыпар. Вăхăт иртнĕçемĕн ĕлĕкрех мĕн пулса иртни манăça тухса пырать. Масарти чул юпаллă вилтăприсен, уйри палăклă тĕмесен, улăп тăприсен вăрттăнлăхĕсене пĕлме самаях тар кăларма тивет тĕпчевçĕсен. Тӳсĕмлĕхпе пĕлӳ те, вăй та кирлĕ çакна тума.

Халăхра упранакан хавхана, сăмах вĕççĕн çӳрекен пултарулăха пĕлнин, ăна тĕпченин пĕлтерĕшĕ калама çук пысăк.

Аваллăха пĕлмесĕр паянхине ăнланаймастăн, малашлăх çулĕсене пушкараймастăн. Иртнĕ вăхăтран лайăххине паянхи пурнăça илмелле. Паянхи çĕнĕлĕх — нумай чухне авалхи паха тĕслĕх. Çав тĕслĕхсене тишкернĕ чухне вĕсем малашне мĕнле пĕтĕмлетӳсем патне илсе тухассине те шутласа пăхмалла.

Легендăсемпе халапсенчи паттăрсен шăпи, пăхаттирсен кун-çулĕ, тĕллевĕсемпе ĕмĕчĕсем вулакана, куракана, итлекене тарăн шухăша ямасăр хăвармаççĕ. Хальхи яш-кĕрĕм пурнăç мĕн кĕтнине тума тăрăшать. Ентешӳсем сана сума суччăр, савчăр та юратчăр тесен малтан вĕсене хăвăн хисеплемелле, тĕллевĕсемпе ĕмĕчĕсене пĕлмелле, кашнинех пулăшма тăрăшмалла. Юлташупа тусна, пĕрлехи йышпа халăха усă кӳнинчен пысăкрах савăнăçпа телей тупаймастăнах.

Чĕмпĕрти И.Я. Яковлев уçнă шкулта вĕреннĕ учитель, пенсионер Роман Чепунов питĕ тĕрĕс асăрхаттарать: «...Халăхăн сăмах вĕççĕн çӳрекен пултарулăхĕ йывăç çинчи çулçăсем пекех. Пурнăç çилĕ вĕсене пиртен уйăрса нихçан та таврăнмалла мар вĕçтерсе каять те тĕлли-паллисĕр сапаласа пĕтерет, çавăн пекех юрăсем, халапсем вăхăтра çырса илмесен йĕрсĕр çухалма, манăça тухма пултараççĕ». (Хыпар. 2001. Пуш уйăхĕн 3-мĕшĕ.)

***В.Д. ДИМИТРИЕВ,***
*И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн тава тивĕçлĕ профессорĕ, истори ăслăлăхĕсен докторĕ*



# Сăваскар паттăрĕсем: Сăвас тата Нарпи

*Чысăмăрпа ирĕклĕхе вĕсем хӳтĕленĕ*

Мĕн вăл Тăван çĕршыв? Чи малтанах çуралса ӳснĕ ял, хула. «Тăван çĕршыв» ăнлав йышлă туратлă, тарăн тымарлă хăтлă йывăça аса илтерет. Турачĕсем — ӳсекен, çитĕнекен ялĕсемпе хулисем. Ку вăл çĕршывăн тĕп пуянлăхĕ.

Унăн çирĕп тымарсем те пур. Тăван çĕршывăн тымарĕсем вырăнĕнче унăн харсăр çыннисем. Чысĕпе ирĕклĕхне паттăр ывăлĕсемпе хĕрĕсем хӳтĕлеççĕ.

Мĕн вăл тăван хула? Малтанах Ярила урамĕ. Ярила — киреметсĕсен турри. Хулан авалхи пайне пăлхар-чăвашсем Ярила сăрчĕ ят панă. Вырăссем ăна Ярилина гора тенĕ. Ку ят хĕвел туррине пĕлтернĕ.

Хула элтеперне Сăваса Ярила сăрчĕ ятлă урам уйрăмах килĕшет. Ку урам ыттисенчен малтан вăранать. Малтан пасар кĕшĕлтетме пуçлать. Тимĕрçĕ лаççи вĕркĕçне пашлаттарма, сунталне чанклаттарма тытăнать. Купсасем, атăçăсемпе çĕвĕçсем хăйсен яланхи ĕçне малалла тăсаççĕ. Лавккасен, лаçсен, паварсен алăкĕсемпе чӳречисем яриех уçăлаççĕ. Сăваскаркă, Сăкăтпуç тăрăхĕсенче пулăçсем тетелĕсене караççĕ.

Хĕвеланăç енче, Сăваскаркă хĕрринче — эткер хулашĕ. Пĕрисем шӳтлесе каланă тăрăх, унта тĕкĕрçĕсем чăрсăр вăкăра майракинчен тата хӳринчен кăкарма хăнăхаççĕ.

Сăвас тăван хулине питĕ юратать, унăн илемĕпе пĕрмай йăпанать. Чăнах та ытармалла мар чаплă Сăваскар! Çырма тулли шыв юхать, çыран тăршшĕпех ешĕл курăк ӳсет, авăрта пулă сикет. Уйрăмах Ярила сăрчĕ, Чапăксар урамĕсем хӳхĕм.

Сăвас, сăвар сăмахсем пĕлтерĕшĕпе пĕр-пĕрне çывăх, вĕсем пăлхар халăхĕсен йăхĕсене палăртаççĕ. Ирĕке юратакан паттăрсене те çакнашкал чĕнеççĕ пăлхарсем. Çырма хĕрринчи пысăк мар хула элтеперне те вĕсем Сăвас ят панă. Ун хулине Сăваскар, юхан шывне Сăваскаркă теме пуçланă. Йыт пулли, Сăкăт пуç, Йӳçлĕх (Трусиха) çырмисен тăрăхĕнче пурăнакансене Сăвас хăйне пăхăнтарнă, вĕсен теперĕ пулса тăнă. Унăн малтанхи ячĕ — Чуар (чу — шыв, ар — çын). Хăй йăхĕнчисене Сăвас паттăрĕ (Чăваш паттăрĕ) ят ытларах килĕшнĕ. Сăваскар ят Шупашкара куçнă. Чу сăмах Китай чĕлхинче те, Алтай халăхĕсен чĕлхинче те «шыв» пĕлтерĕшлĕ. Шыв паттăрĕ. Шупашкар — шыв пусĕнчи хула. Пĕр енчен вăл Сăваскаркă хĕрринче, тепĕр енчен — Атăл çыранĕнче.

Кам вăл Сăвас? Пĕр те пĕр шутласан, ку сăмах йăх ятне пĕлтернĕ. Тепĕр тĕрлĕ тавçăрсан, пайăр ят пулнă — уйрăм çынна çапла чысланă. Элтепере ку ята Пăлхарçи канĕ (патши) панă, хăйне хӳтĕлеме хулкан парнеленĕ.

Сăвар хулана ят хуриччен ăна урăхла каланă. Сăваскарсем ку ята астумаççĕ. Элтепер те элтепер теççĕ. Пĕрмаях çапла хисеплесе чĕнеççĕ. Сăвас сарлака кăкăрлă, тĕреклĕ çан-çурăмлă арçын. Вăл иртсе пынă чухне урам чĕтренет. Паттăр çын пулни пăхсах курăнать. Чăн-чăн паттăр шуйттанран та хăрамасть теççĕ. Тăшмана аякранах курать имĕш. Çынсене ăс вĕрентсе питех чăрманмасть, ырă тĕслĕх хăй кăтартать. Пĕррехинче Шенкерука çапла ăс пачĕ: ăссăрсем хушшинче нумай тытăнса ан тăр, ăслисем хушшинче вăхăтна ан шелле. Çавнашкал вĕрентни пĕтĕм Сăваскара сарăлчĕ.

Элтепер пулма çăмăл-и? Пытарар мар, хăй йăвинче пакша та патша. Хăйĕн хулинче элтепер чăн-чăн хуçа. Уйăх çути — çул çути, хĕвел çути — кун çути. Çак çутăсем элтепере иккĕшĕ те кирлĕ.

Санăн шăпу еплерех?
Аçу-аннӳ пӳрнĕ-и?
Пӳлĕхçĕмĕр пĕлет-и?
Телей килтĕр капланса,
Çурхи шыв пек сарăлса.
Телей пытăр ĕмĕре.
Сан пурнăçу еплерех?
Çил-тăманлă пулмĕ-ши?

Хурлăх килсе пусмĕ-ши?
Хуйху-суйху сирĕлтĕр
Кайăк хурсем вĕçнĕ пек,
Çурхи çил тамалнă пек.
Санăн тусу мĕнлерех?
Аслă Танкăр çырни-и?
Хăв суйласа илни-и?
Тусу сана савтăрах,
Савтăрах, юраттăрах.
Пĕрле пулăр ĕмĕрех.

Элтепер патне селĕм урхамахпа Элтер тĕкĕрçĕ вĕçтерсе çитет.

— Мĕн сĕвеппе килтĕн? — сăлтавне пĕлесшĕн пулать элтепер.

— Хыпар питĕ начар. Йӳркĕнсем Кериме вĕлерчĕç...

Пуян çырма тăрăхне хурах çаратма йӳркĕн эшкерĕсем часчасах килеççĕ. Хулана вĕсем вĕçĕмсĕр хуйхă кăтартаççĕ.

Сăваскаркă хĕрринче тăнăç пурнăç вăраха пымасть. Çуллахи каç пекех кĕске çак вăхăт. Ăна вăраха тăсма хăватлă Танкăр та пулăшаймасть.

Элтепер хулан кăнтăр еннелле тинкерет. Шăв-шав çав енчен илтĕнет.

Сăвара сăваплă хула тесе шутлаççĕ пăлхар-чăвашсем. Юхан шыв хĕрринчи тĕлĕнмелле илемлĕ вырăнта вырнаçнă çак хула. Çаранта çĕр çырли, кашни çупкам — ывăç тулли. Çав хуларан Сăваскара тарса килчĕç хĕрсем — Нарпи, йăмăкĕ Шенкерук, тантăшĕсем Укапипе Укаç, Алсу.

Ука — ылтăн та кĕмĕл çипсемпе илемлетнĕ хăю. Укаç... Ку ята хĕр илемлĕ пит-куçлă, ырă кăмăллă пулнăран панă. Укапи — чĕкеç чĕлхиллĕ хĕр. Çав вĕçен кайăк пек чĕвĕлтетет.

Сăвар-монголсемпе кăпчаксен аллине çакланиччен Нарпи унта самаях пысăк тимĕрçĕ лаççи хуçиччĕ. Кĕтмен çĕртен хулара вилĕм çулсăрах çӳрекен пулчĕ. Тăшман багадурĕ вăйламас Субедей юн тăкмасăр асаплантарать, çурăм шăммине шарт хуçать. Çак асапа кĕтсе тăмасть Нарпи. Йăмăкĕпе тата тантăшĕсемпе пĕрле урхамахсем утланаççĕ те Сăваскаркă хĕррине пырса тухаççĕ, Сăвас хулине вырнаçаççĕ.

Кунта Нарпи Сăвас элтеперпе паллашать. Иккĕшĕ тӳрех

килĕштерчĕç пулĕ, тавлашу вĕçне тухаймарĕç — шыв вăйлăрах-и е çулăмлă вут.

— Шыв çунан вута та пăхăнтарать. Шыв кăвартан вăйлăрах. Шыв пулмасан пурнăç çук... — ура тапсах ĕнентересшĕн Нарпи.

— Çук, пикеçĕм, эсĕ йăнăшатăн... Килĕшетĕп, шывăн хăват çук мар. Çапах вут-хĕм унран та вăйлăрах. Ахальтен мар ĕнтĕ Сăваскарта çулăм сирпĕтекен сăнăсем тытаратăн. Вутçулăм хăвачĕ пысăк... — хăйĕннех çирĕплетрĕ Сăвас.

— Шывăн турат, вутăн алли çук. Шыв пуç пикин шупашка çук. Ай, Аслă Танкăр, ман хута кĕрсемччĕ, шыв хăватлине çирĕплетсемччĕ! — тархаслать Турра Нарпи. — Мана тата акă мĕн иккĕлентермест, пăлхар-чăваш монголран та, кăпчакран та вăйлăрах, мĕншĕн тесен хăйĕн çĕршывĕнче çапăçать, ăна хӳтĕлет.

Нарпи — хӳхĕм хĕр. Сарă çӳçĕ кăлкан пек, хура куçĕ шăрça пек. Сăнĕ-пичĕ вара кулса тăран хĕвел пек. Нар тени хăех хĕвеле пĕлтерет. Ун пек хĕр Сăваскар тăрăхĕнче, тупата, пĕрре кăна. Темле тум та килĕшет хĕре. Шурă шупăр тăхăнсан Нарпи шурă акăш пек курăнать. Куç умне хура сăхманпа тухсан — ытарайми чĕкеç тейĕн.

Нарпи пикене элтепер Сăвас пĕрремĕш хут тимĕрçĕ лаççинче тĕл пулать, пĕрре курсах юратма пуçлать. Сăвас та хĕре килĕшет.

Кăмăл-туйăмне пĕлтерме иккĕшĕ те пайтах вăхăт хăяймаççĕ. Пулла пĕрле çӳреме пуçлаççĕ. Шурă пулă (судак) тытма Атăл юхăмне те тухаççĕ. Тĕрлĕ йышши пулла чĕрĕ хальлĕн те, тĕтĕмлесе те, типĕтсе те Сăваскар пасарĕнче Нарпи сутать.

Мĕнех калăн, чипер хĕр Нарпи вĕçен кайăк пек вĕçесле çӳрет, каччине хĕпĕртӳллĕ чĕрепе кĕтет, янкăс сасăпа ялан юрă янăратать.

Икĕ çамрăкăн телей çулĕ урлă хура кушак каçса кайнăши, кайман-ши, хавaслă туй пулас çĕртен пулмалла мар пулса тухать.

Юрла, юрла теетĕр, —
Юрă ăсти эпир мар.
Юрламашкăн тытăнсан
Ăстаран та кая мар.

Чунӑм юрлать, чун юрлать,
Юрламасӑр тӳсеймест.
Чӗрем сана кӑмӑллать,
Сансӑр кӑмӑл ҫӗкленмест.
Савнӑ ҫыннӑм, хаклӑ тус,
Кӑлӑхах пуҫна ан ус.
Эс пуррипе эпӗ пур,
Эп пуррипе эсӗ пур.
Иккӗленме кирлӗ мар,
Пӳлӗх умӗнче калар,
Эсӗ савӑнтаратӑн,
Эсӗ юрлаттаратӑн.
Маншӑн эсӗ ҫут хӗвел,
Саншӑн таптӑр ман чӗре.
Туслӑх пултӑр ӗмӗре!
Ҫакӑ кирлӗ сар хӗре.

Асӑрхать элтепер, Сӑвар пики Сӑваскаркӑ хӗрринче вӑрах тӑма кӑмӑллать. Мӗншӗн-ши? Сӑнӗ ҫине пӑхса киленет иккен. Сӑваскаркӑна ҫумра йӑтса ҫӳрейместӗн-ҫке-ха. Тусӗ ӑна сӑнне курма якатнӑ тимӗр касӑкӗ парнелерӗ. Ҫавӑн хыҫҫӑн Нарпишӗн юхан шыв тӗкӗр пулма пӑрахрӗ.

Нарпи харсӑр йӗкӗте тӗрленӗ ал тутри парнелерӗ. Сарӑ пир ҫинче пилӗк кайӑк кӑвакал ярӑнать.

— Мӗн тӑваҫҫӗ вара кунта кӑвакалсем? — кӑмӑллӑ сасӑпа ыйтать йӗкӗт.

— Вӗсем иксӗмӗр хушшӑмӑрта килӗштерӳ шыраҫҫӗ. Ҫав тӗллевпе Атӑл леш енчи Кӑкшӑм кӳллинчен ятарласа вӗссе килнӗ... — пиҫнӗ ҫырлан хӗрелет пике пичӗ.

— Сӑвар хули ҫумӗнчен, Утка ҫырми хӗрринчен мар-ши? — иккӗленет йӗкӗт. — Субедей хуйхатман-ши вӗсене?

— Сӑварта хуйхатнисене Вӑта Сӑвар (Веда-Суар) хапӑл туса йышӑнать!

Пӗр каҫхине Нарпи аякрах та мар Сӑвас тӑнине курать. Йӗкӗт шухӑшлӑн юрласа ярать:

Шик шӑхӑртӑм — илтмерӗн,
Кӑчӑк туртрӑм — курмарӑн.
Малашнехи пурнӑҫра
Кирлӗ пулмӑп-ши сана?

— Мӗн вӑл юрату? — пӗлесшӗн пулчӗ Сӑвас.



— Ай, ун пирки манран ан ыйт. Эпир, Сăвар хĕрĕсем, ку туйăм патне çитиччен пурăнайман-ха. Ман шутпа, йĕкĕт мĕн тăвать, ăна юратакан хĕр те çав ĕçех çыпăçать. Кайса тĕрĕслем-ха, ухă сăннисене вут-хĕм сапмалла лайăхах тăваяççĕ-и? Мана тимĕрç лаççинче кĕтеççĕ...

Хĕр вăр-вар çĕкленчĕ те самантрах куçран çухалчĕ.

— Ант, пулнă-пĕтнĕ пăрчăкан вĕт... — йăл кулса юлчĕ Сăвас.

Сăвар пики Нарпи ытти хĕрсем пекех илĕртӳллĕ пулма тăрăшать, сăн-питне илемлетет, тирпейлĕ капăр тум тăхăнать. Сăваскарсене вăл илемĕпе кăна мар, кăмăлĕпе те килĕшрĕ. Сăварта унăн тимĕрçĕ лаççи пурччĕ, унта хĕм сапан сăнăсем туптатчĕç. Сăваскара тарса килсен Сăварта пуçланă ĕçе малалла тăсма мехел çитерет, Сăкăтпуç çырми хĕрринче тимĕрçĕ лаççи уçса сунтал çинче тем кĕрĕслеттерме тытăнчĕ.

Элтепер кӗрсе тӗрӗслерӗ те шалт тӗлӗнчӗ, хӗр хӗҫ-кӑрал туптать.

Пурнӑҫра арҫын та хитреленет, анчах хӗр пек мар, урӑхла. Унӑн вӑйлӑ тата харсӑр пулмалла. Элтепер мачча каштине ним мар йӑтать, Сӑваскаркӑ урлӑ килнӗ упана пӗччен каялла хӑвалать.

Ҫупах кассине элтепер Вутӑшкасси ят пачӗ. Вутӑшӗ Нарпи ятлӑ. Унта кайнӑ чухне йӗкӗтӗн тимӗр кӑвак урхамахӗ утни-юртни сисӗнмест, шыв пек юхать, ҫил пек вӗҫет. Юхан шывӑн турат ҫук, вӗрекен ҫилӗн алли ҫук. Шывран таса пулаймастӑн, ҫилтен хӑватлӑрах вӑй тупаймастӑн. Чапаксарӗнчен тулӑх вырӑн ҫуках, Нарпи пек хитре хӗр те тупаймастӑн.

Юр ҫунипе юр пӗтмест, хӗр кайнипе хӗр пӗтмест. Ҫамрӑксен шӑпи урӑх еннелле ҫаврӑнчӗ. Саманине кура пулас туя урӑх вӑхӑта хӑварчӗҫ — хӗр енчисемпе кӗрӳ енчисем тавлашса ташлаймарӗҫ. Йӗкӗтне йысна тесе чӗнмелле пулаймарӗ, хӗрне инке тӑваймарӗҫ. Пулать вӗт унашкалли те. Субедей пуҫ касаканӗсен пӗр эшкерӗ ҫывӑхах килсе тухрӗ. Ылханнипе тӑшман пӑнчӑхмасть, хирӗҫ тӑмасан шутсӑр алхасать.

Хӗр юлан утҫӑсем (амазонкӑсем) тавлашуллӑ ыйтупа шав ҫӗкленӗ. Сӑкӑткассинчи Юман та унтах. Янкӑс саслӑ Шенкерук витӗмлӗ сӗнӳ парать:

— Шупуҫ ҫырми ҫупах пулӑпа — чапакпа питӗ пуян. Унӑн ятне вырӑсла та, чӑвашла та ҫак пулӑпа ҫыхӑнтар. Ҫупахран — Ҫупахсар (Шупашсар), Чебакран Чебоксары пултӑр.

— Аюк! — илтӗнчӗ Нарпи сасси. — Хула ятне пирӗнсӗрех панӑ вӗт. Элтепере хисеплесе сӑварсем Сӑваскар теҫҫӗ. Эпир те ҫакӑнпа килӗшер...

— Пысӑк пӗлтерӗшлӗ хуламӑр. Вӑл тӗнчене тухмалли хапха, ҫулла — шывпа, хӗлле — ҫуна ҫулӗпе. Хусана та, Чулхулана та, Владимира та кунтан каятпӑр. Тырӑ сутатпӑр, пулӑ сӗнетпӗр, мунчала-курӑс тата чӑпта турттаратпӑр, — вӗҫлерӗ тавлашӑва Унерпи.

Ку ҫырмара мӗн нумай? Ҫупах-чапак нумай. Ҫупаха Нарпи шупах тет, Шенкерука вара ҫупах ят килӗшет. Ҫав пуянлӑх вырӑнӗсене аппӑшӗпе йӑмӑкӗ иккӗшӗ икӗ тӗрлӗ калама кӑмӑлласҫӗ.

— Хулине Сăваскар, çырмине Сăваскаркă тейĕпĕр, — сĕнет Нарпи.

— Мĕншĕн Сăвассар мар. Юмансар, Кайăксар евĕр. Çупахкар, çупахлăх мĕншĕн килĕшмест? — ыйтать Алсу.

— Вырăссем ку çырмана чапак пулă ячĕпе Чебоксары ят панă... — сăпайлăн калать хай мĕн пĕлнине Юман. — Эппин, чăвашла Сăваскар, вырăсла Чебоксары пултăр.

— Тĕрĕс калать Юманкка — хулана вырăсла ят та кирлĕ! — ырлать йĕкĕте Нарпи.

— Анчах... анчах... — хĕрелсе каять Шенкеруk, — ан ÿпкеле, аппамçăм. Сăваскар ята та тиркеместпĕр. Тата Сăкăт касси йĕкĕчĕ пачах Юманкка мар, чăн-чăн Юман!

Нарпин йăмăкĕ çуралсан ят хунă чухне яланхи пекех чăкăт пуçланă, мăчавăр пурпĕр лайăх ят тупайман. «Ку хĕр çÿллĕ пулать. Шерте пики, Шертепи... килĕшмест-и?» Çав ятпах юлатчĕ ахăр, Шенкерук ят сĕнчĕç.

Шенкерук çÿллĕ пулсан та алли хĕвел патнех çитеймест — ут утлансан инçех те юлмасть. Хĕр пуçĕнче вăрăм шухăш, йывăр хуйхă. Йÿркĕнсемпе çапăçса вилнĕ Керимпе пĕрле пулă тытнисем, кимĕпе Атăлваррине тухнисем, пĕрле вылянисем-кулнисем манăçми тăрса юлчĕç хĕр асĕнче.

«Шуçăмчченех çÿрес мар, атте ятне ярас мар!» — шÿтлетчĕ ун чухне Шенкерук. Халĕ инкек кÿрекене ылханать:

— Шăпăрлан шăлса кайтăрах çав çичĕ юта! Шыв наймаки пек ирсĕр вĕт вăл...

Шенкерук кăмăл-сипетĕнче Нарпире пурри те сахал мар. Йăмăкĕ те аппăшĕ пекех хăюллă та шиксĕр, чăрсăр та теветкел. Çакă хĕр хăйне епле тыткаланинче палăрать. Тарăн шыва çырантанах сикет. Атмапа пулă тытма темле авăра та кĕрсе каять.

Аппăшĕ Нарпи Пÿлĕхçĕпе туслă, йăмăкĕ вара урăх Турра пуççапать. Унăн ирхи кĕлли çапла пуçланать:

Пире саван Пихампар!
Пире ырă ăс-тăн пар!

Пихампар хушнипе Шенкерук çут тĕнчери çÿрен-чупан чĕр чуна пурне те хапăллама хатĕр.

— Куçу сенкер. Эппин, сана Шенкерук мар, Сенкерук те-

мелле. Юрруна шăрантар-ха, шет хуйху сирĕлĕ, — сĕнет хĕре Унерпи. Хĕр вăрах ӳкĕтлеттермест, шухăшлă юрă тăсса ярать.

Куç умĕнчи çырмара
Шывĕ юхать шарласа.
Юррăм пачах савăк мар,
Кулянатăп шутсăрах.
Вăштăр-вăштăр çил вĕрет,
Вăрман енчен мар-ши вăл?
Пăшăл-пăшăл çын пуплет,
Пирĕн çинчен мар-ши вăл?
Шăлтăр-шалтăр урапа
Шăн пăр çинче ним те мар.
Пăшăл-пăшăл çын сăмах
Çамрăк пуçа ним те мар.
Шăнкăр-шăнкăр шыв юхать
Сарă хăмăш çумĕпе.
Ĕмĕрĕм иртсе пырать
Шухăш-ĕмĕт çулĕпе.
Улăх тăрăх эп утрăм
Ухлĕм курăк шыраса.
Хула тăрăх эп утрăм
Хам телее шыраса.
Вăрман хĕрне вут хутăм,
Ăçта çитĕ ун çути?
Шырасан та тупмарăм,
Ăçта телей, Тур çырни?

Юрри пур, çăлтăр тупăнатех çамрăк ĕмĕрте.

Шенкерук юррисем пурне те килĕшеççĕ. Вĕсенче Шупах сарăмĕн анлăшĕ тапса тăрать. Çырма айлăмĕ пăхма нимех те мар. Çав айлăмра Шенкерук пике юрă пуçарсан пĕтĕм тавралăх юмахри хитре тĕнче пулса тăрать. Хĕр юрри çынна тăри евĕр хĕпĕртеттерет, сар кайăк пек савăнтарать.

Шенкерук çут çанталăк мулне пуç таять. Уйрăмах сăваплă таса çимĕç кӳрекен пилешпе туслă. Пилеш шăрçа çакса çӳрет, килĕнчен усал-тĕселе пилеш турачĕпе хăвалать. Çак йывăçран арçури, вупăр, шуйттан хăрать. Шенкерук шучĕпе, ăна курсан кирек хăш тăшманăн та сехри хăпать. Çурăмĕ хыçĕнчи хаймана Шенкерук ухă йĕпписемпе пĕрле пилешĕн чĕрĕ туратне хунă. Сыхлатăр инкек-синкекрен.

Нарпи йăмăкĕ Шенкерук тем те пĕлет, тем те шухăшласа кăларать. Куçĕ сенкер, куç харшийĕ аппăшĕнни пек хура, кама телей кӳрĕ-ши?

— Йысна тесе хăçан чĕнме пуçлăпăр? — ыйтать пĕррехинче пăшăлтатса Шенкерук элтепертен. — Çураçнă хĕрĕн шупашка çук. — Унтан çапла хушса хурать: — Ман пирки вара ан иккĕлен, ĕнер пĕр кашкăр тытнăччĕ, паян упа тытас кăмăллă.

Шенкерук пĕрмай шӳтлет те ахăлтатать:

Шупашка та шупашка,
Йĕкĕте кĕтме пултар!
Пулă шӳрпи çимешкĕн
Йĕкĕт киличчен тăхтар!

Сăваскаркă хĕрринче чăри-чари çухăраççĕ. Кăпчаксем чăпăрккасемпе сурăх кĕтĕвĕ хăвалаççĕ иккен. Вĕсен çулне юлташĕсемпе пĕрле Чемен тĕкĕрçĕ пӳлет, кĕтĕве туххăмрах каялла тавăрать.

Чемен — чаптам çын. Тăшмана хăлха чикки епле памаллине лайăх пĕлет. Элтепер тусĕ Чемен сăнă янтăлама ăста, уйра вара пăрçапа туслă. Çынсен тырă пулман чух та унăн ăнать. Уяр çул ушаха акать, йĕпе чух — сăрт çине. Пăрçа тухăçĕпе вăл çулленех сапăр пулать. Ана çинчен патманăн-патманăн пуçтарать. Патманта тăвата пăтавкка. Пĕрле ĕçлеме ăна Унерпи пулăшать.

«Мĕн каласа юрлар-ши?» — кăшт тăхтаса тăрать юрă пуçлама Унерпи. Килĕштернĕ юрра хĕр кĕçех йĕкĕтпе пĕрле шăрантарать.

Унерпие курсассăн Чемен чунĕ кăвакарчăнăнни пек савăнать. Ку пике ăна тыткăнларĕ сăнĕпе, ăмсантарчĕ ăсĕпе, йăпатайрĕ чĕлхипе, илĕртейрĕ куçĕпе.

Пĕлĕт Атăл енчен кăвакарсан çумăр пулать, Чемен куçне тартсан пике кăмăлĕ хуçăлать.

Унерпи шӳтлеме юратать. Акă тантăшĕпе çапла канашлать:

— Шултăрканă пичĕкене шыва пăрахса шăршăнтараççĕ. Шулапĕ витĕнсех çитеймен йĕкĕтпе мĕн тумалла-ши? Ăслă ĕç тума хушам, шултра алапа пĕр чĕрес шыв ăсса патăр. Шет хушăва чиперех пурнăçлĕ...

Хăшĕ-ши ман çăлтăр тӳпере?
Ăна пĕлмесĕр чун чăтмасть.
Хăшĕ-ши ман йĕкĕт Тур çырни?
Пĕлейĕп-ши, чунăм чăтмасть.

Йăран та йăран ешĕл сухан,
Касса çимесен чун чăтмасть.
Пĕр çул çуралса, пĕрле ӳссе
Курнăçасчĕ, чунăм чăтмасть.
Чăпар куккук анчах йăвасăр.
Ман йăва ăçта-ши — чун чăтмасть.
Пӳлĕх пӳрни манăн та пурах,
Тупасчĕ ăна хăвăртрах.
Ан хурланччĕ, хура хурлăхан,
Турăçăм, хуйхăран хăтар!
Пулсам, тусăм, хăлатла хастар,
Хушăнтăрах хăват, хавал.
Сăваскар хĕрринче шур хурăн,
Шăпчăк юррине вăл кĕтет.
Ăçтарах çӳретĕн эс, тусăм,
Килейĕн-ши, чунăм кĕтет.

*Хушса юрламалли:*

Ант санпалан ман тупа,
Телей кӳтĕрех шăпа.
Сана çеç хирĕç тухам,
Чĕререн салам калам.

Унерпи юрăçăпа Чемен шăпăрçă юрă-кĕвви пулăçăсене килĕшет. Каçхи вăйăйа тухса Унерпипе Чемен хăйсен юррине пуçарсан пĕтĕм тавралăх шăпланать.

Монгол ханĕ Бату (1208—1255) Пăлхар çĕршывне 1236 çулта çапса аркатать. Вăл аслашшĕн, Чингисханăн, халалне — юлашки тинĕс хĕррине тухăр тенине — пурнăçлать.

Кăпчаксем — куçса çӳресе выльăх ĕрчетекен халăх. Вĕсем XI—XIII ĕмĕрсенче кăнтăр çеçен хирте иртĕхсе çӳренĕ. Вырăс княçĕсем 1103—1116 çулсенче вĕсене хурахла ĕрĕхсе çӳреме чарнă-чарнах. XII ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринчен каллех пуçтахланма тытăннă.

Пăлхар-чăвашсен пуян хули Сăваскар монгол эшкерне канăç памасть. Субедей çарĕ Сăваскар патне 1237 çулта çитет.

Кашни эткер пуçлăхне Сăваскар элтеперĕ аслă эткерçĕ ят хучĕ. Хăш эткер ăçта тăрасси, мĕн тăвасси пирки уçăмлă кăтартусем пачĕ. Хулан тӳлек урамĕсем хальлĕхе шăпах. Тулли уйăх темшĕн-çке пăшăрхантаруллă çутă сапалать. Тăшман енче тӳпене сивлек шусăм çӳçентерӳллĕн хĕремеслентерет. Автансем авăтма пуçларĕç те сасартăк пĕтĕм хула ура çине тăчĕ.

Хула урлă Владимира, Чулхулана, Пăлхара каймалли çулсем выртаççĕ. Вĕсен ик енĕпе çĕр пӳртсем купаланă, йывăç çуртсем лартнă. Хăрах енне кăна çурт лартнă урамсем те чылай. Чăпта урамĕпе тăкăрлăкĕ кĕске, вĕсенче виçĕ-тăватă çурт кăна. Пасар лапамĕнче тата Салтак слободинче пĕрер чул çурт çĕкленчĕ.

Тăшманпа пĕтĕм хула çапăçас кăмăллă. Ярила урамĕнче, Çĕнĕ Тимĕрçĕ тăкăрлăкĕнче, Çăкăр тӳремĕнче йĕркеленнĕ эткерсем уйрăмах хастар.

Çапăçма пултаракан йĕкĕтсем пурте хăртсем (вăрçă пурттисем) тытрĕç, хаймансене çĕмренсем тултарчĕç. Кăра хĕрсем çунакан сăнăллă ухăсем хатĕрлерĕç. Тӳррине тӳррĕн каламалла: ăçта тупассине, ăçта çухатассине пĕлме йывăр. Вăрçăра ăсли ăсĕпе, хастарри вăйĕпе çĕнтерет. Маттур тĕкĕрçĕ çĕмĕренне тĕлсĕр-йĕрсĕр сая ямастех. Хĕр ухăçă вут-хĕмне кирлĕ çĕре сирпĕтет.

Çапăçăва кĕриччен эткерсем Аслă Танкăра пуççапрĕç, Сăваскаркă хĕрринчи ватă юман тавра виçĕ хут çаврăнса унран вăй-хал ыйтрĕç.

— Çут хуçса лармастпăр. Ант парăнмастпăр! — терĕç пурте çавăн хыççăн элтеперпе пĕрле.

Эткерсем Йыт пулли (Кайбулка), Йӳçлĕх пуç (Трусиха), Сăкăтпуç, Сăваскаркă çырмисен тăрăхĕнчен пуçтарăнчĕç.

Ярила касĕ пуринчен те вăрăмрах. Тĕп урам шутланать. Унта çӳллĕ юпа çумне шăвăç питлĕх çакнă. Халăха пухма çав питлĕхе патакпа танлаттараççĕ. Сăваскарсем ăна чан теççĕ. Чан сасси Сăваскаркă, Йыт пулли, Сăкăтпуç, Йӳçлĕх çырмисем тăрăх ян та ян каять, халăха сехмет çинчен систерет, сыхланма та хӳтĕленме хушать.

Çичĕ ютăн эсрел кĕвентисем вилĕм илсе килнĕ. Хăйсем пĕрин хыççăн тепри урисене тăсаççĕ, ыттисем çаплах малалла талпăнаççĕ.

Сăвас паттăр Субедейпе хăйĕнпе тытăçса пăхасшăн — эсрелсем хушшинче курăнмасть, килмен пулмалла ку тăрăха. Пуçне ылтăнланă чалма тăхăннине эмир теççĕ. Çапăçăва кĕрсен вăл чалмине çăм калпакпа ылмаштарчĕ, ан пĕлччĕр, ан паллаччăр.



Ч-45294
Национальная библиотека
Чувашской Республики

Тĕкĕрçĕсем умĕнче элтепер — тимĕр кăвак урхамахпа, Нарпи аслă эткерçĕ — улма чăпар утпа.

— Тăрлавсăр паттăрлăх сăнăсăр ухă кăна. Паттăрлăхпа юнашар чеелĕх те кирлĕ. Тăшмана çамкаран мар, кĕтмен çĕртен — сăрт хысакĕ енчен тапăнар... — сĕнчĕ Сăвас.

Ку сĕнӳ аслă эткерçĕне килĕшрĕ.

— Хĕçĕм ан хуçăл, пуçăм тĕрĕс-тĕкел юл! — илтрĕç юлан утçăсем унăн янкăс сассине.

Чăнкăр-чăнкăр тевет сасси илтĕнет, ертӳçĕ патнелле Унерпи килет. Пуçĕнче тимĕр калпак, аллинче хĕм сирпĕтмелли ухă.

— Çӳрес çулу такăр пултăр, утланнă уту ан такăнтăр! — ырă сунать Нарпи арçын пекех тĕреклĕ хул-çурăмлă хĕре.

Унерпи юрăсăр пачах пурăнаймасть. Хальхинче те тантăшне юрă парнелерĕ:

Пӳрт хысĕнче шур хурăн,
Хăйă тума юрамасть.
Хăйлăх тума юрасан
Шет каймăттăм вăрмана.
Ялта пур-ха ав йĕкĕт,
Тус тумашкăн юрамасть.
Утă çулма тухаймасть,
Темшĕн ял-йыш юлхав тет.

— Камăн чыс çук, çавă кăна уншăн çапăçмасть, — аса илтерчĕ аслă эткерçĕ Нарпи Ухинене.

Эткерте Шыв чăххи кассисем пысăк хисепре. Вĕçен кайăкĕ тĕм хура — тĕкĕ те, сăмси те, урисем те. Çын çывхарсан хăмăш ăшнелле тарать. Питех вĕçсе çӳренине курман. Тăрукках вĕçсе çĕкленеймест вăл, малтан шыв çумĕнчех лăппăллаппăл тăвать. Шыв чăххи касси тĕкĕрçисем вара ун пек мар, патвар та çивĕч.

Вĕсен аслă эткерçи Алсу кĕлеткипе вăр-вар, утти ĕлккен. Йĕпкĕн хура куç харшийĕ илĕртӳллĕ. Питне хĕп-хĕрлĕ пан улми тейĕн, ăшри хĕмĕ кăвартан вĕри.

Эткерте Шыв хăлти кассисем те пур. Шыв хăлти — шывра пуçтарăнакан ăпăр-тапăр, çӳп-çап. Çав тĕлте шыв юххи хулленленет, шыв илсе килекен пĕтĕм çӳп-çап çыранти хăмăшлăха çакланса юлать. Ахальтен мар туйра çапла юрланине илтетĕн:

Çак кас хёрсем шыв хăлти,
Шывпа юхса каясран
Эпир илсе каятпăр.

Анчах... Шыв хăлти кас хĕрĕсене пырса ан перĕн. Хăйсем камне хăвăрт кăтартĕç.

Хула лаптăкĕнчи тепĕр çырма — Кайбулка. Тăршшĕ виçĕ çухрăм та пулаймасть. Пулă тавраш çук. Йыт пулли лăк тулли. Çырма ячĕ вырăсла. Шенкерук ăна Йыт пулли çырми текелет. Тĕкĕрçĕсем ку касран — çур эткер.

Монгол эшкерĕ аякри çултан килсе ĕшеннине пĕлтерчĕç сăнавçăсем. Нарпи эткерсене Сăваскаркă ик енĕпе вырнаç-тарма сĕнчĕ. Элтепер ку сĕнӳпе килĕшмерĕ. Калаçу хивре пуласси тӳрех сисĕнчĕ. Ара, монгол эшкерĕ çырман ку енче вĕт. Эппин татăклă çапăçу çырман ку енче пулмалла. Çура-çуллă мар сăмах илтсе элтепер кăмăлĕ тăруках хуçăлать, çапах хăйне хытă тытать. Куç харшине пĕрсе хурать те шухăшне çирĕппĕн калать:

— Эткерсене çырман ку енчех хăварар. Хăвăнне анатарах, ыттисене тăварах вырнаçтарар!

Çаплах турĕç. Тăшман вăрах кĕттермерĕ. Малтан Сăвас элтепер Сăкăтпуç енчен темле йăслав илтрĕ, унтан ун хăлхине утсен тĕпĕртетĕвĕ пырса кĕчĕ.

Çичĕ ютсем малтан Йӳçлĕх çырми çыранĕнче чарăнса тапăртатрĕç. Унта тытăнса тăмарĕç.

Тăшман курăннă-курăнман пĕтĕм хула вăранчĕ. Пĕр енче хăнтăртатать, тепĕр енче пăнтăртатать.

— Тăнкăр-танкăр! Хăнтăр-хантăр! Шат та пат! — илтĕнет пур енчен те.

Тытăçу хĕрӳленсех пырать. Пĕри ӳкет, тепри тӳнет. Пĕри ут айне пулать, тепри çиеле тухать. Иртенпех кун çав тери шăрăх. Чăтма çук вĕри. Курăк ĕнет, тĕм çунать, йывăçран тĕтĕм тухать.

Сăваскаркă тăршшĕнче сасартăк тутутсем ӳлесе кăшкăртма, параппансем тăрăслаттарса çапма пуçларĕç. Хăрушлăх çинчен систерсе ухă йĕпписем йăслаcа иртрĕç. Тăшман ĕшеннĕ учĕсене малалла — çырма еннелле хăвалать. Хăвалăх еннелле çаврăнса та пăхмасть, ăна чăрмавсăр çулсем кирлĕ.



Самантрах сăрт хысакĕ енчен Юман аслă эткерçĕ тĕкĕрçисем, хăва тĕммисем енчен Нарпи юлан утçисем учĕсене тапăртаттарса тухрĕç, тăшман çинелле ыткăнчĕç. Çакнашкал ик енчен харăсах тапăнасса кĕтменччĕ монголсем.

Юман аслă эткерçĕ пĕр тăшмана хуса çитрĕ, уххине тĕллерĕ. Сехри хăпнипе лешĕн куçĕ ылмаш кăтартакан пулса кайрĕ. Çĕмрен ăна ĕнсинчен тăрăнчĕ. Тăшман ут çилхи çинелле тайăлчĕ, юлашки сывлăшне ут ури айĕнче кăларчĕ.

Хулăн çивĕчĕн усăнчăк пайăркине Нарпи ĕнси хыçнелле ывăтрĕ, çавăн хыççăнах вутлă-хĕмлĕ йĕп ухăран çичĕ ют çинелле тухса вирхĕнчĕ. Пуçланчĕ пур енче те тискер çапăçу, тытăçу, кăшкăрашу, ахлату. Утсем унта та, кунта та кĕçенеççĕ, йăванаççĕ те тăраймаççĕ. Çынсен ăраскалне кунта таттса параççĕ, виле çине виле купаланать. Сăвас элтепере виçĕ хут амантрĕç — эткерсене вăл çаплах хушусем парать.

Ама-юлан утçăсем Йыт пулли çырми хĕрринче паттăрла тапăнса тăшман эшкерне ăçтан килнĕ, çавăнталла хăваласа ячĕç. Çакăн çинчен пĕлсен Нарпи пикене элтепер хăвăрт шыраса тупрĕ — чăмăртаса ыталарĕ.

— Вăрçăччен сана чуптума хăюлăх çитмерĕ, халĕ вара çĕнтеричченн тăхтатăп... — ăшшăн йăл кулчĕ Сăвас.

Улăхри ухлĕм ирхи сывлăмпа кушăхать. Монголсен ертӳçи ютта хапсăнса нимĕнсĕр тăрса юлать. Нарпи пикен улма чăпарĕ эмир çамкине тапса шăтарать. Çав кирлĕ йыттăн кайри ури лăстанкине!

Юман çĕмренĕ вара монгол вайпучĕн утне ураран ӳкерет. Ун юлташĕ Элтер икĕ çичĕ юта амантать. Чемен аслă эткерçĕ тăшман йышĕнче ылтăнланă юпăлчаллă багадура шырать, анчах лешĕ куç тĕлне пулмасть. «Шет леш тĕнчене çылăхĕсене шутлаттарма ăсаннă...» — лăплантарчĕ ăна Унерпи.

Элтепер эткерĕ тăшманăн эшкерне икĕ çырма хушшине хупса хучĕ.

«Пултаратпăр вĕт, э... Ант пултаратпăр! — çиççе илчĕ элтепер куçĕ. — Танкăрпа Пӳлĕх те, нимĕнле Турă та çăлаймĕç хамăр тăрăшмасан!»

— Тепре харăс пырса çапатпăр та тăшмана — ăна тĕппипех аркататпăр. Малалла!

— Утăрья! — кăшкăрчĕ вăл урхамахне чĕвен тăратса.

Тĕп урама — Ярила кассине усал хыпар килчĕ: Нарпи аманнă. Йăх-яхăн ухă йĕппи Нарпи аслă эткерçĕн сулахай хулĕ витĕр тухрĕ. Хĕр юн юхтарса утне Шыв кукри кассинелле ĕрĕхтерчĕ, суран çине шурă чул хырса сапма шутларĕ. Вăл качи-мăчи майлах, анчах унран шурăрах та çемçерех. Шел, пикене шурă чул çăнăхĕ пулăшаймарĕ.

Сăваскаркă çыранĕнче элтепер çине харăсах икĕ монгол тапăнчĕç, пĕри хĕçпе, тепри сăнăпа. Хĕçне туртса илсе хуçрĕ Сăвас, сăнă кăкăрне тăрăнассинчен хăтăлаймарĕ.

Сăвас чĕри тапма чарăнчĕ. Нарпи ӳчĕ чунĕпе сывпуллашрĕ.

Ыр ут юртать — çул юлать. Ыр çын вилет — ят юлать. Паттăр çын вилет — мухтавĕ ĕмĕр-ĕмĕр тăсăлать.

Çапăçура пуç хунă паттăрсене пĕрле пытарчĕç. Ĕмĕрлĕхсен канлĕхне вĕсем кунта тупрĕç. Пурăннă чухне Сăваспа Нарпие юнашар пулма питех май килмерĕ, кунта тин пĕрле выртма тивĕçрĕç. Паттăрсен кĕлеткисене куринкесене чыслăн хучĕç. Куринке — йывăç хăвăлĕнчен тунă тупăк.

Вилнисене сулахай аяк çине вырттарчĕç, аллисене пуç айне хутлатса хучĕç, пуçĕсене çурçĕр еннелле пăхтарчĕç. Вилтăпри çине çӳллĕ тăпрас хăпартса купаларĕç, чул юпа лартрĕç. Иртнĕ кунсем чĕрĕлмĕç, анчах вĕсен чапĕ паянччenех пурăнать.

Этем ĕмĕрне вăрăмлатма пулать, анчах ăна вилĕмсĕр тума май çук. Аслă Танкăр çĕнтерӳçĕсене пурне те хăй патне илчĕ. Сăваспа Нарпи пек хастар çынсем чăваш халăхĕн татах пулччăр! Тĕлĕкĕсенче капăрлатнă пĕкĕ евĕр çичĕ тĕслĕ асамата курччăр, ĕмĕчĕсенче тăван хула çав асамат пек илемлентĕр.

## Ăнлантарни

Пирĕн шутпа, Шупашкара аталантараканĕ, уншăн тăрăшаканĕ Сăвас ятлă пулнă. Тĕп хулара, Сăварта, ăна çак ятпа хисепленĕ, сăваскарсем те çакна тиркемен.

Пăлхар-сăвассене монголсем пур енчен те хĕсме тытăнсан Сăвас элтепер Сăварта канран: «Пирĕн мĕн тумалла?» — тесе ыйтать. «Пытанар», — хуравлать патша. Ку ĕнтĕ халăхăн вăрмана, чăтлăха

пытанмаллине пĕлтернĕ. *Сăвар, сăвас, чувайс, чуар, чуваш* сăмахсем илтĕнӳпе тата пĕлтерĕшĕпе пĕр-пĕрне çывăх. Вĕсенче *чăваш* ĕлке çиеле тухать, çĕнтерет. Çапла вара *чăваш* сăмах хула элтеперĕ ятĕнчен пулса кайнă теме пулать.

«Гази-Барадж тарихы» летопиçре çапла палăртса хăварнă: «Ун чухнех пăлханнă округсенче акчирмышсем валли... Кукджак, Чыбыксар, Сундэр, Алат, Урджум, Алабуга, Арча, Нуршада баликсем туса лартнă...» Пăлхарсем пысăках мар крепоçсемпе тĕрмесене балик тенĕ. Унтанпа ячĕсем кăштах улшăннă, çапах та вĕсем Кокшага (Кокшайск), Чебоксары, Сундырь, Алатырь, Уржум, Елабуга, Арск пулнине ăнланса илетĕн. Нуршада вара Наровчат пулма пултарать.

Фра-Мауро 1459 çулта тунă географи картти çинче Атăлçи Пăлхара «Амазония» ятпа, Сăваскар хулине «Веда-Суар» (Пĕчĕк е Вăта Сăвар) ятпа палăртнă.

Хусан архиепископĕ Гурий 1555 çулта IV Иван указĕпе Шупашкара вырăс хули тесе пĕлтерет, çар чатăрĕнче вырнаçтарнă пĕрремĕш чиркĕве сăваплать, хулана Владимирти Тур амăш турăшне парнелет. Ку турăш халĕ Введени соборĕнче патша алăкĕн сулахай енче упранать. Иртнĕ ĕмĕрĕн 50-мĕш çулĕсенчен пуçласа Шупашкара сăвапланине хула çуралнă кунĕ тесе палăртаççĕ.

Араб ăсчахĕ Ибн аль-Асир (1160—1233) çырса хăварнисенчен çакă паллă, халиф Ирбиль хулин пуçлăхне Музаффаредина 1221 çулта хулана хӳтĕлеме хушать. «Килсе çитрĕм, анчах манăн кунта 800 чăваш çеç», — тет лешĕ. Араб алфавитĕнче «Ч» сас палли çукран Ибн аль-Асир летопиçре «таваш» тесе çырнă. Çапла вара чăваш халăхĕ тĕнчене хăй ячĕпе пăлхарлăх тапхăрĕнчех, XIII ĕмĕрте тухнă.

Хаяр Иван 1555 çулта Шупашкара хула шутне кĕртет. Шабогскар ят 1562 çулта çуралать. Çак ятпа палăртнă ăна акăлчансен еккипе Антоний Дженкинсон çулçӳревçĕ.



# Пичке сăртĕнче

## Артакпа килнĕ-и е вăрçăпа?

Муркаш районĕнче Пичке сăрчĕ пур. Вăл Юрпаш юхан шыв сăмсахĕ евĕр çурçĕр-хĕвелтухăçĕнчен кăнтăр-хĕвеланăçнелле тăсăлать. Катаран куçа пичке евĕр тăсмака курăнать. Ку сăрт ултă-çичĕ теçеттин лаптăк йышăнать. Сĕм авалах кунта çармăссем пурăннă. Вĕсем сунара çӳренĕ, выльăх-чĕрлĕх усранă, çĕрпе усă курма хăнăхнă.

Çичĕ ĕмĕр çурă каялла ку тăрăха Атăлçи Пăлхар элĕнчен (çĕршывĕнчен) чăваш-сăвассем пысăк йышпа куçса килеççĕ. Чулман Атăл тата Мăн Атăл урлă аякран килнĕ çынсемпе хирĕçес кăмăл çармăссен пулман. Пĕлнĕ: ытарайми çĕршыва çичĕ ют харап кăтартнипе пăрахса хăварма тивнĕ чăваш-сăвассен. Ахальтен мар ĕнтĕ тарса килнисем хăйсен кĕллине çапла пуçлаççĕ:

— Аслăран та аслă Танкăр, пире, хăвăн çылăхлă чурусене, усал-тĕселтен хăтар, чир-чĕртен сыхла, монгол харапĕнчен çăлсам!

...Апаш пинпӳ — чăваш-сăвассен çар пуçĕ — хăйĕн тĕкĕртне (отрядне) Пичке сăрчĕ çине вырнаçтарчĕ. Ку сăрт ыттисем хушшинче лапчăнараххăн, тăшман асăрхамалла мар пытанараххăн ларать. Чăваш-сăвас çарĕ ăçтине усал шухăшпа килекен çичĕ ют тăруках тавçăраймĕ. Кунсăр пуçне, Пичке сăртне сасартăках пырса кĕреймĕн. Ун тавра варсемпе шырлансем темиçе те. Вĕсен тĕпĕнче çăлкуçсем тапса тăраççĕ.

Малтан пинпӳ çӳллĕрех çутсем (сăртсем) çине сĕнтĕрсем (çирĕплетнĕ сăнав вырăнĕсем) турĕ, унтан Пичке сăртне тăш-

ман пырса кĕрейми тĕреклетме тытăнчĕ. Ёçчен халăх çарĕ хулаш тавра шӳмме (канав) чавса çаврăнчĕ. Унта шыв тултарчĕ. Шӳмме чавсан тухнă тăмпа тата тăпрапа пĕлсе усă курчĕç: ун шал енĕпе те, тулашран та виçĕ аршăн çӳллĕш валсем купаларĕç. Валсене тĕреклетме юман юпасенчен тăм тата тăпра тултармалли тăваткал пурасем ячĕç. Унччен ӳснĕ йывăççене турачĕ-мĕнĕпех вал варрине лартса хăварчĕç. Тăмне вутпа хĕртрĕç. Шӳмме урлă каçма тăватă енче тăватă çĕкленекен кĕпер турĕç. Валсем витĕр тухма тăватă хапха лартрĕç.

Юхан шыв пăрĕ кайсан, шыв-шур типсен, акана тухаспа, хĕвелтухăç енчи сĕнтĕр Пичке сăрчĕ еннелле темĕнле мăн йыш килнине пĕлтерчĕ. Хулашра мăйракаран тунă кăрнай хулăн сасăпа систерӳллĕн кăшкăртни илтĕнсе кайрĕ. Сылтăм енчи икĕ тăраллă чи çӳллĕ турултан — хӳтĕлев башнинчен — Апаш пинпӳ таçтан тем шутпа килнĕ йыш çине тинкерсе пăхать. Камсем унта? Мĕн шыраççĕ? Артакпа (мирлĕ шухăшпа) килнĕ-и е вăрçăпа?

Пинпӳ кăкăрĕ çинче йĕс питлĕх йăлтăртатать. Калпакĕ çинче те хулăн йĕс хăюсем. Ун хыçне çĕрпӳсем пырса тăчĕç. Вунпӳсем тĕкĕрçĕсене ушкăнăн-ушкăнăн тачă ретсемпе тăратрĕç. Вĕсем пурте çапăçăва хатĕр: пĕрисен аллисенче — çиппisене карăнтарнă ухăсем, теприсен — йăлтăркка вĕçлĕ сăнăсем, çурăм хыçĕнче, тир хутаçра — хайманра — ухă йĕпписем.

— Кусем Атăлçи Пăлхар элĕнчен пулма кирлĕ. Куратăн-и: уххисем пирĕнни пекех вăрăм, ик аршăна яхăн. Асăрха: хăйсене лăпкă тытаççĕ, — пуçне пăрчĕ пинпӳ еннелле пĕр çĕрпӳ.

Пинпӳ аллисене пуç тĕлне çĕклерĕ, ун хыçĕнче тăракансем те çаплах турĕç, хăнăхнă йĕркепе çӳлти Танкăра кĕлтурĕç:

— Эй, аслă Танкăр! Эй, унăн хĕвел сăнлă мăшăрĕ! Эпир ĕмĕр-ĕмĕр пурăнасшăн артакпа — мирлĕ, килĕштерӳллĕ пурнăçпа. Тăнăçлăх темле мулран та пахарах. Паяна та, ырана та тăнăç пурнăç парăр пире! Сывлăхран та катăк ан тăвăр!

Апаш пĕр çĕрпӳ еннелле çаврăнчĕ:

— Эппин, лăпкă пулар, тараватлăх кăтартар. Ман ятпа хушха: шур сухалсем хăнасене çăкăр-тăварпа кĕтсе илччĕр.

Апаш хушнине пурнăçлама çĕрпӳ васкасах кайрĕ. Кăштахран хулаш хапхи яри уçăлчĕ, унтан икĕ шур сухал тухрĕ. Иккĕшĕ те уявра тăхăнакан шап-шурă вăрăм çăм сăхмансемпе, çавăн тĕслех шĕвĕр тăрăллă калпаксемпе. Шур сухалсем умĕнче çамрăк пике — пинпӳ хĕрĕ Шуçăмпи. Вăл та чыслă тумланнă: пуçĕнче тухья, сулахай хулпуççи урлă сылтăм хул айне тевет тăхăннă. Ун çинче кĕмĕл укçа икĕ рет, çав ретсем хушшинче вĕт шăрçа. Пике утса пыруçăн тевечĕ чăнкăр-чăнкăр тăвать. Унăн аллинче, тĕрĕллĕ шурă пит шăллили çинче, пăри хăпартăвĕ, пăхăр суланчапа — тăвар.

Тарханĕ — çар пуçĕ — темле тиртен çĕленĕ плащ евĕр тумтирпе, ун çумĕсем тăвăр та кĕске курткăсемпе. Вĕсем тархан хыçне ункăланса тăнă. Çав шутра боилсем (сановниксем), çар çыннисен ертӳçисем, ăс паракансем, чиготсем (тархана сыхлакансем), багатурсем. Нихăшĕн çи-пуçĕнче те ылтăн тавраш çук. Унăн кăшкăрашуллă йăлтăравĕ вĕсемшĕн ют иккен, кĕмĕл çути кăмăлларах.

Шур сухалсем çĕре çити пĕшкĕнсе виçĕ хут пуç тайрĕç турхана. Хăрах урипе чĕркуççи çине ларса виçĕ хутчен çăкăнчĕ пике.

— Салам алейккĕм, хисеплĕ хăнамăр! — терĕ пĕр шур сухал, чи ватти. — Сана пирĕн çар пуç — пинпӳ — ырă кăмăлпа пуç таять. Пичке сăртĕнче сăнă-çĕмрен çук мар, анчах кунта мирлĕ халăх пурăнать. Астивĕрччĕ пирĕн çăкăр-тăвара!

Хăй енне тăснă çăкăр-тăвара ертӳçĕ тĕртсе ямарĕ, йăл кулса тутанса пăхрĕ.

— Ăшă салам — ырă кăмăл, çăкăр-тăвар — тараватлăх. Тĕрĕс-и, хисеплĕ ватăсем? Сирĕн пинпĕве хăйне курасчĕ! — аллине чĕри тĕлне тытрĕ тархан.

— Пиртен чару çук, — хуравларĕç шур сухалсем. — Сана тата хăвăн çумăнти чыслă çынсене пирĕн пинпӳ йышăнма хатĕр.

Шур сухалсемпе пикен çи-пуçĕсем тата вĕсем епле калаçни тăрăх кунта хăйĕнпе пĕр юнлă, пĕр чĕлхеллĕ йăх пурăннине ăслă та тавçăруллă тархан ăнкарса илнĕ ĕнтĕ. Çавăнпа вăл хăйĕн çумĕнчи çынсемпе пĕрле хулаша хăюллăн кĕчĕ.

Пинпӳпе тархан пĕр-пĕрне чысласа чĕркуççийĕсене хуç-

латрĕç, алă тытрĕç. Тархан çӳллĕ пӳллĕ, тĕреклĕ хул-çурăмлă, сарлака кăкăрлă. Кăвакара пуçланă хура çӳçĕ варкăш çилпе вĕл-вĕл вĕçет. Тир-сăран çи-пуçĕ кĕлеткине ятуллă кăтартать.

Хăнасем сайлă сĕтел хушшине ларчĕç.

— Эпир те, сирĕн пекех, Атăлçи Пăлхар элĕнчен. Унта пăлхарсене Купрат аслă ханăн ывăлĕ Кăтрак хан ертсе килнĕ. Ĕçчен халăх чĕмсĕр (çеçен) хирсене чун кĕртрĕ, сухаларĕ, акрĕ, кĕтӳ-кĕтĕвĕпе выльăх ĕрчетрĕ, хуласем никĕслерĕ, ачасем çуратса ӳстерчĕ. Атăлçи Пăлхар чечекленекен эл пулса тăчĕ. Çакă хĕвелтухăçĕнчен çичĕ ютсем килсе тухиччен çеç пычĕ çав... — Калама чарăнса тархан ассăн сывласа илет, аллине пинпӳ хулĕ çине хурса сăмахне малалла тăсать:

— Эсир хăвăра чăваш-сăвассем тетĕр пулас... Эпир хамăра чăваш-пăлхарсем тетпĕр. Пурпĕр пĕр халăх. Пытарма çук ĕнтĕ, Атăлçи Пăлхар элĕ вăйсăрланнăçемĕн вăйсăрланса пырать.

Чăваш-пăлхарсем каласа кăтартнинчен çакă паллă пулчĕ: вĕсем çичĕ ютпа пĕрре çеç мар паттăррăн çапăçнă, анчах тăшман чее те вăйлă, тискер те чурăс. Çакна пула чăваш-пăлхарсене хăйсен элне куççуль юхтарсах пăрахса хăварма тивет.

— Чура пулма каялла таврăнас килмест, — лăстăр силлет çӳçне тархан. — Инçе çула тухасси мĕн чухлĕ лайăх, каялла таврăнасси çавăн чухлĕ япăх. Аслă Атăл ку енне халăх йышăнман ырăрах вырăн шыраса килтĕмĕр. Куратпăр, ку таврара эсир пурăнатăр. Сирĕн çывăха вăхăтлăха чарăнма юрамĕ-ши? Утсене кантарăпăр та юхан шывра пулă тытса типĕтĕпĕр, унтан малалла çул тытăпăр...

Тархан çапла каларĕ те пуçне тайрĕ. Ун çине кунти пинпӳ тĕсесе пăхса илчĕ.

— Эпир чăваш-сăвассем, — тӳрленсе тăчĕ вăл. — Пирĕн йăла-йĕрке çапла: килен-каяна çăкăр-тăварпа кĕтсе илетпĕр. Чĕрре кĕрекене сулхăн шывпа сивĕтетпĕр. Сĕмсĕрсене çухаран ярса тытатпăр. Вăйăмăр-халăмăр çитмесен — вилсен вилетпĕр, чĕрĕлле парăнмастпăр. Килекенсенчен хăшĕ пиртен чыс курать, хăшĕ ĕнсе кукли çиет. Илтнĕ эпĕ: чăваш-пăлхарсем — пирĕнпе тăван халăх. Пирĕн сире тиркеме сăлтав çук...

— Çапла, çапла... — килĕшрĕç пинпӳпе унăн çумĕсем.

— Эпир хамӑр валли ҫӗнӗ эл шыратпӑр, — каллех пусне таять тархан.

Пинпӳ хӑйӗн ҫумӗсемпе канашласа илчӗ, унтан хӗпӗртӳллӗ сӑнпа ҫапла пӗлтерчӗ:

— Пирӗн таврара хир-ҫаран анлӑ, шыв-шур тулӑх. Тӑван халӑха хапӑл туса йышӑнатпӑр. Юнашарах вырнаҫӑр, килӗштерсе пӗрле пурӑнӑпӑр! — тараватлӑн каларӗ пинпӳ.

Часах чӑваш-пӑлхарсем хулаш тулашӗнче чатӑрсем тӑватӑва лартрӗҫ, алӑк выранне тирсем карчӗҫ. Вӗсене чӑваш-сӑвассем хапӑл туса пулӑшрӗҫ. Чатӑр варринчи тӑмпа шӑлса тирпейленӗ вучахсенче чӑваш-пӑлхарсем ҫамрӑк лаша ашӗ пӗҫерчӗҫ. Пичке сӑртӗнче тата ун таврашӗнчи ялсенче тархана — турхан, чигота — йӗкӗт, багатура — пӑхаттир теме тытӑнчӗҫ. Вӑхӑт иртсе пынӑ май ку сӑмахсем вӗсен чӗлхине манӑҫми кӗчӗҫ. Чӑваш-пӑлхарсем чӑваш-сӑвассене чул ҫуртйӗре ҫыхӑнтаракан шӗвексӗрех купалама, шыв пӑрӑхӗсем ӑсталама вӗрентрӗҫ.

## Юрату ҫапла пуҫланать

Шуҫӑмпи катара ҫӳрет. Сӑрккине чӗлпӗртен ҫавӑтнӑ. Сасартӑк хӗр умӗнченех ӑсан чарӑлтатса вӗҫсе ҫӗкленчӗ. Пике хӑрамарӗ, Сӑркка вара тӑпах чарӑнчӗ.

— Тупрӑн хӑрамалли... Ӑсан хӑй хӑравҫӑ, — лӑплантарчӗ пике утне, ӑна мӑйӗнчен лӑпкарӗ. Вӑрмантан тухсан Шуҫӑмпи курах кайрӗ: инҫех те мар пӗр каччӑ ҫӳллӗ ҫӳрен урхамахӑн ҫилхине якатать, ӑна ҫепӗҫ сӑмахсем калать. Унтан каччӑ урхамах пуҫне хӑйӗн хулӗ ҫине хучӗ. Икӗ чун — ҫынпа выльӑх — пӗр-пӗрне ӑнланнӑн пӗр хушӑ хытса кайнӑ пек тӑчӗҫ. Урхамахӗпе йӑпанакан каччӑ патне Шуҫӑмпи хӑюллӑн пырса тӑчӗ.

— Салам алейккӗм чӑваш-пӑлхар каччине! — янӑратрӗ хӗр янкӑс сассине.

— Салам! — васкамасӑр хуравларӗ каччӑ. Вӑл тӳрех асӑрхарӗ: хӗр ҫав тери илемлӗ! Куҫӗ йӑм хура, сӑмси тӳрӗ, ӳчӗ хӗвелпе пиҫсе хӗрелнӗ, ку таранччен каччӑна чуптуса курман тути чие ҫырли тӗслӗ. Сӑн-пичӗ ку хӗр ҫирӗп шухӑш-

кăмăллă пулнине кăтартать. «Кам вара эсĕ?» — ыйтасшăнччĕ Румен, хĕр хăех шăнкăрав пек сассипе уçăмлăн каларĕ:

— Пинпӳ хĕрĕ эпĕ. Ятăм — Шуçăмпи.

— Эпĕ тархан ывăлĕ. Румен тесе чĕнеççĕ мана.

Урхамахне утлансанах каччă йĕнер çумне сухăр пекех çыпăçса ларчĕ. Пулать вĕт çавнашкал ăста юлан утçă. Хĕрпе каччă хулаша пĕрле таврăнчĕç. Хĕр те ут çинче арçын пекех лăпкăн та кĕрнеклĕн ларса пырать. Çул çинче çамрăксем нимĕн те пуплемерĕç, пĕр-пĕрин çине вăрттăн пăха-пăха илчĕç кăна. Икĕ ут вара — ăйăрпа кĕсре — хуçисем килĕштернине сиснĕ пекех çураçуллăн юнашарах утса пычĕç.

Кун хыççăн кун иртет. Румен пăхаттир ытлашши пуплеме юратакан çын мар, анчах Шуçăмпипе тĕл пулсан унпа шăкăл-шăкăл калаçма яланах хавас. Вăл Аслă Пăлхар элĕн ватă ханĕ Купрат, унăн ывăлĕ Кăтрак, пăлхарсен тĕп хули Фанагори çинчен хĕре час-часах кала-кала парать. Кăтрак пек чăн-чăн паттăр пулас ĕмĕтне те пытармасть.

Купрат ханăн Пакане ятлă пӳлев (юмăç) пулнă иккен. Çыншăн кам та кам шанчăклă тус пулнине, кам та кам курайми тăшман иккенне вăл витĕр курса тăнă.

— Танкăр — çӳлти Турă — мана малашнехи пирки çынсене систерсе калас пултарулăх панă. Çавăнпа ĕненĕр мана: пăлхарсен хальхи вырăнтан куçса кайма тивет. Катара-катара, Танкăр пӳрнĕ тулăх çĕршывра, вĕсем мирлĕ халăха тĕл пулаççĕ, унпа тăванлашаççĕ, — хăюллăн ăнлантарать Пакане мăнаçлă хан умĕнче.

Чăваш-пăлхарсем Паканене пысăк хисепе хураççĕ. Унăн пĕчĕк кĕлеткине пӳртре тĕпелти кĕтесе вырнаçтараççĕ. Ăна Танкăр хĕрĕ тесе шутлаççĕ. Чăваш-сăвассем вара ăна Пукане ят пачĕç.

Чăваш-пăлхар каччи Румен чăваш-сăвас хĕрне Шуçăмпие курнăçмассерен тек йăпатать чĕлхипе, тек илĕртет куçĕпе. Каччăна тĕл пулсан хĕр чĕри те савнăçпа тулать. Румен çапла шутлать: чăваш-сăвас хĕрĕ унăн çăлтăрĕ те, телейĕ те. Паллах, чăваш-пăлхар хĕрĕсем те тиркемелле мар, анчах чунĕ Шуçăмпи еннеллех туртать. Унра иксĕлми вăй тапса тăрать. Вăл акăш евĕр ярăнса утать.

Ашшӗ парнеленӗ урхамахпа Румен ир те, каҫ та ут кӗтӗвӗсене тӗрӗслеме тухать. Утсем Юрпаш хӗрринчи улăхра ҫӳреҫҫӗ, ҫăра курăк ҫинче ыр кураҫҫӗ. Кӗтӳ патне ҫывхарнă чухне ҫамрăк пăхаттир темле шăй-шай илтет. Тихасем ҫине тапăннă кашкăрсене хӳтереҫҫӗ-мӗн кӗтӳҫсем. Румен пӗр тукмак хӳрене ухăпа тӗллесе перет те, лешӗ чăкăл-макăл йăванса каять. Теприне пеме ӗлкӗреймерӗ — элес-мелес кашкăр кӗтмен ҫӗртен палтах йăванса кайрӗ. Румен шалт тӗлӗнсе ҫаврăнса пăхрӗ те Апаш пинпӳ хӗрне курах кайрӗ. Элес-мелесе вăл пенӗ иккен. Каччăпа хӗр кӗтӳҫсемпе пӗрле кашкăр кӗтӗвне чăл-пар салатрӗҫ, йӗнерӗсенчен пӗрер кашкăр вилли ҫыхрӗҫ те хулаша пӗрле таврăнчӗҫ.

Тепӗр эрнерен, тӗттӗм пуласпа, Румен Юрпаш хӗрринчи улăхра каллех тискер ҫуйхашу тӗлне пырса тухрӗ. Таҫтан хăяматран килнӗ виҫӗ вăрă-хурах виҫӗ ута мăйкăчланă та таҫта хир еннелле вăрласа каяҫҫӗ. Вӗсене хăваланă май шиксӗр каччă иккӗшне ухăпа персе ӳкерчӗ, виҫҫӗмӗшне ҫитсе-ҫитсе пынă чухне ӳксе юлнисенчен пӗри, аманнăскер, тархан ывăлне хыҫалтан персе ҫурăмӗнчен лектерчӗ. Юрать-ха Румен патне юлан утпа Шуҫăмпи вӗҫтерсе ҫитрӗ. Тăнне ҫухатнă каччă ҫурăмӗнчен хӗр ухă йӗппине хăвăрт туртса кăларчӗ, телее ҫӗмрен тарăн кӗмен. Суран ҫине темле сиплӗ курăк хучӗ те шурă чӗрҫиттипе пиллесе ҫыхрӗ.

— Ах, инкек! Ах, инкек! Вăрă-хурахпа пӗччен тытăҫма юрать-и вара?! Ытла та теветкел эсӗ! Чикӗсӗр теветкел! — мăкăртатрӗ хӗр. Кӗлетки лăнчăр кайнă качча аран йăтса йӗнер урлă вырнаҫтарчӗ. Хăй ун хыҫне ларчӗ: «Хам айăплă, хам айăплă! Вăхăтра ҫитсе пулăшаймарăм!» — ҫул тăршшӗпех хăйне ӳпкелесе пычӗ хӗр. Румен урхамахӗ Сăрккаран юлмарӗ, пӗр вӗҫӗмсӗр пăшăрхануллăн кӗҫенсе пычӗ.

Виҫӗ кун, виҫӗ каҫ чăлăм куҫ хупмасăр Шуҫăмпи каччă умӗнче ларчӗ. Вутла ҫунакан ҫамки ҫине пит шăллине шывпа йӗпете-йӗпете хучӗ, питӗнчен, тутинчен чуптурӗ. Виҫӗ кунран тăн кӗрсе куҫне уҫсанах Румен хыттăн кăшкăрса ячӗ:

— Шуҫăмпи! Виҫҫӗмӗшне хăвала! Виҫҫӗмӗш тарать!

— Ăмăрт кайăкăм, ан пăшăрхан: виҫҫӗмӗшне кӗтӳҫсем

тытнӑ. Утсене пӗрне те вӑрлайман! — ләплантарчӗ качча хӗр, шурса кайнӑ пичӗпе ун ҫумне сӗртӗнчӗ.

Сипленсе вӑй илсен Румен Пичке сӑрчӗ ҫумӗнчи ката вӑрмана тухать те пинпӳ хӗрӗн Шуҫӑмпин юррине илтет:

Ҫӗмӗрт ҫеҫке ҫурсассӑн
Килет вӑрман илемӗ.
Ҫӗмӗрт ҫеҫки тӑкӑнсан
Каять вӑрман илемӗ.
Савни чунтан савсассӑн
Килет пурнӑҫ илемӗ.
Савни ӑшшӑн савмасан
Каять пурнӑҫ илемӗ.
Вӗл-вӗл чечек, вӗл чечек,
Вӗлле ҫинче сар чечек,
Ҫил тӑлпаса вӗҫтерсен
Вӗлле чечексӗр юлӗ.
Чипер пике, сар пике,
Ун ҫумӗнче сар каччӑ.
Савни кӑлӑх сивӗнсен
Чунӑм пушанса юлӗ.
Курӑк ҫинчи сывлӑмпа
Чечен чечек пит ҫӑвать.
Ҫӑвӑнсассӑн, тасалсан
Тата чечен курӑнать.
Хӑй ҫӗленӗ шупӑра
Чиперкке хӗр тӑхӑнать.
Тӑхӑнсассӑн, тумлансан
Тата чипер курӑнать.
Паха, яка пӑхӑртан
Хитре сулӑ пултӑр-и?
Ҫутӑ кӗмӗл укҫаран
Алри ҫӗрӗ пултӑр-и?
Эп паллашнӑ пӗр йӗкӗт
Манӑн тусӑм пултӑр-и?
Хушать пулсан кӑмӑлӗ,
Чун-чӗререн савтӑр-и?

— Ай мӗн тери хӳхӗм Шуҫӑмпи юрри! — сасӑпах каларӗ шухӑшне Румен. Унтан хӑй те юрласа ячӗ:

Кӑвак кӑвакарчӑн, чакӑр куҫ,
Кам куракан тулӑ сапӑрах.
Пинпӗвӗн те хӗрӗ хура куҫ,
Кам куракан салам калӑрах.
Хура вӑрман тутлӑн тӗлерет,
Шухӑ ҫил вӗрсессӗн авӑнать.

Пикене курсассăн — чĕрере
Юрату туйăмĕ вăранать.
Тарăн варти сарă чечеке
Хĕвел питех курмасть, мĕн тăвас?
Чун савакан йăрăс чиперкке
Курнăçма çӳремест, мĕн тăвас?
Сад варринче шукăль улмуççи,
Тăкăнминччĕ улми çĕр çине.
Чăваш хĕрĕ маншăн чун уççи,
Ан мантăрччĕ пăлхар каччине.
Ан яр, тăван, утна пахчана,
Ан таптатăр ешĕл курăка.
Ан вылятсам, пике, кăмăлна,
Тăрса юлăп сансăр хăрăка.
Чăпар куккук, авăт хытăрах,
Санăн чарăнасси инçе мар.
Ан пăшăрхан, савни, кăлăхах,
Пирĕн туй пуласси инçе мар.

Румен — çирĕм çулхи каччă. Чăваш-пăлхар пăхаттирĕпе чăваш-сăвас пики тĕл пулсан шалта темле ырă туйăм çутатать вĕсен сăнĕсене. Кирек хăш çамрăк та хăйĕн малашлăхĕ çутă пуласса шанать.

— Атя иксĕмĕр тăванлашар! — сĕнчĕ хĕре Румен.

Шуçăмпи сăнĕ хĕвел шевли пекех çуталса кайрĕ, анчах малтанлăха ăнланмана печĕ.

— Мĕнле майпа?

— Мăшăрланар иксĕмĕр... — вĕрин пăшăлтатрĕ каччă.

— Апла юрать-и? Тархалпа пинпӳ пиллени кирлĕ пуль...

Каччăпа пике — чăваш-пăлхарпа чăваш-сăвас — туслăхĕ мĕн патне илсе пырассине ашшĕ-амăшĕ курсах тăнă.

Икĕ ертӳçĕ çемйине хурăнташлă тăвакан туй чаплă иртет. Çĕнĕ çынсен малтан Донка хĕр ача, унтан Аспарух ывăл çуралать. Çакăнтан пуçланать те икĕ йăх юнĕ пĕрлешме. Туй хыççăн туй кĕрлет. Чăваш-пăлхар каччи чăваш-сăвас хĕрне качча илет, чăваш-пăлхар хĕрĕ чăваш-сăвас каччипе пĕрлешет. Икĕ йăх çыннисенчен пĕр ямахат пулса каять.

Бронза епле шăратаççĕ? Малтан пăхăра уйрăм, тăхлана уйрăм ирĕлтереççĕ. Унтан пĕрле хутăштараççĕ. Çак икĕ халăхпа та çавнашкал пулса тухнă. Пĕр-пĕринчен уйрăм пурăнни икĕ халăх — чăвашсемпе пăлхарсем — сĕм авалах кăнтăрти

çĕршывра çывăхланнă та, куçса килнĕ хыççăн пĕр чаплă патшалăх — Атăлçи Пăлхар элĕ — туса хунă. Пĕр халăхăн икĕ йăхĕ — чăваш-сăвассемпе чăваш-пăлхарсем — Пичке сăрчĕпе ун таврашĕнчи çутсенче тăванла çывăхланаççĕ, çирĕп чăмăра пĕрлешеççĕ.

Пичке сăрчĕ çумĕпе çырмари шыв шавах малалла юхать. Çул хыççăн çул иртсе пырать. Хулашри çара пĕр çын — турхан — ертсе пыма пуçлать. Турхан вырăнне турхан ларать. Таврари ялсем пурте ăна пăхăнаççĕ.

## Пӳлев тĕрĕсех каланă

Утă çулса пуçтарсан хĕвеланăç енчи сĕнтĕр Пичке сăрчĕ еннелле пысăк çар килни çинчен систерчĕ. Хулашра кăрнай хулăн сасăпа кăшкăртни шиклентерӳллĕн илтĕнсе кайрĕ. Ик тăрăллă чи çӳллĕ турултан турхан таçтан тем шутпа килнĕ йыш çине тинкерсе пăхать. Ют эшкерĕн вут кăрал та, пăшал та, тупă та пур.

Турултисем пĕрре çичĕ ют çарĕ çине тинкерӳллĕн, тепре турхан çине ыйтуллăн пăха-пăха илеççĕ. Ăна пурте пысăк хисепе хураççĕ. Вăл хушнипе шыва сикме те, вута кĕме те хатĕр. Çамрăк мар ĕнтĕ турхан. Çӳçĕ самаях кăвакарнă, çамки пĕркеленчĕксемпе картланнă, анчах кĕлетки пĕкĕрĕлсе ларман.

— Чулхула вырăсĕсем мар-и кусем? Тумĕ çавсен, — пĕлтерчĕ шухăшне пĕр çĕрпӳ.

Турхан çамрăк çĕрпӳ еннелле çаврăнчĕ:

— Тӳлек тытаççĕ хăйсене. Усал шухăш çук вĕсен. Ват элчесене кайса пăхма ыйтар.

Кăштахран хулашран икĕ шур сухал тата çамрăк пике — турхан хĕрĕ Çăлтăрпи тухрĕç.

— Хаклă çынсем! Салам сире турхантан. Астивĕрччĕ пирĕн çăкăр-тăвара! — пуç тайса сĕнчĕç шур сухалсем. Хĕр пит шăлли çинчи çăкăр-тăвара хăна еннелле йăл кулăпа тараватлăн тăсрĕ. — Мĕн шухăшпа çӳренине пĕлтерĕр пире.

Вырăс князĕн куçĕ ăшшăн çуталса илчĕ.

— Ырă ут капанран тарман, ырă çын çăкăр-тăвартан пă-

рӑнман, — терӗ вӑл. Кӑмӑллӑн пуҫне сӗлтрӗ, хӑпартуран пӗр татӑк хуҫса илчӗ те йӑл кулсах ҫисе ячӗ.

Турхан йыхравланипе хулаша кӗрсен князь ҫапла евитлерӗ:

— Чӑвашсене эпир лайӑх кӳршӗсем тесе шутлатпӑр. Апла пулсан вырӑс дружини сирӗнпе хирӗҫмест. Эпӗ йӳркӗнсене хирӗҫ тухнӑ. Вӑрӑм ҫул хыҫҫӑн пӗрер кун канма ирӗк памӑр-ши? Мӗнпе те пулин пулӑшма кӑмӑл тумӑр-ши? Хӑваласа ямасан ҫав йӳркӗнсем кунта та ҫитме пултарӗҫ.

Вырӑс княҫӗпе чӑваш турханӗ кӗрекере туслӑн калаҫса ларчӗҫ. Ури тайӑлас пек тулли сӗтел ҫинче тем тӗрлӗ ҫимӗҫ те пур: шӑрттанпа тултармӑш, така ашӗпе вир пӑтти, сӑрапа сим пыл... Хӑй каланӑ тӑрӑх, князь шанчӑклӑ дружинипе темле пӑтӑрмахра та пулнӑ. Ахальтен мар ӗнтӗ унӑн ҫӳҫӗ хӗллехи юр пек шап-шурӑ.

— Ман шутпа, пӗр халӑхӑн тепринпе икӗ тӗрлӗ пуплеме май пур: килӗштерсе е вӑрҫӑнса. Вӑрҫӑнса тени харкашнине, тӳпелешнине, ҫапӑҫнине пӗлтерет ахӑр. Кӗрекере иксӗмӗр калаҫса ларнӑ пек пуплеме те пулать-ҫке. Ман шутпа, вырӑспа чӑваш яланах килӗштерсе те ҫураҫса, татуллӑ та лӑпкӑн калаҫчӑр. Пӗр сӗтел хушшинче ларччӑр.

— Ырӑ ҫыннӑн сӗнӗвӗ те ырӑ. Ку сӗнӳпе хаваслансах килӗшетӗп, — князь аллине чӑмӑртарӗ турхан. — Чӑвашсем пӑлхарсемпе тӑван. Пӑлхарсем вара чаплӑ Аттила тӑхӑмӗнчен. Пӑлхарсен аслӑ ханӗн Купратӑн тӑватӑ ывӑл пулнӑ. Чӑваш-пӑлхарсене Мӑн Атӑлпа Чулман Атӑл тӑрӑхне вӗсенчен пӗри Кӑтрак ертсе килнӗ. Пирӗн халӑх ӗмӗр-ӗмӗр тӑнӑҫ пурнӑҫшӑн кӗрешнӗ...

Князь, ҫутӑ куҫлӑ вӑйпитти арҫын, турхан каланине тимлӗн итлет. Вӑл Купратӑн тепӗр ывӑлӗ Аспарух ҫинчен те пӗлесшӗн.

— Аспарух йывӑрлӑхсене ҫӗнтерсе пӑлхарсене Дуна (Дунай) тӑрӑхне ертсе каять. Вӑл хитре хӗре Пакане пӳлеве юратнӑ. «Ҫут тӗнчере мӗн пур, ҫавна йӑлтах Танкӑр тытса тӑрать. Унран асли ҫуках, — ӗнентернӗ Пакане. — Танкӑр ирӗкӗпе, ҫичӗ ютсем хӗснипе пӑлхарсем ҫӗнӗ ҫӗре куҫса кайрӗҫ. Хӑйсен пурнӑҫӗн йывӑр ҫулӗ ҫинче мирлӗ халӑхсене тӗл пулӗҫ. Вӗсемпе туслӑ пурӑнӗҫ». Пӳлев тӗрӗсех каланӑ-

мӗн. Пӑлхар-чӑвашсемпе сӑвас-чӑвашсем тӑванлашнӑ, халӗ акӑ вырӑссемпе пӗр чӗлхе тупма тӑрӑшатпӑр...

Ҫӑкӑр-тӑварпа сайланӑ хыҫҫӑн турхан княҫа хулаш тӑрӑх ертсе ҫӳрерӗ. Ҫуртсене чул ҫине чул епле хурса купаланине хыпаласах тӗрӗслерӗ — чулсене ҫыхса тӑракан акшар ҫӑрнӑ тӑмсӑрах ҫирӗп тытӑнса тӑнинчен тӗлӗнчӗ. Ҫакна турхан асӑрхарӗ те ӑнлантарса пачӗ:

— Чӑваш-пӑлхарсем вӗрентнӗ пек купаларӑмӑр.

Уйрӑлса каяс умӗн вырӑс княҫӗ турхана пӑлат хӗҫ парнелерӗ, унӑн йӗннине ылтӑнпа эрешленӗ.

— Тавтапуҫ! Пысӑк тав! Чӑвашсем ылтӑн хакне пӗлмеҫҫӗ теме ҫук, анчах вырӑссем пирӗнпе туслӑ пулни ылтӑнран та хаклӑрах! — пуҫне тайрӗ турхан. Парӑмра юлас мар тесе вӑл княҫа Пичке сӑрчӗ хӗрӗсем тӗрленӗ, кӗмӗлпе эрешленӗ шурӑ кӗпе тӑхӑнтартрӗ.

Вырӑс дружинине пулӑшма турхан ҫӗр тӗкӗрҫӗ уйӑрчӗ, ҫынсем валли апатлӑх пӑри ҫӑнӑхӗ, юр-вар, утсем валли сӗлӗ тиеттерчӗ. Княҫа ҫакӑ питӗ килӗшрӗ.

— Ҫӑкӑр-тӑвар хире-хирӗҫ теҫҫӗ. Ырӑ тунине ырӑпа тавӑрмалла пултӑрччӗ! — терӗ вӑл сывпуллашса уйрӑлнӑ чухне.

## Этеме кӑралпа кӑна пӑхӑнтараймастӑн

Ыраш тӗшши тулса ҫитнӗ те хыта пуҫланӑ, часах вырма тухмалла. Шӑп та лӑп ҫак вӑхӑтра Пичке сӑрчӗ патне пысӑк ҫар ҫывхарса килет. Ҫакӑн ҫинчен хӗвелтухӑҫ енчи сӗнтӗр вӑхӑтра систерчӗ. Турхан карманӑн сылтӑм енчи турулӗнче, чи ҫӳллӗ вырӑнта. Ҫивӗч куҫӗ йыхравсӑр килнӗ ҫичӗ юта сӑнаса пӑхать. Ҫывӑхри тата аякри сӑртсемпе тӳпемсем ҫинче, мӗнпур ҫулсемпе сукмаксем тӑрӑх тискер те хӑрушла юлан утсем вӗҫӗхӗррисӗр нумайӑн унталла-кунталла вӗҫтерсе ҫӳреҫҫӗ. Вичкӗн учӗсем лутра, ҫӑмламас, ҫилхисем тӑлпаланнӑ. Ҫыннисем пурте сӑран йӗнерсемпе, кукӑр хӗҫсемпе, кӗске сӑнӑсемпе.

— Камсем кусем? — пӑшӑлтатать турхан хыҫӗнче ҫамрӑк ҫӗрпӳ, Румен ывӑлӗ Аспарух.

— Курмастӑн-им? Урта тутарӗсем... Ҫапах кала: чӗнмен хӑнасем патне шур сухалсем ҫӑкӑр-тӑварпа тухчӑр.

Аспарух хӑвӑртах турхан хушнине пурнӑҫлама кайрӗ. Кӑштахран хулашран икӗ шур сухал тухрӗҫ. Пӗрин аллинче улача ал шӑлли ҫинче ыраш ҫӑкӑрӗ, тимӗр суланчапа тӑвар. Ҫичӗ ют умӗнче тайӑлмарӗҫ, пӗшкӗнмерӗҫ, пуҫӗсене кӑна сӗлтрӗҫ вӗсем.

— Эпир чӑвашсем. Пирӗн йӑла-йӗрке ҫапла: килекене ҫӑкӑр-тӑварпа кӗтсе илетпӗр, каякана кӑмӑлне кура ӑсататпӑр. Астивӗрччӗ пирӗн ҫӑкӑр-тӑвара.

Тутарсен ҫар пуҫӗ — сивлек сӑнлӑ этем — чӑвашсен ҫӑкӑр-тӑварне астивме шутламарӗ, терджуман (тӑлмач) сӑмахӗсене итлесе пӗтермесӗрех хӗсӗк куҫне пушшех хӗссе хучӗ, хаклӑ чулсемпе эрешленӗ калпакне чалӑштарса лартрӗ, пуҫне тата ҫӳлерех каҫӑртрӗ.

— Калӑр турханӑра: хулаш хапхисене яриех уҫса хутӑр. Пире парӑнтӑр! — ик аллине усӑнчӑк хырӑмӗ тӗлӗнче хӗреслетсе тытать ҫар пуҫӗ. Ҫав вӑхӑтра тӗксӗм сивӗ сӑнӗ тискерленсех каять.

Ҫӳллӗ шур сухал, чи ватти, пуҫне мӑнаҫлӑн каҫӑртать, сӗмсӗр ҫичӗ юта хыттӑн хуравлать:

— Эпир — чӑвашсем. Вӗриленекене сулхӑн шывпа сивӗтетпӗр. Сӗмсӗрсене ҫухаран ярса тытатпӑр...

Ҫар пуҫӗ шур сухала малалла калама памарӗ, ун аллинчи ҫӑкӑр-тӑвара кукӑр хӗҫӗпе йӗрӗнчӗклӗн ҫапса ҫӗре ӳкерчӗ. Юрать-ха шур сухалне хулаша таврӑнма мехел килчӗ.

Кӗҫех ҫар пуҫӗ пӗтӗм туменне — вунӑ пинлӗ ҫарне — йӗркелесе тӑратрӗ, хӑйӑлти сассипе кӗске сӑмах каларӗ:

— Тӑнлӑр та пӑхӑнӑр! Туменри мӗнпур нукерсене манран салам! Пӗлетӗр: Ылтӑн Урта — ӗмӗрлӗх. Пӗтӗм тӗнчене чӗркуҫҫи ҫине тӑратнӑ Джитхангир хан хушнипе кунта ҫӗнӗ улус тӑватпӑр. Унӑн чикки Сӑр хӗррине ҫитмелле, ун урлӑ та каҫса каймалла. Унтан уруссен Чулхулине ҫул тытатпӑр, хамӑрӑн чаплӑ утсене икӗ пысӑк юхан шыв кукринче — Окапа Итиль пӗрлешнӗ тӗлте — шӑваратпӑр. Ҫавӑн пек пурне те пултаракан Танкӑр ирӗкӗ, аслӑ хан кӑмӑлӗ!

Хулашри тӗкӗрҫӗсем каҫхи кӗлле пуҫтарӑнчӗҫ. Вӗсен хушшинче ҫӑра сухалне тирпейлӗн касса якатнӑ хисеплӗ ватӑ ҫын — мӑчавар. Унӑн кӗлли тикӗс шыв юххи пек. Ҫирӗп те лӑпкӑ сасӑпа вӑл пурте ӑнланмалла сӑмахсем калать:



— Эй, аслă Пӳлĕх! Эй, пире пăхан ырăсем! Акапуçпе сухаласа, акса, вырьăх-чĕрлĕх ĕрчетсе, пулă тытса, сунара çӳресе пурăнасшăн эпир. Ача-пăча ӳстересшĕн!

Мăчавар сăвапла ĕç тăвать: Пӳлĕх умĕнче илемлĕн, тăнлăн калаçать. Кашни сăмахĕ юрă çаврăмĕ евĕр виçеллĕ, вырăнлă. Тĕкĕрçĕсем шăпах, пурте тухăçалла пăхнă, чĕркуçленсе ларнă.

— Çакăнтах, асаттесемпе асаннесем, аттесемпе аннесем тымар янă вырăнтах, пурăнасшăн эпир. Саланма-пĕтме ан парăр пире. Упрăр пире, сыхлăр пире! Нимрен те ытла çичĕ ют мăшкăлне курма ан парăр! Пуçра сывлăх пултăр! Ал-урара вăй пултăр!

...Турхан — пысăк чунлă хастар чăваш. Пичĕ çилпе кушăрханă, куçĕ çăлтăрла çунать. Вăл чи малтан Така сăртне, Малахай хулаша тата Туçи Олкаша вăрттăн çулсемпе хыпарçăсем кăларса ячĕ, унти чăвашсенчен пулăшу ыйтрĕ.

Темиçе кун каялла кăна хулашра, ун таврашĕнчи ялсенче хавасла пурнăç вĕресе тăратчĕ. Яш-кĕрĕм каçсерен вăййа ту-

хатчĕ, юрăсем шăрантаратчĕ. Чипер инкесем кăпăкланса тăракан сăра юхтаратчĕç, тултармăш тата хуплу пĕçеретчĕç.

Çичĕ ют вăрçăпа килни çинчен усал хыпар сăртран сăрта, çутран çута хăвăрт сарăлать. Хулаш та, ун çывăхĕнчи чăваш ялĕсем те кар хускалаççĕ. Тимĕрçĕ лаççинче ăстаçăсем вас-касах сăнă, çĕмрен хатĕрлеççĕ, хĕçсем туптаççĕ, хăртсем — вăрăм авăрлă, çур уйăх евĕр пуртăсем хăйраççĕ. Стариксем те вăйпитти арçынсенчен юласшăн мар: ухăсем хатĕрлеççĕ, юман чукмарсем, кӳсексем касса якатаççĕ. Кама мĕн ал çемми, çавна тăвать. Камăн аллинче çапăçмалли хатĕр пур, çавă тăван эле хӳтĕлекенсен ретне тăрать.

Турхан хăй вырăнĕнчех — сылтăмри тĕп турулта. Тĕттĕм пуласпа вăл çакăн пек хушу пачĕ:

— Ниçта та кăвайт чĕртмелле мар.

Мĕншĕнне-мĕнне ăнланайманран Аспарух çĕрпӳ ун çине ыйтуллăн куç ывăтрĕ.

— Куратăн-и, тутарсем тĕрлĕ тĕлте вырнаçрĕç. Вĕсем ăçта-ăçта тата мĕн чухлĕн пулнине кăвайтсем тăрăх тавçăрма май пур. Вăрман енчен вут çути пачах курăнмасть. Тутарсем, тен, унта та пур? Пĕлместпĕр. Çынна пĕлменни хăратать те. Пирĕн тĕкĕртсем еплерех вырнаçни те тăшмана паллă ан пултăр.

Турхан çĕрĕпе те кăтăш пулса илеймерĕ. Ăçта унта куç хупма — тăшмана епле тăн кĕртесси пирки шутларĕ. Йыш-па мар, ăсталăхпа çĕнтермелле. Турхан пулас çапăçу хирĕн ик енĕпе экеметсем (пытанса ларнă отрядсем) вырнаçтарчĕ. Турхан çарĕнче ама çынсен тĕкĕрчĕ те пур. Малтанхи вăхăтра унта чăваш-пăлхар хĕрарăмĕсем çеç пулнă. Чăваш-сăвас хĕра-рăмĕсем вĕсенчен юлма шутламарĕç, тĕкĕрте йышлăн хут-шăнчĕç. Унăн ертӳçи Шуçăмпи хĕрĕ Донка. Турхан ку тĕкĕрте хулаш валĕн шал енне тăратрĕ. Çĕрле Така сăртĕнчен, Мала-хай хулашран тата Туçа Олкашран чăвашсен самаях пысăк тĕкĕрчĕсем килсе çитрĕç. Вĕсене турхан тăшман çарĕ хыçĕн-чи ката вăрманта вырнаçтарчĕ. Шанчăклă ентешсем тăван халăх пĕрлĕхне нимрен мала хураççĕ. Туçи Олкаш тĕкĕрчĕн ертӳçи Кочак çичĕ юта тавăрма уйрăмах шăл хăйрать. Мăрса йыхравланипе Чалăм хулана кунака (хăнана) кайсан хăя-матсем унăн хура турă урхамахĕн тирне чĕрĕллех сӳнĕ. Мĕн

тери мăшкăл! Çавăнтанпа Кочак тискер хурахсемпе май килнĕ таран хирĕлет, вĕсене хирĕç мĕн пултарнă таран çапăçать.

Шурăмпуç çути палăрсан, тул çутăлса килнĕ чухне, пуçĕ тăрăх сивĕ шыв ячĕ турхан, пилĕк таран çăвăнчĕ. Ыйхи вара чалах уçăлса кайрĕ, куçĕ çутăраххăн пăхма пуçларĕ. Çынсемпе вăл пĕрмаях йăл кулăпа пуплет. Турханăн ăшă кулли çĕрпӳсемпе вунпӳсен, тĕкĕрçĕсен, ку элти мĕнпур чăвашсен кăмăл-туйăмне çĕклет, хастарлăхне ӳстерет, паттăр пулма хавхалантарать.

Çичĕ ют çĕрĕпех кăвайт çунтарчĕ. Тĕменпӳ куç-хăлхасене (разведчиксене) Пичке сăрчĕ тавра кунĕн-çĕрĕн çӳретсе хăшкăлтарать, турханăн ăçта экеметсем пуррине пĕлме тăрăшать. Шыравçăсем упаленсе тĕрĕслемен вырăн ниçта та хăвармаççĕ, хăйсен тапăрĕ хыçĕнчи ката вăрмана хыпашласа пăхма ăс çитерейменççĕ. Тепĕр кун иртенпех чĕресрен тăкнă пек чарăнмасăр çумăр çурĕ, вĕçĕмрен йăл-ял çиçĕм çиçрĕ, аслати кĕмсĕртетрĕ. Çичĕ ют пуçтахланни çут çанталăка та тарăхтарать пулмалла. Хăнчăр куçлă çар пуçĕ çапăçу пуçлама çумăра пула тăхтаса тăчĕ.

Çумăр чарăнсан, кăнтăрла тĕлĕнче, турхан хулари тĕп тĕкĕрт варрине пырса тăчĕ.

— Тăванăмсем! Сире пурсăра та чун-чĕререн саламлатăп! Хĕвел айĕнче Пӳлĕх пире те тивĕçлĕ вырăн панă, — хуллен пуçларĕ вăл сăмахне. Каланăçемĕн сасси çирĕпленсех пычĕ. — Пире çуратса ӳстерекенсем хăйсем те çакăнта çуралса ӳснĕ. Çуралса ӳснĕ вырăна — тăван эле — вĕсем куç шăрçине упранă пек сыхлама хушса хăварнă. Асаттепе асанне ăс пани ĕмĕрлĕх, атте-анне вĕрентни яланлăх. Вĕсем ăс панине, вĕрентнине асра тытса хамăрăн эле тĕрĕс-тĕкел сыхласа хăвармаллах. Çичĕ юта парăнар мар. Пултараймасан — мăшкăл курăпăр, чуралăха кĕрсе ӳкĕпĕр. Этеме хĕç-кăралпа (сăнăпа-хĕçпе) кăна пăхăнтараймастăн. Тĕрĕссине калатăп: сăнăпа хĕçе пĕр шухăшлăхпа паттăрлăх çĕнтереççĕ. Хамăр пурте пĕрешкел шухăш тытсан, паттăр пулсан ан иккĕленĕр: тăшмана çĕнтеретпĕрех!

Турхана пĕтĕм тĕкĕрт тимлĕн итлерĕ, тăван элшĕн юлашки юн тумламĕччен кĕрешме тупа турĕ.

...Чыссăр этемрен чыссăр этем, чурăс ҫынран чурăс ҫын ҫуралать. Хаяртан тăван тата хаяртарах ӳсет, тискертен тăван тата тискертерех пулать. Урта ҫар пуҫĕ ҫавнашкаллисен шутĕнчен. Ҫынлăх унра пачах ҫук. Вăл кунти чăвашсен пĕтĕм мулне, мĕнпур выльăх-чĕрлĕхне хапсăнать. Ҫавăнпа Пичке сăртне хăвăртрах хăйне пăхăнтарасшăн. Турхан ҫарне ҫĕнтересси пирки иккĕленмест вăл.

Тĕменпӳ лагерь тăрăх хăйне сыхлакан вунă пухлеванпа — вăйламас нукерсемпе — пĕрле ҫӳрет. Ҫумăр ҫума чарăнсан, хĕвел куҫне чарса пăхсан вăл кăкăрне ҫат ҫапать:

— Эпĕ Атăл шывне те пӳлме пултаратăп. Пичке сăртне туртса илесси мĕн вăл? Чăваш турханĕ ман чура пулса тăрĕ!

Турханăн ҫарĕ пĕтĕмпех хулаш хӳтлĕхĕнче тесе шутлать тĕменпӳ. Унăн куҫ-хăлхи Пичке сăрчĕ таврашĕнче ăҫта мĕн пуррине ҫĕр хута тĕрĕсленĕ пулин те тул ҫутăлнă чухнехи тата шалкăм ҫумăр вăхăтĕнчи улшăнусене асăрхайман.

Тутарсен вăрăм сăран пăрăхĕсем — какăрсем — хăрăлтатуллăн ҫухăрса ячĕҫ.

— Тăнлăр та пăхăнăр! Паян Пичке сăртне аркатмаллах! Унтан Чулхулана ҫăварлăхлăпăр. Уруссене чĕркуҫлентерĕпĕр. Унсăрăн пирĕн Уртан ҫурҫĕр чиккинче назарестанри (ҫăва ҫинчи) лăпкăлăх пулмастех! — ҫăварĕнчен кăпăк сирпĕтет ҫар пуҫĕ. — Аслă юхан шыв Итиль малашне те Абескун тинĕснех (Каспи тинĕснех) юхса кĕрĕ, ман туменăм та яланхиллех ҫĕнтерӳ хыҫҫăн ҫĕнтерӳ тăвĕ!

Вăл ҫарăн пĕрремĕш эшкерне хулашăн тĕп хапхи еннелле тĕллесе кăтартать, тапăнса пырса ҫавăнтан кĕрсе кайма хушать.

Хушни, тупата турăшăн, пурнăҫлани мар ҫав. Утсемпе вĕҫтерсе пыракан ҫичĕ ютсем ҫинелле ухă йĕпписем хулаш енчен вĕҫĕмсĕр вĕҫеҫҫĕ. Нукерсенчен ӳкекенни ӳкет, йăванаканĕ йăванать.

Тутарсем яланхи пекех чееленчĕҫ: арпашса кайса каялла чаканҫи турĕҫ, хăйсене ҫапла майпа чăнкă ҫыранлă тип ҫырма еннелле хӳтерме илĕртрĕҫ. Хăюллă тĕкĕрҫĕсен пысăк ушкăнĕ тутарсене хăваласа пырса тĕп тĕкĕре каярах тăратса хăварчĕ. Кам мĕн таран пултарнă пек чупнăран вĕсен речĕсем пăтрашăнчĕҫ. Лăпах ҫав вăхăтра тутарсем сасартăк ка-

ялла çавранчĕç, вăрăм сăран какăрĕсене кăшкăртма, ал питлĕхĕсене (щитсене) чанкăртаттарма тытăнчĕç. Хăйсем хирехирĕç, куçа-куçăн тăрса çапăçассинчен пăрăнаççĕ, çуран тĕкĕрçĕсем тавра явăнаççĕ, çĕмренсемпе переççĕ. Чăвашсем те çапăçма пĕлеççĕ, тĕкĕрçĕсем йышпа чăмăртанса хулаш патне чакаççĕ.

«Чăваш чунне темле хăямат — усал шуйттан — кĕрсе ларнă пулĕ!» — тарăхаççĕ тутарсем. Тĕп вăй пырса çитсен чăвашрĕкĕрçĕсем ут çинчи эсреметсене хăйсене тĕпсĕр çырманалла сиктерчĕç. Эшкерĕн пĕр пайĕ çапла пăчланать, ыттисем шав малалла талпăнаççĕ.

Турхан турул тăрринчен хура тĕтĕмпе экметрисене паллă пама хушрĕ. Вĕсен вăхăчĕ çитрĕ. Чăвашсен унти тĕкĕрчĕсем кĕтмен çĕтен сылтăмран та, сулахайран та сиксе тухрĕç, тăшмана хуптĕрлеме тытăнчĕç.

Хаяр çапăçу каçченех пырать. Тăшманăн малти эшкер ертӳçине Румен ывăлĕ Аспарух çĕрпӳ персе ӳкерет. Тутарсем каялла чакаççĕ, çапăçу чарăнать. Вилнисене пуçтарма вăхăт.

Тутарсем вилнĕ нукерсен ӳчĕсене пĕренесем çине ретĕн-ретĕн хучĕç. Кĕçех унта тем çӳллĕш кăвайт çунма пуçларĕ. Нукерсем çав кăвайт çунса пĕтичченех ун тавра çавăнса çӳрерĕç, çар юррисем юрларĕç. Çапла пытараççĕ вĕсем вилнисене.

## Кăнар вăхăтра килсе çитет

Çапăçу хыççăн тĕменпӳ çĕрĕпех йĕркеллĕ çывăраймарĕ. Ăна темле хăнтăрамак аптратать. Тиха ашĕ упшурла çинĕрен-ши, варĕ хаяррăн ыратать. Хăй патне çĕр хута ăрăмçăпа эмелçĕне чĕнсе илчĕ. Çар пуçĕ сывлăхĕшĕн ăрăмçă Танкăра кĕлтурĕ, эмелçĕ вара хăнтăрамака ватрĕ — чирленине каçанĕнчен тытса çĕклесе шăм-шакне йăваларĕ.

Çар пуçĕ ирпе кăна кăштах кăтăш пулса илчĕ. Пуян капăр хӳшĕре хаклă тирсем çинчен эрленсе те ахлатса тăчĕ. Шăмшакĕ сурать, мухмăра пула пуçĕ ыратать, хăнчăр куçĕ сикекен пулнă. Типĕтнĕ аш çисе кăмăс ĕçсен эшкерсен ертӳçисене чĕнтерчĕ. Ĕнерхи çапăçушăн ертӳçĕсене пĕрин хыççăн тепĕрне намăс сăмахсемпе çатлаттарчĕ.

— Ăнлантарса парăр-ха, — сурчăк сирпĕтсе ыйтать çар пуçĕ хăйĕн çумĕсенчен, — чăваш-тĕкĕрçĕ мĕншĕн пире çĕнтерет?

Çар пуçĕ шăртланнă вăхăтра эшкерсен ертӳçисем çăвар уçма та шикленеççĕ. Пуриншĕн те паллă: чăваш хулашне тытса илесси вăрах ĕç. Кĕре кĕриччен хулана илсен тем пекчĕ те.

...Хулашăн сылтăм турулĕнче турхан та çĕрĕпех куç хупмарĕ. Сăнĕ тĕксĕмленнĕ, куç айĕсем кăвакарнă. Ура çинче пурпĕр çирĕп тăрать, чĕри тикĕссĕн тапать. Чакăр куçĕ çамрăк чухнехи пекех витĕр курать. Тăшман çĕрле тем те тума пултарĕ.

Турхан хăй лайăх пĕлекен икĕ вастра тĕкĕрçĕне Вăта Сăвара пулăшу ыйтма янăччĕ.

Халĕ, тăшман кăткă пекех йышлăран, вырăс вайпутне те пĕлтерес терĕ. Ун патне кама ямалла? Паллах, кам хăвăрт çитме пултарать, çавна. Эппин, Кăнар улăпа.

Ĕлĕк-авал Кăнар евĕр улăпсем пурăннă-мĕн. Пичке сăрчĕ тавра чăвашсенчен малтан пурăннă çынсем çак йăхран пулнă. Пичке сăртне тутарсем тапăннă вăхăта улăпсенчен пĕр Кăнар кăна тăрса юлнă.

Кăнар — чăнласах пăхаттиртен те пăхаттир. Пĕвĕпе капмар юмансенчен çӳллĕ, кăкăрĕ тăвайкки пекех сарлака. Чĕри вут пек вĕри, куçĕ çăлтăр евĕр çиçет. Турхан ăна çапла хушать:

— Тутарсем тапăнни çинчен вырăс вайпутне кайса систер.

— Хăшин патне каймалла? — ăнланмасть Кăнар.

— Пирĕн патра пулни патне.

— Э, леш князь патне... Вăл юратакан ăшаланă акăша тутанса пăхма май килĕ-ши?

— Пустуй палкаса ан тăр. Пĕр уру кунта, тепри унта пултăр! — хăтăрса илчĕ турхан улăпа.

Кăнар хĕвелтухăçнелле çаврăнса тăчĕ, пуç тайса çын илтмелле мар кĕлтурĕ:

— Эй, Пӳлĕх! Сыхла та упра пире, усала сир! Ыр кун пар, ыр çул пар!

Кăнара Чулхулара та пĕлеççĕ иккен. Унтан та ытларах ĕçчен чăвашсене, уйрăмах улăпа, сума сăваççĕ. Князь керменĕнче ăна тарават йышăнчĕç. Князь сăмаха пит ваклакан

çын мар. Чăвашсем пысăк инкеке лекнине пĕлсен хăйĕн çумĕсемпе йăпăрт канашларĕ те çапла пĕлтерчĕ:

— Сирĕн тăшман — пирĕн тăшман. Сире пулăшма пысăк дружинăпа пыратпăр! Çăкăр-тăвар хире-хирĕç пултăр! Тата калам: сан çулу ăнать. Чухла: асамат кĕперĕ çумăр умĕнчен карăнсан çумăр чарăнать, хыçĕнчен карăнсан татах çăвать. Вăн, куратăн-и? Ку таврара çумăр çумарĕ — асамат кĕперĕ карăнчĕ. Апла пулсан çумăр çумасть.

— Эй, Пӳлĕх, çырлах! Пӳлĕх, ан пăрах! Хăвăн улăпна ху упрах! — кĕлтăвать хулăн сассипе Кăнар. Княрçпа калаçса татăлса вăл каялла килме тухать.

Каппайчăк çар пуçĕ хăй çамрăк чухне ханăн мĕскĕн тарçи пулнине манса кайнă ĕнтĕ. Ун чухне пĕрмай хан умĕнче тăпăртататчĕ. Ури айне пукан лартатчĕ, пуçĕ айне минтер хуратчĕ. Темиçе султан йăпăлти тарçă тĕменпӳ пулса тăчĕ.

Паян вăл иртенпех лăпкă мар. Ӳслĕкĕ çаплах чарăнмасть, пуçĕ те хĕсет. Икĕ малти шăлĕ тухса ӳкесле лăканаççĕ, янахĕ тӳсмелле мар сурать. Ытла вăраха кайрĕ Пичке сăрта илесси.

Шуйттан килсе хупламăш, ачи-пăчи пăчланмăш çар пуçĕ эшкерне каллех тапăнма хушать. Çăткăн йăх кашкăрла унта та кунта хĕвĕшме пуçлать. Асар-писер эшкер çав тери йышлă пулнăран пĕтĕм тавралăх аслатилле кĕрлет, çĕр йывăррăн ахлатса йынăшать. Тискер кайăксем сехĕрленсе хытса каяççĕ, кайăк-кĕшĕк вĕçме чарăнать.

Хушма ансат, пурнăçлама йывăр. Каллех хаяр çапăçу тапранать. Тискер эшкер малалла талпăнать, Пичке сăртне парăнтарасшăн тăрмашать. Турхан ентешĕсен тĕкĕрчĕсене çапăçăва хутшăнма паллă парать. Тутарсем çине сасартăк хыçалтан виçĕ тĕкĕрт тапăнать. Туçи Олкаш тĕкĕртне Кочак хăй ертсе пырать. Така сăрчĕпе Малаххай хулаш тĕкĕрчĕсем те тăшманпа паттăррăн çапăçаççĕ.

Çичĕ ют та хастар: чăвашсене Пичке сăрчĕн шӳмми еннелле хĕстерет, хулаша туртса илме ĕмĕтленет. Çак вăхăтра вăрттăн сукмакпа хулаша Кăнар улăп кĕрет, турхана вырăс княç хăйĕн дружинипе нумай кĕттермесĕрех килсе çитесси çинчен хыпарлать. Унтан хĕвелтухăçнелле пăхса кĕскен кĕлтăвать:

— Эй, Пӳлĕх, пулăшсам! Тăшман ĕмĕтне татсам!

Вара Кăнар çапăçăва тухать. Чăннипех пултаруллă вăл: сулмаклă юман чукмарĕпе пĕрре сулать — теçетке нукер тӳнет, тепре сулать — тепĕр теçетке лаплатса ӳкет. Çапать — çичĕ юта чустана çавăрать, тапать — тăшманран нимĕр тăвать. Эшкер йышне пĕрех май чакарать, унăн вăйне аркатать. Эшкер ертӳçине чаплă çи-пуç тăрăх уйăрчĕ вăл. Ăна чукмарпа персен мăн кăмăллă ертӳçĕ ӳт-пĕвĕнчен те, ылтăнланă çи-пуçĕнчен те лăстанкă кăна тăрса юлчĕ.

Çакна кĕтмен çичĕ ют речĕсем арпашăнса-пăтрашса каяççĕ. «Ай-вай, пĕсмелле!» — кăшкăрса яраççĕ сехри хăпнă нукерсем. Вĕсенчен пĕрисем сăннисене çĕрелле усаççĕ, теприсем кукăр хĕçсене йĕннисене чикеççĕ. Юлан утсем хыçĕнчен тусан çеç мăкăрланса юлать.

— Эх, çăвар типрĕ! Шыв парăр! — ыйтать ăшĕ хыпнă Кăнар. Пĕр чăваш-тĕкĕрçĕ ăна çăл шывĕ янă чĕрес тыттарать. Ах, инкек! Кăнар шыв ĕçнĕ вăхăтра хастар та вăр-вар нукер ăна çурăмĕнчен наркăмăшлă сăнăпа тăрăнтарать. Тăшмана Кăнар шыв чĕресĕпе пуçĕнченех перет, анчах хăй те касса янă юман пекех кĕрĕслетсе, ахлатса йăванать.

Каç кӳлĕм турхан патне вăр-вар йĕкĕт пычĕ, çĕрле хулаша Вăта Сăвар çарĕ кĕрессе пĕлтерчĕ. Тĕп вăйсем вара каярах çитмелле, Чулхула çар рачĕ хăваласа янă йӳркĕнсем хула таврашĕнче явăнса çӳреççĕ, вĕсене аркатсанах Вăта Сăвар тĕп вăйĕсем Пичке сăрчĕ çине килеççĕ.

## Вырăс — шанчăклă тус

Ыйхă килменнипе вĕçĕмсĕр аптрать тĕменпӳ. Унăн мухтавлă туменĕ курăс-мунчала чăвашĕсене ниепле парăнтараймасть. Мĕн тумалла? Вĕсене епле парăнтармалла? Ку таранччен никам чарайман туменăн намăс курмалла пулать-и-ха? Вăрçăн хăватлă турри Сульдэ унăн туменĕнчен сивĕнме шутларĕ-ши?

Пехлеван тытнă кĕмĕл кăмканри лĕп шывпа çар пуçĕ питне йĕпетенçи тăвать, кĕççе хӳшше çурттăна лаплатса кĕрет. Арăмĕсенчен чи кĕçĕннине — чăкăт пек шурă ӳтлĕ çӳллĕ мар чиперккене — вăл походсенче те пĕрле илсе çӳрет. Хăйĕн

те, арӑмӗн те ҫурттисем кустӑрмаллӑ. Вӗсене харсӑр урхамахсем парласа вӗҫе-вӗҫӗн кӳлеҫҫӗ. Кустӑрмаллӑ ҫурттӑсене ҫырма-ҫатра урлӑ нукерсем йӑтса каҫараҫҫӗ.

Нӗрсӗр ҫар пуҫӗ ҫапӑҫусем ӑнӑҫманран халӗ арӑмӗпе те тулашмасӑр калаҫаймасть. Вӑл ун патне кӗрсенех ахӑрни, харкашни, унтан хӗрарӑм хӑлха ҫурасла ҫухӑрса яни илтӗнчӗ. Кӗҫех хӗрарӑмӗ хӑй те шалтан вирхӗнсе тухрӗ. Ансӑр алӑк умӗнчи хурал нукерӗ унӑн хӗрлӗ хӑюпа тыттарнӑ тӗтӗм пек кӑвак кӗпине, мӑйӗнчен ахах ҫиппisem усӑннине, аллине ҫыхнӑ кӗмӗл сулла кӑна асӑрхама ӗлкӗрчӗ.

— Ӑҫта хӑямата сӗтӗрсе килчӗ вӑл мана? Май килсенех пӑрахса тарӑттӑм!

Типшӗм чиперкке урӑх нимӗн те калаймарӗ — тӗменпӳ ӑна каялла туртса кӗртрӗ.

Чиперкке патӗнчен тухсан ҫар пуҫӗ хӑйӗн ҫурттипе юнашар вырнаҫтарнӑ хура ялав патне пычӗ. Вӑл вӑрӑм бамбук вулли ҫинче сулланать. Вӗҫӗнчи урлашкинчен лаша хӳрин хӗлӗхӗсем усӑнса тӑраҫҫӗ. Ялав ҫине пӗр вӑхӑт салхуллӑн пӑхса тӑнӑ хыҫҫӑн тӗменпӳ учӗ патне таплаттарчӗ.

Ҫар пуҫӗ хӑй кӑна мар, лаши те ватӑ енне кайнӑ; хура тур пулин те, унӑн чакӑр ҫӑм тухнӑ. Ват шӑм-шакпа вӗри ут утланма ансатах мар ҫав, ҫавӑнпа пӗр хӑнӑхнӑ лутра кӗсрепех ҫӳрет ҫар пуҫӗ. Кӗсрен йӗвенӗ кӗмӗл нӑхталлӑ, йӗнерӗ ылтӑн каҫанлӑ. Хуҫи те чаплӑ тумланать: пуставпа та пурҫӑнпа капӑрланать, ылтӑнпа-кӗмӗлпе эрешленет. Ватӑ кӗлеткине ҫакӑ та кӗрнеклӗх кӳреймест, кӑмӑл-туйӑмне те ҫемҫетеймест.

Ҫар пуҫӗ васкамасӑр юхан шыв хӗррине пырать. Ӑна сыхлакан пехлевансенчен пӗри пӗр сӑмах чӗнмест. Кураҫҫӗ, пӗлеҫҫӗ: ҫар пуҫӗ эшкер ертӳҫисемпе те питех калаҫмасть, ҫӗленӗн чашкӑрса ҫӳрет. Час-часах хыттӑн ӳсӗрсе, сурса пӑрахать. Пӗлеҫҫӗ йӗкӗтсем: ҫар пуҫӗ тилӗ пек чее. Чее ҫыннӑн куҫӗ саккӑр сӑвать. Уйӑх ҫутинче ҫар пуҫӗ хулашӑн ҫурҫӗр енчи ҫӳллех мар валне тинкерсе пӑхать. Мӗншӗн ҫӳллӗ мар? Мӗн пирки? Мӗншӗн тесен турхан унтан тӑшман тапӑнасса кӗтмест. Юхан шыв ку енче путлӑх. Кам пырса сӗкӗнӗ-ха унта! Турхан пире ку енчен кӗтместех. Унта пӗр хыр кӑна ларать. Йывӑҫ тавраш урӑх курӑнмасть. Хӑмӑш тата кун-

тăклăх лутра хăва çăра хунанă. Çӳлтен юхăма май сулăсемпе пĕренесем турттарса килес. Вĕсемпе шурлăх урлă çул хывас. Кĕтмен енчен тапăнас! Турхана чавса таран лартас. Нукерсем хулаш патне путлăх урлă хывнă çулпа пыччăр. Çавнашкал шут тытать çар пуçĕ. Мĕн шутланине пурнăçа кĕртме çийĕнчех хушусем парать.

Тутарсем Юрпаш хĕрринче çĕрĕпех тăрмашрĕç: путлăх вырăнсене хăмăшпа хăва касса сарчĕç, çиелтен пĕренесем хучĕç. Вăрах кĕрмешнĕ хыççăн, ир енне, шурлăх урлă, юхан шывран хулаш шӳмми патне çити, кĕпер пек çул хатĕр пулчĕ.

Пичке сăрчĕ çинче, сылтăмри тĕп турулта, турхан тăрать, юхан шыв енне тимлет. Унта темле хăрушлăх пытараннăн туйăнать. Пĕлĕт ăшĕнчен уйăх тухсан турхан курах кайрĕ: шывпа юхса анакан пĕренене такам çаклатса туртса илчĕ. Турхан виçĕ куç-хăлхана унта мĕн пурри-çуккине тĕрĕслеме хушрĕ. «Час кайăр та час килĕр!» — асăрхаттарчĕ вăл.

Анчах лешсен ĕç-пуç урăхларах пулса тухать. Халапа ăна час калатăн, ĕç вара ун пек хăвăрт пулмасть. «Ай-уй, мĕн тăваççĕ кунта тутарсем?» — шалтах тĕлĕнеççĕ куç-хăлхасем. Тĕплĕнреххĕн пĕлес шутпа путлăхалла шалтан шала кĕреççĕ те лачакана путаççĕ. Хăва хуллисенчен тыта-тыта, пĕрне-пĕри пулăша-пулăша аран-аран каялла тапаланса тухаççĕ.

— Мĕншĕн час килмерĕр? — кăмăлсăррăн ыйтать вĕсенчен турхан. Куç-хăлхасен çи-пуçĕ юшкăнпа лапăртаннине, урайне шурлăх шывĕ тумланине асăрхать те сассине хăвăрт йăвашлатать. Мĕн курнине-илтнине ыйтса пĕлсен пĕр тĕкĕрте, Аспарух çĕрпĕве шанса панине, юхан шыв леш енне каçма хушать, ама çынсен тĕкĕртне, Донка ертсе пыраканнине, шӳммен тулаш енне тăратать.

Тул çутăлнă-çутăлманах тутар тĕменпĕвĕ виççĕмĕш эшкерне çапăçăва кĕртет, хулаша çĕмĕрсе кĕме хушать. Юхан шыв енчен шурлăх урлă тапăнакансене те питĕ шанать.

— Кам вăл чăваш турханĕ? Çăрттан çумĕнчи ыраш пăтри, ват кашкăра вĕрекен анчăк çури! Хальхинче ăна çĕнтеретпĕрех! — кăкăрне чышкипе çатлаттарать çар пуçĕ.

Хулаш тĕп хапхи енчен тапăнакансем те, шурлăх урлă пыракансем те çапăçăва пĕр вăхăтра пуçлаççĕ. Шурлăх çумĕн-

чи вашмăк çыранпа шӳмме патне чи малтан эшкер ертӳçи хăй йăраланса хăпарать. Унăн ури вăрăм, куçĕ чармак. Кăкăрĕ тĕлĕнче темле вăчăра йăлтăртатать. Кĕтмен çĕртен хăйне хирĕç патвар ама çын сулмаклă сăнăпа ыткăннине курсан эткер ертӳçин хĕсĕк куçĕ хăранипе тата хĕсĕнет, ним калама та ĕлкĕреймест, кăкăрне сăнă тăрăнать. Ертӳçĕн тăсланкă кĕлетки шурлăхалла вăркăнать. Ама çын тĕкĕрчĕ нукерсене шӳмме яхăнне те ямасть, сĕмсĕрсене каялла шурлăха чăмтарать. Путлăх унта та, кунта та пăкăл-пăкăл тăвать.

— Гаргар! Каялла чакар! — çухăрашаççĕ нукерсем.

Каялла чакакансене Аспарух тĕкĕрчĕ ĕнселет. Çапăçу вăраха пымасть, ама çын-хӳтĕлевçĕсем тата Аспарух тĕкĕрчĕ çĕнтернипе вĕçленет. Тупсăмне вăхăтра ăнкарса илсен чеелĕхпе инçех каяймастăн çав.

Хулашра та, ун çывăхĕнчи ялсенче те çынсем куççульпе йĕреççĕ, чĕнмесĕр килнĕ çичĕ юта ылханаççĕ. Тăшмана хирĕç тăрасси те вăйлансах пырать. Хулашри çынсем пурте — çамрăккисем те, ваттисем те — шӳмме урлă каçса вал патне çывхарнă тутарсем çине вĕри шыв тата ирĕлтернĕ сăмала сапаççĕ, вĕсене чулпа переççĕ, шĕвĕр вĕçлĕ шалчасемпе тăрăнтараççĕ. Хӳтĕлевçĕсене хĕрарăмсемпе ачасем çапăçма мĕн кирлине парса тăраççĕ, аманнисен суранĕсене çыхаççĕ. Апат та, шыв та вĕсемех йăтса килеççĕ.

Çар пуçĕ хулаш варринелле вутлă çĕмренсем кăларса яма хушать. Темиçе çĕмрен тĕтĕм кăларса иккĕмĕш вал шал енне пырса ӳкет. Унта çулăм палкаса çĕкленет. Нукерсем тепĕр ушкăн вутлă çĕмрен кăларса ярасшăнччĕ — вĕсем патне чăвашсен утлă тĕкĕрçисем вĕçтерсе çитрĕç, нукерсене çӳлти патшалăха ăсатрĕç. Усалтан хăтăлма тĕкĕрçĕсене Пӳлĕх пулăшрĕ пулинех. Хулашрисем пушара сарăлса кайма памарĕç — хăвăрт сӳнтерчĕç.

Хулашăн тĕп хапхи умĕнчи çапăçу ăнăçлăхĕ пĕрре ку еннелле, тепре тепĕр еннелле сулăнать. Акă тутарсен юлан утçисем тулашри вал хĕрринех пырса тухрĕç. Тĕп хапхана тăрăнтарса аркатма вăкăрсемпе кустăрмаллă таран турттарса пычĕç. Çав вăхăтра чăваш-тĕкĕрçĕсен речĕсем арпашса кайма пуçларĕç. Хулашран вĕри урхамахсемпе турхан тата ун

çумӗсем хӑйсем тухрӗç, тутарсем хушшине юман савӑл пек çӗмӗрсе кӗрсе кайрӗç.

Çапӑçура кам çӗнтерессине пӑлхарсен чаплӑ пӳлевӗ Пакане малтанах пӗлтерме пултаратчӗ ӗнтӗ. Шел, Танкӑра парне кӳренçи пулса жрецсем ӑна тахçанах йывӑç тӑррине çакса вӗлернӗ. Халӗ акӑ çип вӗçӗнчи тӗк пек çӗнтерӳ унталла-кунталла сулӑнать. Чӑвашсем паттӑрри паттӑр — вӗсен те вӑйӗ-халӗ иксӗлнӗçемӗн иксӗлет.

Хӗвеланӑç енче тусан мӑкӑрланса çӗкленет. Чулхула çар рачӗ — дружини килни курӑнать. Малта патвар кӗлеткеллӗ князь. Вӑл кӗмӗл пек çап-çутӑ хурçӑ кольчугӑпа, йӑлтӑркка шлемпа.

Вырӑс ратникӗсем тутарсене пере-пере ӳкереççӗ, хӗçпе ваклаççӗ. Нукерсем тарма тесе каялла çаврӑнчӗç çеç — Вӑта Сӑвар янӑ çар савӑлне пырса тӑрӑнчӗç. Сӑвар тӗкӗрчӗсем çапӑçу хирне çӳлевӗç пек ним систермесӗр йӑпшӑнса çитрӗç. Тӑшман курман çӗртре, Пичке сӑртӗнчен аякрах мар лапра, сулмаклӑн тапӑнма йӗркеленсе тухрӗç. Вайпут паллӑ парсан вӗсем çӗр айӗнчен шӑтса тухакан тӗкӗртсем пек тӑшмана хирӗç ыткӑнчӗç.

Тӑшман виллисем купан-купан çапӑçу хирӗнчех выртса юлчӗç. Вилнисене çунтарса пытармасӑр хӑварнине тутарсем чыссӑрла хӑтланни тесе шутлаççӗ. Хальхинче вӗсем çак йӑлана хисепе хураймарӗç. Тыткӑна лекесрен тӗменпӳ хӑйӗн тата арӑмӗн çурттисене те утсем кӳлтерсе тӑмарӗ — вут чӗртсе хӑварчӗ.

Çапӑçу хирӗ тутарсенчен йӑлт тасалать. Тӑванла ыталать вырӑс княçне, Вӑта Сӑвар вайпутне турхан.

Çав вӑхӑтра пӗлӗтсем хушшинчен тухнӑ хӗвел те хаваслӑн кулса ярать.

* * *

Чылаях хухнӑ пулин те, Юрпаш авалхи çулӗпех юхса выртать. Пичке сӑртне чӑвашсем тахçанах сухалаççӗ. Çынсем вӑй хурса, тар юхтарса тунӑ мухтавлӑ хулаш ишӗлчӗкӗсем тӑпра айне пулнӑ.

Пирӗн халӑх хӑйӗн тымарӗ ӑçтан тухнине шырать. Иккӗленмелли çук: пинпӳ Апаш, чӑваш-пӑлхар Румен, чӑваш-сӑвас Шуçӑм-

пи йăхĕнчен эпир. Тăван элшĕн юн тăкнă маттурсен паттăрлăхне асрах тытатпăр, анчах çулсем иртнĕ май вĕсен ячĕсем пĕрин хыççăн тепри манăçа тухаççĕ. Хулашри пĕрремĕш çар пуç Апаш вара ку тăрăхри темиçе ял ятĕнче паянччченех сыхланса юлнă.

Кăнар улăпăн ача-пăча пулман. Вăл сăваплă çапăçура паттăррăн пуç хурсан улăп йăхĕ те татăлать. Шел, чăвашсем хушшинче Кăнар евĕр улăпсем текех çук ĕнтĕ.

Çапах улăпсем аслă ĕçĕсем, пысăк паттăрлăхĕ халăх асĕнче упранать. Турăсемпе тăвлашма пултарнă пăхаттирсем тӳре те ăшă кăмăл-сипетне хăйсем хыççăн юлнă халăха — чăвашсене парса хăварма пултарнă.

*В.Д. Димитриев академик,*
*Н.В. Трубникова, Е.Е. Ерагин тĕпчевçĕсен*
*ăслăлăх ĕçĕсене тата*
*Муркаш районĕнчи Çулаври А.В. Васильев*
*каласа кăтартнине никĕсе хурса çырнă.*




Ку ял урамӗ хӗсӗк мар, ӗретсерен сар чечек, сад-пахчара сар кайӑк. Кашни ҫуртрах ӗҫченсемпе харсӑрсем, патвар та кӗрнеклӗ йӗкӗтсем, ытарайми сар хӗрсем. Куславкка тӑрӑхӗнчи Елчӗкре, вырӑсла Карамышевӑра, хӗр упраҫсем пӗринчен тепри чипертерех. Чӑн илемли вара Чӗкеҫ. Ашшӗ-амӑшӗ ӑна ҫав вӗҫен кайӑк пек эреветлӗ та теветлӗ ӳстӗр, уҫӑ саслӑ та чӗвӗл чӗлхеллӗ пултӑр тенӗ.

Пӗве ҫитнӗ Чӗкеҫӗн сӑн-пичӗ хӗвел пек, кӑвак куҫӗ ҫӑлтӑр пек. Ӑна ялти хастар йӗкӗт Чикан чӗререн юратать, чунтан савать. Ҫавӑн пек ят ӑна хурарах сӑнлӑран тата ӳкӗте кӗми эсрел ан тупайтӑр тесе панӑ. Ара, ҫавскер унӑн тетӗшӗсене иккӗшне те сӑпкара чухнех ҫавапа касса кайнӑ, Чикана вара тупайман. Ашшӗ-амӑшӗ чееленнӗрен ача чиперех ӳссе ҫитӗннӗ, сарлака кӑкӑрлӑ йӗкӗт пулса тӑнӑ.

Вырӑс пупӗ килсе ял-йыша ҫырмара шыва кӗртет, православи тӗнне йышӑнтарать, киремете пуҫҫапма чарать. Чикана Иван, Чӗкеҫе Татьян ят хурать.

Чиканпа Чӗкеҫ мӑшӑрланма та хатӗрччӗ ӗнтӗ, малтан хӗр ашшӗ, унтан амӑшӗ ку тӗнчепе сывпуллашрӗ. Ял-йыш иккӗшне те йывӑҫ хӑвӑлне — туплашкана хурса чыслӑн пытарать. Хуйха ӳкнӗ Чӗкеҫӗн халӗ туй шухӑшӗ ҫук. Ашшӗ-амӑшӗсӗр тӑрса юлсан хӗр пурнӑҫӗ тӗксӗмленчӗ. Куҫҫуль те тӑкӑнчӗ, ҫапах темчченех эрленмерӗ Чӗкеҫ. Хуйхӑпа пусӑрӑнса алӑ усса лармарӗ.

Ир пуҫласа каҫчен, кӑвак ҫутӑран сӗм тӗттӗмччен килти выльӑх-чӗрлӗхе, йышлӑ кайӑк-кӗшӗке тӑрантарать, шӑварать.

Ăна уйрăмах кăрккасене тăрантарасси килĕшет. «Кăльт пар-ха, кăльт пар-ха», — тесе çӳрет картиш тăрăх чĕпписен ашшĕ. Пуçне çӳлелле ялт та ялт çĕклет. Сăмси курпун, хăй хула майри пек хӳхĕм тумланнă. Хушăран тумне хăпартлантарса илет. Ала çинчен тырă сапса парсан савăнăçлăн çухăрса ярать: «Ай тур-тур-тур!»

Кĕлет умне пăри сапсан картишне пĕр кĕтӳ кăвакарчăн пуçтарăнать. Вĕсен чĕпписем те майĕпен-майĕпенех çуначĕсене сараççĕ. Кульăк чĕпписем тет вĕсене Чĕкеç. Çак сăпайлă кайăксем пĕрчĕллĕ тырăпа йăпаннă чухне тăрантараканăн та чунĕ кăвакарчăнăнни пекех савăнать.

Хуранккасăр пуçне (çапла чĕнет Чикана хĕр) тата мĕн çывăх унăн чунне? Юрă-кĕвĕ çывăх. Юрăпа чун кулянăвне сирсе ярать. Юрă-кĕвĕ — уншăн чун уççи. Тепĕр чухне выльăхсем те унăн юррисене тăнланăн туйăнать.

Чикан сунара çӳрет. Ют ял хĕрĕсем хитре, илĕртӳллĕ, анчах Чĕкеçпе танлашакан çук.

Тăлăх уйăх пек пĕччен юлнă каçсенче Чĕкеç тӳпери çăлтăрсене шутлать, чунне çывăх йĕкĕте шухăшĕпе хăй патне чĕнет: «Килсемччĕ! Çумра пулсамччĕ!»

Иртнĕ кунăн çути çук текелеççĕ. Тĕрĕсех-ши? Авалхи пархатарлă çутă паянхи кунччене çухалмасть.

Ку вăл тăват çĕр çул каялла, XVII ĕмĕрте пулнă. Иван Цыганов, ашшĕ-амăшĕ хунă ятпа — Чикан, юлташĕсемпе пĕрле сунара çӳрекенскер, Кĕçĕн Пăла тăрăхне пырса тухать. Эх, мĕн тери илемлĕ те пуян ку ен! Çырмара шыв чăп тулли юхать. Хăмăш çыранлă кӳлĕсенче пулă чăмпăлтатать. Чăнах та питĕ килĕшрĕ катаран килнĕ сунарçăсене кунти тавралăх. Кăнтăрарах вăрман тăрăхĕ пуçланать. Унта тем тĕрлĕ чĕр чун та ирĕклĕ туять. Чикан кунта ухăран хура хир сысни аçине персе ӳкерчĕ. Юлташĕсем тĕреклĕ кăна пăшине тытрĕç.

Сунара вĕсем виççĕн çӳреççĕ: Чикан, Курак тата Имук. Курак — ăслă-тăнлă арçын. Унпа ăçта кайсан та çул çухатмастăнах. Вăл тата пулăç, кăмпаçă. Имук ячĕ «ни мек, ни мук» тенĕрен тухнă. Чухăнрах çав, ни сурăх, ни ĕне усраймасть. Хушма ячĕ çавăнтан. Пĕртен-пĕр пуянлăхĕ — çӳрен

ут. Виççĕшĕ виçĕ хӳхĕм утпа çӳреççĕ. Куракпа Имукăн питĕ шеп çӳренсем, хӳрисем кĕлте пек пысăк. Чиканăн вара — хура тур урхамах. Вĕрискер, чăрсăрскер. Вĕшле йытти вара ăйăртан малта вирхĕнсе пырать.

Чӳк уйăхĕнче Чикан супне тулли ăсан тытса таврăнчĕ. Пĕрне Чĕкеçе парнелерĕ. Парни чаплă, килсе курни вара темрен те паха. Пытармасăр каласан хĕрĕн Чиканпа чунне уçса калаçас килет.

Раштавра Чикана сунартан виçĕ мулкачпа таврăнма пӳрнĕ. Пĕр мулкачĕ сунарçă аллине Чĕкеç ячĕпех çакланнă пулмалла. Савнă хĕрĕ сунарçăна ыталасах тав турĕ.

Чикан йытти Анӳяр — питĕ хаяр. Нимĕнле тискер кайăкран та шикленмест: тӳрех иксе ларать, мăйĕнчен каплаттарать те хуçи еннелле сĕтĕрет. Пĕр кунхине Анӳяр Кĕçĕн Пăла хĕрринчи çӳллĕ тĕмеске патĕнче чарăнчĕ, йĕс юпана вĕрме, тяппИсемпе чавкалашма тытăнчĕ. Анӳяр патне малтан Чикан, унтан Куракпа Имук пырса тăчĕç.

— Ку тĕм пĕр-пĕр улăп çăпати тĕпĕнчен хăпса юлнă пулинех... — аллине çĕклерĕ Имук. Ăна Курак чарчĕ.

— Тăхта, çăпата тăпри мар кунта. Çак тĕмеске, амутке, чăнах та акăш-макăш чаплă улăппа çыхăннă. Ку улăп тăпри. Сумлă çынна пытарнă ĕнтĕ кунта. Паллах, ылтăнсăр-кĕмĕлсĕр мар. Авалхи çынсем пичĕкесемпе укçа алтса пытарнă теççĕ. Йĕс юпа айĕнче ылтăн тултарнă пичĕкесем выртмаççĕ-ши? Амутке, айтăр чавса пăхар! — сĕнчĕ вăл юлташĕсене.

— Кунта ылтăн пытарнă-ши? Чавса пăхар! — куçне чарать Имук.

Пĕр вăхăт нимĕн те шарламарĕ Чикан. Калпакне васкамасăр хывса çамки çинчи тарне шăлса типĕтрĕ.

— Кунта пысăк пуçлăха, пĕр-пĕр элтепере пытарнă ĕнтĕ. Унăн канăçне пăсса çылăха кĕмĕпĕр. Пире вĕсен Турри Танкăр каçармĕ, аçа çапса вĕлерĕ... Тупата. Айван ăслă пулар мар, айтăр кунтан пăрăнар, тусăмсем! — татăклăн сапарĕ Чикан.

— Эппин, пăрăнар... — ун майлă пулчĕ Имук.

Кунта пăлхарсен элтеперне пытарманнине тавçăрнах ĕнтĕ Чикан. Пĕлекенсем каланă тăрăх, йĕспе е бронзăпа нумай

маларахри ёмӗрсен ӑрӑвӗ усӑ курнӑ. Пурпӗр пӑлхарсен, хӑйӗн тӗп йӑх-несӗлӗсен Туррине — Танкӑра асӑнчӗ.

— Ку тӑрӑхра ҫынсем сӗм авалтанах пурӑннӑ, — шухӑшне тӑсрӗ Чикан. — Ҫырма хӗрринчи ҫӗр пулӑх тӑпраллӑ. Акасуха йӗрӗ ҫук та, тӑпри хура, ҫӗр ӗҫлеме питӗ селӗм пулассӑн туйӑнать...

— Асӑрхӑр-ха: кӳлӗсем курӑнкалаҫҫӗ. Вӑрман та ҫук мар. Елчӗкре тиекпе пуп мӑшкӑлне тӳсиччен, амутке, ҫакӑнта куҫса килсен пурнӑҫ ӑнӑҫмӗ-ши? — кӑвак куҫне чарать Курак.

Сунарҫӑсем пӗр-пӗрин ҫине тинкерсе пӑхса илеҫҫӗ. Нихӑшӗ те нимӗн те шарламасть. Ӑнланмалла ӗнтӗ: пурӑнма хӑнӑхнӑ вырӑнтан урӑх ҫӗре куҫасси кӑвайт чӗртме хыр хӑйӑи чӗресси мар. Тӑванпа, кӳршӗ-аршӑпа канашласа пӑхмалла, вӗсен шухӑшне шута илмелле.

Сунартан таврӑнас умӗн Чикан ҫырма хӗррине ясмӑк акса хӑварать. Кӗркунне сунара тепре килсен тухӑҫлӑ ясмӑк вырса пуҫтарать, кунти тӑпра питӗ пулӑхлине курать.

— Айтӑр Кӗҫӗн Пӑла хӗррине куҫса каятпӑр, унта пире никам та тупаймӗ, хырҫӑ та тӳлемӗпӗр, — сӗнет каллех Курак тусӗ пысӑк тухӑҫпа таврӑнсан. Ним те шарламасть юлташӗ — те килӗшет, те хирӗҫлет, пӗлме пулмарӗ.

Ҫапах Чикан ку ыйтупа савнӑ хӗрӗпе канашлать. Пӗлет Чӗкеҫ: хӑйне хирӗҫлениине йӗкӗт кӑмӑлламасть, ҫавӑнпа чееленме шутлать.

— Пурӑнсан-пурӑнсан куҫ курӗ унта, — хуравлать кулаххӑн ҫаксккер. Ӗҫчен Чикана вӑл ҫав тери юратать, ӑна ҫӗр хут мухтасан кӑна сайра хутра пӗрре тиркет.

Чикан та пӗлет: хӗр ӑшӑ сӑмаха юратать. Ачашла ӑна, ырӑ сӑмах кала. Пичӗ ҫинче йӑл кулӑ ан кайтӑр.

— Санӑнни пек илемлӗ кулӑ никамӑн та ҫук! — пӗрмаях аса илтерет йӗкӗт Чӗкеҫе.

Вӑт-вӑт, тепӗр чухне чее пулни те кирлӗ ҫав. Чӗкеҫӗн хӑнӑхнӑ вырӑнтан ҫӗнӗ ҫӗре каяс шухӑш пачах ҫук. Ялӑн хӗвелтухӑҫ енчи масара ашшӗне те, амӑшне те пытарнӑ вӑл. Кунтан кайсан кам тирпейлесе тӑрӗ вӗсен вилтӑприне? Пӳрт тӑрринче те чӗкеҫсем йӑва ҫавӑрнӑ. Кам сӑнаса пӑхса тӑрӗ вӗсен чӗпписене?

Кун иртет те çĕр иртет, вăхăт малаллах шăвать. Çулталăкран Чĕкеç патне Чикан тепре кĕрет. Вăл уяв чухнехи пек йĕпкĕн хура сăхманпа, çӳçеллĕ хура калпакпа.

— Кала-ха, эсĕ мĕншĕн пит хура? — тӳрех кулараххăн ыйтрĕ хĕр. Йĕкĕт кĕттерсе тăмарĕ хуравне:

— Хура çăкăр çинĕрен!

— Тата ыйтам-ха санран: Турă пур-и? Эсĕ Турра ĕненетĕн-и? — тĕпчет хĕр. Чикан ахăлтатсах кулса ярать, унтан тин татăклăн хуравлать:

— Турă кăна мар, шуйттан та пурах.

— Тĕрĕс шухăшлатăн. Турă пире иксĕмĕре пĕр çулпа уттарасшăн, шуйттанĕ вара килĕштерӳ çиппине татасшăн! Эсĕ аçуаннӳ ятне ан яр. Турă мĕн хушнине тăнла. Таçта çӳресе тусна вăрах ан кĕттер! — тилмĕрет Чĕкеç.

— Пĕлетĕн-и? Эсĕ пуртан илемлĕ çут тĕнче! — йăрст тăсăлса тăрать хĕр умне йĕкĕт. — Тăр кăнтăрла — хĕвел, сĕм çĕрле — уйăх, ир килнĕ чухне шуçăм çути маншăн пулсам!

— Сан умăнта пĕр эпĕ çеç çапла пуласчĕ! — ырă кулăпа çутăлтарать хӳхĕм сăнне Чĕкеç. Çав вĕçен кайăк пекех хитрескер ун евĕрлех чĕвĕлтетет.

— Çапла пултăрах! Анчах чĕкеç кĕр каять те çур килет. Санăн та çавнашкалах пулса тухмĕ-ши? — пĕлесшĕн пулать йĕкĕт. Хĕрĕн телейпе çиçекен пичĕ ытарайми илемленет.

— Пĕр çыпçăнсан хăпмастăпах! — шантарать вăл йĕкĕте.

«Унăн сăнĕ хура, ăсĕ çутă», — çиçет шухăш хĕр пуçĕнче. Йĕкĕтĕн куçĕ çĕмĕрт пек хуп-хура — ытармалла мар. Хĕрĕн те куçĕ йăл-йăл çунать. Вăл кăмăллă сасăпа юрласа ярать:

Хура чĕкеç ларнă çирĕк çине.
Ик çунаттине янă ирĕке.
Хуранкка тус савса килнĕ чухне
Ярам-и кăмăлăма ирĕке?

Пике пĕр вăхăт тăхтаса тăрать, унтан çепĕç кулăпа çепĕççĕн ыйтать:

— Тепĕр юрă парнелем-и?

Чиперленет, чиперленет,
Чечекленет пурнăçăм.
Çавăнпа вăл илемленет —
Чунтанах савать тусăм.

Йăл кулса куçран пăхать,
Ачашшăн мана калать:
— Пĕчĕк чунăм, пукане,
Пул ялан ман чĕрере.

— Юрать эппин, килĕшĕп —
Пулăп санăн чĕрӳнте.
Анчах чĕрӳ аслă-и,
Эпĕ шăнăçайăп-и?

Лайăх юрăшăн йĕкĕт хĕре епле тав тунă — пире паллă мар. Тен вĕрин чуптунă — ку вĕсен вăрттăнлăхĕ. Çакă паллă: эрнерен Чиканпа Чĕкеç туй кĕрлеттерчĕç, купăс калаттарчĕç, параппан çаптарчĕç. Иккĕшĕ пĕр-пĕрне савса килĕштерсе пурăнаççĕ. Халĕ ĕнтĕ Чĕкеç юрри те улшăнчĕ. Хаваслăн ĕçлет вăл, савăнса юрлать.

Чунăм юрлать, чунăм юрлать,
Юрламасăр тӳсеймест.
Мĕншĕн-ши чунăм юрлать,
Юрламасăр тӳсеймест?

Савнă мăшăр — хаклă çыннăм,
Эс чуна юрлаттаратăн,
Эс чуна юрлаттаратăн,
Кăмăла çĕклентеретĕн.

Савнă мăшăр, эп пĕлетĕп:
Эс пуррипе эпĕ пур,
Эс пуррипе эпĕ пур,
Телейлĕ эп — хăвах кур.

Хĕвел тухать хĕрелсе,
Пĕтĕм çĕре çутатса.
Çав хĕвел пек эс тăратăн
Манăн чуна çутатса.

Пурăн, чунăм, ĕмĕр пурăн
Çут хĕвел пек ялкăшса,
Çут хĕвел пек ялкăшса,
Манăн чуна çутатса.

Мăшăрĕ юррине Чикан пысăка хурса хакларĕ: «Чуну юрлать пулсан — чĕрӳ çамрăк сан!» — терĕ вăл.

Çĕнĕ çĕре куçса каясси пирки ялта сунарçăсенчен пĕри те çу каçа сăмах тапратмарĕ. Хирти ĕçсене вĕçлесен кĕркунне Чикан ратнисем авалхи йăлапа автан йĕтесĕ хуçма пуçта-

рӑнчӗҫ. Хӑшӗ хӑшне улталасси малтан паллӑ пулмарӗ, йӗтесне туртса хуҫсан Чиканӑн Курака тӗрленӗ кӗпе памалла пулса тухрӗ. «Сире, арҫынсем, йӳҫҫи пултӑр, пире шерпет те юрать!» — хӑйсен кӑмӑлне пӗлтерчӗҫ хӗрарӑмсем.

Ҫавӑн чухне пуҫланчӗ те ӗнтӗ ҫӗнӗ ҫӗре куҫса каясси пирки калаҫу. Арҫынсем Кӗҫӗн Пӑла тӑрӑхӗнчи ҫӗнӗ ҫӗрсене ырларӗҫ те мухтарӗҫ, хӗрарӑмсем вара темшӗн-ҫке юхӑма хирӗҫ ишме шут тытрӗҫ.

Хирӗҫле юхӑмра уйрӑмах Савтепи палӑрчӗ. Тӳррипе каласан, ӑна ялта пӗлтӗр Савтепи — иккӗ вӑхӑтли ят панӑ. Вите тӑвакансене ниме апачӗ ҫитернӗ чухне вӑл сӗтел ҫине пӗр чашӑк ҫӑмарта пӗҫерсе лартса парать.

«Пӗрре сахал, виҫҫӗ нумай, иккӗ вӑхӑтлӑ. Ҫийӗр, ҫийӗр!» — тараватлӑн сӗнет вӑл сӗтел хушшинче ларакансене. Ҫавӑн хыҫҫӑн тухрӗ ялта Савтепи — иккӗ вӑхӑтли ят. Йӗтес хуҫнӑ чухне те ун чӗлхи такӑнмарӗ.

— Тӗлӗнетӗп сирӗнтен... Сухаламан-акман ана ҫинче ҫуралман мулкач чупса ҫӳрет тенӗ пек калаҫатӑр. Тытман упа тирне сӗветӗр.

Хӗрӳленчӗ те хивреленчӗ шӑртламас хӗрарӑм. Ӑна пӳлсе калама йывӑр: хӑр-харах хӑртса пӑрахать.

— Пирӗн арҫынсем ҫӑкӑр харамӗ кӑна. Вӗсемшӗн сунара ҫӳресе пултӑр. Ҫӗнӗ ҫӗре куҫасси ай-яй еплерех тӑкаклӑ. Ҫавна чухламаҫҫӗ апӑршасем! — ун майлӑ пулчӗ Пӑрчӑкан. Ӑна ялта Малти-кайрипе тӑрантаракан хушма ят панӑ.

Пӗррехинче вӑл чусталлӑрах ыраш ҫӑкӑрне сӗтел ҫине чӗллӗн-чӗллӗн касса хурать те хӑйне тӳрре кӑларма ҫапла калать:

— Ку малти ҫӑкӑр... Хӑть тачка, икӗ питлӗ... хӑйра тӗплӗ — пурпӗр ан тиркӗр!

Упӑшки тӳсеймест, сухалне силлесех мӑшӑрне пӑскӑртса илет:

— Сан ялан малти те кайри, кайри те малти... Варринчине хӑҫан ҫитеретӗн вара?

Ҫакӑн хыҫҫӑн ялта кӑсӑк хавха сарӑлать: «Пӑрчӑкан — малти-кайрипе тӑрантаракан». Пӑрчӑкан ларма-тӑма пӗлмен хӗр пулса ӳснӗ. Вӑйӑ картинче вырӑнтан вырӑна хӑй ятлӑ вӗҫен кайӑк пек сике-сике ларнӑ.

— Эс те чипер, эп те чипер, тавай иккĕн чуптăвар! — сĕнет вăл Имука.

Хĕре чуптума йĕкĕтĕн хăюлăх çитмест. Пăрчăкан ăна хăй хăйса чуптăвать. Унтанпа иккĕш пачах уйрăлмаççĕ. Тихаран лаша пулать, туслăхпа юратуран çемье çуралать. Каян хĕре ашшĕ чылай тупра, пĕр тынапа икĕ сурăх парать. Шел, кил карти тепĕр çулах пушанса юлать.

Куккук çăмарта турĕ те, пăрчăкан пусса кăларчĕ теççĕ халăхра. Елчĕк Пăрчăканĕ виççĕмĕш ывăл ӳстерет.

Йĕтес туртма пуçтарăннă ратне Пăрчăкан каласса кĕтет.

— Хусамăр пĕлетĕр: чипер аппан тути пĕрĕнчĕк вĕт!

Укçа енчĕкĕ пирки çапла каларĕ ĕнтĕ вăл. Вăрт та вăрт пăркаланать, унтан çапла хушса хурать:

— Аюк! Елчĕкрен ниçта та каймастăп! Аюккă!

Хĕрарăмсенчен Чĕкеç кăна арçынсем майлă пулчĕ:

— Турткалашса тăма мар, упăшкана итлеме качча тухнă вĕт... Йĕппи ăçталла, çиппи çавăнталла. Ай-хай хавас кирек ăçта та Турă панă мăшăрпа пĕрле! — янăраса кайрĕ унăн яланхи пекех уçă сасси. Хăй сулахай пит çăмартинчи турă палли таранах пилеш пек хĕрелчĕ. — Каяр çĕнĕ çĕре, тулĕк мана атте-анне масарне киле-киле кайма ирĕк парăр!

— Тупата, пурнăçа çакăнтах хăй еккипе яма пулать. Çĕнĕлле йĕркелеме харсăрсем кирлĕ! — пĕтĕмлетрĕ калаçăва Чикан. Çирĕп кăмăл-туйăмлă çын сăмахĕ ыттисене те шухăшлаттарчĕ-шухăшлаттарчех.

...Апла-и, капла-и, пĕр тӳлек ир виçĕ çемье — Чиканпа Чĕкеç, Куракпа Савтепи, Имукпа Пăрчăкан — Кĕçĕн Пăла хĕрринчи Улăп тăпри патне тапранса тухрĕç. Çĕнĕ çĕре çитнĕ-çитменех çĕр пӳрт чавма, лаçсем тума пикенчĕç, стенисене пĕчĕк юман пĕренисенчен турĕç, тăррисене çăка хупĕпе, çерем-пе витрĕç. Кĕçех мăрьесенчен тĕтĕм тухма пуçларĕ.

Пурăнмалли хӳтлĕх тусан арçынсем те, хĕрарăмсем те çӳллĕ авмак хурăн çумĕнче тухăçалла пăхса пĕр çĕре тăчĕç. Курак, куçса килнисем хушшинче чи ватти, калпакне хул хушшине хĕстерчĕ.

— Авалхи йăлана пăрахмăпăр, çĕнĕрен йăла кăлармăпăр... — пăхса илчĕ вăл çĕнĕ çĕре куçса килнисем çине.



— Эй, Турă, пĕсмĕлле! — хулăн сасăпа ҫирĕппĕн малалла тăсрĕ Турă умĕнчи кĕлле Курак. — Ҫĕнĕ ҫĕр, пире хапăл туса йышăнсам! Акнă тырă аван ӳстĕр, пĕр пĕрчĕрен пин пĕрчĕ ҫитĕнтĕр. Пĕвĕ хăмăш пек, пуҫĕ чакан пек пултăр. Иксĕлми ырлăх пар, ана тулли ҫурат, анкарти тулли капан пар... Ан пăрах, Туррăмăр, ҫырлах. Аминь!

Курак Турра виҫ хут пуҫҫапрĕ. Унпа юнашар Савтепи пырса тăчĕ те кĕл тума пикенчĕ:

— Эй, Пӳлĕхҫĕ, тайлă пуҫпа, ăшă питпе, тутлă чĕлхепе тархаслатпăр: ҫăкăр-тăварпа пурăнмалла тусам пире. Выҫса килекене тăрантарса ямалăх, шăнса килекене ăшăтса ямалăх ырлăх-пурлăх парсам пире. Урăх нимĕн те каламастăп.

Вăл мăшăрĕ пек тайăлса-пĕшкĕнсе пуҫҫапмарĕ, пуҫне кăна виҫĕ хутчен сулчĕ. Илемлĕ хĕрарăма ӳксе пуҫҫапмасăрах Пӳлĕхҫĕ тăнласса шанчĕ пулинех.

Куҫса килнĕ ҫемьесем виҫҫĕшĕ те Кĕҫĕн Пăла хĕрринче пурăнаҫҫĕ. Виҫ кил яла та юхан шыв ятне параҫҫĕ. Пĕр-пĕринпе ир те, каҫ та тĕл пулаҫҫĕ, ĕҫ-пуҫ пирки сӳтсе яваҫҫĕ, кăмăл

туличченех пуплеççĕ. Пĕрле кулянаççĕ, пĕрле савăнаççĕ. Савăнăçĕ вĕсен куç тулли. Пултăран яшки çĕнĕ çĕрте те хуняманни пекех тутлă пиçет иккен. Пĕрле пĕве пĕвелерĕç вĕсем. Унта хур-кăвакал ярăнса ишме тытăнчĕ. Çырма хĕррипе хăва лартса тухрĕç. Чиканпа Чĕкеç пĕрле шыв арманĕ те хута ярасшăнччĕ. Шел, вĕсен ĕмĕчĕ пурнăçа кĕреймерĕ.

Çырма хĕрринчи аслă урам ял историне малтан Аялти урам, унтан Чикан касси ятпа кĕрсе юлать. Унтан Кайăксаркассипе Çĕнкас чăмăртанаççĕ. Ку яла чăвашсемсĕр пуçне тутарсем те куçса килнĕ. Ислама пăрахса Христос тĕнне йышăнма ирĕксĕрленĕрен. Хĕвелтухăç урамĕ çумне Вăтакас хушăнать. 1719 çулта ялта кил шучĕ вăтăр тăватта çитет.

Улах кĕтесре хырçă-куланай тӳлемесĕр пурăнатчĕ çĕнĕ вырăнти ял. Анчах асăннă çул ку яла I Петĕр патша салтакĕсем çырма тăрăх турпас юхнине курса шыраса тупаççĕ.

— Сирĕн яла вырăсла ят памаллах... — пĕлтерет салтаксемпе пĕрле килнĕ тиек. Хулăн кĕнекине хур тĕкĕпе çапла çырса хурать: «Новое Байбатырево — Çĕнĕ Пăва».

Ун хыççăн та ял малаллах хунать. 1887 çулта ялта алă кил шутланнă.

Ял пуçланса кайнă чух вырнаçса çитсен çынсем чăн малтан Чикан çемйи валли шурă пӳрт лартаççĕ. Çĕнĕ пӳрт ĕçкинче Чĕкеç хывнă юрра пурте пĕрле янăратрĕç.

Садра шăпчăк юрласан та юрласан
Савăнмĕ-ши сад хуçи?
Эпир кунта юрласан та юрласан
Савăнмĕ-ши ял çынни?

Вăрман витĕр хурт каять те хурт каять
Çăка йывăç шыраса.
Эпир кунта килтĕмĕр те килтĕмĕр
Тус-хурăнташ шыраса.

Куккук йăви çӳлтех мар та çӳлтех мар,
Алă çитес çĕртех мар.
Çĕнĕ Пăва хула мар та хула мар,
Хуларан та кая мар.

И улмийĕ, пан улми те пан улми,
Тăрринчийĕ чи хĕрли.

Тăван ялăм, савнă ял та савнă ял,
Урăх çук сан пек хакли.

Ёçе пурте кар тăрсан та кар тăрсан
Ватти-вĕтти савăнать.
Çулçи çупать, улми ташлать сад пахчин —
Вăл та çынсене сăнать.

Хура сăсар йĕрне йĕрлес марччĕ,
Унпа намăс курар мар.
Атте-анне ятне ярас марччĕ:
Килĕштерсе пурăнар.

Çутă çăлкуç тулăх шывлă, пураллă,
Ăссах тăрар, ан типтĕр.
Пирĕн ял-йыш сăпайлă та хастарлă,
Хуйхă мĕнне ан пĕлтĕр.

Юрлас ăсталăха Чĕкеçе Пӳлĕхçĕ хăй панă. Унăн уçă сасси Чикана çеç мар, пурне те тыткăнлать. Юрă-кĕвĕпе Чĕкеç несĕлĕсем те туслă пулнă. Çак туслăха Çĕнĕ Пăва та çухатман. Мĕнрен килнĕ-ши ку? Ялта кил-çурт хушшинче авал йывăçсем хальхинчен те йăвăрах пулнă. Вĕсем çинче кайăксем тăтăшшăн юрă шăрантарнă. Ахальтен мар ĕнтĕ пĕр урама Кайăксаркасси ят панă.

Шел, хастар Чиканпа чĕвĕл-чĕвĕл Чĕкеçе чипер вилĕмпе вилме пӳрмен. Тепĕр чухне ăнсăртран ура айĕнченех кĕмсĕрт сиксе тухать.

Пĕррехинче Чĕкеç арланă çиппе пĕветме хатĕрленчĕ. Çиппе малтан хур хухи хурса вĕретнĕ шыва чикет, унтан кирлĕ тĕслĕ сăрă курăкĕн шывне ярать. Вăл çак ĕçпе кĕрмешнĕ хушăра таврана хура пĕлĕт хупăрласа илчĕ. Çырма хĕрринчи авмака хурăн, хăй çине хурах тапăннăн, хурлăхлăн хумханчĕ, унтан шатăрт хуçăлчĕ. Ун çумĕнчи хура хурлăхан та тĕпренех аманчĕ. Шуйттан шăлĕ хăшканă хурама çĕре перĕнесле авăнчĕ хуралтă еннелле. Хăрăмран та хура тискер хура пĕлĕт шалкăм çумăр тăкма тытăнчĕ. Çырмари шыв вĕрекен хуран пек чашкăрма та явăнма пуçларĕ. Витререн тăкнă пек шапăртатакан çумăр ниепле чарăнма пĕлмерĕ. Виççĕмĕш кун çырма ейĕвĕ тапса тухрĕ. Çырмана суха пуç, мунча пури юхса кайрĕç.

Таçтан каллех тепĕр мунча юхса пырать. Шалтан такам кăшкăрни илтĕнет. Чикан мунчана пакурпа çаклатрĕ, хуçăлнă

авмак хурăнтан çыхрĕ. Унччен те пулмарĕ — чĕвен тăнă пĕрене ăна пуçĕнченех çапрĕ. Пĕрени аналалла юхса кайрĕ, Чикан таçта çухалчĕ.

— Э-э, Хуранкка, хуран хыттиччĕ сана... Ăçталла чăмрăнха? — хашкаса чупса çитрĕ çав тĕле тара ÿкнĕ Чĕкеç. Вĕрекен юхăмра упăшкине тупаймарĕ вăл, шыв кĕçех ăна хăйне таçта хăяматалла юхтарса кайрĕ — куçран тăнчах çухатрĕ. Мунчи вара сыхланса юлчĕ-юлчех.

Паянхи Çĕнĕ Пăва йĕкĕчĕсем — чăн-чăнах пăхаттирсем, ĕçре яланах маттур. Ял хĕрĕсем пурте сăнпа хĕвел пек, ял хуçалăх производство кооперативĕнче пултаруллă та ăста. Несĕлĕсене, йăхташсене асрах тытать яш-кĕрĕм. Вĕсем пек ырă кăмăл-сипетлĕ, хастар пулма тăрăшать. Хăюлăхпа паттăрлăх нихăçан та манăçа тухмаççĕ. Чиканпа Чĕкеçе, Куракпа Савтепие, Имукпа Пăрчăкана ял-йыш паян кунччененех асра тытать. Лайăх ят юлнă вĕсем çинчен. Ырă ят вара мултан та паха. Хальхи ăру вĕсен ячĕсене хушаматсенче упрать.

Ялта Цыганов хушаматлисем, Чĕкеçĕнни пек янкăс сасписем, унăн юрри-кĕввипе пурăнакансем паянччененех пур. Харсăр çынсем никĕсленĕ селĕм ял хăй те сăваплă. Çав çынсен ратне тăсăмĕсем те калама çук ĕçчен, ытармалла мар ырă кăмăллă.

Елчĕк салинчи прихутра 1835—1888 çулсенче ĕçленĕ Я.И. Смирнов атте çырса хăварнисем.

*И.П. Горшков (1915—1987) учитель-биолог тата библиотекарь пуçтарнисем, атте тата ялти шур сухалсен асаилĕвĕсем тăрăх хайланă.*

# Алманчă паттăрĕ



Патăрьел районĕнчи Алманчă çывăхĕнче, Пӳле çырминчен çурçĕререх, çӳллĕ тӳпем пур. Çак тӳпеме Тимĕрле теççĕ. Унăн тепĕр ячĕ Чакăрчек сăрчĕ. Çак тĕлĕнмелле халап чăваш паттăрĕ Чакăрчек çинчен.

Ĕлĕк-авал, йывăр та тискер саманара, чăваш несĕлĕсене Хусан ханĕ пусмăрта тытнă. Ун çĕрĕсем таçта-таçта çитиех тăсăлнă. Хан валли Сăр шывĕнче çĕкĕ пулă тытнă, Шăнкăртампа Хырла çумĕнчи вăрмансенчен пички-пичкипе çăка пылĕ ăсатнă, Шур Атăл таврашĕнчен паха тирсем турттарнă. Пĕтĕм халăх ăна ясак — тупăшăн вуннăмĕш пайне — тӳлесе тăнă. Акса тăракан çĕршĕн укçа е тырă хальлĕн калан (кулана́й) пуçтарнă, кашни çуртпа ӳплешĕн тĕтĕм укçи тӳлеттернĕ, ватти-вĕттине хăвармасăр чун хырçи сăптăрнă. Баскаксем — чăвашсенчен хан уйăрса лартнă пуçлăхсем — халăха çăткăнла çаратнă, ылтăн-кĕмĕле турта-турта илнĕ, хĕрсене, хĕрарăмсене ирĕксĕрленĕ, йĕкĕтсене хан çарне хĕсмете пуçтарнă, халăха тем тĕрлĕ хур кăтартнă, асаплантарнă, вĕлернĕ.

Хан нукерĕ (салтакĕ) пулма килĕшменшĕн Алманчă çыннине Юмана ут хӳринчен кăкарнă та чунĕ тухиччен урам тăрăх сĕтĕрсе çӳренĕ. Унăн тăлăха юлнă ывăлĕ Чакăрчек çитĕнсе çитнĕ те харсăрсемпе хастарсен ушкăнне йĕркеленĕ, пусмăрçăсемпе кĕрешме, ашшĕшĕн тавăрма тытăннă. Хан баскакĕсемпе çапăçса чапа тухнă Сарри чăваш çак хăюллă Чакăрчеке паттăр пулма хăй пилленĕ тет, пăлат хĕç парнеленĕ тет. «Хан вăрă-хурахĕсенчен хăраса ан тăр, сана курсан — вĕсен хăйсен сехри хăптăр», — тесе каланă имĕш вăл.

Чакăрчек ушкăнĕ малтанхи вăхăтра Шăнкăртампа Хырла хушшинче кăна çӳренĕ. Йыш хушăнса пынă май вăл Аслă Пăла тăрăхне тухнă, Кĕтне хĕррине те çитнĕ. Майĕпен-майĕпенех пĕчĕкçĕ ушкăнтан пысăк эткер пулса тăнă. Авал чăваш тăрăхĕн кăнтăр енне «Тискер уй» тенĕ. Çынсем кунтан çурçĕрелле куçа-куçа кайнă. Вăрман хӳттине, çырма-çатрана пытанса ларнă ялсен шучĕ чакнăçемĕн чакса пынă, кăнтăр енчен Аçтăрхан эшкерĕсем, куçса çӳрекен нухайсем, киле-киле тапăннă. Чакăрчек вара баскаксенне те, нухайсенне те çулне пӳлнĕ. Вăл çаратса çӳрекен нукерсене хăвала-хăвала янă, йĕкĕтсене хан çарне илсе каяссинчен хăтарнă, хĕрсене тыткăна лекесрен çăлнă. Мăрсасемпе баскаксем Чакăрчек эткерĕ çывхарнине пĕлсенех Хусан еннелле туха-туха тарнă. Халăх хӳтĕлевçисен юрри хăюллăрах та хăюллăрах янăранă. Чакăрчек паттăр ăста сăрнайçă пулнă, юрă кĕввине сăрнайпа шăрантарнă. Чакăрчек рачĕ çапла юрланă:

Хӳхĕм юрă, янкăс юрă,
Илтĕнех эс инçене.
Çапăçма ханпа хăюллă
Пуçтарсамччĕ çынсене.

Пулччĕ харсăр, пултаруллă,
Пирĕнпе халех пĕрлеш.
Ханăн пусмăрĕ тĕп пултăр!
Çакăншăн хастар кĕреш.

Камăн кăмăл тӳрĕ, çирĕп,
Килĕрех мăн эткере.
Тăшмана çапатпăр вирлĕн,
Тĕп тăватпăр тĕппипех.

Пул яланах тимлĕ, сыхă,
Ут пĕрмай малтан мала.
Вăйлăн карăнтар эс ухă,
Хĕçпелен тир тăшмана.

Пирĕн юрă янкăс, хӳхĕм,
Илтĕнет вăл инçене.
Çапăçма ханпа вăл селĕм
Харсăр халăха чĕнет.

Пĕррехинче ханăн самаях пысăк тĕкĕрчĕ мăн çулпа Хусантан хĕвеланăçнелле васкавлăн иртсе пынă. Ку çара Чакăр-



чекӗн утлӑ хӑлхи-куҫӗ маларахах асӑрханӑ, анчах тӑшман ытла та йышлӑран ун ҫине тапӑнасси пирки шутламалли те пулман. Утаман эткерӗ пурпӗр ҫав ҫар хыҫҫӑнах вӑрттӑн пынӑ. Хан ҫарӗ Сӑр шывӗн ку енче, ҫармӑс ялӗ ҫывӑхӗнче чарӑннӑ, каҫ пулсанах ӑна пур енчен те хупӑрласа илнӗ. Яла хӳтӗлекенсемпе хан ҫарӗ хушшинче хаяр ҫапӑҫу пуҫланнӑ.

Чакӑрчек хӑйӗн шанчӑклӑ юлташне Пичурана ҫармӑс хӗрарӑмӗ пек тумлантарса яла янӑ, кам мӗншӗн ҫапӑҫнине пӗлсе килме хушнӑ. Кӑшт тӑрсан вӑл таврӑннӑ, мӗн курни-илтнине йӗркипе каласа панӑ.

Хусан эшкерӗ ялти ҫамрӑксене хан ҫарне пуҫтарма килнӗ-мӗн, унччен анчах йӗкӗтсем пӗри те тепри тарса пӗтнӗ. Баскак вара тарнӑ ывӑлӗсем ырӑнне вӗсен ашшӗсене сарайне тытса хупнӑ. Ҫапла унта хӗрӗх икӗ ҫынна чыхса тултарнӑ, вӗсене чӗрӗллех ҫунтарса ярас шутпа вӑрмантан ҫатрака сӗтӗрме хушнӑ. Ҫакӑн ҫинчен ҫармӑс хӗрӗ Ужара хӑйӗн тусне Кечене систернӗ. Хан нукерӗ пуласран йӗкӗт хӑмӑшлӑхра сулӑ ҫинче пытанса пурӑннӑ. Ашшӗне сарайра мӗн кӗтнине пӗлсенех Кече сулӑпа Сӑр урлӑ ишсе каҫнӑ, вырӑс салинче вырӑс вайпута шыраса тупнӑ. Кечене воевода сӗтел хушшине юнашар лартнӑ, ҫӑкӑр-тӑварпа сӑйланӑ. Кече ӑна ҫармӑссене инкекрен хӑтарма тархасланӑ. Вайпут килӗшнӗ.

Вырӑссен рачӗ Сӑр урлӑ кимӗсемпе хӑвӑрт каҫса яла хӑй аллине илнӗ, сарайрисене пурне те тискер вилӗмрен хӑтарнӑ. Ҫармӑссем ялӗпех вырӑс воеводине пуҫҫапса тав тунӑ, хӑйсене Мускав хӳтлӗхне илме ыйтнӑ.

Ҫакӑншӑн Хусанӑн пысӑк эшкерӗ ҫармӑс ялне вырӑссенчен тасатма, пӑлхавҫӑсене тата вырӑссене тӗп хулана тытса кайма килнӗ.

Чакӑрчек харсӑр Пичурана ҫармӑс ялне каялла ярать, вырӑс вайпутне ҫапла пӗлтерме хушать: кӑвак ҫутӑ килсен хан ҫарне вырӑссем те, чӑвашсем те харӑс тапӑнмалла, ҫармӑс ялне ҫӑлса хӑвармалла. Эткерсем калаҫса татӑлнӑ пекех тунӑ. Хан нукерӗсем чатӑрсенче ӑшӑ ыйхӑпа ҫывӑрнӑран пысӑк эшкере виҫӗ-тӑватӑ хут пӗчӗкрех вӑйпах парӑнтарма май килнӗ. Ҫапӑҫу хыҫҫӑн вырӑс вайпучӗ чӑваш утаманне тӑван пиччӗшӗ пек ыталаса илнӗ.

— Илтнĕ эпĕ сан çинчен тахçанах, Чигирчек Юманов. Тав сана, тăванăм, пысăк тав.

Сывпуллашнă чухне вырăссем чăвашсене тем чухлĕ хĕç, сăнă парнелеççĕ. Воевода чăваш утаманне ăшă сăмахсем калать, юлашкинчен çапла пĕлтерет:

— Мускав вырăссем пирки çеç мар, ытти халăхсем çинчен те шухăшлать. Вăл сире тăванла пулăшма яланах хатĕр. Пиччӳнтен пулăшу ыйтни эсĕ вăйсăррине пĕлтермест. Курсам: юман турат çумне турат хушнипе тĕреклĕ. Пилĕк пӳрне пĕр чăмăра пĕрлешсен тăруках пырса çулăхаймăн. Мускав та çавах. Вăл пĕр халăх вăйĕ çумне тепĕр халăх вăйĕ хушăннипе хăватлă.

Чакăрчек аллине чĕри тĕлне тытса çапла хуравлать:

— Аслă сăмах ылтăнпа тан. Тав сана ырă канаш панăшăн. Мускав патшине çĕре çити пуç таятăп, ăна çапла калама ыйтатăп: тăшман умĕнче пуçа усмăпăр. Хамăрăн вăй çитмесен Мускавран пулăшу ыйтăпăр.

Пĕр-пĕрне тăванла ырă сунса уйрăлаççĕ вырăс вайпучĕпе чăваш утаманĕ. Чакăрчек умне каччăпа хĕр — Кече тата Ужара пырса тăраççĕ, хăйсене эткере йышăнма ыйтаççĕ.

— Çармăсла кăштах чухлатăп. Ятăрсем тăрăх, пĕри Хĕвел, тепри Шурăмпуç пулатăр. Эппин, Хĕвел пирĕн эткере юлтăр. Шурăмпуçĕ ял халăхĕпе пĕрле пултăр, ватти-вĕттине пăхтăр, — татса парать вĕсен ыйтăвне утаман.

Часах Кече халăх сыхлавçисен эткерĕнче паттăрсенчен пĕри пулса тăрать. Çав çапăçуччен Чакăрчек ратĕнче чăвашсем çеç пулнă, халĕ вара ялти вăйпитти çармăссем пурте ун патне пынă. Ватти-вĕтти тата хĕрарăмсем вырăссемпе пĕрле Сăр леш енне куçса кайнă.

Чăваш паттăрĕ çинчен баскаксем эмира пĕрре çеç мар хыпарланă. Хусан ханĕ хăй те тахçантанпах ăна пĕтерме шăл хăйранă, анчах Чакăрчек ун эшкерĕсене алхасма паман çеç мар, пĕтере-пĕтере тăкнă. Вăл çичĕ юта ним шуйхаштармасăр ирттерсе янă та хыçалтан сасартăк тапăннă. Çакăнта пулнă унăн çĕнтерĕвĕсен пĕр вăрттăнлăхĕ.

Чакăрчек эткерне хирĕç хан хăйĕн кĕрӳшне — мăрсана ярать. Паттăр чăваш ăна Аслă Таяпа карман ишĕлчĕкĕсем

патёнче вăрттăн тапăнать. Çак кармана пăлхар-чăвашсем тунă пулнă. Вăхăт иртнĕ май вăл тусăнса-арканса пĕтнĕ. Çакăнта ĕнтĕ халăх сыхлавçисем хан пуçтахĕсене сăнăпа тиреççĕ, чукмарпа хиреççĕ, парăнаканнисене тыткăна илеççĕ. Хан кĕрӳшĕ те Чакăрчек аллине лекет. Тыткăнра çак «кăрккана» виçĕ кун выçă тытнă, унтан Хусан çулĕпе çара пакартан кăларса янă. Çавна пĕлсен хан урсах каять, çăварĕнчен кăпăк сирпĕтет. Вăл тăван пиччĕшне — эмира — пысăк тĕкĕрт парать, Чакăрчеке тытса Хусана илсе килме хушать. «Эпĕ мăн хуранта шыв вĕретме хушăп, Чакăрчеке унта чăпăл тăвăп», — тет.

Вăйпа çеç мар, ăспа та çĕнтереççĕ. Харсăр Чакăрчек çакна лайăх ăнланнă. Эмир Хусантан йышлă тĕкĕртпе тухнине пĕлсен халăх эткерĕн пуçĕ çапăçмалли хӳтлĕхе Аслă Таяпа патĕнче мар, урăх вырăнта тума шут тытать. Алманчăран çурçĕререх, Пӳле çырминчен тăварах, Тимĕрле уйĕнче вăл шӳммесем чавтарать, сăрт тавра тăпра купаласа çаврăнтарать. Кунти çӳллĕ сăртран таврара мĕн пурри янкăрах курăнать. Шăнкăртам леш енчи хырлăх та, Туçапа Кив Ахпӳрт те ал тупанĕ çинчи пекех тухса тăраççĕ. Çавăнпа суйласа илнĕ те ĕнтĕ çак вырăна Чакăрчек.

Анчах тем тери тăрăшсан та çапăçмалли çĕнĕ хӳтлĕхе пит васкамалла пулнăран кирлĕ пек хатĕрлесе çитереймен эткер. Хан пиччĕшĕ хăйĕн çарĕпе çывхарса пынă, Аслă Таяпаран иртнĕ те Энтепе еннелле çул тытнă. Чакăрчек юлан утçисемпе эмир тĕкĕртне пачах кĕтмен çĕртен çулăн ик енчен харăсах тапăннă та ăна икĕ пая уйăрса янă, пĕтĕм тĕкĕрте тытса чарнă. Чакăрчек юлан утçисемпе эмир нукерĕсем хушшинче хаяр тытăçу пуçланнă.

Кĕçех Чакăрчекĕн тепĕр чеелĕхĕ пурнăçа кĕнĕ. Тахçан авалах пăлхар-чăвашсем Тикешпе Аслă Таяпа хушшине тăватпилĕк çухрăмран пĕрре пысăк тĕмесем-сĕнтĕрсем купаласа тунă, çав тĕмесем çинче хуралçăсем тăнă. Хăрушлăх çинчен пĕр-пĕрне сĕнтĕрсем çинче кăвайт чĕртсе хыпарланă. Çӳллĕ вырăнти кăвайт аякранах курăннă. Халĕ ку тĕмесене чăвашсем улăп тăпри теççĕ.

Эмир пысăк тĕкĕртпе килнине пĕлсен Чакăрчек сĕнтĕрсем çинчи хурала сисĕмлĕрех пулмаллине систерет. Тытăçу тап-

рансан сехет те иртмест, Чакăрчек ятарласа янă эткерçĕ урхамахпа Тикеш çумĕнчи сĕнтĕре вĕçтерсе çитет. Çав самантрах унта кăвайт ялкăшса çунма тытăнать. Ун хыççăн Аслă Патăрьел ку енчи Кив Ахпӳртри тата ытти тĕмесем те вутпа ялкăшма пуçлаççĕ, хăрушлăх çинчен систереççĕ. Эмир, чăваш юлан утçисем чăрсăррăн çапăçнинчен тĕлĕннĕскер, çакнашкал шухăш патне пырса тухать: иккĕленмелли çук, юлан утçăсем Чакăрчекĕн тĕп вăйĕ мар. Пӳле сăрчĕ çинчисем те унăн çарне вăхăтлăха чарса тăмалли ушкăн çеç. Чăваш утаманĕн тĕп вăйĕ кăвайтсем çуннă енче.

Эмир хăйĕн тĕкĕрчĕн пĕр пайне Пӳле сăртне тытса илме хушать. Хăй вара çарăн пысăкрах пайĕпе Тикешеллеваскать. Ултава вăл унта çитсен тин ăнкарса илет. Çарне хăвăрт каялла çавăрать, анчах Пӳле сăрчĕ çине тепĕр ирпе кăна çаврăнса çитет. Ку хушăра халăх сыхлавçисем унăн пĕр нукерне те чĕрĕ хăварман. Разведчикĕсенчен çак усал хыпара илтсен эмир тарăхнипе минресех каfive.

Чурăс чунлă эмира ун çывăх çыннисем вăрăм çул хыççăн кăштах канса илме кирлĕ пирки аса илтереççĕ. Турткалашсан-турткалашсан килĕшет хайхискер. Тепĕр кунне тĕп вăйĕсене пилĕк юплĕ çырма тăрăхне — Бишбармака вырнаçтарса тухать. Юнашарти Тимĕрлере ун чухне чăтлăх вăрман кашласа ларнă. Нукерсем çав вăрмантан вут-шанкă сĕтĕреççĕ, йывăç турттараççĕ. Çырма хĕррипе хӳшĕсем тăва-тăва лартаççĕ. Вĕсен шучĕ те çук. Чăрăш çинче миçе йĕп, çавăн чухлĕ хӳшĕ.

Çав хушăра Чакăрчек та тĕлĕрмест. Хăй суйласа илнĕ тӳпеме пĕрехмай çирĕплетет, ăна тăшман тытса илейми хӳтлĕх туса хурать. Çапăçу умĕн вăл хăйĕн эткерне çапла калать:

— Эй, тусăмсем! Эй, паттăрсем! Тăрăр çапăçма, усал-тĕселе тĕп тума! Хан тавраше тек ан пусмăрлатăр, никама та хур ан кăтарттăр. Халăх хуйхă-суйхăсăр пурăнтăр, ăна инкек-синкек ан çулăхтăр. Паттăрлăх çĕклентĕр чĕрере, ирĕклĕх пултăр чĕрере!

Эсремет эмир хăйĕн нукерĕсене урăхла хушу парать:

— Касăр, ваклăр, турăр, пĕрне те чĕррĕн ан хăварăр. Чакăрчексĕр пуçне нихăшне те тыткăна илмелле мар. Чакăрчекĕн

ман ура йӗрне чуптума та тивӗҫ ҫук. Ӑна вӗрекен хуран кӗтет. Пӑлхавҫӑсене тӗп тумасӑр, Чакӑрчеке тыткӑна илмесӗр Хусана таврӑнмастӑп. Эй, Аллах, пӗсмӗлле, пулӑшсам пире!

Хайхискер Пӳле сӑрчӗ ҫине эшкер хыҫҫӑн эшкер каять. Эмир ҫарӗ Чакӑрчекӗннинчен икӗ хут пысӑкрах, ҫар хатӗрӗсемпе пуянрах, халӑх сыхлавҫисене пурпӗр парӑнтараймасть.

Чакӑрчек хӑйӗн харсӑрӗсене ҫапла хушать:

— Эпӗ хамӑрӑн эшкер юррин ҫаврӑмне сӑрнайпа пӗрре калӑп — эсир тӑшман ҫине ухӑ йӗпписемпе перӗр, тепре калӑп — аллӑра хӗҫ, сӑнӑ ярса тытӑр, сӑрнай виҫҫӗмӗш хут сасӑ парсан — пурте пӗр харӑс тӑшмана хирӗҫ ыткӑнӑр.

Эмир ҫарӗ урнӑ кашкӑрла ҫаплах малалла сӗкӗнет. Нукерсем хӳтлӗхе ҫитесси ҫӗр хӑлаҫ юлсан сӑрнай сасси пӗрремӗш хут илтӗнет — Чакӑрчек эткерӗ шӑллемӗсенчен ухӑ йӗпписем вирхӗне-вирхӗне тухаҫҫӗ. Кама лекет, ҫав пынӑ ҫӗртех тӗшӗрӗлсе анать. Акӑш-макӑш тӗл переҫҫӗ Чакӑрчек паттӑрӗсем. Тӑшман ҫитесси вӑтӑр хӑлаҫ юлсан сӑрнай иккӗмӗш хут сасӑ парать, халӑх сыхлавҫисем хӗҫ, сӑнӑ ярса тытаҫҫӗ. Сӑрнай пурте пӗлекен кӗвве виҫҫӗмӗш хут янӑратса ярать — пӗтӗм эткер хӳтлӗхрен сиксе тухать, тӑшман ҫине нимӗнпе чарайми хӑватпа ыткӑнать.

Паттӑрсене патвар Чакӑрчек хӑй хавхалантарса тӑрать. Вӑл хура сӑхманпа, ун айӗн тимӗр кӗпе тӑхӑннӑ, уринче сӑран атӑ, пуҫӗнче шӗвӗр тӑрӑллӑ калпак. Пӗвӗпе ҫӳллӗ, кӗлетки тӗреклӗ, хул-ҫурӑмӗ сарлака, куҫӗ ҫӑлтӑр пек ҫунать. Аллинче унӑн вӑрӑм сӑнӑ, пилӗкӗнче — хӗҫ. Вӗри чӗреллӗскер, тӑшмана хирӗҫ кашни хутрах хӑй сиксе тухма хатӗр, анчах ун ик енче икӗ хӳтӗлевҫӗ — Пичурапа Кече тӑраҫҫӗ, утамана вырӑнсӑр теветкелленме памаҫҫӗ.

Ҫапӑҫу хӗрнӗҫемӗн хӗрсе пырать. Сӑрт ахлатать, йынӑшать, чӗтренет. Тӑшман кӗлте пек йӑванать. Сӑрт ҫинче виле урлӑ та пирлӗ выртать. Тӑпра этем юнӗпе пӗвенет. Эмир эшкерӗ ҫаплах сӗкӗнет те сӗкӗнет. Виҫӗ кун та виҫӗ каҫ иртет. Аслати авӑтать, ҫиҫӗм ҫиҫет, чашлатса ҫумӑр ҫӑвать, анчах ҫапӑҫу пӗр самантлӑха та чарӑнмасть.

Тӳсеймест эмир: хӳтлӗхе илме нукерсене хӑй ертсе каять.

— Ара, ку ман аттене асаплантарса вӗлерекенни вӗт, —

палласа илет ăна Чакăрчек. Хӳтĕлевçĕсем те чарса ĕлкĕрей-меççĕ, вăл шӳллемрен вăр-вар сиксе тухать. Çар пуçĕсем пĕр-пĕрне хирĕç талпăнса пынине курсан ик енĕ те тăпах чарă-нать. Çапăçу тапраннăранпах пĕтĕм уй тĕрлĕ шавпа, кăш-кăрашупа сĕрлесе, кĕрлесе, янăраса тăратчĕ. Сасартăк тавралăх асамлăн шăпланчĕ. Акă сăнăпа сăнă хĕресленет, иккĕшĕн сăнни те хуçăлать. Халĕ ĕнтĕ хĕçпе хĕç чанк та чанк тăвать. Пĕри те, тепри те парăнасшăн мар. Нихăшĕ те ниепле çĕней-мест. Чакăрчек хĕçĕ вут пек хĕрсе каять, эмир хĕçĕ йăлт мă-калса çитет. Чакăрчек аллине вăй хушăнсах пырать, эмир алли лăштах усăнса анать. Юлашкинчен Чакăрчек паттăр арăс-ланла хаярланса хăяматăн пуçне касать-татать, элес-мелес кĕлеткине нукерсем еннелле ывăтать. Çакна курсан Хусан çарĕн сехри хăпать.

— Ай-вай, пĕсмĕлле! — кăшкăрса яраççĕ нукерсем, çаврăн-са пăхмасăр тарма пикенеççĕ. Чакăрчек хальхинче те хан çарне çĕнтерет, анчах çапăçура хăй те вилмеллех аманать.

— Пӳле сăртне тăшман виллисенчен тасатăр, вĕсене Биш-бармакри путлăха кайса пăрахăр: куçĕсене курак-çăхан сăх-тăр, ӳчĕсене тилĕ-кашкăр çитĕр. Паттăрла пуç хунă тусăм-семпе пĕрле мана çак сăрт çине — çапăçу хирне пытарăр. Малашне тата сыхăрах тăрăр. Хана хирĕç вырăссемпе пĕрле кĕрешĕр. Паттăрлăх çĕклентĕр чĕрере, ирĕклĕх пултăр ça-кă тĕнчере! — пиллесе хăварать çав паттăр тус-юлташĕсене, ирĕклĕхшĕн вута кĕнĕ çынсене юлашки сывлăшĕ тухас умĕн.

Халăх сыхлавçисем вăл хушнă пекех тунă. Утаманпа унăн паттăр тусĕсене кăтартнă вырăнта пысăк чыспа пытарнă. Чĕрĕ юлнă тусĕсем тата вĕсен ывăлĕсем Чакăрчек пилне манман. Шăнкăртампа Хырла шывĕсем нумаях та юхма ĕлкĕреймен, чăвашсем ытти халăхсемпе пĕрле Хусан ханне хирĕç пăлхав пуçарнă. Вырăс патши IV Иван патне элчĕсем янă, унран хӳтлĕх тата пулăшу ыйтнă. Чăваш халăхĕ хан пусмăрĕнчен вырăс-сем тăванла пулăшнипе хăтăлнă. Çак çĕнтерӳре Чакăрчек тӳпи те пур. Пӳле сăртне ахальтен мар Чакăрчек сăрчĕ теççĕ. Каç-каç ку сăрт çинчен тӳпенелле вут-хĕмсем йăр та яр çĕк-леннине калаççĕ. Çав хĕмсем — авалхи чăваш паттăрĕсенчен хальхи яш-кĕрĕм асăнмалăх юлнă йĕрсем.

Хам курман та, çапăçу вырăнĕ çĕрле çап-çутă çуталса каять теççĕ. Лăп çур çĕр тĕлĕнче Чакăрчекпе унăн паттăрĕсем пурте чĕрĕлсе тăраççĕ имĕш. Халăх эткерĕпе эмир тĕкĕрчĕ хушшинче каллех хаяр çапăçу тапранать. Пӳле леш енчен таçта çитиех çапăçу шавĕ илтĕнет. Ирпе пирвайхи автансем авăтсан шав тăруках лăпланать, çапăçакансем юнлă хĕçĕсене курăкпа шăлса типĕтеççĕ те куçран çухалаççĕ.

Çынсем каланă тăрăх, Чакăрчек пирĕн таврана таçтан, Атăл хĕрринчен килнĕ пулать. Чăвашсене пăхан Пихампар Хырлапа Пăла таврашĕнче усал-тĕселе хирĕç кĕрешме, тӳрĕлĕхпе тĕрĕслĕхе тытса пыма Чакăрчеке ятарласа янă имĕш.

Чакăрчек тĕрĕслĕхе чăна кăларни иккĕлентермест, анчах вăл ăçтан пулни пирки урăхла шутлатпăр. Малтанах каларăмăр: Чакăрчек паттăр Алманчăра çуралса ӳснĕ. Кам тăшмана парăнмасть, çавна халăх манмасть. Кам тăшмана çĕнтерет, ăна халăх чун-чĕререн хисеплет. Шăнкăртам пĕрмаях шăнкăртатĕ, Хырлапа Пăла юхма чарăнмĕç, Атăл нихăçан та хухса типес çук. Çавăн пекех Чакăрчек пек паттăрсен ячĕ те халăх асĕнче ĕмĕр-ĕмĕр пурăнĕ.

Чăнах та, чăваш паттăрĕ Чакăрчек шăпи пире шухăшлаттарма пăрахмасть. Пĕлетпĕр, ун ятне сыхласа хăварнă сăрт çинче Граждан вăрçи çулĕсенче хĕрлисен отрячĕ шуррисемпе çапăçнă, халăх ирĕклĕхне Чакăрчек пекех паттăррăн хӳтĕленĕ. Ача чухне эпир Чакăрчек сăрчĕ çине пĕрре çеç мар кайса курнă. Шӳллемсем ишĕлсе вашмăкланнăччĕ ĕнтĕ. Çак шăтăк-путăклă вырăнта йĕплĕ тĕмсем пур, хăмла çырли те тупаттăмăр, çĕр çырли те астиветтĕмĕр. Çырла татса çӳренĕ май авалхи тутăхса кайнă хĕç хуçăкĕ çине пусни те пулкалатчĕ. Ухă йĕппиcем, пуртă-çĕçĕ таврашĕ те тупăнатчĕ. Кунти пысăк лаптăка суха пуçĕсемпе сухалама май килмен. Тракторсем хир хуçи пулса тăрсан Чакăрчек сăрчĕ тыр-пул ӳстерекен уя çаврăнчĕ, халăха усă кӳме пуçларĕ. Чакăрчек хăй те çавăн çинчен ĕмĕтленнĕ. Сухаланман лаптăк халĕ кĕштек пек çеç тăрса юлнă.

*Патăрьел районĕнчи Алманчăра*
*А.Н. Дружининран çырса илнĕ.*

## Ăнлантарни

Чăн та ĕнтĕ, истори легендисемпе халапĕсенче мĕн калани пĕтĕмпех тĕрĕс теме çук. Халапçăсем кăна мар, ăсчахсем те йăнăшаççĕ. 1391 çулта Уксах Тимур (Тамерлан) çарĕ Тохтамыш çарĕпе çапăçнин вырăнне пилĕк тĕлте кăтартнине тĕл пулатăн. Легендăсем, сăмахран, Тимĕрле текен вырăна шăпах Уксах Тимурпа çыхăнтараççĕ.

Вырăс патшалăхĕн, Атăлçи Пăлхар тата Ылтăн Урта историйĕнче Тохтамыша çапса аркатни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çапăçăвĕ шутсăр пысăк пулнă: унта икĕ енчен тăват çĕр пин çын тухнă.

Самар облаçĕнчи Кушкăра IX класра вĕренекен Михаил Арнольдов ăсчахсем кăтартнă пилĕк вырăна çитсе курнă 2004 çулта, ватă çынсемпе тĕл пулса калаçнă. Тăватă вырăнĕ пысăк çапăçу валли юрăхсăр пулнине палăртнă. Хаяр кĕрешӳ пиллĕкмĕш вырăнта — хăйсен çывăхĕнчи Хăнтăрча юхан шыв тăрăхĕнче пулнине ĕненет пултаруллă çамрăк. Тимурпа Тохтамыш çарĕсем Чăваш Ентен кăнтăрарахра çапăçнă.

«Тохтамышпа Уксах Тимур унччени хирĕçнĕ. Сырдарья тăрăхĕнче çапăçса та илнĕ. 1391 çулхи нарăсра вара Тамерлан, питĕ чее те хаяр Эдигей мăрса хĕтĕртнипе, курултайра сӳтсе явнă хыççăн, Ылтăн Уртана хирĕç походпа тухать. Тавçăруллă йĕркелет вăл хăйĕн ик çĕр пин çынлă çарĕн çул-йĕрне: малтан тавра çулпа Тобол шывĕ хĕррине çитет, Пушкăрт çĕрĕ урлă каçать, Урта хутлăхне пырса кĕрет. Кун пирки Тохтамыш ака уйăхĕнче тин пĕлет, хăвăртрах çар пухса (ик çĕр пин çынна яхăн) Уксах Тимура хирĕç тухать. Шăпах Хăнтăрча таврашĕнче тĕл пулать те утлă икĕ çар (кун пирки М. Арнольдов тĕрĕсех тĕпчесе пĕлнĕ, анчах, манăн шухăшпа, тытăçăвăн пĕр вырăнне çеç тупнă — хаяр та юнлă çапăçу хĕрĕх çухрăм талккишĕпе пынă)». (Хыпар. 2004. Çĕртмен 19-мĕшĕ.)

Апла Уксах Тимур çарĕсем Ылтăн Урта хутлăхĕнче, Вăтам Атăл тăрăхĕнче çапăçнă. Унăн çарĕсем Хырла, Сĕве юхан шывĕсен çыранĕсенчи ялсене те пырса тухма пултарнă-ши? Тĕслĕхрен, хальхи Елчĕк районĕнчи Шăмалака? Ку ял ун чухне пулнă-ши? Ку ыйтусемпе историксем мĕн те пулин татăклăн калани курăнсах каймасть-ха.

Кĕнекери пĕр легендăра Уксах Тимĕр (Тимур е Тамерлан) (1336—1405) çинчен сăмах пырать. Хăй вăхăтĕнче вăл пĕтĕм Азие тенĕ пек пăхăнтарнă: Персие пĕрре кăна мар тапăннă, Индире Дели, Иракра Багдад, Сирире Дамаск хулисене аркатнă. Анкара çывăхĕн-

чи çапăçура çĕнтерсе Осман султанне I Баязида тыткăна илнĕ. Темиçе хут чеен тапăнса Ылтăн Уртана салатса яма пултарнă. Çакăн çинчен чăваш халăх поэчĕ Н.И. Полоруссов (Шелепи) «Уксах Тимĕр Пӳлере илни» легенда сăвăласа хăйланă. Ку ыйтупа пичетре И.И. Одюков профессор çырса илнĕ легенда пур.

Çирĕплетсех калар: Уксах Тимĕр хăй те, унăн çарĕсем те Чăваш Ен тăрăхне çитейменех. Вĕсене ытларах кăнтăрти патшалăхсем, Ази çĕрĕ-шывĕ кăсăклантарнă. Хăйсен хаярлăхне çакăнта кăтартнă, çакăнта тискер çаратусем тунă.

Алманчă хирĕнче Пӳле çырми пур. Çак çырма тăрăхĕнче, Тимĕрле вăрманĕ тăсăмĕнче ĕлĕк-авал çарсем тăни çинчен халăх юмаххалапĕсенче пĕрре кăна мар асăннă. Ку çырма ячĕ пăлхар-чăвашсен хулипе, Пӳлерпе, çыхăнман-ши текен шухăш пырса кĕрет пуçа. Пӳле çар çынни, çар пуçĕ тăнă вырăна пĕлтермест-ши?

Тури Туçан кăнтăрти чиккинче Тимĕрле текен вырăн пур. Унти çырмана та çав ята панă. Ку ята Уксах Тимĕрпе (Тамерланпа) çыхăнтарас шухăшлисем çук мар. Тимĕрлере Тамерлан хăй е унăн çарĕ тăнă тесе ĕнентерме пăхаççĕ. Тĕслĕхрен, «Тимĕр нумай калаçмасть» халапра çав шухăш уçăмлăн палăрать. Ăна Шăмалакра нумай çул шкул директорĕнче тата Канаш хула хаçачĕн редакторĕнче ĕçленĕ М.А. Васильев каласа пани тăрăх çырнă. Халиччен пичетре кун çути курнă халапа ку кĕнекере те малтанхи хальлĕнех хăварнă.

Пытарас мар, Тамерлан Шăмалакпа Тимĕрлере пулнине истори татăклăн хирĕçлет. Паллах, пирĕн çакăнпа килĕшме тивет, мĕншĕн тесен тĕрĕслĕх ăслăлăх енче. Аслă Пăла тăрăхĕнчи паллă тĕпчевçĕ тата таврапĕлӳçĕ Г.Ф. Мулюков «тимĕрле» сăмах ăçтан тухнине çапла ăнлантарчĕ: ку тăрăхра тимĕр тăпри пур. Çакна геологсем асăрханă. Тимĕрлере лаштра юман ларнă, ăна темиçе хутчен те аçа çапнă, хуçнă, лутăрканă. Халĕ ку йывăç шур сухалсен асĕнче кăна юлнă. Аçа-çиçĕме юман патне тимĕр тăпри туртнă теççĕ.



# Хырла хĕрринче туслашнă

## Ула вăкăр хыççăн

> Эпир аваллăх урлă
> Паяна,
> Килес куна
> Паратпăр алă.
>
> *Георгий Ефимов*

Ылтăн Урта ханĕ Тимĕр Пăлат 1361 çулта Пăлхар тăрăхне çунтарса аркатать. Пăлхарсен пĕр пайĕ Хусан тăрăхне, тепĕр пайĕ Сĕве тăрăх анаталла вăрмансене тарса хăтăлаççĕ. Ислам тĕнне йышăннă пăлхарсем «пĕсĕрмен», йышăнманнисем «чăваш» ятпа çӳреме тапратаççĕ.

Чăвашсем Хусан ханлăхĕн пусмăрне çакланаççĕ. Хăнчăр куçлă мăрсана, хан лартнăскере, Шептак çĕрпӳ хăй ялĕн яхăнне те ямасть. Иртнĕ çулсенче хана мĕн кирлине ку таврари ялсенче чăвашсенчен алманçăсемпе паскаксем сăптăратчĕç. Халĕ çакна мăрсан тумалла. Хурчăка тĕлĕкĕнче те шурă чăхха хапсăнать, мăрса вара кăнтăрла та, çĕрле те çĕрпĕве хăйне пăхăнтарасси пирки шухăшлать.

— Аллах каçартăр та, пулать вĕт çут тĕнчере тăнсăр-пуçсăр тăрпалтай! Гяур вĕт вăл! Мăхамет тĕнне тытман çын! Çисе ярăттăм — кашкăр мар, хыпса çăтăттăм — упа мар. Э-э-эй, çырлахах, Аллах! Мĕн тăвăпăр? — ыйтать хăйĕн нукерĕсенчен чее пит-куçлă тăпчам мăрса. Мăн саслăскер сăмаха сĕтĕререх калаçать.

Шухăша кайнă пек пулса нукерсем куçĕсене çеç мăчлаттараççĕ. «Эс унпа ан тавлаш, нихçан та ан харкаш, унсăрăн

тем курса тăмалла пулĕ. Пыршу-пакартуна туххăмрах турт-са кăларма пултарать мăрса. Унăн чун пулмалли вырăнта хăвăл каска!» — асăрхаттарассĕ аксакалсем нукерта çӳре-кен ывăлĕсене.

— Мĕн тăвăпăр? — ыйтать каллех мăрса нукерсенчен.

— Аллаха шĕкĕр, ку таврара хамăр хуçа, — мăкăртатса илет пĕри.

Мăрса — тутарланнă чăваш. Тутарпа чăваш сăмахĕсенчен пăтă çăрма ăста.

— Эппин, алай... ăхă, бит якши. Тилхепе ялан карăнчăк пулмалла, саламат шартлатни илтĕнсех тăмалла. Яри! çĕмĕрт-терме тытăнар-ха, иптешлэр. Шептака хăлха чикки бирегэз. Бехмет сунатăп сире, ĕçĕр-хĕлĕр çу пек юхса пытăр! — çиçĕмле çиçтерет хĕсĕк куçне мăрса. Унтан çапла хушса хурать:

— Çав йĕксĕке леш тĕнчене ăсатсан пирĕн халăх йĕп вĕçĕ чухлĕ те иксĕлес çук.

— Ёриса. Килĕшетпĕр! — хуравлаççĕ нукерсем.

...Никам та мар, хан мăрси тарăхтарать Шептак çĕрпĕве. Çавскер халăха ясак тӳлеттерсе халтан ярать: укçан та, ты-рăпа та, выльăх шутĕнчен те вуннăран пĕр пайне шăйăрса илет. Хана хăйне те, унăн мăрсине те халăх курайми пулса çитнĕ. «Кашкăр курсан катана, упа курсан килелле, мăрсана кур-сан вăрманалла тармалла!» — ăс параççĕ ваттисем яш-кĕрĕме. «Вут пек вăйли çук, çил пек чарусăрри çук, мăрсаран усалли çук!» — йĕплеççĕ çивĕч чĕлхеллисем. «Хăçан шалчи тулать-ши?!» — тарăхаççĕ пур ялсенче те чăвашсем.

Мăрса нукерĕсем Шептак ялне ир-ирех пырса çитрĕç. Вĕсем ăна çĕр çынлă тĕкĕртĕнчен вунă маттура хан валли уйăрса пама, пиçнĕ çырла пек илемлĕ йăмăкне тата ялти чи чипер тăхăр хĕре — пурĕ вунă пикене Хусана ăсатма хушрĕç. Паллах, хан гаремĕ валли ĕнтĕ. Мăрса мĕн ыйтнине пĕлсен çĕрпӳ канăç-лăхне пачах çухатрĕ, чĕри йĕп тăрăннă пек ыратса кайрĕ.

— Юрĕ. Хура курак шуралсассăнах парăп хан мĕн ыйтни-не, — хуравлать вăл нукерсене. Унтан тĕкĕрçисене çапла ху-шать:

— Хан эшкерĕн шăрши те ан юлтăр ялта!

Шептак маттурĕсем нукерсене ялтан хăвăрт хăваласа ярас-

çĕ. Çакăн хыççăн мăрса хăй пысăк йышпа килессе кĕтсех тăр. Тепĕр чухне анлă тĕнче те хĕсĕке тăрса юлать иккен. Кунта, Атăл хĕрринче, пурăнма текех май килместех.

Шептак ял-йышĕ тул çутăлнă-çутăлман вăрăм çула тухать, выльăх-чĕрлĕхне хăваласа пырать. Малта хуçăк майракаллă ула вăкăр. Хурăнлăх та ăвăслăх, юманлăх та хырлăх хыçала тăра-тăра юлаççĕ. Вăрман варринче пĕр çырма хĕррине çитсен хайхи вăкăр малалла пĕр утăм та тумасть, хăваласан та вырăнтан тапранмасть.

— Эй, аслă Пӳлĕх! Пиллесем пире çакăнта пурăнма! Хăвăн ырлăхна хĕрхенмесĕр парсам! — чĕркуçленсе ларать Шептак вăкăрпа юнашар.

Пĕтĕм йыш ун хыçĕнче чĕркуçленет. Пурте пĕшкĕнсе пулăхлă хура тăпрана чуптăваççĕ.

Çырми — Хырла юппи иккен. Ун хĕрринче никĕсленет те ĕнтĕ çĕнĕ ял. Яштака пӳ-силлĕ Шептак хура сăнлă, хура куçлă. «Çĕмĕрт çисе ӳснĕрен питĕм хура», — шӳтлет вăл тусĕсем умĕнче. Хура çăра çӳçне хыçалалла тураса вырттарать. Мăйăхĕ те йĕпкĕн хура. Хура çилхеллĕ хура тур утпа çӳрет. Йĕнерĕ те хура сăрантан. Çынсем ун çинчен «хураран пуян» е «хура пуян» текелеççĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ унăн çĕнĕ ялĕ ятне Карапай (Хура пӳ) Шăмăршă (вырăсла Карабаево) тесе çырса хунă.

Хан мăрсипе эмир таврашне Шептак çĕрпӳ килĕштерейми тăшман вырăнне хурать. Вĕсен эшкерĕсем Елчĕк çывăхне, Кĕçĕн Пăлапа Аслă Пăла тата Хырла тăрăхне килсе тухсан çĕрпӳ хăйĕн тĕкĕрчĕпе май пур таран чышкăлать, ĕнсе кукли çитерет. Хĕсĕрлекенсенчен мĕнпур вăйĕпе хӳтĕлет чăваш ялĕсене. Çавăнпа ăна таврари ялсем пысăк хисепе хураççĕ. Вĕсене хан мăрси кирлĕ мар, турхан пулма хăйсемех Шептака суйлаççĕ. Çакна май унăн тепĕр яла куçма тивет. Ку яла Турхан ят параççĕ. Сăмах май каласан, ку ят паянччене сыхланса юлнă. Турхан тĕкĕртне çынсем ирĕклĕн пыра-пыра хушăнаççĕ.

Вĕçкĕнĕн — пăс, ĕçченĕн — вăй, кĕрешӳçĕн — ăспа тавçăрулăх. Шептак ирçесен çар пуçĕсемпе паллашать, туслашса çывăхланать.

— Шăнкăрчă чĕпписем шыв ĕçнĕ чух унта хура чĕкеçĕн

мĕн ĕç пур? Ĕçчен чăвашсемпе ирçесем шăкăлтатса пурăннă чух мăрсасемпе эмирсен мĕн ĕç пур? Хĕртнĕ турчăка чиксе Атăла ăшăтаймăн, пуш параппан çапса халăха ырă пулаймăн. Пусмăрçăсене хирĕç пирĕн харсăртарах кĕрешмелле. Халĕ чи кирли — пĕрлешӳлĕх, — ӳкĕтлет вăл ирçесен çар пуçĕсене.

Ирçесем ӳкĕте кĕреççĕ, хан эшкерĕсем çине май килсенех чăвашсемпе пĕрле тапăнаççĕ.

## Кайăк хур санăн пултăр!

Пӳлĕхĕн ырă кунĕсем пурах çав. Ылтăн кĕркуннен çурла уйăхĕ хĕвеллĕ те ăшă тăчĕ. Çынсем кĕрхи ĕçсене чиперех вĕçлерĕç. Тыр-пул ӳстерсе ĕшеннĕ уйсем тӳлеккĕн канаççĕ.

Шептак йышлăланнă тĕкĕртне Хырла хĕрринчи çĕмĕртлĕх хӳттинче вырнаçтарчĕ. Вырăс çарĕн 18-мĕш тапăрĕ (станĕ) таçта çакăнталлах, Хырла хĕрринчех, пулма кирлĕ. Шептак пĕччěнех вăрмана кĕчĕ. Пурне те пултаракан Пӳлĕх йывăçсен çулçисем валли тем тĕрлĕ сăрă та тупнă. Пĕтĕм вăрман çуталса кайнă. Сывлăшĕ уçă, таса.

Çывăхрах ăвăссем ылтăн тумпа йăлкăшса çунаççĕ. Вĕсем хушшинчен Хырлан ятсăр юппин йăлтăр шывĕ курăнса кайрĕ. Унтан пĕр ушкăн кайăк хур вĕçсе çĕкленчĕ. Шептак пĕр кайăкне ухăпа тĕллесе печĕ. Çав самантрах çырма леш енче пăшал кĕрĕслетни илтĕнчĕ. Персе ӳкернĕ кайăк хур патне ик енчен иккĕн пĕр вăхăтрах çитсе тăчĕç.

— Ку хур кайăк ухăпа пенĕрен ӳкрĕ... Акă кур: йĕппи те çумĕнчех...

— Ман шутпа, ăна ухăпа çеç мар, пăшалпа та пенĕ... Вăн пуля тушка витĕрех тухнă! — хирĕçлерĕ Шептака кулараххăн тепри. Унтан кайăка ăна тăсса пачĕ. — Ну юрĕ, тĕл перетĕн иккен. Кайăк санăн пултăр. Анчах пĕлесчĕ: кам пулатăн?

— Чăваш турханĕ эпĕ. Шептак ятлă.

— Илтнĕ эпĕ сан çинчен. Нукерсене хăлха чикки тыттараканĕ, эппин!.. Эпĕ вырăс князĕ Андрей Михайлович Курбский, — чăваша хапăл тусах алă пачĕ хайхискер.

Шептак сăнĕ хĕвел шевли пек çуталса кайрĕ.

— Лăпах санпа тĕл пуласшăн килтĕм те çакăнта. Йышăн-



сам мана хӑвӑн ҫарна. Тӗкӗртӗм ҫакӑнтах. Айтӑр кӑтартам, — сӗнчӗ чӑваш вырӑса.

Ҫӗмӗртлӗх хӳттинчи лагерьте чӑваш ҫӗрпӗвӗ вырӑс княҫне шӑрттанпа, ҫӑка лакӑмри сӑрапа сăйларӗ. Иккӗшӗ пуплесе ларнӑ хушӑра пӗр тӗкӗрҫӗ хайхи хур кайӑка ӑшаласа килсе хучӗ. Турханпа князь ӑна та астиврӗҫ.

— Ҫавӑнпа калатӑп: тинӗс тумламӑн-тумламӑн пухӑнать. Аслӑ Раҫҫей пӗрешкел шухӑшлӑ темиҫе халӑх пӗр ҫемьене чӑмӑртаннипе вӑйлӑ. Ҫемьере тетӗшӗ те, унӑн шӑллӗсем те пур. Вырӑс халӑхне тете е аслӑ пичче тесе шутлӑр, эпир вара чӑваш халӑхне тӑван шӑллӑм вырӑнне хурӑпӑр! — пӗтӗмлетрӗ шухӑшне князь, унтан ҫапла ыйтрӗ: — Эпир кунтан ҫӗнӗ хулана, Сӗвене, сывлӑш ҫавӑрса ярсан — Хусаналла ҫул тытатпӑр. Ҫулне лайӑх пӗлетӗн-и? Пире ҫул кӑтартса пыраймӑн-и?

Ку тӑрӑхри ҫулсене Шептак пилӗк пӳрне пек пӗлет. Ҫавӑнпа кунашкал сӗнӳпе вӑл хапӑл тусах килӗшрӗ.

Ҫӗмӗртлӗхри хӳшӗре ҫывӑракан Шептак ҫӗрпӳ ир енне хӑрушӑ тӗлӗк курать. Ӑна сӗм вӑрманта кашкӑр кӗтӗвӗ хупӑрласа илнӗ пек. Ни малалла, ни каялла кайма ҫук. Тукмак хӳресем урса кайнӑн шӑлӗсене шаккаҫҫӗ, пӗр-ик хӑлаҫ тӑршшӗ сикеҫҫӗ. Тӑр пӗччен ҫӗрпӳ аптраса ӳкмест: пӗрне тапать, теприне хӗҫпе касать, виҫҫӗмӗшне чӗлхинчен ярса тытса сӗтӗрет. Пайтах вӑхӑт ҫапӑҫма тивет ӑна кашкӑрсемпе. Ҫапах вӗсене ҫӗнтеретех. Хура вӑрмантан таса уя тухать. Чӑм тара ӳксе вӑранать Шептак.

— Эй, Пихампар, хӳтӗлесем мана тискер янаварсенчен! — ҫаплах чӗтреме чарӑнаймасӑр кӑшкӑрса ярать вӑл. Хӑрушла тӗлӗкӗ ҫинчен ҫулланнӑ вунпӗве каласа парать.

— Эй, ҫӗрпӗвӗм! Тӗлӗкӳ сан пысӑк пӗлтерӗшлӗ. Ҫӗнтертӗн, таса уя тухрӑн пулсан — сан ҫулу-йӗрӳ сӑваплӑ, эппин!

— Сӑваплӑ тетӗн. Вырӑссемпе пӗр ҫулпа кайма шутлани тӗрӗсех апла! — хӗпӗртерӗ ҫӗрпӳ.

— Усӑмлӑ тӗллев лартнӑ хӑвӑн умна. Ӗмӗтлӗ ҫын эсӗ, ҫӗрпӗвӗм. Ӗмӗтлӗ ҫын вӑрӑм ӗмӗрлӗ! — мухтать Шептака вунпӳ.

Ӑна ҫӗрпӳ ҫирӗппӗн ҫапла хуравлать:

— Этем ӗмӗтпе пурӑнать-ҫке. Нимӗнле ӗмӗт те пулмасан мӗн туса пурӑнас ҫак ҫут тӗнчере?

## Пĕр туслашсан сивĕнес мар!

Ку вăл 1552 çулта пулнă. Тĕплĕн хатĕрленнĕ хыççăн Вырăс патшалăхĕн çĕр алă пинлĕ çарĕ Хусаналла похода тухать. Çара IV Йăван ĕмпӳ хăй ертсе пырать.

Пĕлетпĕр, ку похода А.М. Курбский князь малтан пуçласа вĕçне çитиех хутшăнать. Ун чухне вăл çирĕм тăваттăра пулнă, пайтах çапăçусенче пулма ĕлкĕрнĕ. Хĕçпе каснă суран йĕрĕсем тăнлавĕ тĕлĕнче те, хулĕпе алли çинче те тăрса юлнă.

Похода хатĕрленнĕ чух князь хаяр тытăçăва лекет. Ун чухне вырăс çарĕ Коломна улăхĕсенчен те тапранса тухайман. Çакăн чух хыпар килсе çитет: Крым ханĕн çарĕ тапăнса кĕнĕ, Тула хулине хупăрласа илнĕ. Воротынский князь ертсе пынипе пысăк полк çав хулана инкекрен хăтарма васкать. Унăн сылтăм алли вырăнĕнче — Щенятев боярин тата Курбский вайпут. Патша çарĕ кĕтмен çĕртен пырса çитнипе сехĕрленнĕ хан çеçен хирелле тарать, çакна пĕлмен нукерсен вăтăр пин çынлă ушкăнĕ Тула таврашĕнче çаратса-тустарса çӳренĕ. Вăрă-хурахсем çине Щенятевпа Курбский тапăнаççĕ. Крым нукерĕсенчен сахалăшĕ каялла таврăнать, нумайăшĕ уй-хирте выртса юлать. Çапăçура темиçе тĕлтен суранланать Курбский. Çапах сакăр кунранах ура çине тăрать, çарпа пĕрле Улатăр еннелле çула тухать.

Икĕ колоннăпа пыракан полксем çурла уйăхĕн пуçламăшĕнче Сăр шывĕ хĕрринче Улатăр çывăхĕнче пĕрлешеççĕ. Вĕсен малалли çулĕ — Тăвçин кăнтăр-хĕвелтухăç тăрăхĕпе.

Тăвçи çыннисемпе Хаяр Йăван çарĕсем епле тĕл пулни пирки А.М. Курбский князь каярахпа çапла çырать: «Сăр юхан шывĕ урлă каçсан тăвçи çармăссем — хăйсене чăвашсем текен уйрăм халăх — пилĕк çĕршерĕн те пиншерĕн кĕтсе илме пуçларĕç».

Андрей Курбский асаилĕвĕнче тата çакна палăртать: «Сăр патĕнчен Сĕве еннелле çар сакăр кун уйсемпе, вырăн-вырăнăн вăрмансем урлă пырать; çын пурăнакан ялсем питĕ сайра; пур пек ялсем пысăк крепоçсем çывăхне лапчăнса ларнă, çывăхран иртекенсем те вĕсене тăруках асăрхамаççĕ».

Тĕлĕнмелли çук: хальхи Чăваш Енĕн кăнтăр-хĕвелтухăçĕнче ку тапхăрта тискер уйсем тăсăлнă. Ялсем сахал пулнă,

унта-кунта кăна хĕсĕнсе-пытанса ларнă. Халăха çаратас тата чура тăвас шутпа ку вырăнсене нухайсем, Крымпа Аçтăрхан нукерĕсем пĕрмаях киле-киле тапăннă.

Шептак çĕрпĕвĕн тĕкĕртне Курбский князь çарăн сылтăм флангĕпе пĕрлештерчĕ. Шептак сĕннипе вырăс çарĕн 19-мĕш тапăрне Аслă Пăла хĕрринче йĕркелерĕç. Малалла çар Аслă Таяпа, Кăкшăм, Баиш ялĕсем тĕлĕнчен иртсе пычĕ.

Çурла уйăхĕн 13-мĕшĕнче вырăс çарĕ Сĕве хулине пырса çитрĕ. Кунта канса, вăй илсе эрнене яхăн тăчĕ. Çакăн хыççăн Атăлăн сулахай çыранне каçрĕ те Хусаналла çул тытрĕ.

Ку хулана илессишĕн çапăçакан Хаяр Иван çарĕнче чăвашсемпе çармăссен, тăвçи çыннисен отрячĕсем пулнă. Шептак çĕрпĕвĕн тĕкĕрчĕ çак отрядсен шутне кĕнĕ. Авăн уйăхĕнче унăн тĕкĕрчĕ ыттисемпе пĕрле Арск хулашне тапăннă, унти тĕрмене аркатса тăкнă, пайтах тăшмана тĕп тунă тата тыткăна илнĕ.

Хусана хупăрласа тăрассиултă эрнене тăсăлать. Çакă салтаксене çеç мар, çар пуççене те йăлăхтарса çитерет. Крепость стени айне чавса хунă тар пичкисем хаплатса çурăлсанах Курбский вун икĕ пинлĕ отрядпа крепость çине ыткăнать. Унăн шăллĕ Йăван стена çине чи малтан хăпарса каять. Юн юхтарса çапăçнă хыççăн хула вырăссен аллине куçать. Çапăçусем çакăнпа пĕтмен-ха. Хăйсен ханне Едигера хӳтĕлесе нукерсем ун керменĕ таврашĕнче пайтах тăрмашаççĕ. Унтан вунă пин нукер Хусан шывĕ леш енне таса уя çĕмĕрсе тухас шутпа хулан анат еннелле ĕрĕхтерет. Кунта, тăвăр урамра, вĕсен çулне ик çĕр салтакпа Андрей Курбский пӳлет. Нумай нукер вилет çапăçура, пилĕк пинĕ Едигер хана пăрахса хăварать те Хусан шывĕ урлă каçса каять.

Курбскийсем, Андрейпе Йăван, пысăк мар ратпа тăшман çулне пӳлсе çапăçма пуçлаççĕ. Çапăçу епле пыни крепость стени çинчен ал тупанĕ çинчи пекех курăнать. Андрей князь нукерсем хушшине чи малтан вирхĕнсе кĕрсе каять. Унăн урхамахĕ тăшман учĕсемпе ăмăрпа ăмăр пырса çапăнать. Арăслан пекех харсăррăн çапăçать князь. Çакна курса унăн пĕтĕм рачĕ тăшмана хирмеллипех хирет, анчах тискерленнĕ хăяматсем парăнма шутламаççĕ. Андрей курать: тăван шăллĕ

Йăван тăшман речĕсем хушшине çĕмĕрсе кĕчĕ, тыл енчен чăваш çĕрпĕвĕ Шептак хăйĕн тĕкĕрчĕпе тусан кăларса килет.

Андрей князь урхамахĕ каллех тăшман утне пырса чышать, хальхинче вилмелле аманса тӳнет, князь хăй те сусăрланса çĕре ӳкет. Шептакпа Йăван тăшман речĕсем хушшине çĕмĕрсе кĕрсе каяççĕ. Урхамахĕ ӳксен Андрей тепĕр ут утланать, хăй йывăр аманнине пăхмасăрах каллех тăшман çинелле ыткăнать.

Тăшманăн парăнмаллах пулса тухать. Курбскийсем иккĕшĕ те йывăр аманаççĕ. Аслине, Андрее, аслашшĕ парнеленĕ тимĕр тум çăлать (кĕçĕнни, Йăван, ниепле те ураланаймасть, хĕл каçса çăва тухсан çĕре кĕрет).

## Икĕ тусăн ик тĕрлĕ шăпа

Çапăçу вĕçленсен, сусăрланнă Андрей Курбский тăна кĕрсен Шептака унпа курнăçма май килет. Князь çĕрпĕве тăванла ыталать, ăна чаплă урхамах, хаклă йышши йĕнер тата çутă хĕç парнелет.

— Эсĕ чăн-чăн чăваш пăхаттирĕ, вырăспа пĕрешкел тĕллев тытни тăван халăхушăн тăрăшниех пулать. Пирĕн тĕне йышăнма килĕшместĕн-и? Хĕреснаçу хам пулатăп...

Шанчăклă тус тăванран та хаклă иккен. Унпа килĕшет Шептак. Вăл Христос тĕнне куçать, хĕреснашшĕ пек Энтри ят илет. Вырăспа чăваш пĕрешкел ятлă хĕреснашшĕпе хĕресне ывăлĕ пулса тăраççĕ. Çакна чăваш халăхĕ Христос тĕнне йышăнассин, пиччĕшĕпе шăллĕ — вырăссемпе чăвашсем — ĕмĕрлĕх туслашассин шурăмпуç çути темелле. Патша ячĕпе Курбский хĕресне ывăлне çĕнĕ çĕрсем уйăрса парать. Пăхăсăн, унта çĕнĕ ял — Энтриел (Андреево) никĕсленет. Чăвашсем хăйсен çĕрпĕвне чăннипех сума сунă, ламран лама асра тытса тăнă. Çĕнĕ ялсене ун ятне панă. Çавăнпа Чăваш Енри Турхансене, Шептаксене, Энтриелсене, Карабайсене шутласа та пĕтереймĕн.

Эх, халăхăн Шептак пек харсăрсем нумайрах пулсанччĕ! Маттурлăхĕпе, паттăрлăхĕпе вăл яланлăхах ырă ят хăварнă.



Хусанта тĕл пулнăранпа хĕреснашшĕне урăх курман Шептак-Энтри. Ватăлса çитсен çакна пĕлчĕ: Ливонипе вăрçнă чухне Курбский тăшман енне куçнă. Çакăншăн ĕмпӳ Андрей Курбский амăшне, арăмне тата пĕртен-пĕр ывăлне тĕрмене хупать. Вĕсем хуйхăпа хуçălса унтах вилеççĕ. Княça хăйне те Тăван çĕршыва урăх курмасăрах çут тĕнчерен уйрăлма тивет.

*Елчĕк районĕнчи Энтепери*
*П.А. Сапожников шур сухал каласа пани*
*тата «Сказания князя Курбского»*
*кĕнеке (Питĕр хули, 1868) тăрăх хайланă.*



# Камай ячĕ паян та асрах

Камай Усеинов Сĕнтĕрвăрри таврашĕнчи Уплертен. Сарлака та патвар хул-çурăмлăскер çамрăклах хастарлăхпа та паттăрлăхпа палăрать, хăй тавра хăюллă хастарсене пуçтарать. Тĕкĕрçисене хурчăкасем тет. Вĕсем пурте Сĕнтĕрвăррипе Йĕпреç тата Чурачăк енчен. Пурте вăйпитти пăхаттирсем. Утамана çутă ĕмĕчĕсене пурнăçлама пулăшаççĕ. Вĕсем тăрăшнипе Камай чăваш мăрси пулса тăрать. Унăн курайми тăшманĕ — Хусан лартнă мăрса тата унăн нĕрсĕр нукерĕсем. Эсремет тет çав мăрсана Камай. Унăн çулне пур майпа та пӳлет, ентешĕсене хӳтĕлет.

Мăн Шетмĕ ялĕ çывăхĕнче авалах Хусан ханлăхĕн карманне туса хунă. Унта нумай çул Шумбулай мăрса хуçаланнă. Çарне тытса тăма мĕн кирлĕ, çавна пĕтĕмпех чăвашсен парса тăмалла пулнă. Вăхăт çитет — гарнизон темле сăлтавпа урăх вырăна куçса каять, хăйпе пĕрле тыткăнри вырăс княçне те илсе каять.

Мăн Шетмĕре Абдул мăрса пуçтахланма тытăнать. Чăвашсене ку хантар темле ясак та, темле хырçă та тӳлеттерет, ирĕксĕрлесе хăйĕн çарĕн нукерĕсем тăвать. Чăвашăн чунне кăларса илменни кăна.

— Мăрса пирĕн улпут мар, Хусан хантарĕ. Ăна питĕнчен çупсан та ним те мар. Усала аяла тумалăх пирĕн вăй пурах! Айтăр кайрăмăр! — хушать Камай эткерне.

Нукертан мăрса хаяр, мăрсаран шыçмак хан хаяр. Усалăн ури саккăр, мăран мăрсан сăнни тăххăр, ханăн хĕрĕх тĕрлĕ хăямат.

— Ман эткерпе сан эшкер тытăçчăр-и? Е малтан иксĕмĕр кĕрешсе пăхар? — сĕнет Камай хыткан Абдула.

Нукерĕсен умĕнче мăрса урлă-пирлĕ пускалать, урисене унталла-кунталла ыткăнтарать пулин те, иккĕленет те шикленет.

— Эпĕ çĕнтеретĕп — мана Аллах пулăшать! — кăкăрне çапать чышкипе Абдул.

— Мана Пӳлĕхçĕ хăй вăй парать! — малалла утăм тăвать Камай.

Абдулăн ула-чăла лаши ытла хыпăнчăк: урипе çĕр чакалать, шăлĕсемпе тискеррĕн шăмарать, кирек кама та кăшласа ярассăн туйăнать. Усаллăхĕ те пур иккен, чăрсăрлăхĕ те çителĕклех. Чăн-чăн Хусан ăрачĕ çав.

Камайăн çӳрен урхамахĕ вара лăпкă. Ăмăрĕ вырăнтан тапранми чул катрамĕ пекех туйăнать, çапах вăй-халне вăхăт çитмесĕр кăтартмасть. Чăваш ăрачĕ.

Абдул мăрса чăрсăр ули-чăлипе Камая хирĕç ыткăнма хатĕрччĕ ĕнтĕ — сасартăк йăшăл турĕ ун хыçĕнчи эшкер. Ирĕксĕрлесе нукер туса хунă чăвашсем харăссăн тапранчĕç те Камай енне пырса тăчĕç. Абдул йышĕ сахаллансах юлчĕ. Камай паттăр эткерĕ палăрмаллах пысăкланчĕ.

— Кирекми! Каялла! — чĕтревлĕ сасăпа çухăрса ярать Абдул. Çакăн хыççăн сайралса юлнă эшкерĕпе Мăн Шетмĕрен тухах тарать.

Ĕнтĕ çил çаврăнать, çил çаврăнать, ката вăрманта çăка авăнать. Пуçĕ лаштах усăнчĕ Абдул мăрсан. Мĕн тăвас, йывăççăн турачĕ пĕлĕт çине хăпармалли пусма мар.

Камая Хусанта та паллаççĕ. Пĕррехинче чăваш мăрси хула тăрăх çӳрени çинчен хана хăйне систереççĕ. Тутар мар халăхсен ертӳçисене тĕрмене хупма пуçласан ханлăхран халăхсем сивĕнессе, вĕсем Мускав енне пăхма тытăнасса ăнланать Хусан ханĕ, çавăнпа Камая саккунлă мăрса туса хурать.

Ура хамăнах вĕт ман,
Алă хамăнах вĕт ман.
Чун хавалăма пама
Халăх тăванах вĕт ман.
Пăхăр пурте çӳлелле,
Çăлтăр çунать тӳпере.



Пӳлӗхҫӗ савать пире,
Курать эпир ӗҫченне.
Утӑн ури тӑваттӑ,
Усалӑн ури саккӑр.
Ут урине ҫул парӑр,
Усал ури такӑнтӑр.
Нуша юлтӑр хыҫала,
Пирӗн ҫулсем малалла.
Ырри патне талпӑнар!
Сывӑ пулар, пур пулар!

## Халап малалла, вӗҫне тухмаллах, Хусана парӑнтармаллах!

Мускав Кремлӗн Успени соборӗнче 1547 ҫулхи кӑрлачӑн 16-мӗшӗнче аслӑ княҫа, ҫамрӑк IV Ивана, Мономах калпакӗ тӑхӑнтартса патша туса хураҫҫӗ. Ҫакантан пуҫласа Вырӑс патшалӑхӗнче влаҫра аслӑ князь мар, патша ларать. Коронаци хыҫҫӑн тепӗр уйӑхран Иван патша Анастасийӑна качча илет.

Ку çамрăк хĕр авалхи боярсен — Захарьинсен йăхĕнчен. Вĕсем пулас династипе Романовсемпе пĕр йăхран. Анастасия ултă ача çуратать. Патша мăшăрĕ Анастасия 1560 çулта сасартăк вилсе каять. Çакăн хыççăн Иван патшан кăмăлĕ улшăнать.

Ăнăçсăр Хусан похочĕсем хыççăн 1552 çулхи пуш уйăхĕн 24-мĕшĕнче Дума ларăвĕнче патша ханлăха парăнтарма вăхăт çитнине пĕлтерет: «Турă ман чĕрене курсах тăрать: мухтава тухасшăн мар, христиансен тăнăçлăхĕшĕн тăрăшатăп». Боярсене патша сăмахĕ килĕшет, анчах ăна Мускаврах юлма сĕнеççĕ: эхер Крымрисем е нухайсем тапăнас тăк Раççей çĕрĕсене кам сыхлĕ патша хăй вырăнта пулмасан? Иван çирĕппĕн хуравлать: хăрушсăрлăха сыхлама мĕн кирлине тăвăпăр, Хусан пирки мĕн палăртнине те пурнăçлăпăр.

Мускав çарĕ 1552 çулхи çурла уйăхĕнче Хусана хупăрласа илет. Камай мăрса шанчăклă çичĕ юлташĕпе пĕрле хуптĕрленĕ хуларан вырăс патши патне тарса тухать. Вăл Мускав патши чăвашсене тата ытти халăха тутарсен пусмăрĕнчен хăтарасса тахçанах кĕтнĕ.

Хусана хӳтĕлекенсен пур пек вăрттăнлăхĕсен алăкне Камай мăрса яриех уçать. Ĕçмелли шыв тупмалли вăрттăн çулсене, тулашри тĕнчепе çыхăнмалли меслетсене кăтартни уйрăмах пысăк усă кӳнĕ.

Камай мăрса Иван ĕмпӳ элчи ячĕпе чăвашсемпе çармăссен ятлă-сумлă çыннисемпе пĕрле хусансене парăнма ӳкĕтлет.

Элчĕсем çапла ăнлантараççĕ: хула çапăçмасăр парăнсан кирек кама та чĕрĕ-сывă хăвараççĕ, пурлăхне-мулне тĕкĕнмеççĕ, мăсăльман тĕнне хĕсĕрлемеççĕ. Камăн кăмăлĕ ăçта туртать, çавăнта пурăнма пултарать. Ханăн вара вырăс хĕсметне йышăнмалла. Хула парăнма пачах шутламарĕ, нухай уртин бикĕсем патне пулăшу ыйтма элчĕсем ячĕ. Юрать-ха урта Мускав тăшманĕ пулса тăма килĕшмерĕ.

Хусана Хаяр Иван çарĕсем юпа уйăхĕн 2-мĕшĕнче ярса илнĕ. Едигер хан тыткăна çакланать. Патша Камая ылтăнпа эрешленĕ кĕмĕл сават-сапа, ылтăн çӳçеллĕ мăн витĕнчĕк парнелет.

Халăх хушшинче çакăн пек халап сыхланса юлнă. Хусан ханлăхне парăнтарнă хыççăн Хаяр Иван боярсемпе пĕрле Туçи

Енте ял-ял витӗр, уй-уй урлӑ курса ҫӳрет. Патшана анасен тирпейлӗхӗ тӗлӗнтерет. Ҫум курӑк ниҫта та курӑнмасть. Тырпул ӑнӑҫса ӳсет.

— Сирӗн те уйсем ҫакнашкал хӑтлӑ пулӗҫ-ши? — ыйтать патша. — Ма чӗнместӗр? Ман шутпа, йӗркеллӗ улпутӑн хресченӗ ӗҫчен, уйне-хирне ҫум курӑк пусмасть.

— Патшамӑр, чӑваш хресченӗсене пире парӑрччӗ! — тархасласа ыйтаҫҫӗ боярсем Хаяр Иванран.

— Э-э, ҫук, сирӗн аллӑрта ку уйсене те мӑянпа эрӗм тапса тухӗ. Ҫум курӑк айне пулнӑ хирсене курсан ман чӗре ыратать. Ҫар паттӑрне Камая чӑваш улпучӗ туса хуратӑп. Ку тӑрӑхри уйсене ӑна парнелесе паратӑп. Леререхи Пучинкене пултӑр. Ытти ҫӗрти хресченсем ман алӑра юлччӑр...

Камай уйӗнче каярахпа Пучинке, Эйпеҫ, Вӑтаел, Энтриел, Тимеш ялӗсем ӳссе ларнӑ. Халӗ вӗсем Йӗпреҫ районне кӗреҫҫӗ.

Хусаншӑн ҫапӑҫнӑ чухне Камай харсӑр чӑваша — Пичурана тӗл пулать. Вӑл Куславкка ҫывӑхӗнчи Елчӗк ялӗнчен. Ытти ҫӗр-ҫӗр чӑваш пекех Хаяр Иван ҫарӗнче тӑрать, тӑван ял-йышӗпе вырӑссене Хусана илме пулӑшать.

— Аслӑ Пӳлӗх пулӑштӑрах сана! — терӗ ун чухне Камай сарлака кӑкӑрлӑ паттӑр чӑваша. — Эпир пулӑшнине вырӑссем манмӗҫ...

Чӑнах та ҫапла пулса тухать. Вӑрҫӑ хыҫҫӑн Хаяр Иван патша Пичурана Кӗҫӗн Пӑла хӗррине куҫса ларма хушать. Ҫитмӗл теҫеттин ҫӗр илме «креп» хучӗ парать. Унта Пичура Тӗпсӗр кӳлӗ хӗрринче юман тата хурама йывӑҫҫисем лартать. Кӑнтӑр енчи паха ҫӗр ҫине лапкӑшпех пӑри акать, ҫурҫӗр енче вӑрман кашласа ӳсмелле тӑвать.

Ял-ял тӑрӑх хыпар хыҫҫӑн хыпар сарӑлать. Усал сӑмах утпа ҫӳрет, ырӑ сӑмах лӗпӗшпе пӗрле вӗҫет. Кӑмӑла хуҫать, чӗрене витет усал сӑмах. Ырӑ сӑмах чӗрене ҫу сӗрет, хал хушӑнтарать. Тӑван халӑхшӑн мӗн усаллӑ, ҫавна хавалпах тунӑ Камай. Хаяр Иван ӑна чӑваш пӑхаттирӗпе Тукайпа ҫапӑҫма хушсан Камай Мускава хирӗҫ тӑрать, ҫак кӗрешӳре пуҫ хурать.



## Камай уйӗ — туслӑх кӗперӗ

Пучинке таврашӗнчи ҫут ҫанталӑк ҫӑлкуҫҫемпе, ҫырмасемпе пуян. Ҫырма тӑршшӗпех тӑпӑл-тӑпӑл ҫавра пӗвесем. Юмахри пек пуян та илӗртӳллӗ кунти тавралӑх.

Акара авӑн, ун хыҫҫӑн савӑн теҫҫӗ чӑвашсем. Пучинкесем акатуя Камай уйӗнче ирттереҫҫӗ. Ҫак кун нумайӑшӗ авалхи чӑваш тумне тӑхӑнать. Ял асаттесемпе асаннесен юррисене шӑрантарать.

Йӗпреҫ районӗнчи Пучинке тӑтӑшах ял тӑрӑхӗсен командисене йышӑнать. Паттӑрсем Камай уйӗнче кире пуканӗ йӑтса, лапталла выляса, вӗрен туртса, кире пуканӗ ывӑтса, пӗрене ҫинче михӗпе «ҫапӑҫса», хӑйӑр миххисене хулпуҫҫи ҫине хурса, тулли тиевлӗ лава туртса, кӗвентепе шыв кӳрсе — пӗтӗмпе спортӑн вунӑ ытла енӗпе ӑмӑртаҫҫӗ. Куракансем урхамахсен ӑмӑртӑвне уйрӑмах кӑмӑллаҫҫӗ. Лавҫӑсен ӑмӑртӑвӗ те кӑсӑклӑ илем.

*В.В. Кузнецова*
*сӑвӑҫ тӗпчевӗсем тӑрӑх хайланӑ.*



# Çулăмпи — ытарайми чăваш пики

Çак ырă кăмăллă пике ĕç ăслайне лайăх пĕлет. Пулать вĕт унашкал сиплевçĕ — темле чир-чĕртен те сыватать, вут-çулăм чĕлхипе, вĕрӳ-сурупа, çунан вутпа, эмел курăкĕсемпе, тапса тăран çăлкуçăн сиплĕ шывĕпе усă курать.

Вăр-вар пулнăран ял-йыш хĕр ачана пĕчĕкренех Пăрчăкан ят панăччĕ. Çитĕнсен ăна сиплевçĕ, асамçă теме пуçларĕç. Каярахпа апăс ят хушăнчĕ. Çут тĕнчен вăрттăн чĕлхине пĕлет вăл.

Шухăшĕ-ĕмĕчĕпе пике тасçта та çитет. Пирĕштисемпе питĕ туслă. Пӳлĕхçĕ шап-шурă урхамахпа тӳпере чуптарса çӳренĕн туйăнать ăна ачаранах.

Юмăç турăсенчен те чеерех — шăнман пăр çине лартса хăварать: ăслă-тăнлă арçыннах ухмаха кăларать, унăн куçне илемĕпе хуплать.

Пӳлĕхçĕ пулăшмасан асамçă пулма ансат мар. Пăрчăкан — Пӳлĕхçĕ тĕнчин шевли. Вăл сăваплă хăватсене пуç таять.

Пăрчăкан ир те, кас та Турра кĕлтăвать, çӳлти вăйсенчен пулăшу ыйтать.

— Турă пулăшнипе хĕвел тухать — тухтăр, çĕр çаврăнать — çаврăнтăр, кун таврăнать — таврăнтăр. Пире тытса тăракан çутă Танкăр! Пăхса усравçă аслă Пӳлĕхçĕ! Амутке, маншăн та хута кĕрĕрччĕ! Мана та телей кӳрĕрччĕ! Телейĕ вара ун пуçхĕрлĕн çаврăнса килчĕ. Танкăра мар, Аллаха пуççапса пурăнма тиврĕ пикен. Çамрăк хĕр пĕрчине Хусан ханĕ патне илсе кайрĕç. Икĕ хут качча тухса курчĕ вăл. Иван ĕмпӳ Хусана парăнтарма татăклă шут тытсан вăхăтлăха тăван ялне таврăнчĕ.

Виçĕ ут кӳлнĕ чаплă кӳме Пăрчăкан хапхи умĕнче чарăнать. Вырăс вайпучĕ иккен. Чăваш пики вара килĕнче çук. Ăçта хăяматра çӳрет-ши? Кăшт тăрсан хӳхĕм юмăç килни курăнчĕ.

Унăн тăван ялĕ пысăках та мар, анчах ăмсанмалла хăтлă та тăпăл-тăпăл. Пĕр вĕçĕнчен тепĕр вĕçне утса тухма мĕне тăрать! Кашни çурт умĕнче лапсăркка йăмра, унпа юнашарах пике пек хитре пилеш. Йăмри — çил-тăвăлтан хӳтĕленме, пилешĕ — усал-тĕселтен сыхланма. Ахальтен мар юратать тăван ялне Çулăмпи — ытарайми чăваш пики. Тăван ялĕшĕн вăл пĕтĕм вăй-халне пама хатĕр.

Анаткас урамĕсем тăрăх Çулăмпи юрă янăратса пырать.

Урхамах яр-яр пусать,
Пусмассерен йĕр юлать.
Эпĕ ăçта кайсан та
Тăван ялăм, шел, юлать.

Чĕкеç, чĕкеç, чĕкеçĕм,
Ан васкасам кăнтăра.
Çурхи кунсем çитсессĕн
Таврăн килне хăвăртрах.

Хур кайăкпа пĕрле кай,
Вĕçĕр иксĕр те пĕр май.
Пĕрле кай та пĕрле кил,
Сана кĕтет тăван кил.

Тем тĕрлĕ йăва та пур,
Пирĕннинчен хăтли çук.
Темĕн тĕрлĕ çурт-йĕр пур,
Тăван килтен хакли çук.

Сумлă вайпут умĕнче Çулăмпи юратнă юррине вырăсла шăрантарчĕ:

Конь куда бы ни шагал —
Остается след копыт.
Рок куда бы не кидал —
Родину нам не забыть.

Лети, ласточка, лети,
Путь далекий впереди.
Делать нечего зимой —
Ждем мы ласточку весной.

Вĕçлеме памарĕ вайпут пикене, тӳрех хăтăрма пикенчĕ.

— Мĕншĕн килĕнте лармастăн? Сана вăн Иван ĕмпӳ хăй шырать! Пулăшу ыйтать...

Пике çивĕт пайăркине тирпейлет те лăпкăн хуравлать:

— Казанка леш енче шуйттан йăвинче пултăмăр. Амутке, вăл хăрушах мар иккен... Патшана пулăшма хатĕр эпĕ.

Ытарайми чăваш пики тепĕр кун вырăс патши умĕнче тăрать.

Ĕмпӳ мăн кăмăллăн пуплет:

— Пулăшаятăн-и? Пуçна та касма пултаратпăр вĕт. Хусан хулине санран лайăх пĕлекен çук. Тĕрĕс-и?

Мăн кăмăллă патша умне Çулăмпи сăпайлăн çывхарать.

— Хусанти çерçисене хăвăр пата илентерĕр, серепесемпе, читлĕхсемпе çĕр те, пин те тытăр. Урисем çумне кӳкĕртленĕ шăрпăк çыхăр. Ури пĕçерсен çерçи ăçта каять? Килне, хула варрине. Хула çунма тытăнсан нукерсен пушар сӳнтермелле пулса тухать. Хурал вăйсăрланать.

Хаяр Иван пике каланă пек тума хушать. Тĕкме айĕнчи тар пичкисене сирпĕтсен урисенчи кӳкĕртсене чĕртсе çерçисене вĕçтерсе яраççĕ. Хула çунма тытăнать. Нукерсен пушара та сӳнтермелле, вырăссенчен те сыхланмалла.

— Ăслă пике эсĕ. Хусан ханĕсем сана мĕншĕн юратнине ăнланмалла, Сююмбике, — йăл кулать сухалĕ халь çеç шăтнă çамрăк ĕмпӳ, Раççей историйĕнче Хаяр Иван ятпа юлнăскер. — Сан патна эпĕ мĕншĕн килнине чухлатăн-и?

— Чухлатăп çеç мар, лайăххах пĕлетĕп... ăслă-тăнлă хана, амутке, манран пулăшу кирлĕ...

Ăсĕпе, кăмăлĕпе, пултарулăхĕпе пĕчĕккĕлех ырă сăмах илтнĕ Çулăмпи хĕр пĕрчин ячĕ Хусан ханĕн хăлхине те кĕнĕ. Çулăмпи патне вăл хăйĕн мăрсине янă.

Çитрĕ юмăç хĕр тутарсен шĕкĕр хулине. Хан умĕнче юрă шăрантарчĕ:

Юрĕ те çурĕ пуль,
Çилĕ те вĕрчĕ пуль.
Эпĕ каяс çул çине
Юр хӳсе лартрĕ пуль.
Инкек те килчĕ пуль,
Хуйхă та пусрĕ пуль,
Манăн çут телее
Сӳнтерсе лартрĕ пуль.

Çĕмĕртĕм, ан авăн,
Çилпеле ан хуçăл.
Иртетех çил-тăвăл,
Çитетех лăпкă кун.
Çĕмĕртĕм, ан хумхан,
Кăмăлпа çирĕп пул,
Ăшă çу та иртмен,
Сивĕ кĕр те çитмен.
Савни, эс ан пăлхан,
Ытлашши ан кулян.
Çут хĕвел те сӳнмен,
Çут тĕнче те пĕтмен.
Пĕр сĕнӳ çеç парам:
Чун савнине курсан
Ăшă сăмах кала,
Мухтаса савăнтар.

Çап-çамрăк хĕрĕн хӳхĕм юрри хан чунне пырса тиврĕ. Мухтанăран хĕрĕн çутă сăнĕ татах та çуталчĕ, йăл кулли палăрмаллах илемленчĕ. Хура куçĕ хĕм сапать, ӳт-пĕвĕнчен ырă туйăм сарăлать. Йăрăст кĕлетки те кăмăллă. Хитре тĕрĕллĕ шурă кĕпи килĕшӳллĕ.

Пике куçĕнчен вут-хĕм сирпĕнет, кăкăрĕнчен вĕри туйăм тапса тухать — сӳнми çулăм тухнăнах туйăнать.

— Ăсатăр пикене чĕкеç йăвине! — хушать хан тарçисене.

— Эппин, гарема, — тавçăрса илет Çулăмпи, ялта Пăрчăкан ятпа çӳренĕскер. — Ырă ханăмăр, хирĕçлеме юрамĕ-ши? Эпĕ унтан паянах тухса таратăп: мана чаракан вăй çук тĕнчере.

Хусан ханĕ кăмăлсăрланать пулин те, хĕре каялла, тăван тăрăха, таврăнма ирĕк парать.

— Сирĕн хан — чăн-чăн йĕкĕт. Хусаншăн пит кирлĕ çын. Хулара чи таси те кăмăлли, çылăхсăрри те сăвапли. Чунĕ ырăран та ырă. Вăй-халне тĕлсĕр тăккаламасть ахăр, — каласа хăварать юмăç пике мăрсана.

Хусан ханĕ хĕре хăвăртах манса каяймасть. Ячĕ чĕлхе вĕçне килет, çутă сăнĕ куç умне тухать. Хусканăвĕ пăрчăканла вăр-вар, хура куçĕ вылянчăк, уçă сасăпа калаçать. Кăшт тăрсан хан хĕре каллех хăй патне илсе килме хушать.

— Ханум пулма килĕшмерĕн. Ман арăм вырăнĕнче эсĕ мĕн тунă пулăттăн? — ыйтать вăл йăл кулса.

— Хула хӳтӗлевне тӗрӗслеттӗм, ăҫта мӗн туса пӗтерменнине палăртăттăм.

Пăрчăкан Хусан карманӗпе кăмăллă юлчӗ, анчах ҫăлсем ҫителӗксӗррине палăртрӗ, вӗсене ăҫта чавмаллине кăтартрӗ — унта курăк ҫăра та ҫӳллӗ ӳсет. Кăнтăр енчи хӳме тăршшӗпех шӗтӗрнексем лартмалла, тăшман хăпăл-хапăл хăпарса ан кайтăр. Нукерсен мӗншӗн ҫулăм ухăсем ҫук. Пăлхар-сăвассен унашкал ухăсем тахҫанах пур. Тăшман мӗн тунине сăнама ятарлă ҫӳллӗ турул туса лартман.

Амутке, Пăрчăкан арҫын мар, пуҫӗпе вара ҫар нукерӗ пек шухăшлать. Ҫакă тӗлӗнтерчӗ Хусан ханне. Вăл ăна Сююмбике ятпа чӗнме пуҫларӗ. Ханум пулса тăчех Пăрчăкан.

Хусан ханӗ сасартăк вилсен Ҫулăмпи тепӗр ҫӗнӗ хан ҫумӗнче те ханум вырăнӗнчех юлчӗ.

— Хулара пурăнатпăр та витӗр курăнатпăр. Халăх умӗнче ханум — хан майри пулса тăтăм пулсан манăн Пӳлӗхҫӗпе Пихампара пуҫҫапнипе ҫырлахмалла мар, мăсăльман шутӗнче те тăмалла. Хирӗҫлеме ан шутлăр, хам ятпа кремльтех чаплă мечӗт тутаратăп, Аллаха кӗлтума унта ҫӳретӗп...

Пике умӗнче хан ирӗксӗрех шăлне ҫыртать. Сююмбикен ҫӳллӗ мечӗчӗ юмахри хăвăртлăхпа ӳссе ларать. Чиперккене хăйне курас ӗмӗтлисем унта ҫӳреме пуҫлаҫҫӗ.

Тепӗр ҫӗр алă ҫултан ҫак мечӗт вырăнне Сююмбике башнине туса лартасса Ҫулăмпи ханум тӗлленме те пултарайман.

Кам пуҫне кӗнӗ-ши ун ячӗпе палăк лартас шухăш? Вырăс патши пуҫӗнче ханума чапа кăларас шухăш пулман. Хусан ханӗ те вырăс патшине пулăшнă Анаткас хӗрне каҫарман. Эппин, кам? Пăлхар-чăвашсем-и? Ҫулăмпи башни ҫинчен ҫапла ҫырни пур: «Халăх сăмахне ӗненес пулсан вырăс патши хăйне пулăшнă чăвашсене чысласа Ҫулăм пике ячӗпе Хусанта ҫичӗ хутлă, сакăр кӗteслӗ турул лартнă».

Чăнах та, кам лартнă-ши ку турула?

Ытарайми чăваш пики Ҫулăмпи ячӗпе ӗмӗр-ӗмӗр сыхланас манăҫми чаплă палăк чăвашсем лартнă. Турул тăк турул — кервен те капмар.

Иккӗленмелли ҫук: турула чăвашсем тунă — вырăссем



хула тĕкмине сирпĕтсе кĕнĕ вырăна. Чăваш йăли-йĕркинчен пачах пăрăнмасăр: ăна кăштах тухăçалла тайăлтарнă, вăл чĕрĕлĕх тыткăчисен — Аçапа Аман хăватне палăртать, ăна çичĕ хутлă, тăвата тата сакăр енлĕ тунă. Аялти виçĕ хучĕ тăвата кĕтеслĕ, çӳлтисем тăваттăшĕ — сакăр кĕтеслĕ. Çулăмпи башнин тытăмĕ вырăссен авалхи архитектурипе, мăсăльман е тухăç архитектурипе çыхăнман, тăрринче хĕрес те, çурла уйăх та тупаймастăн.

— Çулăмпи керменĕнчен тĕтре витĕр чăваш улăпĕ курăнтăр. Вăл урисемпе çĕр çине пусса тăтăр, пуçĕпе кăвак тӳпене перĕнтĕр! — сĕнеççĕ турул лартакансене Анаткас чăвашĕсем.

— Кермен тăрринчен тавралăх янках курăнтăр, тăшман килнине катаранах асăрхамалла пултăр! — паха канаш параççĕ Хусан мăсăльманĕсем.

— Ăна эпир Çулăмпи керменĕ ят парăпăр! — евитлерĕç чаплă çурта тăвакансем.

— Пире вара Сююмбике башни тесе калама ан чарăр! — хистерĕç мăсăльмансем.

Мĕншĕн палăка унта лартнă-ши? Сăлтавĕ паллă: Сююмбике мечĕт шăпах çавăнта тутарнă.

Турул лартнă чăвашсен ячĕсем паллă мар. Ун тăррине хăпартсанах турул тăвакансене çурт-йĕр хăпартма Мускава илсе кайнă. Унта темиçе хӳхĕм кермен туса лартнă. Унашкал чаплă керменсем урăх çĕрте тăвасран шикленсе вĕсене çĕр тĕпне тухмалла мар антарчĕç-ши е аслашшĕ-асламăшпе курнăçма леш тĕнчене ăсатрĕç-ши — çакна паянччен пĕлекен çук.

Вăл пулнă, ку пулнă, апли-капли юлманах. Анаткас ялĕнче Пăрчăкан ятлă хĕр пулнă, пултарулăх енĕпе, ăс-хакăл çивĕчлĕхĕпе ăна çитекенсем пулманах. Илемĕпе, ăс-тăнĕпе пĕтĕм Хусана тĕлĕнтернĕ, çапла майпа ханум пулса тăнă. Ăна эпир те сума сăвар, Хусан кремлĕнчи ятарлă турула кайса курар. Хаяр Иван Хусана хупăрласа илнине курсан ханум çавăнтан сиксе вилнĕ тени шухăшласа кăларнă юмах кăна: башнине вăл вилсен пĕр ĕмĕр çурăран кăна тунă.

Санкт-Петербургран Хусана 2009 çулхи çу уйăхĕн вĕçĕнче Ксения Шереметьева-Юсупова графиня (качча кайсан Сфи-

ри) хӑйсен йӑхӗн историне кӑтартакан выставкӑна курма килнӗччӗ. Вӑл кунта кремль тӑрӑх ҫӳресе савӑнать. Ӑна несӗлхурӑнташӗ, Сююмбике ханумӑн турулӗ питӗ кӑсӑклантарать. Вӑл ҫав тӗлӗнмелле хӗрарӑм нухайсен ханӗн Юсуфӑн тӑван хӗрӗ пулнине, Хаяр Иван патшан «хисеплӗ» тыткӑнӗнче пурӑннине, унтах пурнӑҫран уйрӑлнине аса илет.

Кунӗсем вӗҫленсе пынине туйсан Ҫулӑмпи Мускавра йӑлайӗркепе ҫылӑх каҫарттарнӑ. «Кам ман пата пынӑ — ҫавна яланах чун ӑшши пама тӑрӑшрӑм. Анат Камӑри пӗр чыслӑ муллан ясар хӗрне тӑватӑ йӗкӗтпе туслаштартӑм. Тӑватӑ вӗлтӗрен кайӑкӗ ҫуратсан пиллӗкмӗш автанпа ҫыхӑнтарма тархасларӗ мулла хӗрӗ.

Нихӑш автанпа та тӑранманскере сӑмса урлӑ чышкӑ пама тиврӗ: хӗп-хӗрлӗ юн палкаса тухрӗ. Ҫулӑмпие ҫылӑхшӑн Танкӑр каҫартӑрах. Унашкалли урӑх пулман».

Сююмбике икӗ хана качча тухнӑ, унӑн чунне Аллах хӑй патне йышӑннӑ. Хевти вара Хусанти башньӑра ӗмӗрлӗхе тӑрса юлнӑ.

Чӑвашсем тавҫӑрнӑ тӑрӑх, Ҫулӑмпи паян та чӗрӗ. Ун турулӗ халь те кун ҫути парать. Ӑна туса лартнӑ чӑваш чулҫисем кӑна ҫӗр ҫӑтнӑ пекех ҫухалнӑ.

Ҫырлах пире, Пӳлӗхҫӗ! Хура халӑха ырлӑх-сывлӑх парнеле, ҫутӑ кунпа тивӗҫтер, иксӗлми тивлет пар!

Аллах акбар! Унран асли ҫук. Аллах хӑй те, унӑн пророкӗ Мӑкамет та пире чӑнласах пулӑшчӑр!

* * *

Кави Кадырович Юлдашев журналист каласа панипе никӗсленӗ. Патӑрьел район хаҫат редакцийӗнче эпир унпа пӗрле ӗҫленӗччӗ. Хаҫат валли ҫырса пама ыйтрӑмӑр — вӑхӑчӗ тупӑнмарӗ. Аллах патне кайма васкарӗ. Кави тутар пулсан та чӑвашла питӗ таса калаҫатчӗ, питӗ тӗрӗс ҫыратчӗ. Тӑпри ҫӑмӑл пултӑр!



# Чăн пысăк мул

Ку вăл сĕм ĕлĕкех пулнă. Атăлçи Пăлхар-Чăваш элĕнче, Кĕçĕн Çарăмсан шывĕ хĕрринчи хулара, çар пуçĕн — пӳлерĕн тахçантанпа кĕтнĕ ывăл çуралать. «Унăн ячĕпе тӳпере çăлтăр çунма пуçлатăр. Ача ӳссен паттăра тухтăр», — тархасласа ыйтнă пӳлер Çӳлти Турăран — Танкăртан. Ачана Аслут ят панă. Çапла пĕлĕтри çăлтăрсен йышне тепĕр çăлтăр хушăннă.

Аслут паттăрăн çичĕ ывăл çуралнă. Пӳлер Танкăртан тилмĕрсе ыйтнăран кашни ывăл ячĕпе çĕнĕ çăлтăр çунма пуçланă. Çичĕ ывăлăн çичĕ çăлтăр. Çичĕ çăлтăртан Алтăр çăлтăр пулса тăнă. Алтăр çăлтăр — çич çăлтăр, çиччĕшĕ те çут çăлтăр. Пăлхар-чăвашăн çич ывăл, çиччĕшĕ те пит маттур.

Пĕр ырă кун Атăлçи Пăлхар канĕ-патши Аслута хăй патне чĕнтерет.

— Акă мĕн каласшăн эпĕ. Пирĕн хулан кашни хапхинчен тăвата еннелле тăвата аслă çул каять. Ку çулсем тăрăх аякри çĕршывсемпе суту-илӳ тăватпăр. Пĕр çулĕ Аслă Пăла хĕррипе пырать. Çав çула хӳтĕлеме карман тумалла. Хăв вăйпитти, ывăлусем çитĕнчĕç. Çавăнта турхан пулма килĕшмĕн-и?

Курать кан: Аслутран паттăрри тупма йывăр. Пĕлет Аслут: канăн ăсĕ çивĕч, шухăшĕ çирĕп. Унăн сĕнĕвĕпе хастар пăлхар-чăваш хапăл тусах килĕшрĕ, йышлах мар тĕкĕртпе — хăйĕн йăхĕнчи темиçе ямахатпа — тăхтаса тăмасăр çула тухрĕ. Кайсан-кайсан Аслут юхан шыв хĕрринче тĕлĕнмелле вĕçен кайăк курчĕ. Пуçĕ çинче майракасем пек ик тĕпек тĕк асăрхарĕ. Çӳренĕ чухне тĕпекĕсене тăрататать, вĕçсе кайнă чухне выртатарать. Ара, ку кайăк текерлĕк-иç.

Пуян та илемлӗ кунта тавралӑх. Ҫӗтмен ҫереме сухаласа тырӑ акса тума пулать. Ҫаран таҫта ҫитиех тӑсӑлать. Инҫех те мар вӑрман. Ҫӑкасем ҫеҫке ҫурнӑ — пыл шӑрши кӗрет. Таса юхӑмлӑ шывра пулӑ чампӑлт та чампӑлт сикет.

— Тӑхтӑр-ха, пӗр сӑмах калам: юхан шыв хӗрринчи вырӑн килӗшет-и сире? Ҫакӑнта тапӑр ярар мар-и?

Аслута хирӗҫлекен пулмарӗ. Тепӗр тесен, ӑна пӳлме никам та хӑяймасть. Каларӗ — тумалла. Кӗҫех пӗтӗм тапӑр хӗрӳллӗ ӗҫе пуҫӑнчӗ — Тикеш карманне никӗсле пуҫларӗҫ. Чи малтан икӗ хутлӑ чул ҫурт купалама тытӑнчӗҫ. Ку вӑл кӗлӗ ҫурчӗ пулчӗ. Танкӑра хисепе хумасан темле инкек те сиксе тухӗ. Ахальтен каламаҫҫӗ: Танкӑрӑн парасси пӗтмен, этем ывӑлӗ-хӗрӗн йӗресси пӗтмен. Шартлама сивӗре ҫилпетӑвӑлпа ахӑракан вӑрманта хевтесӗр вӗҫен кайӑк лапсӑркка чӑрӑш хӳтлӗхне туртӑнать. Этем те инкек-синкекрен упранмалли хӳтлӗх шырать, ӑна Ҫӳлти Танкӑр хӑватӗнче тупасса шанать. Чӑн ӗнтӗ, пурнӑҫ чипер чухне этем Танкӑра аса илсех каймасть, инкек килсе вӑрӑнсан унран пулӑшу ыйтать. Апла-и, капла-и, турхан пушкарать: кирек мӗн тесен те ӗненӳ пысӑк вӑй. Ҫавӑнпа ҫӗнӗ вырӑна куҫса килнисем ваттисен авалхи йӑлипе малтанах кӗлӗ ҫурчӗ янтӑларӗҫ. Самаях пысӑк турӗҫ ӑна — кӗлӗ тӑвакансем пурте шӑнӑҫма пултарччӑр.

Пӑлхар-чӑвашсем ҫывӑхри вӑрманта йывӑҫ касрӗҫ, тӗреклӗ юман юпасенчен виҫӗ ҫӳллӗ хӳме хӑпартрӗҫ, вӗсен хушшинче канавсем-шӳммесем чаврӗҫ те Аслӑ Пӑла шывӗпе тултарчӗҫ. Карман хӳмисем айне пӗрер кашкӑр пытарчӗҫ. Пӑлхар-чӑвашсем хӑйсене кашкӑртан тӑван тенӗрен ӗнтӗ. Таврара мӗн пурри — ҫуккине сӑнама хулашӑн кашни енне ҫӳллӗ башньӑсем — турулсем янтӑларӗҫ. Мӗн туни пӗтӗмпех Танкӑр сыхласа ӗлкӗреймен чухне тӑшмантан хӳтӗленме кирлӗ.

Тикеш карманӗ тӗлӗнчен иртекен мӑн ҫул Атӑлҫи Пӑлхар-Чӑваш элӗнчен Кейӳ (Киев) таранах илсе ҫитернӗ. Ун тӑрӑх каравансем пыл, тир-сӑран, ҫӑм, пир-авӑр тата ытти таварсем турттарнӑ.

Тӑп-тулли шывлӑ Аслӑ Пӑла тӑрӑх пысӑк кимӗсем, карапсем ҫӳренӗ. Вӗсем Аслӑ Пӑларан Сӗвене, Сӗверен Атӑла тухнӑ. Аслӑ юхан шыв тӑрӑх таҫти-таҫти ҫӗршыва та ҫитме пул-

тарнă. Каравансемпе карапсем Тикеш карманĕ тĕлĕнче чарăнса çĕр каçнă, вăрă-хурахран, тĕрлĕ усал-тĕселтен çакăнта хӳтлĕх тупнă.

Этеме мĕн кирлĕ çавă ку тăрăхра çителĕклех. Ĕçлеме кăна ан ӳркен. Пулăхлă тăпра ĕçчен пăлхар-чăвашсене тухăçлă тырпул çитĕнтерме май парать. Юхан шыв çумĕнчи çарансенче выльăх-чĕрлĕх валли капанĕ-капанĕпе утă çулса хатĕрлеççĕ. Шĕшкĕ катисенчен пăлхар-чăвашсем лавĕ-лавĕпе мăйăр турттараççĕ, çуркунне вăрманта хурăн тата вĕрене шывĕ юхтараççĕ.

Акапа утçи хушшинче кунти халăх чаплă уяв тăвать. Уяв вăхăтĕнче вăл ĕçлемест. Паллă: уяв тени уяс тени пулать. Эппин, уяв — ĕçрен пушаннă вăхăт. Ун чухне çынсем те, кӳлсе тухмалли выльăх та канса вăй илеççĕ.

Пысăк уяв çинчен пĕлтерсе урна кăшкăртса ярать. Кĕске тата вăрăм шăхличсем — тӳтӳтпе кай — кĕвĕллĕ сасă пафраççĕ. Унтан халăх умне тĕн йĕркине тытса пыраканĕ — мăчавăр тухать:

— Çӳлте — Аслă Танкăр, шĕкĕр хулара — хăватлăран та хăватлă патша. Кунта, хамăрăн карманта, — паттăртан та паттăр турхан! Ĕрехметех сире пирĕншĕн тăрăшнăшăн! Сире пурсăра та пуç таятпăр! Пуççапатпăр!

— Пуç таятпăр! Пуççапатпăр! — мăчавăр пекех чĕркуçленчĕ халăх.

— Аслă Танкăр! Ырлăх та пурлăх санран кĕтетпĕр! Ут туртайми урпа, ал çĕклейми хăмла туса илмелле пултăрччĕ! Выльăх-чĕрлĕх хунатăр! Виç тĕслĕ выльăха виç карта хупма пар! Мĕнпур пăлхар-чăваш артакпа — мирлĕн, килĕштерсе — пурăнмалла пултăр! Çарăк мар, арăк мар. Танкăр пилĕнчен, патшапа турхан хушнинчен иртес мар. Уяв тума ирĕк парăрччĕ пире! Çитни пулĕ, çитменни пулĕ, çак кĕлĕпе çырлахăр. Айăп ан тăвăр пире! Çырлахăр!

— Айăп ан тăвăр пире! Çырлахăр! — мăчавăр пекех çамкисене çĕр çумне перĕнтерчĕç çынсем.

Пăлхар-чăвашсем суха тума кăна мар пĕлеççĕ, сунара çӳреме те ăста. Вĕсем сăвă-юмах, юрă-кĕвĕпе те пултаруллă.

Ешĕл лапамра халăх малтан сăвă-халап итлесе савăнать.

Сăвăçсемпе халапçăсем пĕрин хыççăн тепри ăмăртмаллах пултарулăхне кăтартаççĕ. Халăх умне тухакана пĕр курка сăра параççĕ. Ăна хавхалану курки теççĕ. Каласа пĕтерсен тав курки ĕçтереççĕ. Аскат хăта ытти çĕрте ытла ăста мар та, сăвă хайлассипе, халап калассипе ăна çитекенни çук. Карман турханĕ Аслут ăна хăйĕнпе юнашарах лартрĕ. Ватă сăвăçпа турхан мĕн пулленине уява пухăннă пĕтĕм халăх тимлĕн тăнлать.

— Аскат хăта, килĕшетĕн-и, килĕшместĕн-и, ман шутпа, çапла: кăнтăрла тăван чĕлхепе юрă янăратаймасан, каçсерен чĕп çутинче сăвă хайламасан, юмах хыççăн юмах яма пăрахсан халăх пĕтет. Юрă-сăвăсăр, юмах-халапсăр малашлăх та, пурăнма та май çук. — Турханăн шухăшлă куçĕнчен ăшă хĕмсем сирпĕнсе тухаççĕ, ăслă сăмахĕсем халăх кăмăлне çĕклеççĕ.

— Çӳлте — Аслă Танкăр, Атăлçи Пăлхар-Чăваш элĕнче — ырă кăмăллă кан, хамăрăн карманта — хастар турханăмăр! Сирĕн ырлăхăрпа пурăнатпăр! Пире çăкăр-тăвар эсир çитеретĕр! Ĕрехметех пурсăра та! Тавтапуç сана, хисеплĕ турханăм, хăвăн халăхна, унăн пултарулăхне пысăка хурса хакланăшăн. Малашне те ан иккĕленĕр: сăвă-юрă, юмах-халап — чăн пысăк мул, Аслă Пăлапа Хырла сăввисем, юрри-кĕввисем калама çук хӳхĕм. Вĕсенче ырă шухăш çеç мар, çутă ĕмĕт те пур... — килĕшет турханпа Аскат сăвăçă. Унтан чеен çапла хушса калать: — Сăвăçпа илешмен турхана мухтамаççĕ, халăх тарçи пулма ăнтăлман сăвăçа та ырламаççĕ.

Çивĕч куçлă турхан сăвăç çине сăнавлăн пăхса илет, уява хитре сăвăпа пуянлатма ыйтать. Аскат хăтан Тикеш карманĕ çинчен ятарласа хывнă сăвви тарăн шухăшлă, çав вăхăтрах эреветлĕ те теветлĕ. Ахахпа капăрлатнă, мерченпе эрешленĕ тейĕн. Сăввине çапла вĕçлерĕ:

Юри килтĕм савăнма,
Ӳлĕм килĕп калаçма.
Чунтан саватăп сире!
Айăп ан тăвăр пире!

Уяв картине, чаплă тумлă турхан умне, Пăрчăкан пике тухать. Карманти ăста тимĕрçĕн Пертейĕн пĕртен-пĕр хĕрĕ вăл. Тĕкĕрт валли тимĕр кĕпесене — кӳпесене çирĕп ăсталаканни

карманта урăх çук. Пĕве çитнĕ хĕрĕ вара юрă юрлама, такмак калама çав тери ăста. Ку енĕпе унран ирттерекеннине тупаймăн. Вăй вĕресе тăракан йĕкĕтсем ун çине куç илми пăхаççĕ. Хĕрĕн ытармалла мар хӳхĕм кĕлетки илĕртӳллĕ туйăм çуратать, асамлă вăйпа хăй патнелле туртать. Ăшă кулли хитре сăн-питне хĕвел пайăрки пек çутатать. Хĕр турханпа мăчавăра чĕркуçленсе пуççапать, пĕтĕм халăха пуç таять, çут хĕлхемлĕ куçĕпе яш-кĕрĕм хушшинче савнă каччине шырать. Сап-сарă çӳçлĕ, кăн-кăвак куçлă çамрăка асăрхарĕ-асăрхарех. Унтан янкăс сасăпа юрă янăратса ячĕ:

Тĕвик-тĕвик текерлĕк
Йăви тĕлне каламасть.
Пĕрле ӳснĕ пĕр йĕкĕт
Варли камне каламасть.

Тĕвик-тĕвик текерлĕк,
Ăçта вĕçсе çӳрен-ши?
Турă панă телейĕм,
Ăçта çĕтсе çӳрен-ши?

Юхан шывăн леш енне
Кашта хурса каçма çук.
Хăвна пӳрмен телее
Укçа парса илме çук.

Хăй йăвине пăрахма
Текерлĕке çăмăл мар.
Вăрах кĕтме, кулянма
Хĕр чĕрийĕ чултан мар.

Текерлĕкĕм, текерлĕк,
Чĕппӳсенчен ан уйрăл.
Йĕкĕтĕмçĕм, сар йĕкĕт,
Саван хĕре ан хуйхăрт.

Тĕвик-тĕвик текерлĕк,
Ăçта вĕçсе çӳрен-ши?
Турă пӳрнĕ телейĕм,
Ăçта çĕтсе çӳрен-ши?

Пăрчăкан юрри вĕçне çитсенех çамрăксем унтан та кунтан кăшкăрса ячĕç:

— Тепре юрлаттарас! Питĕ шеп ку юрă! Тепĕр хут юрлатăр!

Чăнах та, Пăрчкан юрри пурне те килĕшрĕ. Сăмахĕсем чуна çывăх, асра юлаççĕ. Кĕвви еплерех! Кĕвви мĕне тăрать!

Халăх ыйтнипе килĕшсе турхан пуçне сулчĕ те, ырă кăмăллă, уçă саслă хĕр юрра тепĕр хут шăрантарчĕ. Халĕ ĕнтĕ вăл пĕччен юрламасть. Кашни çаврăм хыççăн уяврисем пурте харăс янăратса яраççĕ:

Тĕвик-тĕвик текерлĕк,
Ăста вĕçсе çӳрен-ши?
Турă пӳрнĕ телейĕм,
Ăста çĕтсе çӳрен-ши?

Пытармасăр каласан, Пăрчăканăн Турă пӳрнĕ телейĕ — турхан ывăлĕ Тутирек. Ашшĕ чарнăран кăна йĕкĕт хĕрпе çывăххăн туслашма хăяймасть. Турхан ăна ытла та шухă тесе тиркет. Эппин, хĕр вăр-вар та çивĕч пулни килĕшмест йĕкĕтĕн ашшĕне. Тĕрĕссипе, Пăрчăкан — пулмаллипех пулнă хĕр. Нихăш ĕçрен те пăрăнмасть, тем тума та ăслай çитерет. Тимĕрçĕ лаççинче ашшĕне арçын пекех хастар пулăшать. Тутирек вара хĕре уйрăмах çакăншăн кăмăллать.

Ташă ункине нар пек хитре хĕрсем тухрĕç. Пурте шукăль тумланнă: тĕрĕллĕ шап-шурă кĕпепе, чечеклĕ саппунсемпе. Улăхри капăр чечексем тейĕн. Эх, епле лайăх ташлаççĕ! Мĕн тери çыпăçуллă кашнин хусканăвĕ! Ташлакансем кăшăл туса хĕвел май акăшла ярăнса куçаççĕ. Пĕрре ура тупанĕ çине пусаççĕ, тепре чĕрне вĕççĕн çĕкленеççĕ. Аллисем вара çав вăхăтра кăкăр тĕлĕнче илемлĕн авкаланаççĕ.

Унтан яш каччăсем ташларĕç. Вĕсен карти варрине мăнаçлă турхан хăй чаплăн кĕрсе тăчĕ. Ташă курки ĕçсенех яра пачĕ вăл ташша. Халăх харăссăн та хаваслăн алă çупрĕ. Хĕрсем турхана та такмак каласа ташлаттараççĕ. Чун-кăмăла çĕклекен хаваслă ташă такмак хыççăн такмак çуратать.

Çулçи çупать, улми ташлать
Хĕвел ӳксен пахчана.
Халăх юрлать, халăх ташлать
Мăн уяв çитсен кăна.
Турта хушши тур лаша
Пур ыр çынна пăхтарать.
Пирĕн турхан, тамаша,
Ташшипе савăнтарать.
Шăпăрçă, ан ывăнсам!
Параппан, ан шăплансам!
Ура тупанĕ хĕрет —
Турханăн ташлас килет.

Турхан хӑй ташлама тухнӑран шӑпӑрҫӑсем ташӑ кӗввине татах та тӑрӑшарах калаҫҫӗ, параппан та хаваслӑрах тӳнклетет. Ташласа пӗтерсен турхана тепре сӑра ӗҫтереҫҫӗ.

Ашшӗ хыҫҫӑнах Тутиреке ташлама кӑларчӗҫ. Мӗн тери сатур ташлать вӑл! Хайне килӗшекен йӗкӗт ташлама тухсан Пӑрчӑкан ун ҫинчен пачах куҫ илмерӗ, такмак хыҫҫӑн такмак каларӗ.

Чӳречене уҫса яр —
Сӗлкӗ вӗҫӗ курӑнтӑр.
Савнӑ хӗрне алӑ сул —
Эс юратни курӑнтӑр, —

ҫапла такмакларӗ ҫиҫен куҫлӑ хӗр. «Ку чӑнах та мана панӑ сӗнӳ-ши?» — иккӗленчӗ Тутирек. Тӑпӑртаттарса пычӗ-пычӗ те пӗрле ташлама сӗнсе хӗр умӗнче ура тапрӗ.

Сарӑ пурҫӑн пиҫиххи,
Ярапине мана пар!
Чунӑм савнӑ хӗр пӗрчи,
Эс те ташша яра пар!

Килӗштернӗ чунсем — йӗкӗтпе хӗр — ярӑнса-ярӑнса ташланӑ чухне пӗтӗм халӑх алӑ ҫупрӗ.

Уявра ӑсталӑхпа мала тухнӑ ҫӗнтерӳҫӗсене карманти чи ватӑ старик — Ахман асатте — парне пачӗ. Аскат хӑтапа Тутиреке пӗрер сӗлкӗ — тӗрӗллӗ пит шӑлли, Пӑрчӑкан пикене шӑтӑкласа тӗрленӗ тутӑр тивӗҫрӗ. Парне илнисен пичӗсем телейлӗ йӑл кулӑпа ҫуталчӗҫ.

— Ака тавра аки, ҫаран тавра ҫави. Турат куҫӗ куркипе, тумла шывӗ сӑрипе пурне те кӑмӑллӑ тӑвас! — хушать турхан ятлӑ-сумлӑ стариксене.

Лешсем пурне те ӗречӗпех сӑра ӗҫтереҫҫӗ.

— Ҫӳлте — Турӑ, ҫӗрте — кан, карманта — турхан. Ҫарӑк мар, арӑк мар, кулмалла мар, тутана шӑлмалла мар, кӗрекерен ҫӳле ҫӗклемелле мар. Кулакана, тутине шӑлакана, кӗрекерен ҫӳле ҫӗклекене куркапа мар, алтӑрпа ӗҫтермелле! — ӳкӗтлет пӗр старикӗ.

— Ӗҫекенни путене, ӗҫейменни карӑш. Ытах ӗҫсе ярайманни савнийӗнчен сивӗнтӗр, упӑшкинчен уйрӑлтӑр! — хистет тепри.

— Турăпа патшан, турханпа атте-анне сывлăхĕшĕн ĕçетпĕр! Тав сире, ĕрехмет! — хуравлаççĕ сăрапа сăйланакансем.

...Пăлхар-чăвашсен уявĕ вăхăтĕнче Тикеш карманĕ çывăхне, икĕ çухрăмри юман кати хĕррине, çичĕ ютсен темле ихĕлти эшкерĕ çитсе тăрать.

— Кайăр, тĕрĕслĕр, карманта мĕн тунине пĕлĕр, — хушать тытăнкăллă калаçакан утаман хăйĕн вăшăл-вашăл куç-хăлхисене.

Кусем хулашра пăлхар-чăваш тумĕпе вăрттăн сăнаса çӳрерĕç. Çакна курчĕç: халăх çурхи хаваслă уява пухăннă. Малтан кунта тем тĕрлĕ сăвă каларĕç, юмах ячĕç, янкăс юрăсем юрларĕç, унтан хĕрсемпе йĕкĕтсем ташă ункине тăчĕç. Куç-хăлхасем каялла таврăнсан утамана çапла пĕлтерчĕç:

— Унта ăнсăртлăха кĕтекен пачах çук. Сăвă калаççĕ те юмах яраççĕ, юрлаççĕ те ташлаççĕ... Халех тапăнар!

Тарăн шыв пăтранмасть, ăслă-тăнлă çын арпашăнса каймасть. Утаман çамки пĕрĕмсемпе картланчĕ. Вăл ĕнсине кăтăр-кăтăр хыçса илчĕ те çапла хирĕçлерĕ:

— Çук, шĕвĕрккесем, апла тумастпăр. Сăмахăра тĕплĕ-йĕрлĕ калаçăр, юрлакана, ташлакана ан хурлăр. Ăслă-тăнлă çын кăна сăвă хайлать, юмах ярать. Юрă юрлама янкăс сасă çеç мар, пултарулăх кирлĕ. Ташăпа тĕлĕнтерме те чăннипех ăста пулмалла. Çурт-йĕр никĕсĕ — çирĕп чул, халăх ăс-хакăлĕ — чăн пысăк мул. Унăн пултарулăхне хакламан çĕршывра патши те пакша, турханĕ те кукша. Юрă-ташăпа, сăвăпа та юмахпа туслă халăха çĕнтерейместĕн. Кунтан каялла каяр!

Тытăнчăклă калаçакан утаман ăна-кăна ăнкаракан çын иккен. Хăй каланă пекех турĕ: пĕтĕм тĕкĕртне ăçтан килнĕ çавăнта ертсе кайрĕ. Тикеш карманĕ тĕлне килсе капланнă синкер пĕлĕтсем сирĕлчĕç, хĕвел хаваслăн кулса ячĕ.

Шел пулин те хĕвел вăрах ялкăшмарĕ çав. Таçтан хăяматран тискер хура пĕлĕтсем каллех шуса килчĕç. Тикеш карманĕ çывăхне, юман кати хĕррине, услапсен тепĕр ĕренкесĕр эшкерĕ — вăрă-хурах йышĕ çитсе чарăнчĕ.

— Кайăр, тĕрĕслĕр: кармана тапăнса кĕме ăçтан тата хăçан меллĕ? — хушать хăнчăр куçлă утаман хăйĕн куç-хăлхисене. Кусем хăпăл-хапăл каяççĕ те кураççĕ: халăх уява пу-

хăннă. Сăвă калаççĕ те юмах яраççĕ, юрлаççĕ те ташлаççĕ. Куç-хăлхасем вăрах кĕттермерĕç, каялла таврăнчĕç.

— Пĕтĕм халăх аслă уявра. Тапăнар! — кăкăрĕсене каçăртрĕç куç-хăлха пулса кайнисем.

Хăнчăр куçлă утаман та ăна-кăна ăнкаракан çын иккен. Тарăн шыв пăтранмасть, ăслă-тăнлă çын арпашăнса каймасть. Утаман çамкине хутлам-хутлам картлантарчĕ, ĕнсине кăтăр-кăтăр хыçрĕ, унтан пурте унăн сулăмлă сăмахĕсене илтрĕç:

— Э, çук! Манăн такама çапса хуçмалăх вăй пур, юрă-кĕвĕпе пурăнакана çĕнтерме çав вăй çителĕксĕр. Ăс-хакăл пуянлăхне мала хуракана парăнтараймастăн. Сăвă хайлама, юмах яма ăс та, пĕлӳ те кирлĕ. Юрă-кĕвĕ шăратассин хăйĕн майĕ-меслечĕ пур. Пултарулăхсăр ташă ăсти пулаймастăн. Çурт-йĕр никĕсĕ — çирĕп чул, халăх ăс-хакăлĕ — чăн пысăк мул. Унăн пултарулăхне хакламан çĕршывра патши те пакша, турханĕ те кукша...

Утаман çапла калать те сăнăллă-ухăллă йыша каялла çавăрса каять. Тикеш карманĕ тĕлне шуса килнĕ хура пĕлĕтсем каллех сирĕлчĕç, хĕвел хаваслăн кулса ячĕ.

Пĕр-пĕр синкер вăрăнас пулсан вăл сан патна хăвăнтан малтан çитсе тăрать теççĕ ваттисем. Чăнахах иккен. Пăлхарчăвашсен уявĕ çаплах малалла тăсăлатчĕ-ха, Тикеш карманĕ патне, юман кати хĕррине, тата тепĕр вăрă-хурах эшкерĕ йăпшăнса çитрĕ. Утаманĕ çине пăхма та хăрушă. Сăнĕ тискер, çӳçĕ-пуçĕ пĕтĕмпех эптертен кайнă, пулнă-пĕтнĕ эсрелех. Çапах вараланчăк аллипе хĕвеллĕ тӳпене ярса тытма ĕмĕтленет.

— Кайăр, тĕрĕслĕр: мĕн тăваççĕ халĕ карманта? — шăлне шатăртаттарса хушрĕ утаман икĕ хурахне.

Кăравçи — çапăçмалли хатĕр-хĕтĕр янтăлаканни — утамана çавăнтах пĕр курка пуçа каякан шĕвек тултарса пачĕ. Çак шĕвеке ытла та кăмăллать утаман, кăралçине кăна пĕр тумлам та лекмест. Кушăрканă тутине чĕлхипе япăш-япăш çуласа илнипех çырлахать. Куç-хăлха пулса кайнисем вăрах кĕттермерĕç, каялла таврăнчĕç.

— Пĕтĕм халăх уявра. Сăвă калаççĕ те юмах яраççĕ, юрлаççĕ те ташлаççĕ... — евитлерĕç хайхискерсем.



— Пӗлмерӗр-и: пыл сăра пичкисене ăҫта упраҫҫӗ? — тӗпчет вӗҫкӗн те тăрпалтай утаман.

— Апат-ҫимӗҫе упрама карманта ятарласа нӳхрепсем чавнă. Пыл сăра пичкисем те унтах...

Ăшăх шыв пăтранатех, тăрлавсăр этем тăнран тухатех.

— Апла эппин! Тăн кӗртмеллех ку халăха! — чышкине кăтартрӗ вăл. — Хальлӗхе чарас мар, сăввине те калаччăр, юмахне те яччăр, юр юрлаччăр та ташлаччăр. Эпир вӗсене урăхла ташлаттарăпăр. Турханӗ пакшана тухӗ, тӗкӗртҫисем кукша пулса тăрӗҫ. Карман ҫине ҫӗрле, турхан ыйха путсан, тапăнăпăр! — каллех шăлне шатăртаттарчӗ утаман. Пуҫа каякан шӗвек кăрлавҫине тепре тултарма хушрӗ. Эккей этем! Тӗнче хăть ҫурăлса кайтăр — ăна эрех тултарса пар. Тӗнче касса ҫӳрекенскер ҫав шӗвекшӗн Аслă Пăлана кутăн сикме хатӗр. Пӗр ухмаха ере пуҫласан ҫын тем те хăтланать ҫав.

Кармантисем те суккăр мар иккен. Турул тăрринчи хуралçăсем ката вăрман хĕрринче çичĕ ют хĕвĕшнине асăрхарĕç те турхана пĕлтерчĕç. Ытлах хыпăнса ӳкмерĕ Аслут.

— Каç сĕмĕ çапсанах карман çумĕнчи лапа виç йӳпсем пăрахса тухăр, лашисем урасăр юлччăр, — хушрĕ вăл тĕкĕртçĕсене.

Ĕç-пуç пĕртте çичĕ ют кĕтнĕ пек пулмарĕ — ку каç карманта никам та куç хупмарĕ. Пурте инкеке сирсе яма хатĕрленчĕç.

Çур çĕр çитнине систерсе автансем авăтма пуçласанах çичĕ ют эшкерĕ утсем утланчĕ, шăй-шай шăхăрса карман еннелле вирхĕнчĕ. Кармана кĕме мар, шӳмме патне — хулаш тавра чавса тунă канав хĕррине те çитеймерĕ. Унтан та кунтан кăшкăрашни, çуйхашни илтĕнсе кайрĕ. Малтисем ут çиенсен лапне çитнĕ иккен. Ку вăл виçĕ йĕплĕ тимĕр çаврашка. Вĕсене карманта Пăрчăкан ашшĕ Пертей тимĕрçĕ туса хатĕрленĕ. Ут ун çине пусать те чикĕнсе каять, çĕре йăванать. Ут çиенсем кӳнĕ пăтăрмах вăхăтĕнче вăрă-хурах эшкерне хирĕç кармана хӳтĕлекенсен икĕ ушкăнĕ тухрĕ. Тĕкĕртçĕсем çĕмренсемпе, айпăлтисемпе те хăртсемпе.

— Пăлхар-чăвашсем тăшманпа ямахатăн-ямахатăн çапăçаççĕ. Кашни ушкăнрах сакăр-тăхăр çын. Пăлхар-чăвашсем вăрă-хурахсене икĕ енчен хĕснĕçемĕн хĕссе пычĕç, пĕрин хыççăн тепĕрне леш тĕнчене ăсатрĕç.

Турханăн ывăлĕсем çиччĕшĕ те тăшманпа çапăçакансен ретĕнче. Тутирек вăрă-хурахпа уйрăмах хастарлăн çапăçать. Пуçне тухья евĕр шĕвĕр вĕçлĕ сапар тăхăннă. Аллинче — çутă хĕç. Акă вăл эшкер утаманне хирĕç ыткăнчĕ. Унпа юнашарах кăралçи. Тăлпан кăралçăна вăл туххăмрах тирпейлерĕ, утамана хăйне тапăнчĕ. Чанк та чанк! тăваççĕ хĕçсем. Иккĕшĕ те лачкам тарларĕç. Шуйттан вăйлă, Танкăр татах та вăйлăрах. Утаман хастар, турхан ывăлĕ татах та хастартарах. Тăшманăн хĕсĕк куçĕ кашкăрăнни пек хаяррăн йăлтăрать. Турхан ывăлĕ куçĕнчен çунтарса ярасла вут-хĕм тăкăнать. Хăямата Тутирек хулĕнчен лектерчĕ-лектерчех. Анчах çичĕ юта та чустаран унаман-мĕн. Вăл кукăр хĕçĕпе йĕкĕте кăкăрĕнчен тирме хăтланчĕ — юрать-ха çирĕп кӳпи çăлчĕ. Тăш-

ман урса кайса ҫапăҫать, шуйттан илесшĕскер меллĕ самантра Тутиреке пĕҫҫинчен йывăр амантрĕ — юн палкаса юхса тухрĕ.

Йĕкĕтĕн куҫĕ алчăраса кайрĕ. Тытăҫу мĕнпе пĕтетчĕ-ши, калама йывăр. Юрать-ха Пăрчăкан пике урхамахпа вĕҫтерсе ҫитрĕ, утаман куҫне ывăҫĕпех тусанлă тăпра сапрĕ. Ҫавăн чухне утамана кăкăрĕнчен хĕҫпе тирчĕ те ĕнтĕ Тутирек. Тăшман каснă йывăҫ пек йăванса кайрĕ. Пуҫа каякан шĕвек ыйтма та ĕлкĕреймерĕ, куҫне яланлăхах хупрĕ. Йĕкĕт аманнине курчĕ те сăр туса кайрĕ Пăрчăкан чĕри. Хĕр хăвăрт Тутирек суранне тутăрĕпе туртса ҫыхрĕ, ăна мекеҫлене-мекеҫлене урхамах ҫине вырнаҫтарчĕ, йывăр аманнăскере ыталаса хăй хыҫала ларчĕ.

Аманнă ывăлĕпе хĕре Аслут турхан карман умĕнче кĕтсе илчĕ.

— Тавах сана, Пăрчăканăм, ывăлăма ҫăлса хăварнăшăн! Малашне иксĕре варлă пулма чармастăп, кин пулмашкăн пехиллетĕп! Ҫемьесĕр арҫын туратсăр йывăҫ пекех вăл! Танкăр упратăр иксĕре те!

— Ҫӳлте — хăватлă Танкăр, Атăлҫи Пăлхар-Чăваш элĕнче — ырă кăмăллă кан, хамăрăн карманта — хастар турханăмăр! Сирĕн ырлăхăрпа пурăнатпăр! Ĕрехметех пурсăра та! — сăпайлăн хуравларĕ кин пулас хĕр. Пит-куҫĕнче пытарайми савăнăҫ вылярĕ.

Тикеш карманĕ тĕлĕнчи тӳпе синкер пĕлĕтсенчен тасалчĕ. Сар хĕвел яланхиллех ăшшăн кулса ячĕ. Аслут тата унăн ҫичĕ ывăлĕ ячĕпе Танкăр ҫутнă ҫăлтăрсем ҫĕрле хăйсен вырăнĕнчех ҫунаҫҫĕ. Алтăр ҫăлтăр пĕтĕм тӳпене илем кӳрет. Чăнахах иккен: сăвă-юмахпа, юрă-ташăпа туслă халăха парăнтараймастăн, вăл хăй ҫĕнтерет.

Халап хайларăм — халлантартăм, тантăшсене тĕлĕнтертĕм. Чун тĕпĕнчи сăмаха каларăм — пĕр сăмах та суймарăм. Итлекене — икерчĕ, калакана — кулачă.

*З. Абейдуллина журналистка*
*Аслă Пăла ҫумĕнчи Тикешре илтнĕ халап.*



# Таяпа тата Сарпи, Акташпа Элбану

## Вӗсем пӑлхар-чӑваш ятне ҫӳле ҫӗкленӗ

Тай турхан икӗ ял хушшинче ҫырма хӗрринче карман тума шут тытать. Тен, ҫакӑ кирлех те марччӗ, куҫса ҫӳрекен халӑх эшкерӗсем кӑнтӑртан ҫаратма киле-киле тарӑхтарчӗҫ. Ял выльӑхне кӗтӗвӗпех хӑваласа каяҫҫӗ. Ҫынсене чуралӑха сутма ӑсатаҫҫӗ. Тем те кӗтме пулать путсӗр эшкерсенчен.

Карман тума ялти пӗр-пӗрне килӗштернӗ йӗкӗтпе хӗр — Тай тата Пай тытӑнчӗҫ. Карман тӑвакансем Таяпа тата Пайпи ятсене килӗштерчӗҫ. Хӗр сатуртан та сатур, илемлӗрен те илемлӗ, сарӑ сӑнлӑ, сар ҫӳҫлӗ пулнӑран Пайпие — Сарпи, Тая — Таяпа теме пуҫларӗҫ. Сарпи ят турхана та килӗшрӗ. Вӑл та ҫапла чӗнме пуҫларӗ.

Йӗкӗтпе хӗр тӑрӑшӑвне ытти ялсем те ырларӗҫ, пурте нимене тухрӗҫ. Ку вӑл Х ӗмӗрте пулнӑ теҫҫӗ. Ӗҫе юман пӗренесенчен икӗ рет тӗреклӗ хӳмесем тӑратнинчен пуҫларӗҫ, ретсем хушшине тӑпра ҫапса хытарчӗҫ. Юман хӳме умне шӗвӗртнӗ пӗренесене шӗтӗрнек евӗрлӗ тӑрӑнтарса лартрӗҫ. Юнашарах ҫӗр чавса тарӑн канав турӗҫ, унта туп-тулли шыв тултарчӗҫ. Ун урлӑ ятарлӑ кӗперпе ҫеҫ каҫаятӑн. Хӳтлӗхе пӗртенпӗр тимӗр хапхаран кӑна кӗме пулать.

Мӗн вӑл карман? Ҫирӗплетнӗ хӳтлӗх. Унта тӑшман пырса кӗреймӗ. Шӳмме урлӑ каҫмалли кӗпер ҫӗкленме те, хӑй вырӑнне анса ларма та пултарать. Карманӑн тӑвата кӗтессинче те турул. Енсен варрисенче хӑпартнӑ вӗсене. Пурӗ саккӑр. Кашниех тӑвата хутлӑ. Ку турулсем — шанчӑклӑ

хуралçăсем. Вĕсен аякрине курмалла, инçетрине илтмелле.

Çирĕп те хăтлă карман туса çитерсен пăлхар-чăвашсем хăйсен туррисене кĕлтурĕç:

— Эй, Аслă Танкăр! Эй, Çутă Пӳлĕхçĕ! Хамăрăн карманта мул тытма парăрччĕ. Укçамăр арчана кĕми пултăр, турулсем айĕнче пичĕкесенче упрантăр!

Кармана Çырмапуçпа Юхăмкасси ялĕсем хушшинче янтăларĕç, каярахпа ялĕсене Аслă Таяпа тата Кĕçĕн Таяпа ятсем пачĕç.

Пăлхар-чăвашсене йӳркĕнсем канлĕх памаççĕ. Вĕсем уйсем-хирсем тăрăх куçса çӳреме хăнăхнă. Анатри Атăл тăрăхĕнчен вырăс çĕрĕсем çине пĕр вĕçĕм талпăнса кĕреççĕ, Коломнăпа Рязань хулисене хурахла çаратаççĕ. Таяпа карманĕ те вĕсемшĕн илĕртӳллĕ кукăль. Миçе хут килсе тапăнмарĕçши кунти ĕçченсене?! Карманти хурала хурахсемпе тытăçма, çапăçма тивет.

Тапăну хыççăн тапăну, пĕр тытаçу хыççăн тепри... Йӳркĕнсене миçе хутчен хăваласа янине шутласа та пĕтереймĕн!

Çапăçусенче Таяпапа Сарпи пĕрмаях юнашар. Пĕр-пĕрне пулăшма яланах хатĕр. Таяпа савнă хĕрне сыхлать, хĕрĕ каччишĕн тăрăшать.

Эккей! Пĕр çапăçура турхан хĕре сыхлаймарĕ çав. Çĕр çăтасшĕ нухрай ăна сăнăпа хулĕ тĕлĕнчен амантрĕ. Суранĕ пирчеме пуçланăччĕ ĕнтĕ — йӳркĕнсем каллех тусан вĕçтерсе çитрĕç. Хальхинче вĕсем ытти чухнехинчен те йышлăрах.

— Хапхăр мĕншĕн тимĕртен?! Юписене мĕншĕн тарăн чавса лартнă?! — хăрăлтатуллă сасăпа кăшкăрса ячĕ йĕспе капăрлатнă юпăнчăлли. — Халех уçăр!

Сарпи систерӳллĕн турхана çаннинчен туртрĕ.

— Чееленмесĕр çĕнтерес çук ку йыша. Хапха патĕнчи хурала пăрăнма хушар. Йӳркĕнсене кармана кĕртсенех хапхана хупăпăр...

Хурахсем шӳллем урлă каçсан кĕпер таçта çӳле çĕкленчĕ. Тăшман тамăк пек хĕсĕкре тăрса юлчĕ. Тинех лекрĕç хăйхисем. Кĕреймеççĕ те, тухаймаççĕ те. Вăрăм сăмсаллă пĕр йӳркĕнĕ пуçне каçăртса турул çинчи Сарпие куçĕпе тăрăнчĕ те юрласа ячĕ:

Шур перчетке ҫыхса
Пӳрнем шӑтрӗ.
Савни сана кӗтсе
Каҫ та пулчӗ.

Шуҫӑм ҫути килет,
Тул ҫутӑлать.
Уйрӑлассӑм килмест,
Чун хурланать.

Ӑсатса яр, ҫавни,
Ӑсатса яр,
Кӗмӗл кӗпер урлӑ
Каҫарса яр.

Кӗмӗл кӗпер урлӑ
Каҫарса яр,
Кӗмӗл ҫӗрӗ витӗр
Ай пӑхса юл.

Ыран кӗпер урлӑ
Каллех килсен
Сана тараватлӑн
Кӗтсе илӗп.

Сарпи юррине йӳркӗн мӗн вӗҫне ҫитиччченех юрларӗ, пӗтерсен пӑлхар-чӑваш хӗрӗнчен ҫапла ыйтрӗ:

— Сарпиҫӗм, юрӑшӑн парне пулмӗ-ши? Сан юрру вӗт ку, — ыйтрӗ нухай.

— Пӑлхар-чӑваш чиперккин юрри вӑл. Халь ман юрра итлӗр.

Юрла, юрла тееҫҫӗ,
Юрламашкӑн сӗнеҫҫӗ.
Чӑннипе эп юрлани —
Тусӑма савӑнтарни.

Ҫукки ҫукшӑн кулянать,
Пурри пурпа мухтанать.
Ман куҫ тулли савни пур,
Ӗненмесен — килсе кур.

Ытарма ҫук ҫеҫпӗле,
Тыткӑнлать куккук сасси.
Илем ҫӑлать тӗнчене,
Илем хӑй патне чӗнет.

Ҫут тӗнче чӑнах хитре,
Кулӑ ҫуратать питре.



Эсё те илемлĕ пул,
Хĕпĕртесе йăл-йăл кул.

Кĕмĕл шывра ирĕлмест,
Ылтăн хăй тĕсне ямасть.
Эс те ылтăн-кĕмĕл пул,
Тĕлĕнмелле ырă пул.

Илемлĕ пул чунупа,
Таса пулсам кăмăлпа.
Илем çăлтăр тĕнчене,
Телей кӳтĕр вăл пире.

Пăлхар-чăваш турханĕ хĕвелтухăç еннелле çаврăнса тăчĕ, ӳсĕркелерĕ те пуçне çӳле çĕклерĕ. Унтан пурте унăн мăнаçлă сассине илтрĕç:

— Çутă Танкăр, ырă Пӳлĕхçĕ, карманти хĕрт-сурт, çырлахсамăр пире! Йӳркĕнсем, пурте тăнлăр! Пăлхар-чăвашсем — тӳлек те мирлĕ халăх. Вĕсем нухайсен таврăмне нихçан та

ура ярса пусман, унашкал хӑтланма шутламаççӗ те. Сире вара çут тӗнче тӑвӑр. Эккей самана! Пурте, пӗри юлми, урӑх килместпӗр тесе сӑмах парсан, Турӑ умӗнче тупа тусан çак карманти кӗпер хӑй вырӑнне анса ларать. Куçӑм тек ан куртӑр сирӗн хӑтланӑвӑрсене, хӑлхам ан илттӗр эсир тулӑксӑр янӑрашнине.

Чуна пырса тивмелле каларӗ ӑслӑ-тӑнлӑ турхан. Йӳркӗнсен ертӳçи вӑрах кӗттермерӗ, аллине чӗри тӗлне тытса тупа турӗ:

— Хамӑрӑн Туррӑмӑр ячӗпе калатӑп: сирӗн пата пӗр йӳркӗн та урӑх килмӗ! Суятӑп пулсан мана çакӑнтах çӗр çӑттӑр е аçа çапса вӗлертӗр!

Хутлӑхри кӗпер кӗçех хӑй вырӑнне ларчӗ, йӳркӗнсем кармантан вирхӗнсе тухрӗç, килнӗ çулпа каялла тапса сикрӗç.

Нухайсем килме пӑрахсан Таяпа тинех Сарпие качча илет те ӗмӗрӗ вӗçне тухичченех унпа телейлӗ пурӑнать.

Хастар Таяпан тата ӳркенме пӗлмен Сарпин пурнӑçласа çитереймен ӗмӗтсем пайтах юлнӑ. Вӗсен ӗçне-хӗлне несӗлӗсем малалла тӑсаççӗ. Таяпа карманне Кушламар пӳ çӗнетет, çирӗплетет. Карман варринче хӳхӗм кермен тутарать. Ашшӗ шутланӑ тӑрӑх, унта тӑван хӗрӗ Элбану мӑшӑрӗпе пӗрле пурӑнмалла.

Таяпа тӑрӑхӗнче пӗр вӑхӑт пурнӑç тӳлекленчӗ. Кушламар кермене умӗнчи хыр çине вӑрмантан карӑк килсе ларакан пулчӗ. Вӗçен кайӑк хыр йӗппине туганать, лӑпкӑн та савӑккӑн карӑклатать.

Кушламар пӳ тӑван хӗрӗпе пулас кӗрӳшне çапла калать:

— Тырӑ вырса пуçтарсан кӗр мӑнтӑрӗпе туй кӗрлеттерӗпӗр савӑнса...

Акташпа Элбану аслӑ пӳ сӑмахне савӑнса тӑнларӗç. Анчах йӗкетпе хӗр шӑпи урӑхларах пулса тухрӗ.

Кушламар аслӑ пӳ çарӗ Аслӑ Таяпапа Кӗçӗн Таяпа хушшинчи карманта тӑрать, çак тӑрӑха кунӗн-çӗрӗн сыхлать. Тӳлек пурнӑç вӑраха пымарӗ çав. Каллех хура пӗлӗтсем карӑнчӗç. Кӗрхи кунсем çитсен çанталӑк сулхӑнран сивве кайса пычӗ. Пӗр сивлек кун чӑрсӑр монголсем йышлӑн тӗпӗртеттерсе çитрӗç.

Çын куççулӗ çӗре ӳкмест. Çакна шута илмерӗç ун чухне



монголсем. Никама та шеллемерӗҫ. Арҫынна чура шӑпи кӳресшӗн, хӗрарӑма хӑрхӑм тӑвасшӑн хыпӑнчӗҫ вӗсем. Кушламарӑн мухтавлӑ керменне хупӑрларӗҫ, тӗкӗрҫӗсене пӗри юлмиччен касса вакларӗҫ.

Мӗн тумалла? Кушламар аслӑ пӳ, харсӑр Акташ тӗкӗрҫӗ, Элбану пике карманта юнашар тӑрса тухрӗҫ. Кушламар аллинче айпӑлти, Акташ сӑнӑпа, Элбану ухӑпа. Виҫҫӗшӗ те хӑюллӑ, виҫҫӗшӗ те Таяпапа Сарпи никӗсленӗ хулаша тӑшмантан сыхласа хӑварасшӑн.

Пике шур кӗпепе, шурӑ саппунпа. Ку тӗс хӗр илемне тӳперен те ҫӳлерех ҫӗклет. Хӳхӗм сасӑпа сар кайӑкла янӑравлӑн юрласа ячӗ Элбану:

Шулап ҫинчи шур кайӑк
Вӗҫсе каяс шутлӑ мар.
Таяпара хӗр нумай,
Йӗкӗт шырас шутлӑ мар.

Кӳлнӗ лаша — сар ҫӑрха,
Унран чапли тата пур.
Ан мухтанӑр, йӗкӗтсем,
Сиртен маттур тата пур.

Мӑн кӗтӳре ут нумай,
Ҫӳрен хушка пӗрре ҫеҫ.
Ялта каччӑ пит нумай,
Эп юратни пӗрре ҫеҫ.

Тем тери хыт авсан та
Пӗкӗ турта пулаймӗ.
Вӑрах кӗтрӗм пулсан та
Сана ман чун пӑрахмӗ.

Сар кайӑк, уҫланкӑра
Ҫӗнӗ юрӑ шӑрантар.
Савниҫӗм, курасшӑнччӗ,
Килтӗн пулсан ална пар.

— Юрру пӗтрӗ-и?! — кӑшкӑрчӗ пӗр хатарлӑ монгол. — Ак сана ҫавӑншӑн парне... — монгол сӑннине Элбану ҫинелле тӗллерӗ.

Акташ сӑннипе тӑшман сӑннине ҫавӑрттарса илчӗ те тимӗр монгола тӳнтерчӗ. Элбану уххине туртрӗ, Кушламар ҫичӗ ют кӑкӑрне айпӑлти тӑрӑнтарчӗ.

Кушламар пӳ, унӑн ытарайми хӗрӗ Элбану, хастар Акташ юнашар тӑрса тӑшманпа ҫапӑҫрӗҫ, виҫҫӗшӗ пӗрле пуҫ хучӗҫ. Вӗсен ячӗпе тӳпере халӗ виҫӗ ҫӑлтӑр ҫунать.

Пӑлхар-чӑвашсем, Таяпапа Сарпи несӗлӗсем, тискер тӑшмана ҫӗнтереймерӗҫ. Кармана монголсем тӗпӗ-йӗрӗпех ҫӗмӗрсе тӑкрӗҫ, хӳтлӗх карманӗн турулӗсене ҫунтарса ячӗҫ.

Ваттисем каланӑ тӑрӑх, ҫак карманӑн тӑватӑ кӗтессине пичӗкесемпе укҫа чикнӗ теҫҫӗ. Мӑнкун каҫӗсенче турулсем тӑнӑ тӗлте ҫав укҫа ҫунать теҫҫӗ. Хӑш-пӗр чухне ҫав укҫа качака путекки пулса чупса ҫӳрет тенине илтнӗ.

Аслӑ Танкӑр пурах ҫӗр ҫинче. Унӑн пулӑшуҫи Пӳлӗхҫӗ Турӑ та пурах. Вӗсем пулӑшнипе Таяпа ялӗсем пурте сыхланса юлнӑ. Эпир паттӑр пӑлхар-чӑвашсене темиҫе ӗмӗртен те манмастпӑр, сума суса, пуҫ тайса аса илетпӗр, пӗтӗм халӑхпа пӗрле чыслатпӑр.

Тав сире, чаплӑ несӗлӗмӗрсем! Ӗмӗр-ӗмӗр мухтав сире харсӑрсем, паттӑрсем!

Пурнӑҫ тикӗс шыв юххи мар, апла та пулать, капла та килсе тухать. «Пӑлхар-чӑвашӑн пуҫри шухӑшӗ ҫурхи шыв пек ан вылянтӑр. Пирӗн ҫинчен ят ан тухтӑр», — теҫҫӗ ваттисен йӑлипе хальхи таяпасем. Сире пурсӑра та Аслӑ Танкӑр, Ҫутӑ Пӳлӗхҫӗ ырӑ сунса пулӑшчӑр, вӑй паччӑр.

* * *

Таяпа тата Сарпи, пӑлхар-чӑваш пӳвӗ Кушламар, унӑн хӗрӗ Элбану, тӗкӗрҫӗ Акташ ҫинчен ырӑ халапсем паянчченех сыхланса юлнӑ. Вӗсем пӑлхар-чӑваш халӑхӗн сӳнми ҫӑлтӑрӗсем. Ҫав паттӑрсем ҫинчен пире Елчӗк районӗнчи Энтепе ҫынни Александр Сапожников кӑрнатир (гренадер), унӑн ывӑлӗ Пантелеймон Александрович каласа панӑччӗ.



# Патӑрьелсем паттӑрпа тӑван

Халап хӗлле хӗскӗчрен хӑталать. Хам хӗпӗртесе хӑйчикки хӳттинче хӑлатла хӑлаҫланам, аваллӑх хунавӗнчен хитре халап хайлам.

Ашшӗ-амӑшӗ ӑна Юман ят панӑ, анчах ялта ку ятпа чӗнмеҫҫӗ. Акатуйӗнче хӑйпе кӗрешекенсене ҫулсеренех ҫӗнтернӗрен Паттӑр теҫҫӗ. Пурӑна киле ял-йыш унӑн чӑн ятне манӑҫах хӑварать. Юлашки вӑхӑтра пурнӑҫӗ пӗртте ӑнса пымасть ҫакӑн. Кӗтӳ кӑларсанах ӗни ӳкет, ҫу варринче мунчи ҫунса каять, ачи-пӑчи пӗрин хыҫҫӑн тепри чирлет. Аптранӑ енне Паттӑр ялти пӳлев (юмӑҫ) патне каять.

— Мана тата мӗн кӗтет? Каласа парсамччӗ пытармасӑр! — тархаслать вӑл карчӑка.

Тӑйлӑк-тайлӑк пӳрчӗ умӗнчи ҫӑка айӗнче ларать пӳлев, хытӑрканӑ пӳрнисемпе ҫӑм ҫиппи арлать. Аллине ҫулҫӑ тытать те юрланӑ сасӑпа калама пуҫлать:

— Акӑ кур: ҫӑка ҫулҫи ҫырулла. Унта мӗн ҫырнине мансӑр пуҫне никам та каласа параймӗ. Чӗрӳне лӑплантар, чунна хытар, халиччен мӗн тӳсни ырӑ ута ҫулӑхнӑ пӑван кӑна. Сана пысӑкрах инкек кӗтет: ӗшеннӗ урхамаха кашкӑр тапӑнать. Тинкерсем: ҫулҫӑ ҫинчи ҫыру йӗрӗ татӑлать, эппин, кашкӑр-кашаман харсӑр урхамаха парӑнтарать. Урхамахӑн инҫе ҫула тарса тухма тивет...

Пӳлеве Паттӑр урӑх итлесе тӑмарӗ, темиҫе нухрат тыттарчӗ те ним каламасӑр унран пӑрӑнса кайрӗ.

Пӳлеве Паттӑр кӑлӑхах кӳреннӗ иккен. Пурнӑҫ шӑпи ҫав карчӑк каланӑ пекех пулса тухрӗ. Вӑхӑт нумаях та ирт-

мерӗ — яла тарҫисемпе пӗрле мӑрса килсе ҫитрӗ. Вӑл хӑй лутра та хытанка кӑна, ҫӑткӑнлӑхӗ вара Атӑлран та сарлакарах. Ясак тӳлейменшӗн Паттӑрӑн мӗнпур выльӑхне хӑваласа тухма, унӑн пӗртен-пӗр хӗр ачине Энюша хӑйӗн хӑрхӑмӗ туса хума шут тытрӗ. Сӳннӗ хӑйӑн ҫути ҫук, мӑрса эшкерӗн намӑссимӗс ҫук. Кашкӑр курсан — пӑрӑнса иртме, упа курсан — килелле утма, мӑрсана курсан — аяккалла тарма хушнӑ ваттисем. Паттӑр паттӑрах ҫав — апла тума шутламарӗ, мӑрса мӗн шутланине пурнӑҫа кӗртме памарӗ, ӑна тарҫи-тӗрҫипех ялтан хӑваласа ячӗ. Эппин, мӑрса нукерсемпе пӗрле тӗпӗртеттерсе килессе кӗтсех тӑр. Паттӑр хӑйӗн кил-йышне, тӑванӗсене Хусан хыҫӗнчен инҫе ҫула илсе тухрӗ. Таркӑнсем Атӑл урлӑ каҫаҫҫӗ, кун ҫутипе кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнелле каяҫҫӗ, ҫӗрле тапӑрта тӑраҫҫӗ. Малта пыракан хура вӑкӑр ҫула тухнӑранпа ниҫта та выртса канмарӗ, чарӑнсан та ура ҫинчех кавлесе тӑчӗ. Темиҫе кунран каҫ кӳлӗм вӑкӑр Аслӑ Пӑла юхан шыв хӗрринче уҫланкӑра чарӑнчӗ. Малтан ҫикелесе ҫӳрерӗ, унтан шыв ӗҫрӗ те курӑк ҫине канӑҫлӑн выртрӗ, чӑпӑрккапа юнасан та вырӑнтан тапранмарӗ.

— Вӑкӑр выртнӑ вырӑнта тыр-пул аван пулать теҫҫӗ. Эппин, пирӗн ял ҫакӑнта, вӑкӑра килӗшнӗ вырӑнта, пултӑр! — татӑклӑн каларӗ Паттӑр хӑйпе пӗрле килнисене. Унӑн йышлӑ ҫемйи, тӑванӗсемпе хурӑнташӗсем ҫӗнӗ ҫӗрте вӑрман пайтах кӑкларӗҫ, унта тыр-пул акса тума тытӑнчӗҫ, выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетрӗҫ, Аслӑ Пӑлара пулӑ тытрӗҫ.

Паттӑр ялӗнчи (Патӑрьелӗнчи) пӗтӗм йыш тутӑ та тулӑх пурнӑҫпа пурӑнма пуҫланӑччӗ кӑна, артаклӑ (мирлӗ) пурнӑҫ кӗтмен ҫӗртен татӑлчӗ. Хырла тата Шӑнкӑртам ҫырмисем урлӑ нухайсен вӑрӑ-хурах эшкерӗ килсе тапӑнчӗ. Паттӑр хӑйӗн ратнипе эшкере хирӗҫ хӑюллӑн тӑчӗ, анчах вӑйсем пӗр тан пулмарӗҫ ҫав. Паттӑр йышӗ ҫапӑҫа-ҫапӑҫа Аслӑ Пӑла леш енне каҫса ҫӑлӑнчӗ. Нухайсем картасенчи мӗнпур выльӑха хӑваласа кайрӗҫ, ҫӗр пӳртсенчи пур-ҫук пурлӑха сӗтӗрсе тухрӗҫ, ялта хӗрлӗ автана урӑм-сурӑм ташлаттарчӗҫ. Пуҫтахсем чипер пурӑнас ҫынсене пӗлӗтпе ҫӗр хушшине — килсӗр-ҫуртсӑр, выльӑх-чӗрлӗхсӗр, чӑх-чӗпсӗр — тӑратса хӑварчӗҫ. Йӗрес — куҫҫуль тухмасть, пулӑшу ыйтас — камран?

— Çук, кунта та пурăнма май килмест. Хура вăкăр пире ăнăçлă вырăна илсе килмен. Урăх çĕре куçса каяр! — шут тытрĕ çирĕп тымар ярса ĕлкĕреймен ял халăхĕ. Пĕр лашасăр, пĕр вăкăрсăр тăрса юлнă çынсем хальхинче пушă уйсем урлă çурçĕрелле Ункă тăрăхне танккарĕç. Кунта Çĕнĕ Патăрьел (Богатырево) никĕслерĕç. Ӳксен тăма йывăр, çапах тăрасах пулать. Ĕçчен йыш çĕнĕ вырăнта та сывлăш çавăрса ячĕ.

Шел, ырă пурнăç кунта та вăраха тăсăлмарĕ. Тӳрере укçа татăлмарĕ, пурпĕрех инкек курмалла пулса тухрĕ. Килсе çитрĕ Хусантан Салтак хан: пĕрремĕш хут — мăрсасемпе, тăлмачсемпе, иккĕмĕш хут — нукерсемпе, çар пуçсемпе. Пăри хăпартăвне касмашкăн хурçă çĕçĕ, Паттăр ратнине çĕнмешкĕн вăйлă эшкер кирлĕ. Ку вăхăта Паттăр ывăлĕсем çитĕнсе çитрĕç ĕнтĕ, кашниех вунă нукера тăрать. Вĕсем ухăпа тискер кайăка та, мăрса нукерне те çухрăмран персе тивертме пултараççĕ. Кинĕсем те хăюллă: шĕвĕркке вĕçлĕ сăнăсем ярса тытрĕç. Хаяр çапăçу пулать ял çывăхĕнче. Паттăр ратни çĕнтерет-çĕнтеретех. Салтак хана Çавал урлă хăваласа яраççĕ. Унăн нукерĕсен виллисене Ункăпа Çавал анаталла юхтарса кайрĕç. Хăйне вара халăх Саплăк хан теме пуçларĕ. Çакăн хыççăн хайхи хан Паттăра манчĕ темелле. Мăрсасемпе çар пуçсем ун патне килсе çӳреме пăрахрĕç.

— Кала-ха пире, — ыйтаççĕ пĕррехинче ашшĕнчен ывăлĕсем, — хăв пек паттăр пулас тесен пирĕн мĕн тумалла?

Те шӳтлесе, те чăнласах вĕсене ашшĕ çапла хуравлать:

— Паттăр пулас тесен телей пĕлĕтне тупмалла. Ку пĕлĕт çулла шарлак çумăр çуса кайсан тупăнать. Çумăр çунă чухне вăл çĕр çумнелле лăпчăнать. Юр пек те шурă, кăпăк евĕр çемçе. Çав асамлă пĕлĕте тупсан унпа çăвăнмалла. Телей пĕлĕчĕ тĕлне пулнă çын вара çил пек çивĕч, вут пек вăйлă, шыв пек шиксĕр пулать.

Паттăрăн ытти ывăлĕсем асамлă пĕлĕт тĕлне пулнă-ши, пулман-ши — пире паллă мар, Тăлпай ятли шыраса тупни пирки пачах иккĕленместпĕр. Ахальтен мар ĕнтĕ вăл акатуйсенче ашшĕ пекех çулсерен паттăра тухать.

Йĕкĕтĕн ачаран пыракан йăпану пур. Ку вăл аслашшĕн-

чен юлнӑ кӗсле. Вӑтӑр тӑватӑ хӗлӗхлӗскере ӑстаҫӑ чӑрӑшран тунӑ. Ҫамрӑк паттӑр кӗсле каланӑ чухне хӗрарӑмсем куҫҫульпех йӗреҫҫӗ. Кайӑк тытма катана каяс пулсан та ӑна хӑйӗнчен хӑвармасть. Ҫурӑмӗ хыҫне тӑпӑл-тӑпӑл сарӑ арчара ҫакайса ярать. Каннӑ вӑхӑтра кӗсле каласа савӑнать.

Тӑлпай ашшӗнех хывнӑ. Ун пек ҫӳллӗ, вӑйлӑ та хастар. Тӑлпай кайӑка (сунара) тата пулла ҫӳреме кӑмӑллать. Хӑех тир тума вӗренчӗ, пулӑ типӗтсе айланать. Вырӑс салисене те, мишер аулӗсене те тир тата типӗтнӗ пулӑ сутма ҫӳрет, ҫавна май вырӑсла тата тутарла перкелешме хӑнӑхрӗ. Тетӗшӗсем авланчӗҫ, ку вара пӗр-пӗр чиперкке тыткӑнне ҫаплах ҫакланаймасть-ха.

Ашшӗ парнеленӗ Ҫилҫунат урхамаха йӗкӗт ҫав тери юратать. Кайӑка ҫӳренӗрен унпа ӑҫта-ӑҫта ҫитсе курмарӗ-ши? Аслӑ Пӑла хӗррине, темиҫе ҫул каялла ашшӗ чӑмӑртанӑ ял вырӑнне, илсе тухрӗ ӑна пӗррехинче кайӑкҫӑ ҫулӗ. Ашшӗ ҫемйи кунта пурӑннӑ чухне Тӑлпай катӑк йӗмпе чупакан ачаччӗ. Ҫунтарса янӑ ял тӗлӗнче халӗ кӗлпе кӑмрӑк, вутпуҫҫисем кӑна тӑрса юлнӑ. Нимрен те, никамран та шикленме пӗлмен Тӑлпайӑн ҫӳҫӗ вирелле тӑрса кайрӗ. Вӑл Пӳлӗхе пуҫҫапрӗ те ҫырма тӑрӑх анаталла анчӗ, пысӑк мар хӳшӗ туса лартрӗ.

Тулӑх шывлӑ ҫырма питӗ килӗшрӗ ӑна. Шӑрӑх кун шывра хӗпӗртесех ишсе ҫӳрерӗ. Шывӗ тарӑн, пӳ ярса тӗпне ҫитеймерӗ. Ҫилҫунатне те унта шыва кӗртрӗ. Янавар пуҫне каҫӑртрӗ те ҫырма урлӑ калла-малла савӑнсах ишсе каҫрӗ. Тата кунта, Аслӑ Пӑла тӑрӑхӗнче, тӑпра мӗне тӑрать! Хуп-хура, пулӑхлӑ. Тыр-пул туса илме питӗ шеп.

Ҫырма ҫыранӗсем вырӑн-вырӑнӑн вӑрманлӑ: юманлӑх та, ҫирӗклӗх те, ӑвӑслӑх та тӗл пулать. Тӑлпайӑн тӑпӑл-тӑпӑл хӳшши ҫырма кукӑр тунӑ ҫӗрте, ӑвӑслӑхра. Кунта вӑл тир типӗтмелли каштасем майлаштарчӗ.

Тӗттӗм пуласпа тискер кайӑксем Аслӑ Пӑла хӗррине ушкӑнӑн-ушкӑнӑн шыв ӗҫме ҫӳреҫҫӗ. Кашни ушкӑнӑн хӑй хывнӑ сукмак пур. Кунта вӗсем пӗр-пӗрне тивмеҫҫӗ, тӗкӗнмеҫҫӗ. Кашкӑрӑн та мулкача курсан сӗлеки юхмасть. Шыв ӗҫме килнӗ вӑхӑтра тискер кайӑксене Тӑлпай тытмасть.

Пӗр каҫхине Тӑлпай тӗлӗрсе кӑна кайнӑччӗ, урхамахӗ кӗ-

çеннӗрен кусне хӑвӑрт уçрӗ те сӑнӑ тытса хӳшӗрен сиксе тухрӗ. Ак тамаша: лаша патӗнче темле йӗкӗт тӑра парать. Çилçунат малти урисемпе çӗре кукалет, ют çынна хӑй çывӑхне ямасть. Халиччен курман-пӗлмен йӗкӗт пиçиххи çумӗнчи хӗçне йӑпӑртах айккинелле пӑрахрӗ, тӳпеттейне хывса хул хушшине хӗстерчӗ.

— Бит якши синӗккӗ алаша! Чуппипе те аптрамасть пулмалла. Сутмастӑн-и? Туяннӑ пулӑттӑм, — йӑл кулчӗ йӗкӗт.

— Кайӑкçӑ эпӗ. Тӑлпай ятлӑ. Урхамах хама кирлӗ. Сутмастӑп, — хуравларӗ Тӑлпай.

— Мана эттей Камиль ят панӑ. Шӑнкӑртамри Абдрахман бай ывӑлӗ пулатӑп...

Çапла паллашрӗç пӗр-пӗринпе икӗ çамрӑк — чӑвашпа мишер. Пӗр-пӗрин чӗлхине пӗлсех çитерейменсен те хӑшӗ мӗн каланине чиперех ӑнланчӗç. Тепӗр кун çав вӑхӑталлах хӳшӗ патне Камиль татах килчӗ.

— Безнен аулта иртегэ — ыран — сабантуй була. Урхамахпа пымастӑн-и? — сӗнчӗ Тӑлпая йӗкӗт. Унтан çапла пӗлтерчӗ: туслӑ чӑвашсем унта кашни çулах хутшӑнаççӗ.

Тӑлпай вӑрах иккӗленсе тӑмарӗ — килӗшрӗ. Тепӗр кун ӑна Камиль сар укаллӑ тӳпеттей пачӗ, ярӑм-ярӑмлӑ халат тӑхӑнтартрӗ, пилӗкӗнчен ярапаллӑ сарлака пир пиçиххи çыхтарчӗ. Хайхи чӑваш каснӑ лартнӑ мишер йӗкӗчӗ пулса тӑчӗ.

Капӑр тум тӑхӑннӑ çынсем — çамрӑксем те, ваттисем те — ял çумӗнчи çеремлӗ вырӑна пуçтарӑнчӗç. Мишерсен аслӑ уявӗ — сабантуй — ир-ирех кӗрлеме пуçларӗ. Каштасем çине тӗрленӗ сӗлкӗсем çакрӗç. Вӑйçӑсем купӑспа мишер кӗввисене шӑрантараççӗ. Параппансем тӳнлетеççӗ, йӗс турилккесем чӑнкӑртатаççӗ.

Мӗнле кӑна вӑй виçмеççӗ-ши сабантуйра: çуран чупаççӗ, сиксе, кӗрешсе, ухӑран персе ӑмӑртаççӗ. Çапах ут ярасси тӗп вырӑнта! Кам ӑмсанса пӑхмасӑр чӑтайӗ çӑмарта пек чӑмӑр урхамахсем çине! Мухтасса та юлан утçӑна мар, ун утне мухтаççӗ.

Пӗлтӗр сабантуйра çинçе уралла Газават ӑйӑрӗпе Камиль мала тухнӑччӗ. Кӑçал вара çак телей Газавата пӳрмерӗ: Çилçунат ӑна каярах хӑварчӗ, пӗрремӗш вырӑна йышӑнчӗ. Мишер хӗрӗсем тӗртнӗ кавире тивӗçлӗ пулчӗ чӑваш йӗкӗчӗ.

Сабантуйра Тăлпая хăйпе кĕрешсе пăхма сĕнчĕ Камиль.

— Пиçиххисенчен е пилĕкрен тытса? — ыйтрĕ Тăлпай.

Пилĕкрен пилĕк тытса кĕрешме килĕшрĕç. Ай-вай вăйлă иккен мишер йĕкĕчĕ! Айккинелле — пĕр енне те, тепĕр енне те — пăркалама хăтланчĕ ăна Тăлпай. Ăçта унта! Тапратаймастăн та, хускатаймастăн та. Эппин, урăхла хĕсмелле. Тăлпай йĕкĕте çӳле çĕклесе илчĕ, хăй тавра вăр та вăр çаврăнчĕ, унтан пуçĕ урлă çĕрелле ыватрĕ... Тăлпай сабантуй паттăрĕ пулса тăчĕ, ăна така парса чысларĕç. Сабантуй халăхĕ пăхаттире çĕклесе илсе çӳлелле ыватаканччĕ. Тăлпай çĕнтерессе кĕтмен мишерсем ăна çӳлелле ыватмарĕç, çапах алă çупса саламларĕç.

Кăçалхи сабантуйра Камилĕн Газавачĕ малти вырăна йышăнаймарĕ, хăй те паттăра тухаймарĕ. Çакăншăн çĕнĕ тусне ӳпкелеме шутламарĕ вăл, хисепе хурса хăй патне хăнана чĕнчĕ. Бай ывăлĕ чăваш кунака тăванла чысларĕ. Дильбара йăмăкĕ хăй пӳлĕмĕн тĕнĕ евĕр шăтăкĕнчен пуçне кăна кăтартрĕ, сабантуйри ăнăçу ячĕпе саламларĕ. Мишер хĕрне ют арçынна пĕтĕм пĕвĕпе курăнма шариат хушмасть иккен. Ун чухне Тăлпая ку хĕрĕн йăрăс кĕлеткине курма май килмерĕ, анчах унăн кĕмĕл шăнкăравăнни евĕр янăравлă çепĕç сассине илтрĕ, пысăк хăмăр куçĕ çăлтăрла çуннине курчĕ, хăйĕн çине кăсăкланса пăхнине асăрхарĕ. Сасси те, куçĕн çути те чуна çу сĕреççĕ.

Пуян çыннăн сĕтелĕ çинче темле çимĕç те пур: çамрăк тиха ашĕ, бавурсак (йăвача), çăмартапа тунă кăрт, кăмăс... Хĕр тарçă тин уçласа ӳкернĕ услам çу вашмăк тăм чашăкпа килсе лартрĕ.

— Кырт ашши, майĕбелен çи... — çине-çинех сĕнет ăна Камиль.

«Халĕ те майĕпен çиетĕп-çке. Кулмасть-и вăл манран», — тĕсесе пăхать иптешĕ çине Тăлпай. Унтан мишер сăмахĕ «май» услам çăва пĕлтернине аса илет те кулса ярать.

— Тăлпайăн тăнсăр пуçне темле шухăш та пырса кĕрет, — ăнлантарса пачĕ вăл хăй мĕн пирки кулнине. Унтан пĕр шӳтлемесĕр çапла пĕлтерчĕ: — Ман сăмахсенче ултавпа суя валли вырăн çук, лайăх çынна, унăн йăмăкне хисеплесе тав тума эпĕ

тивĕçлех. Тупата! Кавире те, такана та атте ялне Ункă хĕррине çити турттарса каяймастăп. Такана — Камиле, кавире — хăех тĕрлемен-ши — Дильбарăна парнелеме ирĕк парăрччĕ.

Хĕре хистесех сĕтел хушшине чĕнчĕç. Йăмăкĕ тетĕшĕ çине, тетĕшĕ йăмăкĕ çине пăхса илчĕ. Чăваш йĕкĕчĕн ырă кăмăлĕ нихăшне те тĕлĕнтермерĕ. Парнесене иккĕшĕ те тав туса йышăнчĕç.

Сабантуй хыççăн тепĕр кун вăрманти хӳшше тетĕшĕпе йăмăкĕ — иккĕн икĕ утпа — килчĕç. Паллах, сăлтавсăр мар: вĕсем паттăр чăваш умĕнче парăмра юласшăн мар иккен. Камиль ăна çиелтен тăхăнмалли тумтир — вĕр çĕнĕ бешмет — парнелерĕ. Дильбара вара именсе те хĕрелсе кайса асăнмалăх тĕрĕллĕ кĕпе пачĕ. Çакă Тăлпая чун кĕртнĕ пек те вăй хушнă пек пулчĕ. Чăваш йĕкĕчĕ хăнасене ăшаланă ăсанпа, сим пылпа сăйларĕ. Хăй мишер хĕрĕ çине куç илмесĕр пăхрĕ. Питĕ килĕшет ăна çап-çаврака питлĕ, яштака пӳллĕ çамрăк хĕр. Çакна тетĕшĕ те асăрхарĕ ĕнтĕ.

Ытла та кăмăллă çын Камиль. Тавлашма, хирĕçме юратмасть. «Шылай кирэк, жул якши!» — çапла каласа хăвăрт килĕшет хăйпе калаçаканпа. «Çапла кирлĕ, çакă лайăх!» тени пулать ĕнтĕ. Анчах хальхинче Камиль ку сăмахсене каламарĕ, чăваша кулараххăн çапла асăрхаттарчĕ:

— Йăмăк çине куç ан хыв, тусăм. Урăх тĕн тытакана Коран качча тухма чарать... — Унтан çилленсе мар, тарăхса мар, лăпкăн йăмăкĕ еннелле çаврăнчĕ: — Эсĕ те кăтра пĕлĕтсем тăррине хăпарса ан кай.

Тетĕшне кӳренесси Дильбара асĕнче те çук. Вăл сăмси çине усăнса аннă çӳç пĕрчисене сывлăшпа вĕрсе сирчĕ те именчĕклĕн кулса ячĕ. Тул çутăлнă вăхăтра сар кайăксем юрланине итлеме юрататъ Дильбара. Çавăнпах-ши «сандукач» сăмаха питĕ кăмăллать. Тăлпая вара хĕр хăйĕн сандукачĕ — сар кайăкĕ — вырăнне хума пуçларĕ.

— Аллах бирсен! Анчах авланма шутламан йĕкĕте епле качча кайăн-ха! Урăх халăх хĕрне качча илесси — çӳллĕ ту çине хăпарасси... — пытармарĕ хĕр.

— Эсир чăваш кĕввисене итлеме кăмăл тумăр-и? — ыйтрĕ парнесемшĕн тата хĕр сăмахĕсемшĕн хĕпĕртенĕ Тăлпай. Леш-



сем килĕшессе кĕтмесĕрех каштаран çакăнса тăракан арчаран кĕсле кăларчĕ те çепĕç кĕвĕсем калама тытăнчĕ. Эх, мĕн тери пултаруллă кĕслеçĕ иккен чăваш йĕкĕчĕ! Ун çеммисене тăнланă май пуçра тем тĕрлĕ çунатлă шухăшсем çуралаççĕ.

Кĕвĕ татăлчĕ. Тăлпай хĕлĕхлĕ мыскарана арчине хурасшăнччĕ ĕнтĕ, Дильбара итлесе тăранайман иккен.

— Аллах бирсен! Тата кăштах кала-ха... — йĕкĕте куçĕнчен пăхрĕ хĕр. Чиперкке ыйтнине епле тивĕçтермĕн-ха!

— Уксах Тимĕр Пăлхара çунтарни çинчен юрă итлĕр эппин... — сĕнчĕ йĕкĕт. Кĕслепе пĕрле хăй те янкăс сасăпа юрласа ячĕ.

Ку юрă тăсăмлă та хурлăхлă. Пăлхарсемпе чăвашсен (суварсен) паттăрлăхĕ çинчен ăнланмалла сăмахсемпе чĕрене вырнаçакан çемĕре каласа парать. Пăлхар патшин виçĕ хĕрĕ тăшман аллине çакланассинчен хăтăлма, шурă акăшсем пулса çичĕ тинĕс леш енне вĕçсе кайни Дильбарăна тарăн шухăша ячĕ. Тĕрĕссине тĕрĕсех калар, ку юрă хĕре уйрăмах килĕшрĕ, патша хĕрĕсем вырăнĕнче вăл хăй те çапла тунă пулĕччĕ.

Тăлпайăн Шăнкăртамра мишер туссем тупăнчĕç. Вăл ытти халăх çыннисенчен пĕртте ютшăнмасть. Тăмпаелĕнче унăн вырăс вăртах пур, Шăмăршăра мăкшă тус пурăнать.

...Унтанпа вăхăт чылаях иртнĕ ĕнтĕ, анчах Дильбара сăнĕ Тăлпай куçĕ умĕнчен каймасть. Ашшĕ хистет пулин те йĕкĕт çаплах авланмасть.

Кĕркунне çитет. Тыр-пула тирпейлĕн пуçтарса кĕртнĕ. Выльăхсем самăрăлнă, пичке пек çӳреççĕ. Паттăрăн тăхăр ывăл çуралнăччĕ. Шел, пĕрне Çӳлти Турă вăхăтсăр хăй патне илчĕ. Саккăрăшĕ: Пайтуш, Пипар, Чатук, Чупай, Шакшан, Юлаш, Эткен тата Тăлпай чиперех. Хĕрĕ Энюш килсе ернĕ Мамли чăваша качча тухрĕ. Çĕнĕ çемье хальлĕхе хуньăшĕ патĕнчех пурăнать-ха.

Йăлана кĕнĕ йĕркепе Паттăр йӳçĕ ĕçсе тутлă калаçма шут тытать, пысăк çемйине кĕрхи тулăх кĕрекене лартать. Кĕçех Турра кĕлтума пĕтĕм çемье ура çине тăрать. Çемье пуçĕ ик аллине кăкăрĕ тĕлне тытса кĕлĕ самахĕсене калать:

— Эй, Турă, çырлах, Мăн Турă, çырлах, Мăн Турă Амăшĕ, çырлах! Пӳлĕхçĕ, çырлах, Пӳлĕхçĕ Амăшĕ, çырлах, Хĕрт-сурт,

çырлах, Хĕрт-сурт Амăшĕ, çырлах! Çĕнĕ тырăпа сире асăнатпăр, ятарласа пичке пуçлатпăр. Ывăлăмсене телей пӳрме тархаслатăп. Вĕсене çирĕп сывлăх парсамăр, ашшĕ-амăшĕнчен уйрăммăн чипер пурăнмалла тусамăр. Эй, ырă турăсем, пирĕн пĕртен-пĕр хĕрĕмĕре çуртлă-йĕрлĕ тăвăр! Пире тырпулсăр ан хăварăр, пурăнмалăх мул парăр. Хĕвел амăшĕ, хĕвелпе пĕçертсе ан яр, çил амăшĕ, çилпе типĕтсе ан яр, Пихампар, пирĕн хута кĕр. Акнă тырра-пулла пĕр пĕрчĕ акса пин пĕрчĕ илме парăр. Çичĕ тĕслĕ тырра-пулла çичĕ пӳлме тытма парăр. Авăртсан çăнăх-кĕрпе перекетне парăр. Виç пайĕнчен пĕр пайне ĕçмешкĕн-çимешкĕн, çын валли уйăрмашкăн тивĕçтерĕр. Панă çĕртен ан палăртăр, илнĕ çĕртен ан иксĕлтĕр.

Кĕлĕ хыççăн пурте Турра пуççапаççĕ те сĕтел хушшине лараççĕ, савăш курки ĕçеççĕ, шăкăл-шăкăл пуплесе лараççĕ. Çемье пуçĕ каллех ура çине тăрать:

— Ывăлăмсем, кинĕмсем, пĕр çемьере килĕштерсе пурăннăшăн пурсăра та тавтапуç. Пурте пĕрле кăткă йăвинчи пек йăшăлтатрăмăр. Тăвăр мар-и сире? Хĕсĕк мар-и? Çитет капла пурăнса. Кашнин хăйĕн йăви пултăр, кашниех çĕнĕ ял никĕслетĕр. Кĕрĕвĕм Мамли, сана та çапла тума пиллетĕп. Кĕçĕн ывăл ашшĕ килĕнчех юлтăр, часах тепĕр кин кĕртĕпĕр.

Амăшĕ чун парса, ӳстерсе çын тунă ывăлĕсемпе хĕрĕ çине ăшшăн-ăшшăн пăхать. Çывăх уйрăлу ăна хурлантарать, çапах сасăпа нимĕн те каламасть.

— Ĕçрĕмĕр те çирĕмĕр, аттемĕр сывă çӳретĕр, анне пире яланхиллех савтăр, сăра пички тулли тăтăр! — пуç тайса тав турĕç Паттăра ывăлĕсемпе кинĕсем, хĕрĕпе кĕрӳшĕ. Пĕлеççĕ: ватăсене сума сумасан хăйсем те сум кураймĕç.

Çав кĕркуннех çичĕ ывăлĕ çичĕ тĕлте çичĕ ял никĕслет. Кĕрӳшĕ те Энюшпа пĕрле çĕнĕ ял — Мамликасси — никĕсне хывать. Паттăрăн ывăлĕсемпе кĕрӳшĕ Ункăпа Çавал шывĕсем тăрăх вырнаçаççĕ. Маларах кайса калас тăк вĕсен ывăлĕсемпе мăнукĕсенчен пурĕ çирĕм сакăр ял пуçланса кайнă. Пурин çинчен те тĕпĕ-йĕрĕпе каласа пама мехел çитес çук, Тăлпай пирки вара каламах тивет.

Çемье çавăрса ашшĕ-амăшне савăнтарайман çав çулланнă йĕкĕт. Каçăр пуçлă Çилçунатне утланать те хăй куç хывнă

Аслă Пăла хĕррине çул тытать. Чаплă урхамаха çĕр алă çухрăм та ним те мар. Çухрăм вăл ирĕксĕртен кайнă чухне вăрăм, чун туртнă чухне — кĕске.

Аслă Пăла хĕрринчи хӳшĕ епле хăварнă çаплах ларать темелле, анчах унта кĕрсе тухакан пулнă иккен. Сĕтел çине чечек çыххи хăварнă. Чечекĕсем шаннă, пурпĕр вăрман уçланкин ĕлкенлĕхĕпе тасалăхне çухатман. Кам пуçтарнă-ши вĕсене? Кам килме пултарнă хуçасăр хӳшше? Чечексене кĕрен хăюпа кăшăл туса çыхнă. Ăçта курнăччĕ-ха Тăлпай кунашкаллине? Эх, тăмсай! Каснă лартнă тăмсай! Тăнлавне шĕвĕр пӳрнипе пăраласа илчĕ йĕкĕт. Чĕкеç çунатти пек хура çивĕтне Дильбара çапла çыхса çӳрет вĕт.

Тăлпай тӳрех Шăнкăртама çул тытрĕ. Паллах, хĕрпе курнăçма мар, Камиле çĕр пӳрт тумашкăн чĕнме. Хĕлле хӳшĕре пурăнаймăн. Чĕнессе Камиле çеç чĕннĕччĕ, тетĕшĕнчен йăмăкĕ те юлмарĕ. Пĕлме çук: тетĕшĕнчен-ши е ытарайми чăваш йĕкĕтĕнчен?

— Юмахра аса илнĕ кăвакал сăмси çинчи çурт пекех пулчĕ ку! — савăккăн кулса ячĕ Дильбара çĕр пӳрте туса çитерсен.

Кирек мĕн калăр та, Дильбара ытти хĕрсем пек мар, ăшри шухăшĕсене пытармасть. Кăмăллă сăнĕ асамлă вăйпа хăй патнелле туртать.

Пĕрре кĕрхи сивĕре шăнчĕ Тăлпай, ӳсĕре пуçларĕ, халсăрланса тăрайми пулчĕ, вутла çунма тытăнчĕ. Çав вăхăтра ун патне Камильпе Дильбара килчĕç. Хĕр пĕр тăхтамасăр çĕнĕ çĕр пӳртре чул кăмака хутса ячĕ, чирлĕ çынна пĕтнĕк чейĕ вĕретсе ĕçтерчĕ. Ун çумĕнчен пĕр утăм та хăпмарĕ.

— Паян кунтах юлатăп. Чирлĕ çынна пăхакан кирлĕ, — çирĕппĕн каларĕ хĕр тетĕшне каç пуласпа. — Кур: çамкинчен пăчăр-пăчăр тар юхать...

— Асту: Коран урăх тĕнлĕ çынпа мăшăрланма чарать... — тепĕр хут аса илтерчĕ йăмăкне Камиль унччен каланă сăмахах, анчах çирĕппĕн мар, хăй те иккĕленнĕ пек, тăнăçлăн.

— Мăсăльмана вăл та юрамасть, кăна та чараççĕ! — тĕлĕненçи пулать Дильбара. — Тункăс (сысна) ашĕ çимелле мар. Асамçă пулма юрамасть. Юрани мĕн пур-ши? Урăх тĕн тытаканпа çемье çавăрма хушмаççĕ. Пурнăç-и ку? Шариат пире

хальлĕхе сывлама кăна чармасть... — Хĕр çӳллĕ çамкине картлантарать, шухăша путнă пек пулать, унтан маларах калани çумне çакна хушать: — Эй, аплах мар пуль, унăн хăш-пĕр чарăвĕсем чăнах та вырăнлă. Сăмахран, çын ĕçке ярăннине, аскăнла хăтланнине халăх та тĕрĕсех сивлет, анчах юрату ыйтăвĕпе ирĕклĕх паманнине епле ырлăн-ха? Эй, Аллах, пулсам пирĕнпех! Пулăшсам май пур таран!

Тăлпай кăкăрĕ çумне çыпăçма хатĕр Дильбарăн кăмăлĕ вылянчăк мар. Вăл çăлтăр пек çутă куçне чеен хĕссе илет, вăтана-вăтанах çапла калать:

— Кайăкçă йĕкĕтшĕн тĕнче тикĕс. Хăйне мишер хĕрĕ кăмăлланине ăçтан асăрхатăр-ха вăл? Шăна кантăка çапса ватаймасть, авланма шутламан йĕкĕте хĕр качча тухаймастех!

— Эпĕ Мăхамета та, Христоса та ĕненместĕп. Çавăнпа гяур — урăх тĕн тытакан — тесе ан шутлăр. Дильбарсăр пуçне мана урăх нимĕнле Турă та кирлĕ мар, — вăйсăррăн сăмах хушрĕ чирлĕ Тăлпай.

— Аллахăм, Тăлпая ура çине тăратма карапат (хăват) парсам! — тархаслать хĕр чун-чĕререн.

Дильбара сыв мар йĕкĕт патĕнче чĕрне вĕççĕн çӳрет, ăна сыватассишĕн чунне парать. «Сыватсам ман сандукача! Чипер çӳрекен тусамччĕ!» — пĕрмаях кĕлтăвать вăл пурне те пултаракан Аллаха.

Вăй илсе ура çине тăрсан Тăлпай хăйне тăванла пăхса сипленĕшĕн хĕре ик аллинчен тытса ăшшăн-ăшшăн тав турĕ.

— Тавтапуçах! Рехмет! — терĕ вăл. Унтан хĕре хăй çумне чăмăртарĕ, ун çине темле шăтарасла пăхса илчĕ те питĕнчен, тутинчен темиçе хут чуптурĕ. — Сăмахăмсенче ултавпа суяна вырăн çук, чунăмра вара юрату çунать! Ĕненсем! — тупа тунă пекех каларĕ Тăлпай.

Çак сăмахсене илтсен хĕрĕн пĕтĕм ӳт-пĕвĕ çăмăлланса кайрĕ. Таçта, чĕри тĕпĕнче, ачаранах пĕлекен хаваслă юрă çуралчĕ:

Бас, кызым Дильбара,
Син басмиче мин басам...
Ташла, Дильбара хĕрĕм,
Ташламасан — эп ташлап...

Тăлпай сывалсан Дильбара Шăнкăртама таврăнмарĕ. Ашшĕ хĕрне чăваша туй туса качча пама килĕшмерĕ пулин те, икĕ çамрăка пĕр-пĕринчен уйăрма шутламарĕ. Камиль пек якши иптеш, Дильбара пек ăшă чунлă чиперкке пуртан çут тĕнче тата илемлĕн туйăнчĕ Тăлпая. Ураса тухсан (типĕ тытасси иртсен) хĕрпе йĕкĕт мăшăрланчĕç.

Тепĕр эрнерен Ункă тăрăхĕнчи Патăрьелĕнчен Аслă Пăла хĕррине харăсах çичĕ çемье куçса килчĕ, Тăлпая шыраса тупрĕ. Вĕсем Ункăпа Çавал тăрăхĕнчи хыпарсене пĕлтерчĕç. Салтак хан каллех Паттăрпа унăн ывăлĕсен ялĕсем çине пырса тапăннă: ял-ял тăрăх сехре хăпартса çӳренĕ, пысăк ясак тӳлеттернĕ, чылай çĕре хăй аллине туртса илнĕ, Паттăр ялне Салтăкьял (Салтыганово) теме хушнă.

— Халăх ылханĕ Салтак ханăн пуçне вăрăнтăрах! — тарăхсах усал сунчĕ ăна Тăлпай.

Çĕнĕрен килнĕ йыш çĕр пӳртсем чавса вырнаçсанах вăрман кăклама пикенчĕ, çĕре сухаласа ыраш акрĕ. Çынсем пĕр вырăнта тĕпленсе пурăнма мĕн кирлине пурне те турĕç. Çапла яланлăхах никĕсленчĕ Паттăрăн тепĕр ялĕ — Аслă Пăла хĕрринчи Патăрьел. Тăлпайпа Дильбара пĕтĕм халăхпа пĕрле ĕçлерĕç. Мишер хĕрĕ халь чăваш хĕрарăмĕ пек тумланать. Ятне те урăхлатнă: Тилпике тесе чĕнеççĕ.

Аслă Пăла хĕрринчи Патăрьелпе Шăнкăртам пурнăçĕ тӳремлĕхри шыв юххи пек тикĕс пымарĕ çав. Кăнтăр енчен нухайсем утсемпе кĕперленсе килчĕç те икĕ ялне те çаратрĕç, вут тĕртсе хăварчĕç.

— Капла пурăнма çук. Мĕн те пулин тумаллах! — терĕ Камиль иптешне.

— Тупата, çитет пире чăх чĕпписем пулса пурăнма! Ырă ят авалтан ютшăнать хăравçăран. Чăвашсенчен пĕчĕкçĕ тĕкĕрт йĕркелетĕп. Епле, мишерсем килĕшмĕç-и унта кĕме? — ыйтрĕ Тăлпай пултăрĕнчен — арăмĕн пиччĕшĕнчен.

— Аллах бирсен! Алă усса пуçтараймăн пуса! — хутшăнчĕ калаçăва Тилпике.

Хурăнташлă çынсем пĕрне-пĕри пăрахмаççĕ, кирлĕ пулсанах усă кӳме тăрăшаççĕ. Камиль тĕкĕрте кĕме хапăл тусах килĕшрĕ.

— Шылай кирек... Жул якши! — пулчӗ унӑн яланхи сӑмахӗ.

Теветкел чӑвашсемпе мишерсем пысӑк мар тӗкӗрте чӑмӑртанчӗҫ, ирӗклӗхшӗн паттӑррӑн кӗрешме Пӳлӗх, Аллах ячӗпе тупа турӗҫ. Ку тӗкӗрте мӑкшӑ-ирҫесем те пыра-пыра хушӑнчӗҫ.

Уйри тыр-пула пухса кӗртсен, кӗр кунӗсем ҫитсен, Арск карманӗнчен темиҫе теҫетке нукерпа эмир ӗрӗхтерсе килчӗҫ, кунти ялсене ҫаратма тытӑнчӗҫ. Тилпике йӑмӑкне Джамильӑна хан гаремне илсе кайма кӑмӑл тунӑ эмир. Ку мӑшкӑла епле тӳсӗн-ха?! Кӗтне тӑрӑхне кайӑка кайнӑ Тӑлпайпа Камиль усал хыпара пӗлсен хыпалансах Патӑрьелне таврӑнчӗҫ, вӑрт-варт тӗкӗртпе Аслӑ Таяпа патӗнче эмира хӑваласа ҫитрӗҫ, нукерсене чӑл-пар салатрӗҫ, куҫҫульпе йӗрекен Джамильӑна каялла илсе таврӑнчӗҫ.

Шел, ку пӑтӑрмах ҫакӑнпа пӗтмерӗ. Тепӗр эрнеренех эмир Шӑнкӑртама самаях пысӑк ҫар ячӗ. Шӑши упана епле хирӗҫ тӑрӗ! Тӑлпайпа Камиль, Тилпикепе Джамиля Пӑла урлӑ ҫурҫӗр еннелле пушӑ уя кайса пытанчӗҫ. Эмир нукерӗсем Абдрахман бай ҫуртне тӗпӗ-йӗрӗпех ҫунтарса ячӗҫ, байне хӑйне тытса кайса Арскри касамата хупрӗҫ. Икӗ хӗрӗ ашшӗшӗн мӗн чухлӗ куҫҫуль тӑкмарӗҫ пулӗ. Камиль йӗрессе йӗмерӗ, анчах чӗмсӗр ҫӳрерӗ.

Вырӑс похочӗ ҫинчен хыпар Аслӑ Пӑла хӗррине хӑйсенчен малтан ҫитрӗ. Ҫар рачӗсем Улатӑр енчен килчӗҫ.

— Сирӗн ялта кам вырӑсла пӗлет? — ыйтрӗ Патӑрьелӗнче вырӑс вайпучӗ.

Ӑна тӳрех Тӑлпай патне ертсе кайрӗҫ.

— Эпир ҫар валли апат-ҫимӗҫ тата фураж туянасшӑн. Пулӑшма килӗшмӗр-ши? — пуҫ тайрӗ вайпут.

Тӗрлӗ халӑхӑн ҫар ҫыннисене Тӑлпай халиччен пайтах курнӑ: ыйтмаҫҫӗ — тӑпӑлтараҫҫӗ, туянмаҫҫӗ — ҫаратаҫҫӗ. Кусем вӑн туянасшӑн. Тӑлпай вырӑс полкне пулӑшма хапӑл тусах килӗшрӗ. Патӑрьелпе таврари ялсенче салтаксем валли апат-ҫимӗҫ те, фураж та пайтах хатӗрлеме май килчӗ. Вир кӗрпи, вӑкӑрпа така ашӗ нумай туянчӗ вайпут. Пӑрипе урпана та тиркемерӗ. Нумай ял ҫынни вырӑс ҫарне мӗн кирлине пӗр тӳлевсӗр пачӗ.

Тăлпай хăйĕн тĕкĕрçисене çапла каларĕ:

— Ирçе пире туртăнкă, мишер çывăх хурăнташ, вырăс аслă тете вырăнĕнче пултăр! Халĕ пурте пĕрле хана хирĕç çапăçма каяр!

Тупата, тĕрĕссине калать Паттăр ывăлĕ — Тăлпай утаман: хан тата унăн йыттисем ирçепе чăваша пĕрехмай хур кăтартаççĕ, вырăс ялĕсене вăрă-хурахла тустараççĕ, мишерсене те тĕрлĕ енчен хĕстереççĕ, çапăçса юн юхтарма хӳтереççĕ. Тĕкĕрçисем умĕнчи сăмахне утаман çапла вĕçлет:

— Хĕсĕрленине, пусмăрланине çитет чăтса, ăшăмра вут çунать! Тупата туршăн, тавăрар Хусана!

Ку вăл 1552 çулта пулнă. Патăрьел тĕкĕрчĕ вырăс çарĕпе пĕрле кайрĕ. Тăлпай тĕкĕртне чăвашсем пĕрмай хутшăнаççĕ. Тĕкĕртрен самаях пысăк полк пулса тăрать. Вырăс патшин çарĕсене чăвашсемпе мишерсем çул кăтартаççĕ, кĕперсем хываççĕ, пур енĕпе те пулăшма тăрăшаççĕ. Кайăк каçман çырмаран та каçса каять çар, упа тухман вăрмантан та чиперех тухать.

Походра полк умĕнче — Тăлпайпа Камиль. Тĕкĕрçĕсем хăйсен юратнă юррине янăратаççĕ:

Уртса янă йăмра кăтрине
Çумĕнчи Пăла шывĕ çине.
Тăван Патăрьел — паттăр ял,
Ытармалла мар лайăх ял.

Сарă хĕр улмуççи айĕнче
Тĕрĕсем ӳкерет пир çине.
Йĕкĕчĕ тимĕрçĕ лаççинче
Утă çулма туптать çавине.

Шуса тухрĕç таçтан пĕлĕтсем,
Аслатиллĕ синкер çывхарать.
Алхасаççĕ тискер хурахсем,
Вĕсене иртĕхме чармаллах.

Ута эс васкасах йĕнерле,
Тăван ялăн чысне хӳтĕле!
Унăн чысĕ — сăваплă тупра,
Çамрăкран ăна эсĕ упра.

Пăла шывĕ юхать явăнса,
Вăр та вăр çавăрать кăпăкне.

Ăсатать Патăрьел кулянса
Инçетри похода йĕкĕтне.

Кам та кам çунмалла — вăл путмасть,
Кам та кам путмалла — вăл çунмасть.
Паттăр пулччăр патвар йĕкĕтсем,
Хастар пулччăр ялти пикесем.

Уртса янă пилеш кăтрине
Çумĕнчи Пăла шывĕ çине.
Тăван Патăрьел — паттăр ял,
Çут тĕнче пекех хаклă ял.

Икĕ эрнерен вырăс полкĕ Тăлпайпа Камиль тĕкĕрчĕпе пĕрле Арск карманне хупăрласа илчĕ.

— Пӳлĕх, пулăшсам! — пуççапрĕ Тăлпай çапăçу умĕн.

— Аллах акбар! Аллах аслă! Хăвăн чуруна Камиле, Шăнкăртамри Абдрахман ывăлне, тĕрĕс тĕне тытакан çынна, çапăçура упра! — вĕрин кĕлтурĕ Камиль.

Тусĕпе юнашар тăрса карманти касамат хапхине çĕмĕрсе кĕрсен Камиль хăйĕн ашшĕне шыраса тупрĕ-тупрех. Абдрахман бай сăн-пичĕ паллами улшăннă: кĕлетки çав тери типшĕмленнĕ, шăмми кăна тăрса юлнă. Тумтирĕ шалпар михĕ пек усăнса тăрать.

— Мухтав Аллаха! Курасса сунманччĕ, эттей, сана! — ыталаса илчĕ ашшĕне Камиль.

— Ах, ывăлăм, чĕр вилĕмрен çăлса хăвартăн эс мана! — хаш сывласа ячĕ ашшĕ. Ашшĕн те, ывăлĕн те куçĕсем шывланчĕç. Тăлпайпа Камиль — кĕрӳшĕпе ывăлĕ — вată бая темиçе тĕкĕрçĕпе пĕрле килне — Шăнкăртама — ăсатса ячĕç. Аллах упраса усратăрах ăна!

Арска илсен вайпут çарне Хусан патне илсе кайрĕ, тĕп вăйсемпе пĕрлешрĕ. Хан нукерĕсем вырăссене крепость стени çине ниепле те хăпарма памаççĕ. Иван ĕмпӳ кармана тар тултарнă пичкесемпе сирпĕтсе аркатма, вĕсене кирлĕ çĕре лартмашкăн çĕр айĕнчен çул чавма шут тытрĕ. Çĕр айĕнчен мĕн таран чавас пирки ыйту хускалсан ăçта çити чавмаллине виçме Тăлпай килĕшрĕ.

— Аслă патшамăр, мана хушăр! — сĕнчĕ Паттăр ывăлĕ.

Йăван ĕмпӳ чăваш полкĕн утаманĕ çинчен ырă сăмахсем пĕрре кăна мар илтнĕ, çывăхран пуçласа курать ăна.

— Мĕнле майпа виçесшĕн?

— Мĕнлине хăвăрах курăр. Салтаксем пеме пачах чарăнчăр.

Хусана хӳтĕлекенсем Булак юхан шыв енчен крепость патнелле çын килнине кураççĕ. Вăл хĕç-пăшалсăр. Крепоçе хӳтĕлекенсем ăна пемерĕç. Леш çынни кĕсле калать. Уксах Тимĕр Пăлхара çунтарса яни çинчен хурлăхлă юрă юрлать. Сасси çăл шывĕ пек таса та уçă, янăравлă. Юрă сăмахĕсем уçăмлă, кĕвви кăмăла хускатать. Атăлçи Пăлхар хулин чапĕ пĕтĕм тĕнчипех сарăлнă. Тамерлан çарĕ Пăлхар çине çеçен хир çилĕ пек хăвăрт килсе тапăнать, ăна çунтарса яма, тĕппипех пĕтерме шут тытать.

Сыхлар хулана!<br>
Сыхлар хулана!<br>
Тăван хулана — Пăлхара!<br>
Тăшман, ан ăмсан!<br>
Тăшман, ан ăмсан!<br>
Тăван хулана памастпăр сана!

Çапла каласа ыткăнаççĕ çичĕ ют çине пăлхарсемпе чăвашсем. Самарканд çарĕ хулана хура пĕлĕт пек хупăрласа илнĕ. Пăлхарсемпе чăвашсем сехĕрленсе ӳкмеççĕ, хăйсен хулине паттăррăн хӳтĕлеççĕ. Стена çумĕнчен пĕр утăм та чакмаççĕ, вилмелле пулсан — унтах вилеççĕ.

Хулара пушар вăйланнăçемĕн вăйланать. Кермене вут хыпсан пăлхар патшин виçĕ хĕрĕ çӳле — çи витти тăррине — хăпараççĕ.

Хуламăр пĕтмĕ!<br>
Хуламăр вилмĕ!<br>
Вăхăт çитсен çĕнĕрен ӳссе ларĕ!

Çакнашкал шанăçпа тапаççĕ хĕрсен чĕрисем, анчах вĕсен виççĕшĕн те тăван енпе сывпуллашма тивет.

Хуламăр, сыв юл!<br>
Текех эс ан çун!<br>
Çич ют кулли эпир пулмастпăр!

Çи витти шатăртатса та кĕрлесе çуна пуçласан патша хĕрĕсем шурă акăшсем пулса çичĕ тинĕс леш енне вĕçсе каяççĕ, тĕнче пĕтеспе каялла таврăнасса шантараççĕ.

Хусан ханĕн нукерĕсем кĕслеçе-юрăçа çемçелнĕ кăмăлпа тăнларĕç. Хăшĕ-пĕри куççульне шăла-шăла илчĕ.

Тăлпай çапла юрла-юрла стена çумнех çитрĕ, кăштах тăчĕ те каялла çаврăнчĕ. Кĕслине калать, юрлать — çав вăхăтрах утăмĕсене те шутлама манмасть. Хăйĕннисем патне каялла чиперех çитрĕ, стена миçе утăмрине патшана пĕлтерчĕ. Салтаксем çĕр айĕнчи çула пилĕк талăк чаврĕç, стена айĕнче нӳхреп турĕç, унта тар тултарнă хĕрĕх сакăр пичке кустарса кĕртрĕç. Пичкисене уçса çурта лартса хăварчĕç.

— Мĕншĕн халĕ те сирпĕнмест? — пăшăрханать патша. Вăл çамрăк-ха, çирĕм виççĕре кăна. Ĕмпӳ чиркĕве кĕрет, сăхсăхса Турра кĕлтума пуçлать. Çав вăхăтра калама çук пысăк хăватпа крепость стени арканса каять.

Халап хыр тăрне, хам хапха витĕр Аслă Пăла хĕррине. Патăрьелпе Шăнкăртам тĕрĕс-тĕкел ларччăр, хула пулмаллах хуначчăр.

* * *

Нумай çул пĕрле ĕçленĕ юлташăм, вăхăтсăр çĕре кĕнĕ К.К. Юлдашев журналист каласа панине никĕсе хурса, ăна тав туса тата сума суса çырнă. Вăл таврапĕлӳçĕрен илтнĕ истори халапĕ В.Д. Димитриев академикăн «Чувашские предания о Казанском ханстве и присоединении Чувашии к России» статйинче (УЗ ЧНИИ, вып. 60. Чебоксары, 1975), И.И. Одюков профессорăн «Авалхи тата Атăлçи пăлхарсем çинчен калакан истори халапĕсем» кĕнекинче (Шупашкар, 1984), И. Никифоровăн «Пирĕн ял» асаилĕвĕнче калаиипе пĕр килет.



# Кĕлĕм, Энтри тата Чăрăш

Çуркунне, шыв-шур чакма пуçласан, Кĕтнерен унăн Хум ятлă юппинелле пăрăнса кĕрсе виçĕ пысăк мар сулă юхăма хирĕç вăраххăн шуса пынă. Виçĕ сулă çинче виçĕ çемье. Сулăсем çине кантăр пирĕнчен пуç пĕкмелĕх пĕчĕкçĕ чатăрсем карнă. Каскăн çилпе шалкăм çумăра сахал мар курнăран вĕсем лăстанкăланма пуçланă. Чăнах та, сулăсен çулĕ самаях вăрăм пулнă. Тăван ялĕнчен тарса тухнă чăрсăр чăвашсем Кĕлĕм, Энтри тата Чăрăш анлă Атăлран сĕвек çыранлă Сĕвене ишсе кĕнĕ, чăтăмлăн шухă Кĕтне тăрăх тухнă. Вĕсем мулла çитеймен, мăрса куçĕ курман улах вырăн шыранă.

Пурăнасса ку чăвашсем çак таранччен Атăл леш енче чиперех пурăннă тет. Инкек ура айĕнченех сиксе тухнă-мĕн. Вĕсен ялне шакла пуçлă мулла çÿреме иленнĕ, вĕçĕмсĕрех хулăн кĕнеке — Коран — вуланине итлеттернĕ, темле Мăкамета — тÿпери уйăха çурлапа çаклатса туртнăскере — пуççапма хистенĕ. Епле апла, кунти чăвашсен тархасламалли турăсем унсăрах пур-çке! Вĕсене ĕненме пăрахни атте-анне чысне манниех пулать вĕт. Çакăн пирки тарса тухнă та ĕнтĕ виçĕ чăваш. «Хамăрăн Турра пăрахас тăк çут тĕнчене курар та мар», — тупа тунă вĕсем.

Хум çырминче харсăр чăвашсем турпас татăкĕсем юхнине асăрханă.

— Ку юхан шыв тăрăхĕнче те çынсем пурăнаççĕ иккен. Тен, вĕсен те муллапа мăрса пур? Майкăчах кĕрсе ÿкиччен çакăнталла чарăнса пăхар мар-и? — тенĕ пĕри — Кĕлĕм ятли.

Энтрипе Чăрăш хăйсен юлташĕн ăслă сăмахĕсемпе килĕшнĕ,

шывпа шӳсе йыварланнӑ йывӑҫ сулӑсем ҫӑра хӑвалӑх сулхӑнне пырса йӑпшӑннӑ.

Кунта хайхи чӑвашсен куҫӗ умне ейӳ илекен улӑх тухса тӑнӑ, аякрах та мар ката вӑрмансем курӑннӑ.

Энтри хӗвелтухӑҫнелле пӑхса чӗркуҫҫи ҫине ларнӑ та тархаслакан сасӑпа кӗлтума пуҫланӑ:

— Эй, аслӑ Пӳлӗхҫӗ, аслӑ Пӳлӗхҫӗ Амӑшӗ — хӑрпан, хӑрпан амӑшӗ — хӑт, хӑт амӑшӗ — юсав, юсав амӑшӗ — ырӑ уйӑх-хӗвел, ҫӗр-шыв, юман, йывӑҫ — ирӗк парӑрччӗ пире ҫакӑнта пурӑнма!

Чӑрӑшӑн кӗлли кӗскерех пулнӑ:

— Эпир Турӑпа Пӳлӗхӗн чунӗсем. Пире Турӑ лайӑха ҫыртӑр, Пӳлӗхҫӗ лайӑха пӳртӗр, — тенӗ Чӑрӑш, унтан пӗшкӗнсе тӑпрана чуптунӑ.

Турӑсӑртарах Кӗлӗм хӑйне евӗр кӗлтунӑ:

— Эпир хамӑрӑн атте-анне ачисем, Пӳлӗх мунчине вут тӗртмен, Пӳлӗх пӑрушне пусса ҫимен! Унӑн пире кӳренме сӑлтав ҫук! — ҫапла каланӑ та вырнаҫмалли вырӑн шырама утнӑ...

Калмӑк арманӗнчен анатарах, Хум хӗрринче, Райхыҫ текен ушах вырӑн пур. Ҫавӑнта вырнаҫнӑ та ӗнтӗ чи малтан ку таврари виҫӗ ялӑн тӗп аслашшӗсем. Анчах Райхыҫӗнче вӑрах пурӑнайман вӗсем: шыв илнипе аптӑранӑран сӑнаса пӑхмалла виҫӗ чӑваш виҫӗ тӗле куҫса ларнӑ. Ҫӗнӗ вырӑнсем виҫҫӗшӗн те ӑнӑҫлӑ пулнӑ. Вӗсем пӗр ҫӗре куҫма пӗрне-пӗри пайтах ӳкӗтленӗ, анчах нихӑшӗ те вырӑнтан тапранман. Виҫӗ ҫемье виҫӗ тӗлте хунама пуҫланӑ.

Ку хӑҫан пулнине асаттесем те маннӑ ӗнтӗ, мӗншӗн тесен унтанпа Хум тӑрӑх шыв сахал мар юхса иртнӗ, ватӑлнӑ йывӑҫсем вырӑнне ҫӗннисем ӳсе-ӳсе ларнӑ. Ҫулсем иртсе пынӑ май Кӗлӗмкасси, Энтриел тата Чӑрӑшкасси ялӗсем пулса кайнӑ. Ялйышсем хӑйсен тӗп аслашшӗсене манман, вӗсен ячӗсене ҫӗнӗ ӑру асӑнмалӑх хӑйсен ялӗсен ячӗсенче сума суса сыхласа хӑварнӑ.

Ҫӗнӗ ялсем никӗсленӗ виҫӗ чӑваш несӗлӗсем Мӑкамета йышӑнман, вӗсене киремет те кирлӗ мар пулса тӑрать.

*Йӗпреҫ районӗнчи Кӗлӗмкассинчи В.И. Иванова пенсионерка ал ҫырӑвӗ тӑрӑх ҫырнӑ.*



# Йӗпреҫпе Шемек

«Чăваш Ен Вырăс патшалăхӗпе пӗрлешсен XVI ӗмӗрӗн иккӗмӗш ҫурринчен тытăнса тата XVII ӗмӗрте Хум юхан шывӗпе ун юпписем тăрăхӗнчи ҫӗрсем ҫине ҫурҫӗр-хӗвелтухăҫпа хӗвелтухăҫран тата Хусан леш енчен чăвашсем куҫа-куҫа килнӗ, Хум шывӗ (Кӗтнен сулахай юппи) ун чухне тулăх шывлă пулнă. Ҫӗнӗ ҫӗре килекенсем юхан шыв пуҫне ҫитиех хăпарса Хумпуҫ Патăрьел (паллă мар Патăрьелӗнчен куҫса килекенсем), Йӗпреҫ тата Шăрттан (Хусан леш енчен килекенсем) ялӗсене никӗсленӗ. Ахăртнех, чăваш сунарҫисем тата вăрманта пыл тытакансем кунти вырăнсене унччченех пӗлсе тăнă пулмалла».

***(Г.Б. МАТВЕЕВ.** Ибресинский край. Чебоксары, 1993. С. 15*)

## Каччăпа хӗр мӗн ҫинчен юрлаҫҫӗ?

Хурамак вăрмантан юхса тухать. Унăн юпписем таҫти-таҫти чăтлăхсен сӗмлӗхӗнчен тăсăлса килеҫҫӗ те вăрман хӗрринче пӗр вăйлă юхăма пӗрлешеҫҫӗ. Ҫу каҫиччен тулăх шывлă ку юхан шыв. Тарăн авăрсенче шыв вăр та вăр ҫаврăнать, ҫăрттан шампăрт та шампăрт сикет. Хăмăшлăх тӗлӗнче партас ҫатăлтатать. Юхан шыв ҫыранӗсем хăвалăхлă та курăклă. Лапам тăрăх таҫта ҫитиех йăлăм тăсăлать. Ку юхан шыв вăйне-хăватне Чулман Атăла парса тăрать.

Хурамак ик енӗпе мăн ял — Хурамакасси — ларать. Пысăк ялта тата таврари ялсенче патвар йӗкӗтсем ката вăрманти катмар юмансем пекех йышлă. Вӗсенчен чи маттурри Шемек ятлă. Сире ун ҫинчен каласа парам. Аслă ялта тата таврари ялсенче чипер хӗрсем хӗвеллӗ уҫланкăри ҫырла ҫеҫки чухлех. Вӗсенчен чи илемли те харсăрри Йӗпреҫ ятлă. Сире ҫав хӗрпе паллаштарам.

Ачаранах кĕтӳçĕре çӳренĕ Кивкасри Пурмар. Куланайшăн пит хĕстернĕрен хура Хуралккаран кивçен укçа илнĕ те вăхăтра тавăрса парайман. Çавăнпа ывăлĕ Шемек аршăн çӳллĕш ӳссенех ăна та вăрăм пушă явма вĕрентнĕ, унпа пĕрле пĕтĕм ял кĕтĕвне кĕтме кĕрĕшнĕ. Унтанпа Шемек хулĕ çинчен кĕтӳ пушши анмасть. Юр ирĕлсе тепре çăвиччен хăй явнă пушша сĕтĕрет, хĕлле вара платникре çӳрет.

Çамрăкрах чухне Хуралкка суту-илӳпе айланнă. Ку ĕç ăна таçти-таçти çĕршыва та илсе çитернĕ. Сутуçа кăнтăрти пĕр ялта казахсем çунатлă çуртра акăш-макăш пысăк икĕ çаврака чул хушшинче çăнăх авăртни тĕлĕнтернĕ. Пирĕн те тырра çапла авăртмалла тăвасчĕ! Çак ĕмĕтпе таврăннă вăл. Кăнтăрти асăннă ялта ĕмĕте арман тенĕ. Хăйĕн ĕмĕтне пурнăçа кĕртмесĕр те лăпланман Хуралкка. Çунатлă çурт туса лартнă, унта таврари мĕнпур ял тыррине авăртма пуçланă, авăртнăшăн кĕреçе курки сăптăрнă. Çунатлă çурта арман ят панă. Çавăнтанпа чăвашсем пурте ăна арман теççĕ. Ывăлĕ Ентиер çитĕнсен вара хайхи Хуралкка Хурамака пĕвелесе шыв арманĕ те туса лартрĕ. Çăкалăх ĕшнинче вĕсен пысăк утар пур. Унти каска вĕлле шутне хăйсем те пĕлмеççĕ имĕш. Пĕрех Хуралкка кассан та юн тухми хыт кукар.

Çилпе-çумăрпа касăлнăран, хĕвелпе хĕртĕннĕрен, ĕçпе пиçĕхнĕрен çирĕп те тĕреклĕ ӳссе çитĕнет Шемек. Чунĕпе вăл тин шăтнă ешĕл курăк пек таса, кăмăлĕпе кăвак кăвакарчăн пек йăваш. Кĕтĕве кăнтăрла Хурамак хĕррине тапăра тăратсан кĕтӳçĕ çăка туратĕнчен шăхлич тăвать, унпа тем тери çепĕç кĕвĕсем калать. Çав кĕвĕсем янăранă чухне таврари сар кайăксем те шăпланаççĕ. Ун чухне ашшĕ улача кĕпин çанни вĕçĕпе куççульне шăлса ларать. Шемек юрлама та ăста. Унăн тăсăмлă та хурлăхлă юррисем тĕксĕм Хурамакăн лăпкă та мăнаçлă юхăмĕпе килĕшӳллĕ.

Юрласан-юрласан каччă юхан шыв хĕррипе вăрманалла утать. Пĕр тĕлте Хурамак питĕ авăк кукăр тăвать. Шемек çав кукăрти яка чулсем патне çӳрет, вĕсем çине васкамасăр темĕнле ӳкерчĕксем тăвать.

Каччăн чĕре патне пыракан юррисене итлеме сар кайăк çеç мар, пĕве çитнĕ сарă хĕр те иленнĕ иккен. Ку вăл Тукас-

ри ҫӗрме пуян Хуралкка хӗрӗ Йӗпреҫ. Ҫав пике пӗррехинче качча хыҫҫӑн вӑрттӑн йӗрлесе пырать. Чулсем ҫинчи ӳкерчӗксенче вӑл хӑйӗн сӑнне палласа илет. Миҫе чул, ҫавӑн чухлӗ Йӗпреҫ. Хура куҫлӑ, хура пурҫӑн пек куҫ харшиллӗ. Сулахай пит ҫӑмартиййӗ ҫинчи шӗпӗнӗ те хӑй выранӗнчех. Питне ӑшӑ кулӑ илемлетет. Ӳкерӳҫӗ ӑсталӑхӗнчен тӗлӗнсе пӗр вӑхӑт хӗр шак хытса кайнӑн пӑхса тӑчӗ. Шемеке ӑшӑ сӑмахсем каласси килчӗ, анчах хӑй хыҫҫӑн сӑнаса ҫӳрекен пуррине ан пӗлтӗр тесе ун патне пымарӗ. Халиччен пӗлмен ырӑ туйӑм кӗрсе тулчӗ хӗр чӗрине. Ҫав туйӑм юрату пулса тӑрасса чухлаймарӗ-ха вӑл.

Кӗтӳҫе Йӗпреҫ каҫхи вӑййа тухсан курчӗ. Вӑл шурӑ пир кӗпепе, улачаран ҫӗленӗ йӗмпе. Урине ҫӑм чӑлха тӑхӑнса ҫӑпата сырнӑ. Унӑн ҫӑра куҫ харшийӗсем ҫӳлелле ҫӗкленнӗ, ҫамрӑклӑх хавалӗ куҫне ҫуттӑн йӑлтӑртаттарать. Пӑхаттир пек качча ҫине Йӗпреҫ куҫ илми пӑхать, ӑна курсан савӑннипе чӗри кӑлт та кӑлт тапать. Шемек те куҫӗпе хӗре шыраса тупрӗ, тем каласшӑн пулса куҫне мӑчлаттарса илчӗ. Анчах каччӑпа хӗр ҫав каҫ тӗл пулаймарӗҫ — именни чарчӗ.

Хӗр ашшӗ таҫти хуларан ывӑлӗ валли хӗрӗх хӗлӗхлӗ кӗсле туянса килнӗ. Ентиер унпа аппаланма ерҫеймест, Йӗпреҫ вара кӗсле калама хӑвӑрт хӑнӑхрӗ. Акӑ каҫ пулсан вӑл кӗслепе урама хӑйсен сачӗ тӗлне тухса ларчӗ. Кӗсле каланӑ май хӗр такмаклама та ӳркенмест:

> Кӗсле тытса каласан
> Пире качча илтӗ-ши?
> Качча хӗре курсассӑн
> Кӑчӑк туртса илӗ-ши?

Ҫывӑхри ҫӗмӗрт хыҫне тахӑш вӑхӑтра Шемек ҫитнӗ тӑнӑ. «Тата юрла-ха, Йӗпреҫ. Тепрер ҫаврӑм итлесчӗ», — тет хӑй ӑшӗнче качча. Хӗр ун кӑмӑлне пӗлчӗ тейӗн ҫав. Унӑн Хурамак шӑнкӑр-шӑнкӑр юхнӑ чухнехи евӗр хӳхӗм сасси каллех янӑраса кайрӗ:

> Каска ҫинче лараттӑм,
> Хӗвел ӳкрӗ пит ҫине.
> Ӳссе-ӳссе пыраттӑм,
> Саврӑм кӗтӳҫ ачине.



Шемек пётём кĕлеткипе чĕтренсе илчĕ. Нивушлĕ ун çинчен юрлать хĕр? Шемекĕн хĕре куриччен курас килет, курсан — çывăхарма хăяймасть. Хальхинче вара хăюлăх çитерчĕ-çитерчех, хĕр умне пырса тăчĕ.

— Эсĕ-и? — кĕтнĕ пекех ура çине тăчĕ хĕр, яштака каччă аллине хыттăн-хыттăн чăмăртарĕ, унтан пуçне ун кăкăрĕ çумне пĕкрĕ. Çавăн чухне ĕнтĕ каччăн тути пĕрремĕш хут çепĕçрен те çепĕç сăмахсем каларĕ:

— Юрататăп сана, Йĕпреçĕмçĕм... Эсĕ маншăн шурăмпуç çăлтăрĕ пулсам!

Хĕр чĕри ун чухне шăнăçми савăнăçпа тапрĕ, сăнĕ-пичĕ вутла çунчĕ. Ашшĕ те, тетĕшĕ те хура сăнлă, Йĕпреç вара сарă. Амăшне пăхнă пулинех. Куç тулли хĕр такам кăмăлне те килĕ. Шемекпе Йĕпреç ыталашса сак çине юнашар ларчĕç.

— Мана савăнтарас шутпа тепĕр авăк юрламăн-и? — хĕр куçĕнчен тилмĕрӳллĕн пăхрĕ Шемек.

Йĕпреç тархаслаттармарĕ, хăй юратнă юрра пуçарчĕ:

Çĕнĕ паха енчĕкĕн
Шереписем пурçăнтан,
Тулне ука тултрăмăр,
Ăшне кĕмĕл хутăмăр.
Хамăр ялăн йĕкĕчĕ
Пуплет манпа кăмăлтан.
Ун çине куç хыврăмăр,
Юратрăмăр, саврăмăр.
Улăх тăрăх эп утрăм
Ухлĕм курăк шыраса.
Ухлĕм курăк шăтман пуль,
Шăтнă пуль те типнĕ пуль.
Урам тăрăх эп утрăм
Хам савнине шыраса.
Тус урама тухман пуль,
Тухнă пуль те кĕнĕ пуль.
Утса-чупса çырла татрăм
Кунсем шăрăх вăхăтра.
Çапах пурак тулмарĕ,
Çырли урăх пулмарĕ.
Юрларăм та ташларăм
Тантăшсемпе каçпалан.
Пурпĕр кăмăл тулмарĕ —
Савни унта пулмарĕ.
Вăрман витĕр тухнă чух

Сарă мăйăр эп куртăм.
Мăйăр татса пулмарĕ —
Çумăр килсе хупларĕ.
Савни манăн чĕрере,
Ир те, каç та асăмра.
Урăххине шырас мар!
Ыталашса чуптăвар!

Хĕр юрри Шемеке тем тери килĕшрĕ, лайăх юрăшăн тесе ăна тутлăн-тутлăн чуптурĕ.

— Ӳкерме ăстине куртăм-ха, — йăлтăр кулăпа пăхса илчĕ хĕр Шемек çине. — Сан юрруна итлес килет!

Каччи те тепре ыйтасса кĕтмерĕ, янравлă сасăпа тăсăмлăн янăратса ячĕ.

Хĕрпе каччă пĕр-пĕринчен тул çутăласпа тин уйрăлчĕç.

## Шемек евчĕ ярать

Кĕтӳçĕ Шемекĕн авланма шухăш пур, анчах евчĕ яма ашшĕ чарать. Унăн ялан пĕр сăмах:

— Эх, ывăлăм! Йĕпреç хăй ай-хай ĕçчен те кăмăллă, ашшĕ вара питĕ çăткăн. Çичĕ сурăха çухатнă тесе вăл иксĕмĕре пĕр картшăн та тӳлемерĕ. Ĕнисем хĕç пек тăрса юлнă тесе хăртрĕ. Хăвах куратăн: хăйне парăмлă çынсене вăл мĕн тери ĕçлеттерсе хăшкăлтарать! Пуян çынпа хурăнташлă пуличчен упана çулăх.

Кĕтӳçĕ Шемек сăнĕ Йĕпреç куçĕ умĕнчен пĕртте каймасть, чул çинчи ӳкерчĕксем пĕр саманта та асран тухмаççĕ. Хĕр Пурмар кинĕ пулма паян тесен паян хатĕр.

Хурамакассисем тепĕр хĕл хĕсĕнкелесе каçрĕç. Ашшĕ чарсан та Шемек хĕр çураçма Хуралкка патне евчĕ ярать.

— Хулăм мĕн чухлĕ тӳлет? — ыйтать хĕр ашшĕ.

— Кăçалхи кĕтӳ тыррине пĕтĕмпех хулăм шутне парать...

— Акă епле иккен... Арăмне выçах усрасшăн-им вара? Малтан лайăх çурт-йĕр çавăртăр, ман хĕр хура çурта пымасть... — тесе кăларса ярать евче Хуралкка.

Пуян çын хĕрĕ илемлĕ те, анчах туй лартса пулĕ-ши? Мăн кăмăллă Хуралкка тĕллевĕсем паллă: хĕрĕ валли муллă упăшка шырать.

— Эсĕ, хĕрĕм, ан васка-ха... Малтан хурапа шурра уйăра-

кан пул. Садри улмуҫҫи чечекне кăҫал хура тăм ÿксе пĕтерчĕ. Тăрнаккай Шемек те хĕр телейне ҫавнашкал таптасшăн. Вăл кĕтÿ хыҫҫăн хура тусан ҫăтса ҫÿретĕрех. Сан валли урăххи тупăпăр, — ăс парать ашшĕ хĕрне.

Анчах каччăпа хĕр юратăвĕ ÿпре ĕмĕрĕ пек кĕске мар иккен. Хĕр ҫураҫасси мĕнпе вĕҫленнине пĕлсен Йĕпреҫ салхуланнă каччăна пир енчĕкпе укҫа тыттарать.

— Ҫакна мана хĕр тупри хатĕрлеме Ентиер тете пачĕ. Эсĕ унпа ҫурт-йĕр ҫавăр...

Ҫур ҫултан кĕтÿҫĕ вĕр ҫĕнĕ ҫурт-йĕр ҫавăрать, чăх-чĕп вĕҫсе каҫайми хÿме хÿтерет.

Хĕл каҫсан Шемек хĕр ҫураҫма тепре ярать.

— Хулăм мĕн чухлĕ тÿлет? — ыйтать хĕр ашшĕ.

— Кăҫалхи кĕтÿ тыррине пĕтĕмпех хулăм шутне парать...

— Акă епле иккен... Арăмĕпе иккĕш шăл хушшине мĕн хурĕҫ? Картиш тулли выльăх-чĕрлĕх пулсанччĕ тата хăть... — тесе кăларса ярать евче Хуралкка.

Пуян ҫын хĕрĕ кăмăла килет те, ăна качча илме ансат мар иккен.

— Ай-хай! Хĕрĕ хуйхăрни, каччи кулянни чунсăр Хуралккана урайĕнчи ҫÿп выраннe те тăмасть ҫав, — ассăн сывлать ватă кĕтÿҫĕ Пурмар. Унтан ҫапла хушса хурать: — Хивре пуян ҫын кăмăлĕ!

Пурмар кĕлетки пĕкĕрĕлнĕ, ÿчĕ-тирĕ пирченĕ, пĕтĕмпех хĕрлĕ хура тĕслĕ пулса тăнă. Шур ҫÿҫлĕ пуҫĕ кăкăрĕ ҫинелле усăнать, хытă хуйхăрнăран ыратма та хĕсме пуҫлать. Старик вара хăяра ҫурмаран ҫурать, ăна тутăр ăшне хурса ҫамки тĕлне тытать.

Хуралкка хăй пек пуян кĕрÿ тупасшăн, мул ҫумне мул хушăнмалла тăвасшăн.

— Ыйтам санран: хăвăншăн ҫеҫ пурăнни пурнăҫ-и вăл? Пирĕншĕн те пурăн: аҫу ятне ҫÿле ҫĕкле, хĕр тупри ҫумне кĕрÿ мулĕ хушăнтăр. Пурмарăн вара пĕтĕм ратни те ĕнепе вăкăр, сурăхпа качака кĕтĕвĕ кăна. Вĕсем те хăйĕн мар. Ҫавсемпе ĕҫсе ҫимелле пулать-и манăн? — ыйтрĕ ашшĕ хĕрĕнчен.

Ҫапах каччăпа хĕрĕн кăмăлĕ хăрăк турат пек хуҫăлмарĕ. Йĕпреҫ пăшăрханакан каччăна пурҫăн енчĕкпе укҫа тыттарать.

— Çакна мана хӗр тупри хатӗрлеме атте пачӗ. Эсӗ унпа выльăх-чӗрлӗх, хур-кăвакал туян.

Тăрăшсан-тăрăшсан Шемек картиш тулли выльăх-чӗрлӗх, хур-кăвакал усракан пулать. Хурамакассинчи йывăççем çулçисене кӗрхи çилпе вӗçтерчӗç, çуркуннене çӗнӗрен çулçă кăларчӗç. Шемек хӗр çураçма евчӗ виççӗмӗш хут ярать.

— Хулăм мӗн чухлӗ тӳлет? — ыйтать хӗр ашшӗ.

— Кăçалхи кӗтӳ тыррине пӗтӗмпех хулăм шутне парать.

— Акă епле иккен... Арăмӗпе иккӗшӗ çимесӗрех хӗл каçасшăн-им? Акатуйӗнче паттăра тухтăр — вара хӗр пӗр сăмахсăрах унăн пулать! — куçне сиввӗн çиçтерет Хуралкка.

Пуян çын хӗрне юратма пулать, анчах ăна качча илме май килмест пулӗ çав! Çак шухăш пăралать Шемек пуçне.

— Савниййӗм, çӗнтерекене парне хам хатӗрлетӗп. Тулӗк асту: Ентиер упа пек вăйлă. Ăна чеелӗхпе кăна çӗнтерме пулать.

Йӗпреç каччăна тутинчен чуптăвать, савса сар укаллă ал тутри парать. Кӗçех ял тăрăх хыпар сарăлать: Хуралкка хăйӗн хӗрне качча парать. Акатуйӗнче кӗрешсе кам паттăра тухать, çавна хăйӗн кӗрӳшӗ тăвать.

Йӳтемен Хуралкка ачисене мӗн пӗчӗкренех çапла вӗрентнӗ: ыйхă вăрлакан — ыйхă вăрлать, кам ӗç вăрлакан — хăйне усă кӳрет. Ашшӗ хистенӗрен Йӗпреç хӗлле кунӗн-çӗрӗн çип арлать, çуркуннепе пир тӗртме ларать. Хӗç витӗр илме кӳршӗ хӗр ачи пулăшать. Хӗр çиччӗ хӗçӗпе тăла тӗртет. Ут хӗлӗх пек çипрен майра пуставӗ пек тăла пулать. Кăçал Йӗпреç йӗтӗн çиппинчен пир тӗртрӗ, ураççине мамăк çиппи ярса пычӗ. Пирне таса юр çине сарса шуратрӗ, юр кайсан каска çине илсе тухса çапрӗ, тăсăлтăр тесе тантăшӗпе ик еннелле туртрӗç. Кайран хӗр çинçе пир кӗпи çӗлерӗ.

Кӗтӳ тапăрта чухне Шемек вăй пухас шутпа пӗр вӗçӗмсӗр тункатасем кăкларӗ, май килсен хăй пек çирӗп каччăсемпе çине-çинех вăй виçрӗ.

Ака тусан, вăй пухсан хурамакассисем акатуй тума шутларӗç. Ун умӗн хӗрсем чир-чӗртен тата усал-тӗселтен сыхлама акапуç туртса ял йӗри-тавра çаврăнаççӗ. Хăйсем çивӗчӗсене лăстăр салатнă, пиçиххийӗсене салтса янă, Йӗпреç те вӗсем хушшинче пулчӗ. Акапуçне Шемек тытса пычӗ.

Акă ял-йыш уява пухăнчĕ. Эй, пĕсмĕлле! Халăхĕ кĕр те кĕр кĕрлет. Ваттисем ватă хурамана пуççапаççĕ.

— Эй, пире пăхан ырă Турă! Хăвăн çыннусене ан пăрахчĕ! Уя тухсан уйра тухăçлăх кӳрччĕ, киле кĕртсен килте перекет парччĕ! Акатуйран акатуя усрасам! Чӳк, çырлах! Сана йӳçси, пире юсманпа шерпет!

Кĕрешме тухиччен Шемек куçĕпе яш-кĕрĕм хушшинче Йĕпреçе шыраса тупрĕ те ăна куç хĕсрĕ. «Ан пăшăрхан, хама хур тума памăп», — тенине пĕлтерчĕ çакă. Шемекшĕн Йĕпреç паян нихçанхинчен те илемлĕ. Унăн ятуллă пĕвĕ Хурамак хĕрринчи тирек пек йăрăс. Вăл шап-шурă кĕпепе, симĕс тĕслĕ саппунпа, ука янă пиçиххипе. Çи-пуçĕ çинçе пилĕкне çăт тытса тăрать. Пит çăмартийĕ темĕнле çепĕç çутăпа йăлтăрать. Пилĕкне хытă çыхать, ăсне çирĕп тытать ку хĕр. Ятне ямĕ ял çине, пит пĕçертмĕ çын çинче.

Ентиерпе кĕрешме тытăнсан Шемек туххăмрах ăнланчĕ: ку мăйăр çирĕп хупăллă. Пĕлет Ентиер евче ашшĕ мĕн каланине. Унăн та йăмăкне кĕтӳçе качча парас килмест. Çапах Шемек ăна парăнтарчĕ-парăнтарчех. Кăкăрĕн пĕтĕм вăйĕпе хирĕç тăнă çĕртен сасартăк ӳкесле тайăлчĕ те тытăнкăлăхне çухатнă Ентиере хăй урлă çавăрса çапрĕ, самантрах ун çине утланса ларчĕ.

Паттăра шур акăш пек шап-шурă çинçе пир кĕпи Йĕпреç хăй тăхăнтартрĕ. Кĕпи умне тĕрленĕ, çухине укапа эрешленĕ.

— Кĕпи пĕттĕр, пуçĕ юлтăр! — терĕ вăл паттăра тутинчен чуптуса.

Анчах хĕр качча чуптума васканă иккен. Хуралкка хăйĕн хĕрне каччăран хăвăрт пырса уйăрчĕ. Иккĕшĕн хушшине сивĕ шыв сапнă евĕр çапла лаплаттарса хучĕ:

— Хурамак юхăмне хăçан тепĕр май çавăраять, çавăн чухне Шемек ман хĕре качча илет!

— Шалт аптрамалла! — кăшкăрса ячĕ Шемек. Пӳлĕх хăйне телей кӳрессе кĕтсе пурăннă каччă, тăм ӳкнипе шанса кайнă курăк пек, тăруках сӳрĕкленчĕ.

Икĕ арман хуçи Хуралкка пуян кĕрӳ тупма ĕмĕтленет, ятлă-сумлă çынсемпе хурăнташлă пулма шутлать.

— Асту, хĕрĕм, ашшĕ-амăшне итлеменни пархатар кур-

масть. Ашшӗ-амӑшӗ пиллесен пин пулать, пиллемесен — кӗл пулать. Ан иккӗлен: Шемек сан упӑшку пулас ҫын мар, — каллех ӑс вӗрентет ашшӗ хӗрне.

Апла пулин те каччӑпа хӗр ӗмӗчӗ ӳкен ҫӑлтӑр пек чӑл-пар саланса каймасть. Йӗпреҫ хӑйӗн шӑпи пирки Ентиере ашшӗпе калаҫса пӑхма тилмӗрет. Ашшӗпе калаҫасса калаҫать лешӗ, анчах...

— Куҫ курӗ-ха. Васкани пӳрмен, пӳрни пӳрнӗ... — пытарать тӳррине Ентиер.

Урампа хӗрсем юрласа пыраҫҫӗ:

Мӗн пӑхатӑр-ха пире,
Хальччен хӑмач курман-им?
Мӗн пӑхатӑр-ха пӗве,
Ӑвӑс ҫурта курман-им?
Лупашкари вӗт турпас
Сикет, сикет — тухаймасть.
Пирӗн касри сарӑ хӗр
Каять, каять — каяймасть.

Ҫак юрра илтсессӗн сарӑ хӗрӗн Йӗпреҫӗн пуҫӗ лӑнках усӑнать, ӑшӗ ҫунма пуҫлать. Вӑл хурланнипе хуллен юрласа ярать:

Хусан ҫулӗ — хура ҫул,
Хура тусан тӑраять,
Пирӗн пит ҫумне ҫыпӑҫать.
Ӗмӗр питрен каяс ҫук,
Куҫран куҫҫуль типес ҫук,
Аларан тутӑр каяс ҫук.

## Кирек ӑҫта кайсан та пӗр хӗвел

Хурамак хӗрринчи чӑваш ялӗн пурнӑҫӗ хӗсӗнсех пырать. Пӗрчӗн-пӗрчӗн пухнӑ вӑрлӑхпа хура анасене шуратса хӑварма вӑй ҫитерессе ҫитереҫҫӗ, анчах хӗл ларсанах пӳлӗмсем хӑвӑрт пушанса юлаҫҫӗ те, выҫӑллӑ-тутӑллӑ ҫынсен чуна упраса хӑварассишӗн тӑрмашма тивет. Тӳре-шара халӑха тимӗр кӑшӑлпа хӗстернӗ пекех хӗсӗрлет, пӗрмай хырҫӑ-марҫӑ сӑптӑрать. Староста та пулин ял укҫине хӑйне валли хӗстерсе хӑварать.

Пӗлтӗр ҫулла ҫанталӑк питӗ шӑрӑх та типӗ тӑчӗ, ҫумӑр ҫуманнипе калчасем ӗнсе кайрӗҫ. Хурамак типсе каясла хухрӗ. Ялан шыв айӗнче пулнӑ чулсем те ҫиеле тухрӗҫ. Халӑх

## Шывӗ сивӗ те — тути лайăх

Кӗсменсемпе авăсса икӗ çамрăк Чулман Атăла ишсе тухрӗ, аслă Атăл урлă каçрӗ, Сӗве тăрăх Кӗтнене, унтан Хум хумӗсен ытамне пырса çитрӗ. Хум пуçланнă тӗлелле çитеспе Йӗпреçпе Шемек вăрăм çул тунă кимме хăмăшлăха сӗтӗрсе кӗртсе лартрӗç. Çывăхрах пилӗк-ултă хӳшӗ ларать.

— Пирӗн ял Хумпуç Патăрьел ятлă. Эпир Çавал тăрăхӗнчи Патăрьелӗнчен куçса килтӗмӗр, — пӗлтерчӗç çӗнӗ ял çыннисем. — Кăмăлласан эсир те пирӗн ял пулăр.

Çыран хӗрринче кунти каччăпа хӗр хулăн пӗтӗрнӗ кантăр çиппинчен тетел çыхаççӗ. Каччи хӗре куç уçма та памасть, пӗрмай тăрăхлать:

Хура лутра хӗрсене
Айне вӗт чул сарас та,
Çине ашăк витес те
Кӳпке-кӳпке çывратас.
Сарă вăрăм хӗрсене
Шурă саппун çактарас,
Паха тутăр çыхтарас,
Савнă сарă каччипе
Йăкăл-йăкăл çӳретес.

Лутака хӗр пӗрчи малтан çав йӗкӗлтекен каччă çине, унтан кӗрнеклӗ Шемек çине вутла çунакан куçпа пăхса илет те хуравне çийӗнчех тупать:

Шӳпке пулă пулмасан
Урăххине тытатпăр.
Хамăр каччă савмасан
Урăххине тупатпăр.

Хӗр чăрсăрлăхӗ хурăн хуппи пек хăварт тивсе каякан Йӗпреçе тарăхтарсах ярать. Вăл леш хӗре тӳрех чышкă кăтартать:

Апла мар, хура хӗр.
Юрамасть, лутра хӗр.
Хамăрăнне памăпăр.
Хăлха чикки кӗтсе тăр.

Унтан йăпăртах Шемек еннелле çавăрăнать: — Ку хӗр енне куçна ан çиçтер! Кимӗпе малалла каяр!

Йӗпреçе хирӗçлеме хăяймасть Шемек. Вӗсем малалла кайма тапраннăччӗ ӗнтӗ, тетел çыхакан каччă кимме пырса тытрӗ.

— Ял теҫетникӗпе Хум паттӑрпа курса калаҫмасӑр ан кайӑр...

— Ҫӑкӑр-тӑварпа сӑйламасӑр ямастпӑр... — тӑхтама сӗнчӗ леш лутра хӗр те.

Сунара кайма ухӑ йӗпписем хатӗрленӗ ҫӗртен Хум паттӑр хӑвӑрт килсе ҫитрӗ. Ҫӗнӗ ҫӗр шыракансене пуҫ тайса саламласан ӑҫтан тата ӑҫталла ҫул тытнине ыйтса пӗлчӗ.

— Пастай, эсир Султанпа Савкан ялӗнчен эппин. Иккӗшӗ те ман хӑнасем пулнӑччӗ. Атӑл леш енчен кунта куҫса килме шутлатчӗҫ. Унччен пӑхса усрама икӗ ут хӑварчӗҫ. Вирьял Кушлавӑш уйӗнче хаклӑ тирсемпе улӑштарса туяннӑччӗ.

Хӑнасене тараватХум паттӑр мулкач ашӗпе, вӑрман хӑмли сӑрипе сӑйларӗ, тавралӑха пӑхса ҫӳреме Султанпа Савкан учӗсене пачӗ.

— Тӑпра эйпет-и ку таврара? — ыйтрӗ Шемек.

— Эйпетне эйпет, анчах ырӑн-ырӑнӑн вара йӗпресе тӑрать... — пулчӗ хурав.

Шалт аптрамалла! Эппин, вырнаҫиччен тӑпра мӗнлине лайӑх чамалас пулать.

Ут утланнӑ Йӗпреҫпе Шемек виҫ-тӑватӑ ҫухрӑм кайсан пӗр ҫырма пуҫӗнче ҫӑл палкаса тухнине асӑрхарӗҫ, ун шывне тутанса пӑхрӗҫ.

— Ай-уй, пулать те иккен сивӗ шыв! — ҫӳҫеннӗ пек пулчӗ Йӗпреҫ.

— Сивви сивӗ те — тути лайӑх, — тепӗр йӗкӗр ывӑҫ ӑсса илчӗ Шемек ҫӑл шывне.

Утсем те шыв патне туртӑнчӗҫ, анчах янаварсене чуптарса килнӗ хыҫҫӑн шӑварсан вӗрилле пулать. Ҫав вӑхӑтра ҫӑлран инҫех те мар ҫамрӑк хунавсем хушшипе темле чӗр чунсем чӑштӑр-чӑштӑр тутарса пыни илтӗнчӗ, кӗҫех хӑйсем те курӑнчӗҫ. Вӗсен хӑлхисем пысӑк та вӑрӑм. Пысӑккисемпе пӗрле икӗ пӑрушӗ.

— Пӑшисем кусем, — пӑшӑлтатса пӗлтерчӗ Шемек.

Ӑна кӗтӳ кӗтнӗ чухне вӗсене курма пӗрре ҫеҫ мар тӗл килнӗ. Ҫамрӑк хунав ҫулҫисене ҫикелесе пӑши ҫемйи лӑпкӑн вӑрман еннелле кайрӗ.

— Акӑ мӗн, Йӗпреҫӗм. Пирӗн тапӑр хальлӗхе ҫакӑнта пул-

выççа тăрса юлчĕ. Унта та кунта çынсем çĕнĕ çĕре куçса каясси пирки пупленине илтме пулать.

Тутă пурнăç, йĕркеллĕ çи-пуç тăвас ĕмĕтпе ял халăхĕ киремете пуççапать, парнесем кӳрет. Çакă та кăлăхах. Кӳршĕллĕ тутар ялĕнчен мулла килсе çӳрет, ислама куçма ӳкĕтлет, Мăкамет ылханĕпе юнать. Чиркӳллĕ вырăс ялĕнчен хĕрес тытнă пачăшкă килсе каймасăр пĕр кун та иртмест. Вăл Христос тĕнне йышăнма хистет, тамăкра çунтарассипе хăратать. Мулла та, пачăшкă та чăваш тĕнне хытă тапăнаççĕ, хура тĕспе сăрлаççĕ те пылчăкпа витсе хураççĕ. Пуп пĕрмай православие мухтать. Ку таранччен пĕлмен-курман çав тĕнрен пăрăннăшăн тӳре-шара арçынсене ирĕксĕрлесех рекрута пуçтарать. Çул çитнĕ Шемекĕн те ят тухрĕ. Патвар качча çавнашкал шăпа кĕтни кĕç-вĕç качча тухма ĕмĕтленекен хĕре — теветкел Йĕпреçе — тарăхтарсах ячĕ. Христос тĕнне Йĕпреç пурпĕр чун çывăхне ярасшăн мар. Асаттесемпе асаннесен тĕнне мĕн çиттĕр? Вĕсен тĕнĕ чи тĕрĕсси тесе шутлать ăслă-тăнлă хĕр.

Хуйха ӳкнĕ икĕ чун Пурмар çурчĕн хапхи умĕнче кăвак шуçăм киличченех тăчĕç.

— Йĕпреçĕм, эс илтмен-и? Кăвак хуппи уçăлса кайнă самантра чунри ĕмĕте каласа ĕлкĕрсен каланă пекех пулать...

— Ăçтан пĕлетĕн?

— Атте хăйыларĕ.

— Эсĕ вара мĕн ыйтăттăн?

— Иксĕмĕре пĕрлештерме...

— Хăçан уçăлать-ши кăвак хуппи?

— Халь-халь уçăлса кайма пултарать. Вăл уçăласса ирпе шурăмпуç килес умĕн сыхламалла тет. Çиçĕм çиçнĕ евĕр ялт курăнать, симĕссĕн-кăваккăн йăлтăртатать, анчах самантрах пĕтет тет. Пĕтиччен каласа ĕлкĕрмелле пирĕн...

— Кăвак хуппи уçăласса кĕтместпĕр! Атте пире пĕрлешме пĕлĕт çĕр çине йăтăнса анмасăр та пехиллемĕ. Атя иксĕмĕр, аçу килĕшсен, виççĕмĕр... çĕнĕ çĕре куçса каяр.

Çак сĕнӳ каччăна тӳрех килĕшрĕ. Иккĕшĕ те хăйсен ĕмĕтне епле пурнăçласси пирки шухăшлама тытăнчĕç. Нумаях та пулмасть вĕсен ялĕнчи Султанпа Савкан таçти катари вăрмансене сунара кайса çӳрерĕç. Унта вĕсем кăш-сăсар та, упа та, ытти

тискер кайăксем те тытнă. Йĕпреç çавсемпе тĕл пулса калаçрĕ.

— Эпир кайнă çĕрте улах вырăнсем çук мар. Куçса каясчĕ те — шикленетпĕр, — хуравларĕç лешсем.

Паян Йĕпреçĕн ашшĕпе тетĕшĕ Çăкалăхри утара кайрĕç. Ирпе çанталăк ăмăрччĕ, кăнтăрла тĕлнелле пĕлĕтсем хĕвел тĕлĕнчен сирĕлчĕç. Тӳпе тăрна куçĕ пек тăрăлчĕ.

— Халех тете киммине çине ларатпăр та çула тухатпăр! Васка! — хирĕçлеме юрами сасăпа хушрĕ хĕр каччăна.

Шемекпе Йĕпреçе ăсатма пĕр ватă Пурмар кăна тухрĕ.

— Хамăр мĕскĕнрен ахлатма та хуйхăрма тивет çав, — ассăн сывлать ватă кĕтӳçĕ.

Хуйхă-суйхăпа хуçăлнă старике хăйсемпе пĕрле çĕнĕ çĕре пыма çамрăксем тем тери ӳкĕтлеççĕ, лешĕ пурпĕр пуçне кăна пăркаласа тăрать.

— Эпĕ сирĕнпе пыраймăп ĕнтĕ. Шăннă пирки шăм-шак чарăнмасăр сурать. Ну, ывăлăм, савса паманнине савса илетĕн. Савса илетĕн тĕк — савса усра. Манран пехил сире иксĕре те!

Кăвакарнă сухалне каçăртса старик çамрăксене иккĕшне те хăй çумне чăмăртарĕ, унтан тухăçалла çаврăнса тăчĕ:

— Ай-хай ырă пирĕштисем — чун хӳтĕлевçисем, пĕв сыхлакансем! Пирĕн тĕле тем те килсе тухĕ, эсир çамрăк мăшăртан усала сирсе тăрăр! Курăнми çунатăрсемпе вĕсем валли çул уçса парăр! — пăшăлтатрĕ вăл кушăркана тутипе. Унтан каллех ывăлĕпе кинĕ еннелле çаврăнчĕ: — Çулăр ăнăçтăр! — ăшшăн ырă сунчĕ ватă кĕтӳçĕ. Унпа пĕрлех ватă хурама та чипер кайăр тенĕн туйăнчĕ.

Кимĕ çине вырнаçса ларсан икĕ çамрăк каялла çаврăнса пăхрĕç.

— Кирек ăçта кайсан та пĕр хĕвел, çуралса ӳснĕ ялăм — çав шел юлать! — терĕ ӳкнĕ сасăпа Йĕпреç.

Шемек çакна илтмĕш пулчĕ, хĕр шухăшне хăвăрт урăххи çине пăрчĕ:

— Шалт аптрамалла! Пĕлетĕн-и, паян эп çăвара çăкăр пĕр хĕлхем яман!

Йĕпреç каччăна ăнланчĕ: пăшăрханма парасшăн мар ĕнтĕ хĕр чĕрине. Иккĕш пĕрле чĕре сури тусан кимĕ Хурамак тăрăх юхăма май инçе çула тухрĕ.



тăр. Ĕçме юрăхлă шыв иксĕлми, вăрман юнашарах. Эппин, çимелли те тупăнĕ, — сĕнчĕ Шемек.

Йĕпреç хирĕçлемерĕ. Утсене тăлласа курăк çине ячĕç. Хăйсем тӳрех ĕçе пикенчĕç: утсене тăратмалли тĕкме турĕç. Унсăрăн вĕсене кашкăрсем килсе çурма пултараççĕ-çке-ха.

Çĕнĕ çĕрте пурăнма мĕн кирлине тăвассин йывăр лавне Шемекпе Йĕпреç иккĕшĕ пĕрле туртаççĕ. Икĕ кун çĕр пӳрт чаврĕç. Ун тăррине йывăç турачĕсемпе, хурăн хуппипе витрĕç.

— Алчамуй ĕçлетĕн! Тачăрах хур, хĕсерех хур, унсăрăн тăпра тăкăнĕ! — асăрхаттарсах тăрать Шемеке арăмĕ.

— Тăпрапа витиччен маччана тăм сĕрсе тикĕслетĕп-ха, — лăплантарать ăна упăшки. Кĕме-тухма тата тĕтĕм кăларма вăл курăс хуппинчен алăк хăрталарĕ.

Ирхи шуçăм çутипе тăрса хĕвел аниччене ĕçлет çемье. Шемек юманран кĕпе валашки чавса тăвать, çăкаран алтăр алтать — кĕпе çунă чухне валашкана шыв яма кирлĕ. Вăрмана сунара çӳреме вăхăт тупать вăл, Йĕпреç вара çырла-кăмпа пуçтарать. Ăмăр çанталăкра Шемек кил валли, тĕрĕсемпе илемлетсе, тăм савăт-сапа тăвать. Кирек мĕне те алли çыпăçать унăн. Тăмранах вĕçен кайăк кĕлеткисем ăсталаса арăмне парнелет. Упа кĕлеткине пысăк турĕ, вутпа хĕртсе типĕтрĕ.

— Ытла кĕрĕс-мерĕс. Çĕр пӳртре унсăр та тăвăр, — тесе тула кăларса пăрахрĕ Йĕпреç тăм упана.

— Ай турах, упа хăй ан пĕлтĕрех! — упăшки чĕлхи вĕçне килчĕ çак сăмах.

Упи вара тепĕр ирех Шемек хурăн хуппи çине кăмрăкпа мăшăрĕн сăнне ӳкерсе тăнă çĕре пырса тухрĕ.

— Кай каялла! Унсăрăн çапса пашалу туса хурăп! Ан кил! — юнарĕ Шемек упана, хăй çаплах ӳкерме пăрахмарĕ. Упи вара ăна янах шăмми тыттарчĕ. Шемек лĕпсĕр йăванса кайрĕ. Утаман ăна кӳпкеме пикенчĕ.

Çав вăхăтра Йĕпреç çĕр пӳртре кĕрмешнĕ: тăм чӳлмекпе шаркку лартнă, вĕри чул çинче юсман пĕçернĕ. Тултан çуйăн-çайăн илтĕннĕ. Йĕпреç хăвăрт тулалла вирхĕнсе тухать те упăшкине мĕкĕрекен упа айĕнче курать. Чунтан тарăхса каять Йĕпреç. Сулмаклă пуртăпа упана пуçĕнчен çапать, çăмламаса йăвантарать те упăшки патне пĕшкĕнет:

— Ай-уй, хытă ислетнĕ! Мăнтарăн çынни, аран хăшлатса выртать.

Шемекĕн сывлăшĕ пӳлĕннĕ, куçне аран вылятать. Йĕпреç упăшкине çĕклесе тăратса лартрĕ, юман çумне таянтарчĕ. Кайран ăна пайтах вăхăт тĕрлĕ курăкпа сиплерĕ, анчах Шемеке пурпĕр унчченхи вăйĕ таврăнмарĕ.

Пурнăç тилхепине хăй еккипе тытса пыракан Йĕпреç халĕ ĕнтĕ ăна çирĕппĕнех ярса илчĕ. Ывăлĕсем Икунтейпе Имĕлле ун куçĕнчен пăхрĕç. Шемек те арăмĕпе тавлашăва кĕмест.

Хурамакассинчен Султан, Савкан тата тăлăх хĕрарăм Уль икĕ ывăлĕпе куçса килчĕç. Малтан Султан Хура çырма юхса тухакан вырăнта, Кăнья уçланкинче, Савкан Йăмра çырми хĕрринче, Уль вара Шĕкĕлчемре вырнаçрĕç. Йĕпреç вĕсене хистесех хăй пурăнакан вырăна куçарса килчĕ. Атăл леш енчен куçса килекен ытти чăвашсене те хастар хĕрарăм хăйĕн çĕр пӳрчĕ тавра вырнаçтарчĕ. Çапла чăмăртанчĕ Йĕпреç ялĕ.

Ик-виç çухрăмри Шăрттана куçса килекенсем хурăнташĕсене тунсăхласа Атăл урлă тăван ялне Хурамакассине кайнă та лайăх мар хыпарсемпе таврăннă. Çил-тăман вăхăтĕнче арман тăрри лăпах хуçи çине йăтăнса аннă та — Хуралккаран пашалу чусти кăна тăрса юлнă. Çакăн хыççăн унăн ывăлĕ — акатуйсенче паттăра юлакан Ентиер — ĕçке яраннă. Пĕрмай пыл кăрчамипе лӳшкеннĕ. Çăкалăхри пыл хурчĕсене хуçи ĕçке ерни тарăхтарнă-ши е урăх сăлтавпа, ӳсĕр Ентиер çине тапăннă та вилмеллех сăхса пĕтернĕ. Çĕрме пуянăн ишĕлнĕ çил арманĕ те, шыв арманĕ те, утарĕ те, кермен пек килçурчĕ те, пĕр сăмахпа каласан, ĕмĕр тăршшĕпе пухнă пĕтĕм мулĕ хуçасăр тăрса юлнă. Хисеплĕ кĕтӳçĕ ватă Пурмар та çĕре кĕнĕ иккен.

Йĕпреçпе Шемек ӳчĕсем виç çĕр çул каялла тăпра пулнă ĕнтĕ, вĕсен ячĕсем вара çынсен асĕнче яланлăхах юлчĕç. Хастар хĕрарăм ятне аслă ял хăй ятĕнче упрать.

*Пĕрле ĕçленĕ юлташăм, вăхăтсăр çĕре кĕнĕ*
*В.И. Андреев (Хурамал) — журналист*
*тата сăвăç — каланине тĕпе хурса çырнă.*



# Турайпа Чӗкеҫ

Асаттесен аслашшӗсем ӗнентернӗ тӑрӑх, авал «алман» сӑмах хырҫӑна е куланая пӗлтернӗ. Хырҫӑ пуҫтаракана алманч тенӗ. Ҫавал тӑрӑхӗнчи ҫав пилсӗр ҫын пурӑнакан яла та Алманч ят панӑ. Ку ял Шӑхрантан, хальхи пек каласан Канашран, вӑтӑр-хӗрӗх ҫухрӑмра. Унӑн ячӗ халичченех улшӑнмасӑр юлнӑ. Куланайҫӑ Ахмат ҫӗрме пуян пулнӑ, ял ҫыннисене пурне те хӑй аллинче тытнӑ. Унӑн ывӑлӗ Турай тимӗрҫӗ хӗрне — сӑпайлӑ та чипер Чӗкеҫе юратнӑ. Ҫак хӗр чечекри улмуҫҫи пек чечен те илемлӗ, ҫурхи хӗвел пек ырӑ та ӑшӑ кӑмӑллӑ. Чун-чӗри савӑк, ӗмӗчӗсем ҫутӑ. Ӳт-пӗвӗнче ҫирӗплӗх, хастарлӑх. Сассинче ытарайми ҫепӗҫлӗх, ачашлӑх. Чӗкеҫ чунӗ Турайшӑн ҫуннӑ. Анчах каччӑн ашшӗ арман хуҫин кӑпӑшка та самӑркка хӗрне кин тӑвасшӑн ӑнтӑлнӑ: кӑкӑр ӗмнӗ чухнех ӑна ҫураҫса хунӑ.

Куланайҫӑ та сӑхӑ пулса ҫуралман. Малтанхи вӑхӑтра вӑл ялти ытти хресченсенчен пӗчӗкҫӗ утар тытнипе кӑна уйрӑларах тӑнӑ, тутӑрах пурӑннӑ. Ахмат ятлӑскер, вӑл та ыттисемпе пӗрлех Хусан мӑрси пусмӑрне тӳснӗ.

Таврари чӑваш ялӗсем пурте Карамыш мӑрсана пӑхӑнса тӑнӑ. Вӑл Упаҫырми ҫывӑхӗнче хулаш тутарнӑ. Мӑрса нукерӗсемпе чӑвашсем ун тавра шӳмме, хальхи пек каласан канал, алтса ҫаврӑннӑ. Тӑпра купаласа ҫӳллӗ вал тунӑ. Карамыш кашни ялтах чӑвашран ясак пуҫтаракан уйӑрса лартнӑ. Халӑха хӑех суд тунӑ, ҫаптарнӑ, асаплантарнӑ, пӑхӑнманнисене вута пӑрахса ҫунтарнӑ. Чӑвашсене хан ҫарӗ валли ҫулсем, кӗперсем тутарнӑ, лава янӑ, ҫамрӑкраххисене хӑй патне

хӗсмете илнӗ. Хулашри ҫара чӑвашсем тӑрантарса усрамалла пулнӑ.

Пӗррехинче кӗр еннелле Карамыш мӑрса пысӑк мар свитипе, хӑйпе пӗрле ҫӳрекенсемпе ӗнтӗ, темле майпа Ахмат патне чей ӗҫме кӗрет. Пысӑк кунака — кукша пуҫлӑ мӑрсана, унӑн свитине Ахмат тем тери чысласа хӑналать, пӗр чӗрес пыл, карҫинкка тулли хӗп-хӗрлӗ пан улми кучченеҫ парса ярать. Ҫавӑнтанпа Ахмат утарӗнчен Упаҫырмине пыл чӗресӗ-чӗресӗпе ӑсанать, утар хуҫи вара алманч Ахматран Ахмед пулса тӑрать.

Пӗр те пӗр шутласан алманч нимех те мар: халӑхран ясак пуҫтарать те Упаҫырмине мӑрсана леҫсе парать, лешӗ вара Хусана хан патне ӑсатать. Анчах пухӑннӑ шутран мӑрса та, Ахмед та май килнӗ таран хӗстере-хӗстере хӑвараҫҫӗ. Хурчӑка вӗҫмесӗр пурӑнаймасть. Ахмед ҫын укҫине хӑй кӗсйине чикмесӗр чӑтаймасть. Чухӑн пирки ясак вӑхӑтра тӳлейменни ялта пайтах. Ку вара алманчшӑн йывӑрлӑх мар, пурлӑх ҫӑлкуҫӗ пулса тӑрать. Вӑхӑтра тӳлейместӗн пулсан — алманч ани ҫинче ӗҫлесе пар, унӑн выльӑхне кӗт. Ҫуркунне кивҫен илетӗн — кӗркунне пӑт пуҫне пӑт ҫурӑ тавӑрса пар.

Пӗр ҫулхине ҫанталӑк ытла та сикчӗллӗ килчӗ. Ҫумӑр курманнипе тӑпра типсе ҫуркаланчӗ. Ҫавалта чӑх ури йӗпенмелӗх те шыв юлмарӗ. Ҫил ана ҫинчен тусан ҫӗклесен унӑн хӳри вара таҫта ҫитиех тӑсӑлчӗ. Уйри тыр-пул ӗнсе-ҫунса кайрӗ. Халӑх выҫҫа тӑрса юлчӗ. Алман та килсе капланать. Тӳлемелле. Чунсӑр Ахмед вӑхӑтра тӳлейменнисен ӗнисене хӑй патне хӑваласа каять, уйрӑм картана хупса хурать. Чухӑн хресченӗн Асаматӑн ӗни те унта лекет. Унӑн выҫӑ ларакан ачисем ҫари ҫухӑрса йӗреҫҫӗ, ашшӗ-амӑшӗн чӗрине вутсӑр ҫунтараҫҫӗ. Хайхи Асамат хӑй пек телейсӗрсемпе пӗрле Чӗкеҫ ашшӗ патне тимӗрҫӗ лаҫҫине пырать, кашнинех ҫивӗч хӗҫ туптаса пама тархаслать. Лайӑх ҫын пулнӑ ҫав тимӗрҫӗ Ахмал, ыйтнӑ пекех тунӑ. Хӗҫ тытнӑ хресченсене алманч хирӗҫлесе тӑмасть, ӗнисене тавӑрса парать. Хӑй тепӗр кунах Упаҫырминчен мӑрса нукерӗсене ертсе килет. Вӗсем йышлине курса Асамат юлташӗсене ҫапла калать: «Хырӑм пирки ҫурӑмсӑр юлма юрамасть. Атьӑр ялтан тарар». Асаматпа юлташӗсем таҫти вӑрмана тарса пытанаҫҫӗ. Ахмал тимӗрҫӗ ун пек тума



килӗшмест, ялтах юлать. Ăна вара нукерсем хăй тунă хӗҫӗпех касса вӗлереҫҫӗ, тимӗрҫӗ лаҫҫине вут тӗртсе ҫунтараҫҫӗ.

Ашшӗне пытарсан Чӗкеҫ тимӗрҫӗ лаҫҫи вырăнне кайса пăхрӗ: кăмрăк купи тата сунталпа вӗркӗч кăшкарне ҫеҫ курчӗ вăл. Кунта ашшӗн сăпрай мăй таранахчӗ: ҫава туптатчӗ, ҫурла шăллатчӗ, лаша таканлатчӗ... Тимӗрҫӗ алли вăйлă та ҫирӗпчӗ. Хăйне вӗлериччен вăл мăрсан виҫӗ нукерне кăнтма ӗлкӗрнӗ. Ҫавнашкал паттăр ҫын, хӗртсе туптанă паха тимӗр пекех, ӗмӗр пурăнмалла пек. Ашшӗне урăх курас ҫуккине Чӗкеҫ ӗненесшӗн те мар. Ун хăлхинчен хушăран мăлатук сасси янăранă пек пулса каять. Ашшӗ ҫук, амăшӗ чирлӗ. Хӗр пуҫӗ пӗкӗрӗлет, ҫан-ҫурăмӗ лӗштӗрех усăнать. Халӗ ӗнтӗ тăлăх туратăн пӗртен-пӗр шанчăкӗ савнă каччи ҫинче. Чӗкеҫ ҫунса кӗлленнӗ тимӗрҫӗ лаҫҫи вырăнӗнче хуйхăрса тăрать, Турая аса илет те хурлăхлă юрă пуҫарать:

Ах, мӗншӗн шутсăр хурланатăн
Кӗр ҫитсен эс, хурлăхан?
Сăлтавсăр-мӗнсӗр тайăлатăн,
Хăмла ҫырли енне пăхан.
Ах, мӗншӗн питӗ кулянатăн
Эс, хӗр упраҫ, пӗве ҫитсен?
Чӳречерен ялан пăхатăн,
Кама-ши чăтăмсăр кӗтен?
Хур кайăксем вӗҫсе иртсессӗн
Салхулăх пуснăн туйăнать.
Савниҫӗм, эс аса килсессӗн
Куҫҫулӗ шăпăр тăкăнать.
Типсе каять садра улмийӗ
Кунсем пит шăрăх вăхăтра.
Вут пек ҫунать сар хӗр чӗрийӗ
Пӗччен куляннă вăхăтра.
Тенкел сармийӗ сарă пурҫăн,
Ларса пăхмашкăн ан ӳркен.
Пирӗн тӗлтен иртсе пыруҫăн
Кӗрсе тухмашкăн ан ӳркен.

Хӗрӗн чӗрене витекен хӳхӗм юррине Турай ҫырма хӗрринчи ҫӗмӗрт хыҫӗнче тăнласа тăнă-мӗн. Чӗкеҫ еннелле ҫывхарчӗ каччă, унтан лăпкăн-лăпкăн юрласа ячӗ:

Ан кулян, юрлах ялан, пикеҫӗм,
Пӗтӗм ял итлетӗр юрруна.
Шантаратăп, манăҫми Чӗкеҫӗм,
Чӗремре ман ҫăлтăр эс кăна.

Юррусем сан калама çук ырă,
Юрататăп эпĕ вĕсене.
Тыткăнлатăр эс юрланă юрă
Çепĕççĕн ман çамрăк чĕрене.
Ĕненсем, Чĕкеçĕмçĕм, савниййĕм,
Кăмăла килни ман урăх çук.
Манăн чуншăн çывăххи, хаклиййĕ
Пĕтĕм тĕнчипе те урăх çук.
Пурнăç çулĕ пирĕн пит тумхахлă,
Ан кулян çапах та кăлăхах.
Эс пул çирĕп, вăйлă та хăватлă,
Телее тупатпăр хамăрах.
Çӳремешкĕн йывăр çулсăр-мĕнсĕр,
Пултăрах йĕррӳ тап-такăр çул.
Ан шутлатăр çыпăçмашкăн сĕмсĕр,
Ирттĕрех телейлĕ сан кун-çул.
Ик вĕçе пĕр тĕвĕпе çыхсассăн
Пурăнăпăр иксĕмĕр тату.
Пĕр-пĕрне чунтан-вартан савсассăн
Ĕмĕрлĕхех пырĕ юрату.

Тăвалла йывăр лавпа лайăх ут та аран хăпарать. Çавăн пекех кун хыççăн кун выçă ялта аран-аран иртсе пырать. Пысăк хуйхăпа хуçăлнăран тимĕрçĕ Ахмал мăшăрĕ те нумай пурăнайман, часах ăна упăшкипе юнашар пытарма тивнĕ. Чĕкеç сĕм тăлăха тăрса юлнă. Çапах вăл хуйха-суйха парăнман: хăла лашине çитерме çӳренĕ, ĕнине пăхнă, уйри ĕçе те ĕлкĕрнĕ. Пичĕ хĕвелпе пирченĕ, çилпе кушăрканă. Хĕре усалтĕселтен пĕр Улайкка йытă сыхланă. Чĕкеç хăйне савакан Турайран та ютшăннă пек пулнă.

Тантăшĕсемпе ката вăрмантан çырларан таврăннă чухнехи пăтăрмах хыççăн ку туйăм татах та вăйланчĕ. Ушкăнра арман хуçи хĕрĕ Эмине те, уксахларах утаканскер, пурччĕ. Хĕрсем пасар çулĕпе кайрĕç, Чĕкеçе вара Турикас хĕрĕ тӳрĕ сукмак кăтартрĕ, пĕрле пыма килĕшрĕ. Ку сукмакпа Чĕкеç халиччен çӳресе курман. Вăрмантан тухаспа сылтăм енче хĕвел питтинче хăйăрлă тайлăм, сулахайра — çĕрме пуçланă тункатасем.

— Эс утма çулпа тӳрех ут, эпĕ сана хăваласа çитетĕп, — тет Турикас хĕрĕ Чĕкеçе.

Чĕкеç ним шухăшламасăр малалла утать, чăштăр-чăштăр сасăсем илтĕнсен тăп чарăнать. Пăхать те — чунĕ сӳ туса

каять: сукмак урлӑ теҫетке ытла хура ҫӗлен шуса каҫать. Кӗвенте пек хура ҫӗленсем сехре хӑпартмалла чашкӑраҫҫӗ. Ҫапах Чӗкеҫ шуса ҫӳрекенскерсене хуйхатмарӗ, вӗсем иртсе каймасӑр вырӑнтан та тапранмарӗ.

Кайран пӗлчӗ вӑл: Турикас хӗрӗ ӑна Эмине хушнипе ҫав сукмакпа ертсе кайнӑ иккен.

Чӗкеҫӗн ҫӑнӑх пӗтсе ҫитет. Урапа ҫине пӗр михӗ ыраш хурать те шыв арманне каять. Ҫав вӑхӑтрах унта пӑри миххисем тиенӗ лавпа Турай пырса ҫитет.

— Халӗ мӑрса валли кулачлӑх шур ҫӑнӑх авӑрать. Унтан пӗрмене Турай пӑри ярӗ, ҫавӑн хыҫҫӑн вара чиперккене те черет ҫитӗ, — пӗлтерчӗ арман хуҫин тарҫи. — Ӗҫленипе аллӑр татӑлса ӳкмесен вӑхӑт ирттермелле кӑштах вутӑ татмӑр-ши?

Турайпа Чӗкеҫ вутӑ татса ҫурнӑ вӑхӑтра арман пӳртне Эмине кӗрсе тухрӗ, унта пушӑ михӗ пӑрахса хӑварчӗ. Ӗҫ пӗтерсен каччӑпа хӗр арман пӳртне кӗреҫҫӗ. Вӗсем сӗтел хушшине ларса тӗлӗрсе каяҫҫӗ. Ҫав вӑхӑтра Эмине пӑрахса хӑварнӑ михӗрен хура ҫӗлен шуса тухать, Чӗкеҫ ури патне явкаланса пырать. Хӗр тӗлӗк курать: ун урине Улайкка сӗртӗнет пек, хӑй шӑнса кайнӑ, чӗтрет. Чӗкеҫ ӑна тивмест, ӑшӑнтӑрах ман ура ҫумӗнче тесе шутлать.

Хура ҫӗлен вара Турай ури патне шуса пырать. Каччӑ та тӗлӗк курать: Эмине ун урине сивӗ пӑрпа тӗкет пек. Тарӑхса каять Турай, кӑшкӑрса ярать те пӗрех тапать ӑна. Ҫав самантра сӑхать те ӑна уринчен ҫӗлен.

Турай кӑшкӑрнипе вӑранса кайрӗ хӗр. Урай тӑрӑх ҫӗлен явӑннине курсан ӑна турчӑкапа ҫаклатса алӑкран кӑларса ывӑтрӗ.

— Ай-уй, сӑхрӗ-и? Урунтан-и?

Лешӗ мӗскӗннӗн пуҫне кӑна сӗлтрӗ.

— Пакӑлчакран сӑхнӑ...

— Мӗн пӑхса тӑратӑн тата? Хӑпарт шӑлавар пӗҫҫине! — хаярлансах хушрӗ Чӗкеҫ. Каччӑ хирӗҫленине пӑхмасӑр сӑхнӑ хыҫҫӑн юлнӑ икӗ пӑнчӑна вӑл сӗтел ҫинче выртакан ҫӗҫӗпе касса ҫурчӗ те сурантан юна ӗмсе илсе сурса пӑрахрӗ, тепре ӗмсе илчӗ — каллех сурса кӑларчӗ.

— Мĕн хытса тăратăн? — тинех куланçи турĕ Чĕкеç. Унтан çăварне чӳхеме çăл патне чупрĕ.

Çĕлен сăхсан хушăран çын вилнине те калаççĕ. Турай ун пек инкекрен хăтăлчĕ. Пĕр вăхăт малтанласа пуçĕ çаврăнкаларĕ ĕнтĕ, тепĕр куннех каччă çĕлен сăхни пирки пачах манса кайрĕ. Чун-чĕрине вара ниçта та аптраса ӳкмен Чĕкеç ĕмĕрлĕхех кĕрсе вырнаçрĕ. Пĕр кунхине килтисем шăкăл-шăкăл калаçса ларнине курса Турай хăюлăх пухать те çапла калать:

— Аттеçĕм, аннеçĕм, каçарăр та, пуç тайса ыйтса пăхма шутларăм: мана авланма ирĕк пулмĕ-ши сиртен?

Сивлек сăн-питлĕ Ахмед тинкерӳллĕн арăмĕ çине пăхса илет, унтан канашланă пек пулать.

— Эсĕ мĕнлерех шутлатăн, амăшĕ? Ман шутпа, çул çитнĕ каччă мăшăрланнинине хурлама кирлĕ мар. Çемьере йыш ӳсĕ, тупра çумне хулăм хушăнĕ. Çапла-и, ывăлăм?

— Аплах мар çав, атте. Пулас кинĕр тăлăх турат кăна. Ашшĕ-амăшĕ ун валли мул тавраш хăварайман. — Турай çапла каларĕ те ашшĕ çине хăвăрт пăхса илчĕ. Пĕлет ывăлĕ: ашшĕпе асăрханса калаçмалла. Çил хăй майлă вĕрнĕ чухне вăл çын пекех, çил хирĕçле вĕрсен — унра çын латти пĕтет.

Халĕ те Ахмат пĕрре шурса, тепре кăвакарса кайрĕ, питĕнче юн тĕсĕ пачах юлмарĕ.

— Кам пирки калаçатăн эс? — тăруках сассине хăпартрĕ вăл. — Сан çураçнă хĕр пур. Пӳлĕх умĕнчи çылăхран хăра. Çураçнă хĕр мулĕ сана ĕмĕр пурăнма çитĕ. Арман хуçин урăх ача-пăча çук. Пĕртен-пĕр Эмине çеç. Алманчран кам ирттĕр? Хальлĕхе эпир хуçа. Алманчран кам пуян? Хальлĕхе аçу-аннӳ пуян. Питĕ шеп туй тăвăпăр.

— Ĕç тĕлне пĕлмен Эмине хĕрлех кăвас чĕрес пек мăнтăрланнă. Çĕлен чĕлхине чухлать тенине те илтме пулать ялта ун çинчен. Çитменнине, уринче айăп пур: уксахлать. Мана Чĕкеçех илсе парăр.

— Ка-ма? Эсĕ шухăшласа калаçатăн-и? Эминен ячĕ мĕне тăрать! Мăрса хĕрĕпе пĕр ятлă вăл, — сăнĕ-пуçĕ тискерленнĕ Ахмед ура çине тăрать, урай тăрăх саркаланса та хăлаçланса утма пуçлать.

Ашшӗ-амӑшӗпе калаҫса татӑлаймарӗ Турай. Ашшӗ ывӑлӗпе калаҫнӑ чухне амӑшӗ пӗр сӑмах та шарламарӗ. Турай картишне тухсанах упӑшкине асар-писер тӑвӑл кӑларса тустарчӗ:

— Мӗншӗн кӳрентеретӗн-ха ывӑлна? Юратнӑ хӗрне илме ма чаратӑн? Хӑв мӗнле авланнине мантӑн-им? Чӗлхӳнте ним чарак та ҫук. Пуҫна мӗн килет, ҫавна персе яратӑн. Усал хӗрарӑмла туххӑмрах таҫта та ҫитсе килетӗн, — ай ятларӗ арӑмӗ Ахмеда, ну пӗҫертрӗ. Вӗри ҫатма ҫулаттарманни кӑна.

Ахмечӗ вара арӑмӗн сӑмахӗсене пурпӗр хӑлхине чимерӗ. Тӑрст! ҫапайрӗ чышкипе сӗтеле.

— Ҫитет! Кам хуҫа ҫемьере — эсӗ-и, эпӗ-и? Мӗнле вӑл хӑлха пуҫран иртсе каймалла? Хамӑн ывӑла хам ӑс пама тивӗҫ, унӑн айванлӑхӗ хыҫҫӑн каймӑп, сана та ухмахланма памӑп, — татӑклӑн каласа хучӗ вӑл. Пуҫӗнче вара хӑрушӑ та синкер шухӑш амаланчӗ: «Ҫав арман пӗви мӗншӗн татӑла-татӑла кать-ха? Пӳлӗх умӗнчи ҫылӑхран аякра тӑрар та, пӗвене сыхлама Чӗкеҫе хушмалла мар-ши?» Ахмед васкамасӑр тумланчӗ, арман хуҫи патне тухса сулланчӗ.

Асар-писер ҫил тухрӗ, пӳрт тӑррисене вистерӗ, Чӗкеҫсен вите тӑррине ҫӗре ҫавӑрса ҫапрӗ. Ун хыҫҫӑн ҫумӑр лӳшкерӗ. Ҫумӑр иртсе ҫил тамалсанах Чӗкеҫ пӗр лав пӗлтӗрхи улӑм турттарса килчӗ. Виҫӗ юплӗ вӑрӑм йывӑҫ сенӗкпе улӑма йӑта-йӑта илсе вите тӑррине витме пикенчӗ. Шӑп ҫав вӑхӑтра картишне Турай килсе кӗчӗ, хӗре сывлӑх сунчӗ те ҫапла хушрӗ:

— Эсӗ, Чӗкеҫ, кӗреплепе вите тӑррине хӑпар, улӑмне аялтан эпӗ парса тӑрӑп. Асӑрханулла пул, ан ӳк.

Икӗ ҫамрӑкӑн ӗҫ ӑнса пычӗ. Улӑм ҫӗклесе панӑ майӑн Турай савнӑ хӗрӗ ҫине вӑрттӑн пӑха-пӑха илчӗ. Чӗкеҫӗн сӑнӗ салхуллӑ, анчах вӑл пурпӗр ытармалла мар илемлӗ. Аллиурин кашни хусканӑвӗ килӗшӳллӗ. Вите тӑррине витсен ҫамрӑксем кӑмакара кустарса пӗҫернӗ ҫӗр улми ҫирӗҫ, Чӗкеҫ хатӗрленӗ сулхӑн кӑваса ӗҫрӗҫ.

— Атте-анне мана сана качча илме чарать... — вӑраххӑн пуҫларӗ сӑмахне Турай.

— Чӗкеҫ Турая качча тухма шутламан та, — сасартӑк пӳлчӗ ӑна хӗр. — Сан ҫураҫнӑ хӗр пур. Ҫав хӗр ӗмӗтне татнӑшӑн

Пӳлĕхçĕ мана çитмĕл хут тытса хуçлатĕ, ĕмĕр-ĕмĕр асап кăтартĕ.

— Атте-анне мана Чĕкеçе качча илме чарать, — çав сăмахах тепĕр хут пуçларĕ Турай. — Чунăмçăм, хĕвелĕм, кĕрт мана киле. Куçам эп сан патна пурăнма. Асапне пĕрле тӳсĕпĕр. Вите тăррине çил çавăрса çапсан пĕрле витĕпĕр... — Хĕр чĕнменнине кура Турай ун çине тилмĕрсе пăхрĕ, ăшă-ăшă сăмахсем каларĕ: — Мана çырнă хĕр упраçăн пилĕкĕ çинçе, куçĕ пиçнĕ çĕмĕрт тĕслĕ, çӳçĕ йĕпкĕн хура. Ячĕ Чĕкеç, хăй те çав вĕçен кайăкран пĕртте кая мар...

Хĕр качча итлерĕ-итлерĕ те, унăн пичĕ çине хĕвел çути ӳкнĕ пекех пулчĕ. Ашшĕ-амăшĕ килĕшменнипе Турай çуначĕ пачах хуçăлман иккен. Чĕкеç темшĕн-çке вăтанса кайрĕ, пуçне аялалла пĕкрĕ. Çавăн чухне ĕнтĕ каччă Чĕкеçе пĕрремĕш хут чуптурĕ. Хĕр те унран пăрăнмарĕ. Анчах алманч ывăлĕ Чĕкеç патне киле кĕме ĕлкĕреймерĕ, ашшĕ ăна темиçе лавпа тир тиеттерсе Хусана кăларса ячĕ.

Чуна килĕшекен каччăпа пĕрлешме сăмах татнă хыççăн Чĕкеç çунатланчĕ тейĕн. Пӳртне çуса тасатрĕ, картишне тирпейлерĕ, анкартинче утă çулчĕ. Ун аллинче ĕç вĕресе кăна тăчĕ. Инкек кĕтмен çĕртен сиксе тухрĕ. Хаяррăн вĕрекен Улайкка çĕрле сасартăк йынăшса ячĕ те пачах шăпланчĕ. Ырă мара сиссе Чĕкеç пуртă тытрĕ, картишне тухрĕ. Пĕлмен çав хăюллă хĕр унта хăйне мĕн кĕтнине: ăна йывăç тукмакпа пуçран çапса минретнĕ те шăналăкпа чĕркесе арман пĕви хĕррине йăтса кайнă. Пичĕсене хупăрланă икĕ тискер арçын мĕскĕн хĕр мăйĕнчен йывăр чул çыхса çакнă. Çав хушăра хăйсем пĕрехмай кĕлтунă:

— Эй, Пӳлĕхçĕ, каçар. Çылăх тесе ан шутла, кирлĕрен çапла тума тивет, хуçа хушнипе хĕр пурнăçне тататпăр, — мăкăртатнă пĕри.

— Эсĕ, Чĕкеç, ан кутăнлаш: арман пĕвине лайăх сыхла, татса кайма ан пар, — лăпăртатнă тепри.

Эсреметсем хĕре сулласа шыва пăрахма хатĕрччĕ ĕнтĕ, сасартăк тĕмсем хыçĕнчен темиçен сикрĕç тухрĕç, хăлхасăр та илтмелле кăшкăрса ячĕç:

— Эй, мĕн тăватăр эсир?!

Эсреметсем иккĕшĕ те самантрах куçран çухалчĕç. Вĕсене

усалтан та усал ӗҫе вӗҫне ҫитерме чаракансем Асамат матту-рӗсем пулнӑ иккен. Хӗр мӑйӗнчен ҫыхнӑ сулмаклӑ чула Асамат шыва илсе печӗ, кӗпи ҫухавине вӗҫертрӗ, юн таппине тӗрӗслерӗ.

— Сывлать, чӗри тапать, — кӗҫех пӗлтерчӗ вӑл юлташӗсене.

Виҫӗ кун, виҫӗ каҫ Асамат паттӑрӗсем Чӗкеҫ килӗнчен тухмарӗҫ. Ӑна тӑна кӗрсе вӑй илме пулӑшрӗҫ, усал-тӗсел шухӑшлисенчен сыхларӗҫ. Ҫак вӑхӑтра Турай та Хусантан таврӑнчӗ. Вӑл ҫул ҫӳренӗ хушӑра тӑван ялӗнче мӗн пулса иртнине пӗлсен унӑн чышкисем хӑйсемех чӑмӑртанчӗҫ. Ӑна Асамат лӑплантарчӗ: «Пӳлӗх курать, вӑл суккӑр мар. Мӗнле тавармаллине вӑл пире калӗ. Эпир вара канлӗх кӗтместпӗр, ҫӑмӑллӑх шырамастпӑр, пусмӑра хирӗҫ тӑратпӑр», — шантарчӗ вӑл Турайпа Чӗкеҫе.

Каччӑпа хӗртен вӗсем ҫывӑх тӑвансем пекех алӑ парса та ыталашса уйрӑлчӗҫ. «Кирлӗ пулсан мана Ахрат варӗнче шыра», — шӑппӑн пӗлтерчӗ Асамат Турая тухса каяс умӗн.

Пӗр-ик кунран Алманчра ҫӑвартан ҫӑвара хыпар сарӑлчӗ: арман хуҫи ҫухалнӑ, вилли те ҫук. Унтан ялти инкесем тепӗр хыпар шӗкӗлчерӗҫ: Чӗкеҫ патне Турай киле кӗнӗ тет. Алманчра чӑнах та ҫӗнӗ ҫемье ҫуралать. Анчах ҫӗнӗ ҫынсен телейӗ вӑраха пымасть. Вӑхӑтсӑр ҫӗре кӗнӗ тимӗрҫӗн шанчӑклӑ тусӗ Тевет пӳлев тӑшмансем ҫамрӑк мӑшӑрӑн кил-ҫуртне хӗрлӗ автан ярасси ҫинчен ятарласа килсе систерет.

— Ватӑлтӑм ӗнтӗ. Шӑммӑм-шаккӑм чарӑнмасӑр сурать. Мана халь тин нимӗн те кирлӗ мар. Тен, телей курма сирӗн урӑх вырӑна куҫса каймалла? — пулчӗ ун сӑмахӗ. Теветӗн кӑмӑлӗ пусӑрӑнчӑк, сӑнӗ пӑшӑрхануллӑ. Кӑкӑрӗнчен сывлӑш йывӑррӑн тухать.

Вӑл нумай каласса тӑмарӗ. Тевет мӗн калани Турай пуҫӗнчен пӗртте тухмарӗ.

— Чӑнах та, пурӑнма май ҫук кунта. Тухар та каяр ирӗк ҫӗрелле. Пирӗншӗн те телей пӗтмен пулӗ-ха, ӑҫта та пулин тупӑпӑрах, — шухӑш тытрӗ Турай.

Халиччен куҫҫуль кӑларса курман Чӗкеҫ йӗрсе ячӗ, пуҫӗпе упӑшки кӑкӑрӗ ҫумне тӗршӗнчӗ.

— Аттен хуран тулли ылтăн укçа, арча тулли хут укçа. Хăшне илме хушатăн? — ыйтрĕ Турай арăмĕ чĕнменнине кура.

— Мĕн калаçатăн эс? Эпир вăрă-хурах мар вĕт. Анчах пĕр ут аçу-аннӳнтен тивĕçлех сана. Ĕç лаши суйласа ил — кирлĕ пулĕ. Эпĕ хамăрăн хăлапа пырăп, — хуравларĕ Чĕкеç.

Тĕттĕм каç вĕсем лакăмпа сăра, шăрттан, хăпарту илеççĕ, иккĕшĕ икĕ ут утланаççĕ, инçе çула тухаççĕ.

— Сĕт çулĕпе кайăр, çу çулĕпе çӳрĕр, — ырă сунса ăсатрĕ çамрăк мăшăра ырă кăмăллă Тевет. Чĕкеçе вара çакă тăван ашшĕ пехиллесе ăсатнă пекех пулчĕ. Икĕ юлан ут куçран çухалсан та Тевет вĕсем кайнă еннелле чылайччен пăхса тăчĕ, пуçне пăркаларĕ, çине-çинех ассăн сывларĕ. Унăн кăмăлĕ хурланчăк, сăнĕ хуйхăллă, чунĕ ыратмаллипех ыратать.

Телей шыраса кăнтăралла каяççĕ хастар чĕреллĕ çамрăксем. Пĕр яла та кĕмеççĕ, пăрăна-пăрăна иртеççĕ. Кăнтăрла улах вырăнта утсене курăк çине тăлласа яраççĕ, шăвараççĕ, каçпа каллех çула тухаççĕ. Виççĕмĕш каç Аслă Пăла юхан шыв хĕрринчи чăваш ялĕ Аслă Патăрьел хыçа тăрса юлать. Ир енне тепĕр юхан шыв урлă каçаççĕ, хыр вăрманне кĕреççĕ.

— Миçе çухрăм килтĕмĕр-ши? Нивушлĕ пире шырама çакăнта çитиех тапаçланĕç? — упăшкине куçĕнчен чăр-р пăхрĕ Чĕкеç.

— Вырăн килĕшет-и сана? Эппин, ӳпле тăвар, — сĕнчĕ Турай.

Хырлăхри лапамра пысăк ӳплере çĕнĕ çынсем эрне ытла пурăнаççĕ. Турай пушăт касать, сунара çӳрет, Чĕкеç йĕкел, кăмпа пуçтарса типĕтет, пилеш татать. Кунта вĕсене вăрăм туна пит аптăратса çитерет. Çавăнпа вăрмантан тухса юхан шыв тепĕр енче çĕр пӳрт чаваççĕ, унта пурăнаççĕ. Икĕ ывăл çуратса ӳстереççĕ вĕсем. Асли, Упи ятли, Патирекрен хĕр илсе килет, унпа пĕрлешет те сунара çӳреме ирĕк пултăр тесе пĕр пилĕк çухрăма пурăнмаллипех куçса каять. Кĕçĕнни, Сарпаттăр, ашшĕпе пĕрле юлать. Çапла никĕсленеççĕ иккĕмĕш Алманчăпа Упи ялĕсем. Эппин, алманчсемпе написем, пурте Турайпа Чĕкеç, Сарпаттăрпа Упи несĕлĕсем пулаççĕ.



# Сĕт кӳлли

Ĕлĕк-авал, Çĕрĕк Çăпата патшара ларнă çулсенче, пичке хырăмлă, кĕреçе питлĕ çĕрме пуян Вунпӳ пуряннă, вăл вунă яла тытса тăнă. Унăн ачаш хĕрĕ Ачăла пулнă. Ăна тăлăх турат Тăхăла пăхнă. Ачăла лутака пӳллĕ, шатра питлĕ пулнă, çапах ăна пике тенĕ. Тăхăла улма пек те çырла пек пулнă, çапах ăна хăрхăм тенĕ. Ачăлан капăр тумне укапа, кĕмĕл тенкĕпе эрешленĕ. Тăхăла шăла пир кĕпепе çӳренĕ.

Пасар пĕрле те, телей расна теççĕ çав. Ачăла çу çинчи тăпăрч пек савăнса пуряннă, Тăхăла ир те, каç та куççульпе шапарнă. Ачăла умĕнчен пылпа шерпет нихăçан та татăлман, хăймаллă сĕт лекнĕ. Тăхăла тăраниччен çăкăр çисе курман, шывне те куççульпе хутăш ĕçнĕ. «Пĕрех хутчен курка сĕт çиййĕттĕм, вара вилсен те вилĕттĕм», — ĕмĕтленнĕ Тăхăла. Ача чухне ăна асламăшĕ таçти-таçти çĕршывра Сĕт кӳлли пуррине пĕлтернĕ. Çак кӳлĕ çинчен хĕр час-часах шухăшланă, ăна каç-каç тĕлĕкре курнă. Тĕлĕкĕнче вăл çав кӳлĕ хĕрринче çӳренĕ, ыйхăран вăрансан — каллех тамăка кĕрсе ӳкнĕ. Патак çимен кун пулман ун! Хуçисем ăна сӳс пушăпа систернĕ, чĕн пушăпа чĕнтернĕ, тепĕр чухне ларайми-тăрайми пуличченех хĕненĕ.

Тем тĕрлĕ те шухăшланă Тăхăла, йывăр пурнăçран хăтăлма ĕмĕтленнĕ. Анчах ку саплăк сӳтсе пăрахасси мар çав.

Хуçа хĕрĕ Ачăла шутсăр кĕвĕç чунлă пулнă. Вăл ĕç тăвас шутпа пилĕкне авса курман, хĕр пулса ӳссе йĕп тытса витĕрмен, Тăхăлана чăтма пултарайман, ун çинчен элек сармасăр, ăна нехек кăтартмасăр пĕр кун ирттермен, апла та элекленĕ, капла та суеçтернĕ.

— Тĕсне курас килмест çав хăрхăмăнне, сассине илтсен хăсăк тухать. Пĕлместĕп, мĕншĕн усратăр пуль вăл харам пыра...

Питĕ ĕçчен пулнă Тăхăла. Хĕвелтен малтан тăрса сĕм çĕрлечченех çĕрме пуян ĕçне тунă, çынсем çывăрма выртсан тĕрĕ тĕрлеме пикеннĕ. Ытла та хўхĕм тĕрлеме пĕлнĕ вăл. Ку ăсталăха ăна асламăшĕ вĕрентнĕ, вилес умĕн вăл çапла халалласа хăварнă:

— Эх, хĕрĕм, манран телей курасси пулмарĕ, пĕрех хут сан пуçна инкек тивмин лайăхчĕ. Эс çитĕнсе çитиччен шăммăм витĕр те курăк шăтĕ, анчах ман сăмаха ан ман: лўппер ан пул, вăрт-варт пул. Сылтăм аллу тунине сулахай аллу ан систĕр. Ăраскална тупас тесен хăвна валли телей тутăрĕ тĕрле. Ăна тĕрлеме хĕрĕх те пĕр çип тупмалла, çипне ирхи сывлăм шывĕпе хĕрĕх те пĕр хут çумалла та хĕрĕх те пĕр çилпе типĕтмелле.

Асламăшĕ вĕрентсе хăварнă пекех тунă хĕр. Хĕрĕх те пĕр тĕрлĕ çип тупнă, çипне ирхи сывлăм шывĕпе хĕрĕх те пĕр хут çунă та хĕрĕх те пĕр çилпе типĕтнĕ, вара телей тутăрĕ тĕрлеме пикеннĕ. Ку калама çук кăткăс ĕç пулнă. Йĕп часчасах тирĕннĕрен хĕр пўрнисем шыçса кайнă, чăтмалла мар сурса ыратнă. Çапах вăл пĕр пуçăннă ĕçе пăрахман, хăвăртрах тĕрлесе пĕтересшĕн пулса çĕрĕ-çĕрĕпе куç хупман. Тĕрленĕ май шăппăн юрă ĕнĕрленĕ. Тĕрленĕ те юрланă, юрланă та тĕрленĕ. Юрри йĕрсе ямалла хурлăхлă пулнă:

> Уй варринчи тункати,
> Çил тивменни пĕр кун çук.
> Тăлăх турат пуçăм пур,
> Хурлăх курман пĕр кун çук.

Ăшне пусарма телейсĕр Тăхăлан пĕр чун кăна пулнă: лаптăк тăраллă пĕр пĕчĕкçĕ пўртре тăр пĕчченçи тăван шăллĕ пурăннă. Анчах Вунпў хăйĕн тарçи-тĕрçисене яла çўретмен, Тăхăлан шăллĕне те аппăшĕ патне кермене кĕртмен.

Çăлтăр та вĕçсĕр çунмасть, унăн та çути пĕтет. Çавнашкалах Тăхăла та йывăр пурнăçа чăтайми пулса çитет. «Мĕн пулать-килет, тухам та тарам, Сĕт кўлли çĕршывне шырам!» — шухăшлать вăл. Ăна телей тутăрне тĕрлесе пĕте-

рейменни чарса тăрать. Тăхăла çил пулать, тăвăл пулать, тутăрне тĕрлесе пĕтермеваскать. Хăвăрт ĕçленĕрен унăн сылтăм алли мĕн тунине сулахай алли сиссе те юлаймасть. Пĕр касхине вăл юлашки тĕрре туса çитерет. Хĕр тутăр çине пăхать те хăй ĕçĕнчен хăй тĕлĕнет: телей тутăрĕ вутăн-хĕмĕн çунса тăрать, хĕвел пек те уйăх пек йăлтăрать, çӳçисем-шереписем вĕл те вĕл вĕçеççĕ. Тăхăла тутăра хулĕ урлă уртса ярать, вара калама çук илемленсе-чиперленсе каять. Çавăн чухне ăна Ачăла курнă пулсан кĕвĕçнипе супăнь хăмпиллех çурăлса кайнă пулĕччĕ.

Тăхăла нумай шухăшласа тăмасть, Вунпӳ керменĕнчен вăрттăн шăвăнса тухать, ăçталла куç курать — унталла каять. Сĕт кӳллине шырать. Куран-пĕр тĕлĕнет çак чипер хĕртен: утпа пыран анса пăхать, çуран пыран чарăнса тăрать.

Шав малалла пырать хĕр, утнă çĕрте утать, чупнă çĕрте чупать. Сахал каять-и, нумай-и, кайсан-кайсан вăл пĕлĕт хĕррин леш енчи, хыр вăрманĕ хĕрринчи çӳллĕ чул ту патне пырса тухать. Пăхать те тĕлĕнсех каять Тăхăла: кунта Турай паттăр асапланать-мĕн. Турай паттăр та, Тăхăла пекех, Вунпӳ тарçи пулнă. Теветкел пуçлăскер, вăл Вунпӳ тарçи-тĕрçине хăй майлă çавăрнă та çĕрме пуяна хирĕç пăлхав пуçарса янă. Çĕнтереймен çав шеремет пăлхавçăсем. Пăлхав пуçĕ Турай паттăр выçă кашкăртан та хаяр Вунпӳ аллине çакланнă. Вара Вунпӳ эшкерĕ Турай паттăра пĕлĕт хĕррин леш енчи, хыр вăрманĕ хĕрринчи чăнкă чул ту çумне çĕр те пĕр сăнчăрпа сăнчăрласа хунă. Ту тăррине упăте пуçлă, алтăр куçлă вунă тискер упана тăратнă. Упасем тем пысăкăш чулсене Турай паттăр çинелле кустара-кустара ярасçĕ. Харсăр паттăр çав чулсене аякалла ывăтать, питĕнчен шăпăр-шăпăр тар юхать.

— Эй, мăнтарăн этемĕ, — тет Тăхăла куççуль витĕр, — сан асапун вĕçĕ-хĕрри пур-ши е çук-ши?

Турай паттăр çын сассине илтсе пĕр самантлăха кăна çаврăнса пăхать те юмахри евĕр акăш-макăш чипер хĕре курать. Хĕр тутăрĕ вутăн-хĕмĕн çунса тăрать, хĕвел пек те уйăх пек йăлтăртатать, çӳçисем-шереписем вĕл те вĕл вĕçеççĕ.

Юраман çав Турай паттăра çаврăнса пăхма: пĕр кĕрĕс-мĕрĕс чул ăна кăкăрĕнчен пырса лекет те, Турай паттăр ешĕл курăк çине тĕшĕрĕлсе ӳкет, мăшăр куçĕ самантрах сӳнсе хупăнать.

Ҫакна курсан упăте пуҫлă, алтăр куҫлă тискер упасем савăннипе ахăл-ахăл кулма пуҫлаҫҫĕ. Чунĕ кӳтсе килнипе Тăхăла ача пек ĕсĕклесе йĕрсе ярать:

— Хамăн ăраскал ҫукки ҫитмест, мана пула мĕнешкел паттăр вилсе выртрĕ... Ăҫта-ши ман телейĕм?..

Хĕр ҫапла калама ĕлкĕрет ҫеҫ, ҫĕр виҫĕ хутчен унталла та кунталла чĕтренсе илет те, каласа та ĕненес ҫук, хĕр умне ватăла пĕлми, ĕмĕрне вилми чипертен те чипер каччă тухса тăрать, пуҫ таять те ҫапла калать:

— Эп Телей ятлă, ҫĕнми хăватлă. Ман ятпа тутăр тĕрлекеншĕн виҫĕ хутчен тарҫă пулатăп, мĕн ыйтнине пикешĕн ыйтнă пекех тăватăп!

— Эп пике мар, хăрхăм ҫеҫ. Мана пула Турай паттăр вилсе выртрĕ. Ман пĕрремĕш ыйту ҫакă пултăр, ăна пурнăҫлама сан вăю пултăр: чĕртсе парччĕ каччăна, чун кĕртсемччĕ эс ăна! — тилмĕрет Тăхăла.

Телей паттăр хĕвелтухăҫнелле ҫаврăнса тăрать те хăвăрттăн сăвăлама пуҫлать:

— Ип пултăр, сип пултăр, мĕн калани пур пултăр! Тăхăла пике ыйтнипе, Телей паттăр хушнипе Турай паттăр чĕрĕлсе тăтăр! Ҫĕр те пĕр сăнчăр татăлтăр!

Телей паттăр ҫапла калама ĕлкĕрет ҫеҫ — Турай паттăр вăштах сиксе тăрать те Тăхăлапа Телей паттăра тав тăвать, ырлăх-сывлăх сунать. Телей паттăр ик ҫамрăкпа сывпуллашать те, кĕҫех вăл тăнă вырăнта тĕтре кăна юлать.

— Манăн халь ĕҫпе васкамалла... Кăмăлу пулсан атя пĕрле, — сĕнет Турай паттăр хĕре.

— Манăн хам ҫитес ҫĕре ҫитмелле, ху пыр манпа, — хуравлать Тăхăла.

Вĕсем алă тытса сывпуллашаҫҫĕ те иккĕшĕ ик еннелле уйрăлса каяҫҫĕ. Тăхăла Сĕт кӳллине шыраса ăҫталла куҫ курать, унталла каять. Шав малалла пырать вăл, утнă ҫĕрте утать, чупнă ҫĕрте чупать. Сахал каять-и, нумай-и, кайсан-кайсан ывăнса ҫитет, вăй-халĕ те пĕтет. Сĕт кӳллине ҫаплах тупаймасть. Тăхăла ҫул ҫинче ларать те хуйхăрса йĕме пуҫлать.

— Эй, мĕскĕн пуҫăм! Мĕншĕн ăраскалсăр-ши эпĕ? Ăҫта-ши ман телейĕм?..

Унччен те пулмасть — ҫӗр виҫӗ хутчен унталла та кунталла чӗтренсе илет те, хӗр умне ватӑла пӗлми, ӗмӗрне вилми чипертен те чипер каччӑ тухса тӑрать, пуҫ таять те ҫапла калать:

— Эп Телей ятлӑ, ҫӗнми хӑватлӑ. Ман ятпа тутӑр тӗрлекеншӗн хапӑл тусах тарҫӑ пулатӑп, мӗн ыйтнине пикешӗн ыйтнӑ пекех тӑватӑп!

— Эп пике мар, хӑрхӑм ҫеҫ. Ман иккӗмӗш ыйту ҫакӑ пултӑр, ӑна пурнӑҫлама сан вӑю пултӑр: ман Сӗт кӳлли ҫӗршывне тупасчӗ, унта ырлӑх курса пурӑнасчӗ, — тилмӗрет Тӑхӑла.

Телей паттӑр хӗвелтухӑҫнелле ҫаврӑнса тӑрать те хӑвӑрттӑн сӑвӑлама пуҫлать:

— Ип пултӑр, сип пултӑр, мӗн калани пур пултӑр! Тӑхӑла пике ыйтнипе, Телей паттӑр хушнипе Сӗт кӳлли ҫӗршывне кайма ҫул пултӑр!

Телей паттӑр ҫапла калама ӗлкӗрет ҫеҫ — Тӑхӑла ури вӗҫнех асамат кӗперӗ пурҫӑн тилхепе пек карӑнса анать. Вӑл ҫитмӗл те ҫичӗ тӗспе ҫиҫет, унваррипе, крыльца ҫинчи евӗрлӗ, картлаҫсем ҫӳлелле тӑсӑлаҫҫӗ.

— Ман ятпа тутӑр тӗрлекеншӗн тата тепӗр хут тарҫӑ пулатӑп, мӗн ыйтнине пикешӗн ыйтнӑ пекех тӑватӑп! — тет хайхи Телей паттӑр. Ҫавӑн хыҫҫӑн вӑл тӑнӑ вырӑнта тӗтре кӑна юлать.

Асамат кӗперӗ ҫинчи картлаҫсем тӑрӑх ҫӑмӑллӑн утать Тӑхӑла. Утсан-утсан хӗвелтен инҫетри, уйӑхран аякри акӑшмакӑш чаплӑ ҫӗршыва пырса тухать вӑл. Кунта пахчан-пахчан улмуҫҫи ӳсет, чи тӑрринчи сар улми хӗр алли татасса кӗтет. Сад варринче куҫпа виҫейми пысӑк кӳлӗ пур. Тӑхӑла кӳлӗ ҫине пӑхать те шалтах тӗлӗнет: кӳлӗ шывӗ шӗвви шӗвӗ, анчах шыв мар, шурри шурӑ, анчах юр мар. Пирӗн хӗр ӑна астивсе-тутанса пӑхать. Ак хайхи, шыв та мар, мӗн те мар, ытарайми тутлӑ сӗт иккен. Тӑхӑла хӑй сӗт кӳллине тупнине тинех ӑнкарса илет.

Ыр курса та савӑнса пурӑнать вӑл ҫак ҫӗршывра. Эрне хыҫҫӑн эрне иртет, уйӑх хыҫҫӑн уйӑх иртет. Анчах Тӑхӑла кунран-кун кичемленсе пырать, ӑшӗ вӑркама пуҫлать. Йӑ-



лӑхтарать пикене кӳлӗри хӑймаллӑ сӗт, садри хӗрлӗ улмасем те ӑна текех илӗртмеҫҫӗ. Темшӗн-ҫке ӑна тӑван ялӗ часчасах аса килет, куҫӗ умне хӑй ҫуралса ӳснӗ лапчӑк тӑрӑллӑ пӗчӗкҫӗ пӳрт туха-туха тӑрать. Хӑлтӑр-халтӑр та тӑйлӑктайлӑк вӑл пӳрт, пурпӗр шухӑш ҫав киле вӗҫе-вӗҫе ӳкет, пурпӗр кӑмӑл ун еннелле туртӑнать. Хӗр чӗри ӑнланми тунсӑхпа хӗсӗне-хӗсӗне илет. «Ӑҫта ҫӳрет-ши Турай паттӑр? Аса илет-ши вӑл мана?» — шухӑшлать Тӑхӑла. Акӑ вӑл, юмахри евӗр хитрескер, Сӗт кӳлли хӗррине тухса тӑрать. Кунти ҫӗршывра садсем ешернӗ вӑхӑт, ҫулҫӑ сарӑлнӑ вӑхӑт, Тӑхӑла пикен вара — ӑшӗ ҫуннӑ вӑхӑт. Вӑл тӑван ҫӗршывӗ еннелле тунсӑхлӑн ӑнтӑлса тинкерет те кӗрхи кун пек салхуланса каять. Ютри телей — телей мар иккен. Ҫӗрме пуян патӗнче пурӑннӑ чухнехи пекех, Тӑхӑла хурлӑхлӑ юрӑ пуҫарать:

Уй варринчи ут кӑшкарӗн
Ҫулҫи вӑр-вӑр ай ҫаврӑнать,
Вӑрри шӑпӑр ай тӑкӑнать.
Тӑван яла аса илсен
Ӑш-чик вӑр-вӑр ай ҫаврӑнать,
Куҫҫуль шӑпӑр ай тӑкӑнать.
Мӑн шыв юхать ай сарлака,
Каҫӑ хурсан — каҫӑ ҫитмест,
Кӗпер хывсан — кӗпер ҫитмест.
Ҫуралнӑ ял ман аякра,
Хыпар ярсан — хыпар ҫитмест,
Салам ярсан — салам ҫитмест.

Пуҫ тӗлӗнчен хур кайӑксем какӑлтатса иртеҫҫӗ. Тӑхӑла ҫав вӗҫен кайӑксем хӑйӗн килӗ еннелле вӗҫнине курать те — чӗрине ҫӗҫӗ кӗнӗ пекех пулса каять. Вара пирӗн хӗр Сӗт кӳлли хӗррине ларать те хуйхӑрса йӗме пуҫлать:

— Эх, мӗскӗн пуҫӑм! Мӗншӗн ӑраскалсӑр-ши эсӗ? Ӑҫта-ши ман телейӗм?..

Унччен те пулмасть — ҫӗр виҫӗ хутчен унталла та кунталла чӗтренсе илет. Хӗр умне ватӑла пӗлми, ӗмӗрне вилми чипертен те чипер каччӑ тухса тӑрать, пуҫ таять те ҫапла калать:

— Эп Телей ятлӑ, ҫӗнми хӑватлӑ. Ман ятпа тутӑр тӗрлекеншӗн хапӑл тусах тарҫӑ пулатӑп, мӗн ыйтнине пикешӗн ыйтнӑ пекех тӑватӑп!

— Эп пике мар, хӑрхӑм ҫеҫ. Ман юлашки ыйту ҫакӑ пул-

тăр: манăн тăван яла каялла таврăнасчĕ, Турай паттăра курасчĕ, — тилмĕрет Тăхăла.

Телей паттăр хĕвелтухăçнелле çаврăнса тăрать те хăвăрттăн сăвăлама пуçлать:

— Ип пултăр, сип пултăр, мĕн калани пур пултăр! Телей паттăр хушнипе, Тăхăла хăй ыйтнипе куç уçса хупнă çĕре вăл тăван ялĕнче пултăр, харсăр Турай паттăра куртăр!

Тăхăла куçне хупса уçать те тăван ялне курах каять. Чӳлмек лартнă мăрьесенчен тĕтĕм мăкăрланать. Вунпӳ керменĕ çывăхĕнче темле çынсем хĕвĕшеççĕ, те ырă ĕç, те усал ĕç тăваççĕ. Пике тинкерсе пăхать те çакна ăнкарса илет: кунта Турай паттăр Вунпӳ эшкерĕпе çапăçать иккен. Харсăррăн çапăçать вăл: сулмассерен сукмак тăвать, çапмассерен çул хывать. Çапах ăна Вунпӳ эшкерĕ хĕснĕçемĕн хĕсет.

Тăхăла хăвăрт тăван килĕ еннелле чупать, ури çĕре тивнĕ çĕрте тивет, тивмен çĕрте тивмест. Хĕр лапчăк тăраллă пĕчĕкçĕ пӳрте чупса кĕрет.

Шăллĕ çав вăхăтра ал арманĕпе мăян вăрри авăртнă пулнă. Çăкăр пĕçерме ĕнтĕ!

— Пăрах, шăллăм, ĕçне, хура халăха пухмалла, Турай паттăра пулăшмалла! — хушать ăна Тăхăла.

Шăллĕпе аппăшĕ ял тăрăх пĕр килтен тепĕр киле чупаççĕ, хура халăха кар тухма, Турай паттăра пулăшма йыхравлаççĕ.

Акă ĕнтĕ, кур ĕнтĕ, тăйлăк-тайлăк çуртсенчен, лăчăр-лачăр лаççенчен кар тăрса халăх тухать, Турай паттăра пулăшма чупать.

Кĕрешӳ те çапăçу хĕрсех каять. Турай паттăр малта çапăçать. Анчах Вунпӳ те парăнмасть, упăте пуçлă, алтăр куçлă тискер упасене чĕнсе илет.

Çав вăхăтра çĕр виçĕ хутчен унталла та кунталла чĕтренсе илет те, хура халăх умне ватăла пĕлми, ĕмĕрне вилми чипертен те чипер качча тухса тăрать, пуç таять те çапла калать:

— Эп Телей ятлă, çĕнми хăватлă. Хам ирĕкпе, кăмăл туртнипе тĕрĕс ĕç тарçи пулатăп, халăх майлă тăратăп!

Телей паттăр кĕçех Турай паттăрпа юнашар пырса тăрать те тискер упасене чукмарпа хирме пуçлать. Иккĕн сулаççĕ — икĕ сукмак пулса тăрать, иккĕн çапаççĕ — икĕ çул

пулса тăрать. Икĕ паттăра хыçалтан хура халăх пулăшать. Тӳсеймест Вунпӳ эшкерĕ, тарса-тарса пырать те çĕр хăвăлне чăма парать. Пичке хырăм, кĕреçе пит Вунпӳ те унтах кĕрсе ӳкет. Хыçранах ун ачаш хĕрĕ Ачăла та çĕр хăвăлне анса каять. Турай паттăрпа Телей паттăр халăх пулăшнипе çӳллĕ сăрта ишсе антараççĕ те çĕр хăвăлне хупласа хураççĕ.

Телей паттăр хура халăха, унтан Турай паттăрпа Тăхăла пикене уйрăммăн пуç таять те çапла калать:

— Пĕлетĕр ĕнтĕ: эп Телей ятлă, çĕнми хăватлă. Йышăнăр мана хăвăрпа пĕрле пурăнма!

Хура халăх савăнать, Телей паттăра хапăл туса йышăнать. Çавăнтанпа телей халăх хушшинче пурăнать, килтен киле кĕрсе çӳрет. Ăçта кĕрет — унта кил-çурт тулăх пурнăçпа тулать, сĕт-турăхпа çу-тăпăрчă кĕрекене ларать.

Вунпӳ эшкерне тĕп тусан Турай паттăр пике патне тав тума пынă. Çав вăхăтра лăпкă çилĕ ăшшăн-ăшшăн вĕрме тытăннă, хĕвелĕ çутăрах çутатма пуçланă. Телей илемлетнĕрен-ши, хĕр чăнах та куç илмелле мар хитре пулнă. Каччă çине Тăхăла çав тери ырă кăмăлпа именсе пăхнă, савăннипе чĕри кăлт та кăлт сикнĕ. Ун пуçĕнче хăй тĕрленĕ телей тутăрĕ вутăн-хĕмĕн çунса тăнă.

Унтанпа вăхăт нумай иртнĕ-и, сахал-и, ку пире паллă мар, сире те ку кирлĕ мар, Турай паттăрпа Тăхăла пике мăшăрланнă. Ыр курса та савăнса пурăнма тытăннă вĕсем.

Тăхăла патĕнче эп те пулса куртăм. Таçти-таçти çĕршыври Сĕт кӳлли çинчен вăл маннă ĕнтĕ. Чун-чĕрепе тăрăшсан Сĕт кӳлли хамăр ялтах тума пулать.

* * *

Çĕр чăмăрĕ çинче тулăх пурнăçа ырми-канми ĕç тытса тăрать. Турай паттăрпа Тăхăла кин чăннипех те мухтавлă ĕçченсем пулнă. Хальхи яш-кĕрĕмĕн те вĕсем пек пуласчĕ, хăйсен хастарлăхĕпе пĕтĕм халăха тĕлĕнтересчĕ. Хаваслă хастарлăх халăха хавхалантарать, хĕпĕртеттерет. Паттăрсен хăвачĕ пире харсăрлăхпа хăюлăх парать.

*Патăрьел районĕнчи Алманчăри К. Степанова халапĕ тăрăх йĕркеленĕ.*



Асаматпа Илемпи

Асамат — ёҫчен тимӗрҫӗ. Сухапуҫ тимӗрӗпе сӳре шӑлӗ, ҫавасурла, пӑчкӑ-пуртӑ ӑсталать тӑван ялӗнчи тата кӳршӗ ялсенчи ҫынсем валли. Тем те тума пултарать, халӑха мӗн кирлине йӑлтах хӑй янтӑлать. Тимӗрҫӗ лаҫҫинче Асамат ир пуҫласа каҫчен, пӗрмай хӑйӗн ёҫне тӑвать. Ҫак маттур тимӗрҫӗ сӑран атӑпа ҫӳрет, атти тӗпӗ ҫырулла, пуснӑ йӗрӗ эрешлӗ.

Ытарайми хитре Илемпи ялта чи пултарулла ал ёҫ ӑсти. Ун тӗррисем ҫумӑр хыҫҫӑнхи хӗвеллӗ ҫанталӑк пек ҫуталса тӑраҫҫӗ. Вӑл ҫыхнӑ чӗнтӗр кирек кам куҫне те илӗртет. Илемпи тӗртнӗ капӑр кавир чечеклӗ улӑха аса илтерет, кил-ҫурта илем кӳрет.

Ал ёҫ туман хӗрсене шараҫ пирӗ мӗн тума? Тӗрре пӗлмен хӗрсене сар пурҫӑн та кирлӗ мар. Ӳркевсӗр Илемпие вара, ҫаксемсӗр пуҫне, ука та кирлӗ, вӗт шӑрҫа та кансӗрлемест.

Асамат тем шырать именчӗк хӗр ҫумӗнче, каях тӑрать ун килне, ӑна мӗн кирлине пӗрмаях тупса пама тӑрӑшать. Илемпин пилӗкӗ ҫинҫе, сӑнӗ чипер, пичӗ ҫинче хӗвел ҫути пур. Асамат савнийӗ таҫтанах хитрен курӑнать: икӗ тӑнлавне икӗ сар кӑтра капӑрлатать. Ҫапла, тӗлӗнтерет вӑл тӗррипе, ӑмсантарать ӑсӗпе, савӑнтарать сӑнӗпе.

Пӗр-пӗрне чун-чӗререн савакан каччӑпа хӗршӗн инкек кӗтмен ҫӗртен килсе тухнӑ.

Ҫав таврара, сӑрт-ту тӗлӗнчи синкерлӗ пӗлӗтсем хыҫӗнче, ҫут тӗнчен чи ҫӳлти хутӗнче, акӑш-макӑш сарлака ҫунатлӑ, виҫӗ пуҫлӑ пысӑк ҫӗлен — тискер Аҫтаха пурӑнать. Ку эсремет — таврари ҫӗлен-калта патши. Вӑл шунӑ ҫӗрте шӑвать,

лапăстатнă çĕрте лапăстатать. Çынна та, выльăха та, ытти чĕр чунсене те тиркемесĕр хыпа-хыпа çăтать. Çĕлен çĕлене кăна çимест. Малтан алтăр пек куçĕпе çиçĕм çиçтерет, çĕлен хырăмне кĕрес чунăн куçĕ алчăраса каять, унтан Аçтаха ăна хўрипе çапать — лешĕн пуçĕ минрет. Çавăн чухне хыпса çăтать те ĕнтĕ Аçтаха алчăранă та минренĕ чĕр чуна. Хăй те хăрушă, хăямат сарлакăш çăварĕ тата хăрушăрах. Усал сывлăшне пĕрре вĕрсе кăларать те, таврара вичкĕн çил выляма тытăнать: йывăç тăррисене авăнтарать, юртакан ута тăрататать. Çил алхаснă вăхăтра авăнаканни авăнса юлать, лутăрканаканни лутăрканса юлать.

Аçтаха тепре вĕрет — асар-писер çавра çил кăларать: йывăççем çĕре çити тайăлаççĕ, утса пыракан ут кукленсе ларать, тăракан çын хутланать, чĕркуçленет. Куç уçмалла мар çавра çил вăхăтĕнче ванаканни ванса юлать, çĕмĕрĕлекенни çĕмĕрĕлсе юлать.

Аçтаха виççĕмĕш хут вĕрет — юхтаракан çумăрлă, çунтаракан çиçĕмлĕ акăш-макăш хăрушă тăвăл тапранать: йывăççем шатăрт та шатăрт! хуçăлаççĕ, кукленнĕ ут лапах тўнет, чĕркуçленнĕ çын йăвансах каять. Хуçăлнине çумăр шывĕ çаврăнса тарăн авăра юхтарать, тўнни-йăванни таçта хăямата юхса кайса çухалать.

Шавлă ĕçкĕ-çикĕ мар, çурла-çава сасси мар, ял варринчех Аçтаха янăрашать, урăм-сурăм çуй тăвать. Ши-ши! шăхăрать, пĕтĕм яла ян ярать. Хĕвел ансан тапратать, лăпах çур çĕрччен шавлать. Кўпсен-чыхсан кĕленче керменне таврăнать, кунĕпех ыйха туртать.

Аçтаха вĕрни-шăхăрни çитмĕл çичĕ çухрăмран илтĕнет. Ăна илтсен шикленекенни сехрине хăпартать, сехĕрленекенни чĕтрене ерет. Шиксĕр чĕр чун кăна пуç усмасть, урипе çĕре кукалет, хăрушлăх еннелле тăпра сирпĕтет. Паттăр çын кăна хăнк та тумасть, пуçне ялт çĕклет, хăрушлăха хирĕç кăкăрĕпе тăрать.

Ял-ял хушшине Аçтаха килсе çапăнсан çанталăк та пăсăлать, асар-писер çил-тăвăл тапранать, кўлĕре хума хум хашка-хашка хăвалать. Синкер хура пĕлĕт пек çĕрле вĕçе-вĕçе килет Аçтаха. Чăваш çĕрĕ тăрăх каскăн вăрă-хурахла çўрет, инкек те синкек кўрет. Çăткăнран хăтăлма халăх çырма-çат-

рана, вăрмана-катана тарса пытанать, хăйпе пĕрле вырăнтыхчĕрлĕхне те хӳтерет.

— Ах тур, тур, тур! Пĕтерет ку пирĕн пурнăçа пĕтĕмпех! — ахлатаççĕ арçынсем ахрат çырминче.

— Мĕн-ма инкăр-ханкăра анса каймасть çав Аçтаха! — тарăн варта тарăхаççĕ теприсем.

Хĕрарăмсем хурланса хуйхăраççĕ. Ачи-пăчи шари çухăрать.

Аçтаха сап-сарă сăнлă Илемпие те асăрханă. Ку хĕре çăтма хапсăнать те хĕрĕнет, анчах мехелĕ çитеймест те тивеймест.

Асамат Илемпи килне Илепи карчăка евчĕ туса ярать, хăçан туй лартасси пирки калаçса татăлма хушать. «Патвар тимĕрçĕ мăшăрĕ пуласси маншăн пысăк телей. Анчах халех туй тума вăхăт çук — пичче валли çурт лартатпăр», — хуравлать евче Илемпи. Ваттисем туя чӳк уйăхĕнче тума килĕшеççĕ. Çакăн çинчен Илепи карчăк никама та каламарĕ, кӳршĕри тăхлачине кăна пăшăлтатса систерчĕ. Анчах хĕрĕх шăл витĕр тухсассăн хĕрĕх яла сарăлать çав. Кĕркуннепе хӳхĕм туй пуласси çинчен пĕтĕм ял калаçма тытăнать.

Инкек кĕтмен çĕртен килсе тухрĕ. Пĕррехинче ыйхă вĕçнĕ Аçтаха пике улăх варринче утă çулнине курах каять. Çăтса ямашкăн хапха пысăкăш çăварне карнăччĕ ĕнтĕ — Илемпин шап-шурă тутăрĕн яр çутă тĕрри Аçтаха куçне йăмăхтаратьшартарать, унăн нар пек сăнĕ тискер çĕленĕн хыпса çăтас ĕмĕтне сирсе ярать.

Çапла, хитрелĕх Илемпие вилĕмрен çăласса çăлать, çавăнпа пĕрлех тепĕр енчен шар кăтартать: йăтса тарать пикене Аçтаха сăрт-ту тĕлĕнчи синкерлĕ пĕлĕтсем хыçне, кукăрмакăр ним латтисĕр керменне. Пуçланать вара Илемпин тамăкри пек пурнăç. Сехĕрленмесĕр сехет иртмест, куççуль кăлармасăр кун иртмест. Чăлкăм куç хупмасăр çĕр каçать, чĕри Асаматшăн çулăмсăр çунать.

Çав тери кичем Аçтахан кĕрĕс-мерĕс керменĕ. Хĕвеле тӳртĕн ларнăран, хура пĕлĕт хупăрланăран хĕвел çути шала пачах кĕмест. Аçтаха хĕвел тӳпене хăпарса çитичченех ним туйми çывăрать, çывăрса тăрсан кантăк керменĕ тăрăх лӳпперрĕн лапăстатса та анасласа çӳрет, тĕттĕм пулсан çутă тĕнчен тăваттăмĕш хутне — çĕр пичĕ çине кӳпме те чыхма, каскăн-

ланма та хурахланма тухса каять. Тискер тĕлĕнтермĕш тĕттĕмре теветкелленет, хĕвеле пачах юратмасть, ăна çăтса яма та хатĕр. Хĕвел йĕтем пысăкăш тенине пĕр тухатмăшран илтнĕ те пырне ларасран шикленет.

Илемпи пуçĕнчен пĕр шухăш тухмасть: «Нивушлĕ пирĕн юрату ăраскалсăр пулĕ-ши?» Аçтаха вăрă-хураха тухса лапăстатсан хуйха ернĕ хĕр хурлăхлăн хӳхлеме тытăнать, хăйĕн çемçе чĕлхипе тăсса ярать хурлăхлă юррине:

Çил иртĕхет ĕнтĕ улăхра,
Тертленетĕп эпĕ хурлăхра.
Ут юртаймасть çумăр çунăран,
Эп юрлатăп ăшăм çуннăран.
Хыр çумĕнче хура хурама,
Эп çуралнă ăша çунтарма.
Хуйхăрать-çке хура хурлăхан,
Хуйхăрать пуль маншăн пур тăван.
Сӳтĕлтĕрех сарă çип çăмхи,
Ман юрра илттĕрччĕ тус хăлхи.
Вĕçен кайăк пулса тăраттăм,
Вĕçсеех те пырса кураттăм.
Тăраттăмччĕ уйра тыр вырма,
Çурли шăлсăр тесе калас çук.
Калаттăмччĕ çулăмлă сăмах,
Юнашар, савнийĕм, эсĕ çук.
Тăраттăмччĕ эп урпа вырма,
Хăлчăк алла тирет тементтĕм.
Илтеесчĕ санран ăш сăмах,
Сунтална чупту эс тементтĕм.
Сарă тулă вырмашкăн хушсан
Турткаланса тăман пулаттăм.
Пилĕк çине эс алă хурсан
Сан çумна йăпшăннă пулаттăм.
Тухмарĕ-ши хирте çил-тăман,
Манмарăн-ши мана, Асамат?
Маннă пулсан хăвăрт аса ил,
Майне туп та хăтармашкăн кил.
Кăвакал ишет мăн кӳлĕре,
Юрату упратăп чĕрере.
Чунăм юратниййĕ тĕнчере —
Хăвах та пĕлетĕн — эс пĕрре.

Сăрт айккинче çĕр çырли, хĕвел ăшшăн пăхсассăн — тата пиçес кăмăл пур. Кантăк читлĕхре сарă хĕр, телей пĕтмен пулсассăн — килне таврăнас ĕмĕт пур. Анчах хăвăн тĕлне

хăв хĕвел яраймастăн, çук телее алăпа туртса илейместĕн. Шыв хĕрринче хĕп-хĕрлĕ пилеш пиçет, çупкăмăн-çупкăмăн шыва ӳкет. Пилеш мар тăкăнать шыв çине, Илемпи куççулĕ юхать чĕрçи çине. Хуйхăрсан-хуйхăрсан пике аллисене çӳле-çӳле çĕклет те асамлă вăйсене тархасласа кĕлтума тытăнать:

Эй, çап-çутă çăлтăрсем,
Пулăрччĕ маншăн туссем.
Çитнĕ таран вăй-халăр
Асамата вăй парăр.
Эй, уйăхăм, каçхине
Çутатсам каччă çулне.
Çав çулпа Асамата
Илсе килех ман пата.
Эй, хĕвелĕм, хĕрхенсем,
Ыр тумашкăн эс пĕлсем:
Пулăшсамччĕ каччăна
Тамăкран çăлма мана.
Асаматăм, эс каçар,
Хатĕрле пĕр-пĕр каçа
Хăв валли мăшăр çунат,
Унпала сан çул ăнать.
Ĕнтĕ чăтăмлăх пĕтет,
Ман чĕрем сана кĕтет.
Юратăвăм ĕмĕре,
Яланах пулар пĕрле.

Çын ĕçпе мар, хуйхăпа туртăнать. Аçтаха хăйне итлемен Илемпие выçă асаплантарать, шыв памасăр ăшне çунтарать. Хĕрĕн çутă сăнĕ тĕксĕмленет, яштака кĕлетки типшĕмленет. Вăл хăй пĕлнĕ пек çеç мар, амăшĕ вĕрентнĕ пек ир те, каç та пуççапса Турра кĕлтăвать:

— Ырă Турă, Турă Амăшĕ, Пӳлĕхçĕ, Пӳлĕхçĕ Амăшĕ, Хăрпан, Хăрпан амăшĕ — хăт, хăт амăшĕ — юсав, юсав амăшĕ, ырă уйăх, хĕвел, çĕр-шыв, юман, йывăç — пурте çырлахăр. Пирĕн ялти ĕçчен тимĕрçе Асамата хăвăр ырлăхăртан ан хăварăр: ăна çирĕп сывлăх сунăр, ăс парăр та паха канаш сĕнĕр, хĕрне хатарлă хаяр хăяматран хăвăрт хăтарма харсăрлăх, хăват хăлачĕ халаллăр!

Аякран-аякран çил ачисем Асамат хăлхине Илемпин хурлăхлă юррисене, ирхипе каçхи кĕлĕ сăмахĕсене асамлă майпа илсе çитереççĕ, вăл тилмĕрсе ыйтнине пурнăçлама хистеççĕ.

Асамат та кашни ир Турăран тархасласа ыйтать:

— Эй, Пӳлĕхçĕ, ырлăх кӳрекен Туррăмăр! Пирĕн ял хĕрне Илемпие, Аçтаха касмăкне лекнĕскере, каç выртсан канлĕх пар, ир тăрсан чăтăмлăхпа хастарлăх пар. Ăна тыткăнран та касмăкран çăлсам.

Анчах Пӳлĕхçе тархаслакансем нумай çав. Кашнин кăмăлне тивĕçтерме мехел çитерейместь пулмалла. Илемпи çаплах тыткăнра та касмăкра. Тăван чăваш халăхĕ çаплах Аçтахан пусмăрне тӳсет. Шĕшкĕ тин шăтнă юмана хĕвел çути кăтартмасăр хупласа тăнă пек, Аçтаха çамрăк пикене телей курма памасть, пĕтĕм ăрăскалне таптать. Чăн ĕнтĕ, ӳссен юман шĕшкĕ пусмăрне çĕнтерет-çĕнтеретех, унран нумай çӳле ӳссе хăпарать, анчах Аçтаха пусмăрĕнчен пике епле хăтăлĕ-ши? Тăван халăх хăçанччен пусмăр тӳсĕ-ши?

Çапли çапла, анчах Асамат халăха епле пулăшмаллине пĕлмест, савнă хĕрне мĕнле майпа çăлмаллине пушкарaймасть.

Пĕр ирхине каччă кӳлĕ хĕррине пулла кайрĕ, вăлтапа пĕчĕк пулă туртса кăларчĕ. Пăхрĕ-пăхрĕ те кăвак ӳтлĕскерне каяллa шыва чăмтарчĕ. Самантранах кӳлĕрен, тарăн çĕртен, Вутăш ишсе тухрĕ. Хăй çын пекех, вăрăм çӳçлĕ, анчах ӳчĕ кăвак.

— Лайăх çын эсĕ, Асамат: тăван чĕппĕн пурнăçне татмарăн... Мĕнпе пулăшам сана?

— Тăван халăха Аçтахаран хăтарасчĕ, хамăр ял хĕрне Илемпие касмăкран çăласчĕ...

— Лайăх çын эсĕ, Асамат: халăх хуйхипе хыпса çунатăн. Эпĕ çак кӳлĕре кăна хуçа. Ну юрĕ, шыв-шурти ытти вутăшсем пулăшнипе вăйлă çумăр çутарăпăр, тӳпенелле çӳле-çӳле пурçăн кĕпер карăнтарăпăр. Çав кĕпер тăрăх Аслати урхамахупа Аçтаха патне çитме пултарăн. Акă сана асамлă вун икĕ юсман. Ăна шыврисем имлĕ курăксенчен пĕçернĕ. Аслатипе иксĕр вăй-халăр иксĕлсен пĕрер юсман, тарласа чăм шыва ӳксен икшер юсман, йăлтах халран кайсан — виçшер юсман çиейĕр те малалла талпăнăр.

«Ĕнтĕ, савнă тусăм, çунатăмçăм, хăвна пырса хăтариччен йĕр те тӳс»! — тесе калĕччĕ май пулсан каччă хĕре. Асаматăн кăкăрĕ сарлака, алли-ури çирĕп, вăйĕ-халĕ такама та çĕнтересле. Чăн-чăн паттăр. Халăха Аçтаха пусмăрĕнчен хă-



тарма, савнă хĕрне тыткăнран çăлма хурçă хĕç хатĕрлет, юман тымарĕнчен сулмаклă чукмар тăвать.

Çав тери хӳхĕм Асаматăн урхамахĕ Аслати. Чаплă урхамах кĕçĕнет — уяр кун аслати авăтать, аçа-çиçĕм çиçет. Урхамаха та вăрăм çула хатĕрлет Асамат: утă-урпа ытлăн-çитлĕн çитерет, мăн кĕлеткине хырчăкласа та çуса тасатать. Темиçе кунран каччă урхамахăн чуппи-юртти хăвăртлăхне, хурçă хĕçĕпе юман чукмарĕн çирĕплĕхне тĕрĕслесе пăхать.

Паллă: сăваплă ĕçе кун çутипе тăваççĕ. Асамат ир-ирех Аслатие утланать те аякри çула теветкелленсе тухать. Ырă утăн ури çĕре тивмест, пуçĕ пĕлĕте лекмест, утни-чупни сисĕнмест, шыв пек юхать, çил пек вĕçет.

Асамат лайăх пĕлет: çутă тĕнче çичĕ хутлă. Виçĕ хучĕ çĕр тĕпĕнче, тăваттăмĕшĕ — çĕр пичĕ, ытти виçĕ хучĕ — тӳпере. Эппин, Аçтаха тӳпери виççĕмĕш хутра. Чăл-чăл çунан вут çути, катаран курнан кăвайт çути еннелле тăсăлать сĕрен кĕперри. Кун ытла та хăвăрт иртет. Ара, хĕвел кăнтăрлаччен вăкăр çинче пырать тет, апатран вара — лаша çинче. Пĕр кун иртет — каç кӳлĕм Асамат урхамахпа тĕнчен пиллĕкмĕш хутне хăпарса çитет.

Аçтаха ахăрса ăна хирĕç тухать. Вăл усал сывлăшне пĕрре вĕрсе кăларать те таврара вичкĕн çил выляма тытăнать. Çил алхаснă вăхăтра авăнаканни авăнса юлать, лутăрканаканни лутăрканса юлать. Сĕрен кĕперри чĕтренсе чĕтренет, çапах пĕр шит те шалтăрккалла шăвăнмасть. Асаматпа Аслатин вăйĕ-халĕ палăрмаллах иксĕлет. Каччă çурăмĕ хыçĕнчи пештĕртен икĕ юсман кăларать. Иккĕшĕ те çатма пек çаврака, хăйă евĕр çӳхе. Асамат пĕрне хăй çиет, теприне урхамахне чăмлаттарать. Чăнах иккĕшне те вăй кĕрет. Аçтаха — ашкăнакан анчăк, ăна çапсассăн та çылăх çук. Асамат виçĕ пуçлă тискер Аçтахана юман чукмарĕпе пĕррех çапать те пĕр пуçĕнчен арпа тăвать. Ик пуçăн кăна юлнă хайхи хăнтăр-хантăр аран тарса хăтăлать.

Чăл-чăл çунан вут çути, катаран курăнан кăвайт çути еннелле çĕкленет сĕрен кĕперри, Асамат çав кĕпер тăрăх çӳлелле çул тытать. Урхамахăн ури çĕре тивмест, пуçĕ пĕлĕте лекмест, утни-чупни сисĕнмест, шыв пек юхать, çил пек вĕçет.

Иккĕмĕш кун каç пуласпа паттăр Асамат тĕнчен улттăмĕш хутне хăпарса çитет. Аçтаха ахăрса ăна иккĕмĕш хут хирĕç тухать, хаярланса иккĕмĕш хут вĕрет — куç уçайми çавра çил кăларать. Çав çавра çил вăхăтĕнче ванаканни ванса, çĕмрĕлекенни çĕмрĕлсе юлать. Сĕрен кĕперри силленессе силленет, çапах пĕр аршăн та аялалла авăнмасть.

Аслати кукленсе ларчĕ, ут çинчен ӳкнĕ Асамата чĕркуçленме тиврĕ. Чăваш паттăрĕ те, унăн урхамахĕ те тарласа чăм шыва ӳкеççĕ. Асамат çурăмĕ хыçĕнчи пештĕртен тăватă юсман кăларать. Тăваттăшĕ те тулли уйăх пек çавракка, пир пек çӳхе. Каччă иккĕшне хăй çиет, утне икĕ юсман чăмлаттарать. Чăнах та иккĕшне те вăй кĕрет. Аçтаха — ашкăнакан айван, çапсассăн та çылăх çук. Асамат хаяр Аçтахана юман чукмарĕпе çапмаллипех çапать те тепĕр пуçне çилпе вĕçмелли кĕл туса хурать. Пĕр пуçăн çеç юлнă хайхи хăямат аран тарса хăтăлать.

Чăл-чăл çунан вут çути, катаран курăнан кăвайт çути еннелле хăпарать сĕрен кĕперри. Асамат çав кĕпер тăрăх çӳлелле çул тытать. Урхамахăн ури çĕре тивмест, пуçĕ пĕлĕте лекмест, утни-чупни сисĕнмест, шыв пек юхать, çил пек вĕçет. Виççĕмĕш кун каç пуласпа паттăр Асамат тĕнчен чи çӳлти хутне хăпарса çитет. Кунта юн ĕçен эсремет керменĕ курăнать. Аçтаха ахăрса Асамата хирĕç виççĕмĕш хут кăра çиллĕн вĕçсе тухать. Виççĕмĕш хут вĕрсе кăларать Аçтаха йĕтем сарлакăш çăварĕнчен хаяр сывлăша — юхтаракан çумăрлă, çунтаракан çиçĕмлĕ акăш-макăш хăрушă тăвăл тапранать. Сĕрен кĕперри сулланасса сулланать, çапах пĕр хăлаç та халтăрккалла тайăлмасть.

Асамат та, Аслати те пĕтĕмпех халтан каяççĕ, сĕрен кĕперри çине юнашарах тӳнеççĕ. Асамат çурăмĕ хыçĕнчи пештĕртен юлашки ултă юсмана кăларать. Улттăшĕ те хĕвел пек çавракка, пӳс пек çӳхе. Каччă виççĕшне хăй çиет, утне виçĕ юсман парать. Чăнах иккĕшне те çĕнĕрен вăй кĕрет. Аçтаха — армак-чармак аскăн, çапсассăн та çылăх çук. Асамат тискер Аçтахана юман чукмарĕпе вирлĕн çапать те, унăн юлашки пуçĕнчен йĕпе вырăн кăна тăрса юлать, элес-мелес хапи хăмăр хăнкăлалла хавшаса хăтсăрланать.

Çав вăхăтра хĕвел пĕлĕтсем хушшинчен савăккăн кулса тухать, пĕтĕм çут тĕнче хитреленсе каять. Асаматпа Илемпи урхамаха утланаççĕ те сĕрен кĕперри тăрăх тăван ялне таврăнаççĕ, шавлă туй тума хатĕрленеççĕ.

Çапла, хитрелĕх хĕре вилĕмрен хăтарчĕ, паттăрлăх ăна тыткăнран çăлчĕ. Сӳнмен таса юрату вара Асамата та, Илемпие те çутă шанчăк кӳчĕ, вĕсен чун-чĕринче çĕнĕ ĕмĕтсем çуратрĕ. Асамат валли вутăшсем карнă çăлăнăç кĕперне хĕвеллĕ çумăр çунă чухне халĕ те курма пулать. Ăна пурте Асамат кĕперри теççĕ. Хăюллă та харсăр качча мухтаса, таса юратăва ырласа вăл çичĕ тĕспе çиçет, хĕвел куллипе ялтăрать.

Вашават Асамат туй умĕн яланхи йăлипе кӳлĕ хĕррине пулă тытма каять. Кунта Вутăш вăрăм çӳçне тураса ларать.

— Вутăш, çырлах! Вутăш, çырлах! — тесе çывхарать ун патне тимĕрçĕ.

— Ах, Асамат, эсĕ пысăк йăнăш тунă: Аçтаха пуçĕсене катертнĕ, хапине çаплипех хăварнă. Халĕ унăн çĕнĕ пуç ӳссе ларнă. Çут тĕнчери мĕнпур çĕлен-калтана халь хăй тавра пуçтарать. Часах сан патна вăрçăпа килет. Тăван ялна тĕппипе пĕтерме шăл хăйрать, Илемпие татах илсе кайма ĕмĕтленет.

Çав вăхăтра Аçтаха чăнах та пикенсех вăрçа хатĕрленет. Хăй патне чи малтан хантар хăтăшне — хурăн пуçлисен, йĕс çĕленсемпе туй çĕленсен аслă йăнăралне чĕнтерет.

— Ну мĕнле, ик сар пăнчă йăнăрал, эсĕ йĕмсĕр çарупа вăрçа пыма ĕриса-и, çук-и?

— Кампа вăрçмалла? — хăюланса ыйтать ик сар пăнчăлли.

— Кампа-кампа... Паллă: Асаматпа.

Ку ята илтсен аслă йăнăрал иккĕленсе тăрать, анчах çĕлен-калта патши халь-халь тилĕрессине курсан васкасах килĕшет:

— Ĕриса, ĕриса...

Унтан Аçтаха хура çĕленсен йăнăралне — кутăн куккăшне кермене чĕнтерет:

— Ну мĕнле, сивĕ куç йăнăрал, эсĕ наркăмăшлă çарупа вăрçа пыма ĕриса-и, çук-и? Е манăн çĕнĕ йăнăрал тупмалла?

Çакна илтсен кутăн куккăшĕ кампа вăрçмаллине ыйтса тăмасть — тӳрех килĕшет.



Çĕлен-калта патши вăрçа çаплалла хатĕрленни çинчен чăваш тимĕрçине Вутăш каласа парать.

— Пулăшсамччĕ, аслă Вутăш, ăс парсамччĕ: халĕ ман мĕн тумалла? — пуççапать ăна чăваш паттăрĕ.

— Лайăх çын эсĕ, Асамат. Халăх хуйхипе хыпса çунатăн. Эпĕ çак кӳлĕре кăна асли, çĕр çинче хуçа мар. Вырăс салинчи Влас тимĕрçе кайса тилмĕр, вăл та санпа пĕрле хĕçпе-сăнăпа Аçтаха çарне хирĕç тухтăр...

— Килĕшмест пулĕ çав... — ассăн сывлать Асамат.

Вутăш çине тăрсах Власа тархаслама хистет:

— Калаçса пăхнăшăн чĕлхе çĕтĕлмест. Ăшши те, сивви те пĕр çăвартанах тухать. Вашават та тарават çын çăварĕнчен сивĕ сăмах тухас çук.

Вутăш хушнă пекех тăвать Асамат: вырăс ялне Влас патне çул тытать, хуйхине ăна каласа парать.

— Пулăшсам мана, вырăс паттăрĕ, тăван яла Аçтахаран хăтарма! — тилмĕрет вырăса чăваш. Унтан шухăшлăн юрă пуçарать:

Утасчĕ ман çулпалан —
Ик айккипе хурăн пур.
Савăк пурăнаттăм ялан —
Пуç çĕклеми хуйхă пур.
Вăрман урлă хурт вĕçет
Хăвăл йывăç шыраса.
Пуçри шухăшăм вĕçет
Шанчăклă тус шыраса.
Вырăс — эсĕ тимĕрçĕ,
Чăваш — эп те тимĕрçĕ.
Иккĕн пĕрле туптасан
Ĕç ăнатех, пулăшсам.
И лăс хурăн, лăс хурăн,
Хăв çывăхна ярсамччĕ.
И ыр вырăс, ыр вырăс,
Пулăшу эс парсамччĕ.
Çăткăн тăшман тапăнсан —
Çамрăк çыннăн юн вĕрет.
Юлташăмăр пулăшсан —
Никам çĕнми вăй кĕрет.
Кам хăюллăн пулăшать —
Пулĕ чи çывăх юлташ.
Эсĕ вырăс, эп чăваш,
Пулар çывăх хурăнташ.

Асамат тархаслани, унăн тилмĕрӳллĕ юрри Влас чĕринех пырса тиврĕ, чăваша пулăшма вырăс хапăл туса килĕшрĕ. Çапăçава тухма, пулăшма хатĕрри çинчен хăй хайланă тăсăмлă юрăпа пĕлтерчĕ:

Вăрман тумне мĕскер илем кӳрет?
Сип-симĕс çулçă — çав илем кӳрет.
Пур халăха мĕскер телей кӳрет?
Юлташлăх, туслăх — çав телей кӳрет.
Çăлкуçăн шывĕ сулхăн та таса,
Ăна упра, типтерлĕн усă кур!
Юлташ тупсассăн хăв кăмăлласа —
Унран ан сивĕн, ĕмĕр туслă пул!
Ав Асамат та тимĕре туптать,
Пурнăç тăвасшăн йывăр лав туртать.
Эппин, чăваш та пирĕн пек этем.
Вăл пултăр шăллăм, эп пулам тете.
Юлташсăр çын — тымарсăр йывăç пек,
Туссемсĕр пурнăç — йӳçĕ пăрăç пек.
Юлташлăх, туслăх кирлĕ яланах.
Тăсса паратăп алă эп сана.

Илтсеттӗм эп чӑваш каланине,
Кӗресчӗ ҫав кашнийӗн хӑлхине:
Нумай та пӗтет, сахал та ҫитет!
Пӗрле пурӑннине мӗн ҫитет!

Вашават Влас ҫапла калать:

— Пире атте-анне ҫуратнӑ. Сана Пӳлӗх, мана Турӑ пӑхса ӳстернӗ. Тӑнлӑ-пуҫлӑ пулас тесе пурӑнтӑмӑр. Иксӗмӗр те тимӗрҫӗ. Эппин, пулар юрӑхлӑ юлташ, тӳсӗмлӗ тус та хаклӑ хурӑнташ...

Этем лайӑххи калаҫнинчен курӑнать. Ку ҫын ҫав тери тӑн-тӑн, чӑнах та тӑнлӑ-пуҫлӑ.

Картишӗнче Влас урхамахӗ Ӑмӑрткайӑк кӗҫенет — сасси ҫут тӗнчен пур хучӗсене те ҫитмелле янках каять. Ӑна итлесе Аслати кӗҫенсе ярать — уяр кун аслати авӑтать. Ай, чӑнах та аван ку урхамахсем, урисене тӑп-тӑп тытаҫҫӗ, пуҫӗсене ҫӳле каҫӑртаҫҫӗ.

Чӑваш тимӗрҫи Вутӑш патне тепре каять, хӑйне Влас вырӑс пулӑшма пулни ҫинчен пӗлтерет. Вутӑш ӑна хӑюллӑ пулма хушать, унтан ҫапла калать:

— Акӑ сана ҫирӗм тӑватӑ асамлӑ юсман. Ӑна шыврисем имлӗ курӑксенчен пӗҫернӗ. Пӗр ҫарпа ҫапӑҫса хӑшкӑлсан Власпа иксӗр пӗрер юсман ҫийӗр, урхамахӑрсене те пӗрер юсман чӑмлаттарӑр. Тепӗр ҫарпа ҫапӑҫса ӗшенсен икшер юсман ҫиййӗр, утсене те икшер юсман парӑр. Юлашки ҫапӑҫӑва вӗҫлеме хал ҫитмесен виҫшер юсман ҫиййӗр, утсене те виҫшер юсман чӑмлаттарӑр.

Икӗ паттӑр: вайпитти вырӑс Влас йӗпкӗн хура хӳхӗм Ӑмӑрткайӑк урхамах утланса — хӗҫпе-сӑнӑпа, чыслӑ чӑваш Асамат улма чӑпар ут утланса — хӗҫпе-чукмарпа, халӑха хӑтсӑр хӑяматран хӑтарма хирти хирсем хушшинчи хутлӑхра хӑрамасӑр, хускалмасӑр хурал тӑраҫҫӗ. Ҫакна курсан Аҫтахан пӗрремӗш мӑн ҫарӗ — хӑратсан та хӑраманни — тӑпах чарӑнать, ик сар пӑнчӑллӑ йӑлттам йӑнӑрал та куҫне чарсах пӑхать. Мӑн ҫар чӑнахах хӑрамалла чухне те хӑрамасть, йӳтенӗ йӑнӑралӗ вара йӑхсӑрла йӑпшӑнмасть, йӑпӑлтисенчен йӑлӑхмасть, йӑлтӑрккине юратать, йӑлттамӗпе йӑпанать. Вӑл ҫапӑҫура ҫӗнтерме хыпӑнчӑк хаяр Аҫтахапа пӗрле ҫарамас ҫар

пуҫтарнӑ: хатарлӑ хурӑнташӗсене, хытӑркка хунчӑкамӗсене, хыткан хӑтисене, хевтесӗр хӑйматлӑхӗсене хӗсмете хутшӑнтарнӑ, халсӑр хантарсене те хӑйсенчен хӑварман. Ҫӗрӗн кусан, шывӑн ишен, ураллисен утан йышне пурне те вӑрӑ-хурах ҫарне пуҫтарнӑ.

Хӑрушӑ патша хулӑмкка Аҫтаха хуҫӑк хурама хыҫӗнче хуҫаланать. Хыпӑнса хыпакан хуплӑвне хӗвӗнчи хутаҫа хурать. Ҫӗнӗрен ӳссе ларнӑ ҫӑткӑн ҫӑварӗ вӗрсе ҫавра ҫил ҫавӑрттараймасть ӗнтӗ, халӗ вӑл пысӑк йышлӑ икӗ ҫарӗ ҫине шанать. Икӗ паттӑра — вырӑспа чӑваша хирӗҫ пӗрремӗш ҫара ярать. Малта музыкҫӑсем: параппанӗ тӑн-тӑн-тӑн, купӑс пекки нӑй-нӑй-нӑй. Ҫар пуҫӗнче Аҫтаханӑн хантар хӑтӑшӗ — йӳтенӗ йӑнӑрал: тӑн-тӑн пӑхкалать, шуйлануллӑн шукалать.

Ырӑ кӑмӑллӑ Власпа Асаматӑн чунӗсемпе ирӗксӗрех хаярланма тивет.

— Пирӗн тӑшман тухатмӑшпа пӗртӑван, вупӑрпа вӑртахлӑ, ҫӑткӑнсемпе ҫыхланчӑк. Ӑна тӑруках пусӑнтараймӑн. Ҫапах тытӑҫса пӑхар-ха, — пуҫне ялт ҫӗклет вӑйламас Влас.

— Эс таҫтаччӗ, тете, эп таҫтаччӗ, явӑҫтарчӗ пире пӗр тӗллев. Эппин, Пӳлӗхҫӗ, пиллесем пире! Эппин, Туррӑмӑр, пулӑшсам пире! — ҫутӑлтарать куҫне чӑваш паттӑрӗ.

Тӑр кӑнтӑрла тӗлӗнче, хӗвел чи ҫӳле улӑхсан, ҫапӑҫу пуҫланать. Шӑван-кусансене пӗри сӑнӑпа тирет, тепри чукмарпа ҫапать. Вырӑспа чӑваш пӗрне-пӗри юлташла та тусла пулӑшаҫҫӗ, тӑшмана иккӗн ик енчен хиреҫҫӗ, сывлӑш ҫавӑрса илме те памаҫҫӗ.

Аҫтаха ҫарӗ чуна сехӗрлентермелле ши те ши шӑхӑрать, ҫӗнтересшӗн ҫапӑҫать. Авкаланаканни авкаланать, шӑвакканни шӑвать. Пӗри те тепри хӳрисемпе ҫапаҫҫӗ, ыраттармалла ҫыртаҫҫӗ. Икӗ паттӑрпа вӗсен урхамахӗсене хӑйӗн каҫхи апачӗ тума ӗмӗтленет Аҫтаха.

Власпа Асамат канмасӑр ҫапӑҫнӑран хӑшкӑлса ҫитеҫҫӗ. Акӑ Асамат шыврисем парнеленӗ тӑватӑ юсмана кӑларать. Вырӑспа чӑваш пӗрер юсман ҫиеҫҫӗ, иккӗшне икӗ ута чӑмлаттараҫҫӗ. Ҫыннисен те, учӗсен те хал хушӑнать, хӑват тупӑнать, хастарланса ҫапӑҫаҫҫӗ. Сурӑх кӗтӗвӗ кашкӑртан тарса чӑлпар саланнӑ пек мӑн ҫар та йӑлтах пусӑрӑнчӗ. Хуҫӑк хурама

хыҫӗнчен хуп-хура хапаллă тепӗр эшкер хыпăнса килсе хăмсарать. Аҫтахан хантар хăтăшӗ — йӳтенӗ йăнăрал кунтах хăтсăр хăтланать. Икӗ паттăр пӗр-пӗрин патне ҫул хывать, пӗри теприне пулăшать, хирӗлекен хăтана кӳпкет. Авкаланакан ирсӗр ӳтӗнчен кӗсел туса хучӗҫ, хăйсем тӗшӗрнӗ ҫӗленсене ун ҫине купаларӗҫ. Аптăрами Асаматпа вăйламас Влас ҫӗлен-калта ҫарне тăрайми ҫапса салатрӗҫ.

Ҫавна курсан апăрша Аҫтахан нӗрсӗр пичӗ-куҫӗ пушшех тискерленет, хăй чӗтреме, турткалашма та тапкалашма пуҫлать. Кашкăрла улать, упалла урать, хурахла хаярланать. Вăл ахăрса анрашать, хура хурлăханла хурланать, хуҫăк хурама хыҫӗнче хуйхăрса хыҫаланать. Хăрнă хырăмне хăнтăрамак хирет, хыпăнса хыпакан хуплăвне хӗвӗнчи хутаҫа хурать. Хăйхи хăямат Аҫтаха вырăспа чăваша хирӗҫ тепӗр ҫарне ярать — хальхинче хура ҫӗленсене вăскăртать. Малта музыкҫăсем: параппанӗ тăн-тăн-тăн, купăс пекки нăй-нăй-нăй. Ҫар пуҫӗнче Аҫтаханăн кутăн куккăшӗ — яваланчăк йăнăрал: унăн-кунăн пăхкалать, пăлтăр-пăлтăр шукалать.

Каллех вăйлă ҫапăҫу тапранать. Власпа Асамат шăван-кусан хурахсене хӗҫпе вакласҫӗ, чукмарпа ӗнселеҫҫӗ. Урхамахсем — Аслатипе Ăмăрткайăк — хăрасса хăраҫҫӗ, хартлатасса хартлатаҫҫӗ, тискер ҫӗленсене пурпӗр тапта-тапта лапчăтаҫҫӗ. Хура ҫӗленсем хӳрисемпе ҫапаҫҫӗ, сăннисемпе сăхса наркăмăшпа вӗлерме хăтланаҫҫӗ. Аҫтахан анчăкла акăшмакăш алхасакан ҫарне Асамат арăсланла аркатать. Вăйлăран та вăйлă Влас вӗриленсех пӗрмай малалла вирхӗнет, тăшмана пӗрин хыҫҫăн теприне хирет. Катаран каллех кăтăрнă эшкер кăштăр килсе капланать. Айван Аҫтахан калăпсăр калттам кукша куккăшӗ хăй те кунтах каскăнланать, куштанла кăшкăрашать. Икӗ паттăр пӗр-пӗрин патне ҫул хываҫҫӗ, пӗрнепӗри пулăшаҫҫӗ, каппайчăк кукшана кӳпкелеҫҫӗ, куҫ кӗретех курнăҫланма памаҫҫӗ, авкаланакан ирсӗр ӳтӗнчен нимӗр туса хураҫҫӗ, хăйсем лачăртаттарнă ҫӗленсене ун ҫине купалаҫҫӗ. Каҫ кӳлӗм Власпа Асамат ҫав тери ӗшенеҫҫӗ. Акă Асамат Вутăш парнеленӗ сакăр юсмана кăларать. Вырăспа чăваш икшер юсман ҫиеҫҫӗ, икӗ урхамаха та икшер юсман параҫҫӗ. Чăвашпа вырăсăн та, урхамахӗсен те вăй-хал хушăнать. Икӗ

паттăр хавхаланса çапăçать, хура çĕленсен çарне хĕçпе турать, сăнăпа-чукмарпа кăнтать, урхамахсемпе таптать.

Çапăçу вăраха кайнăран Асаматăн та, Власăн та вăй-халĕ пĕтсе çитет. Урхамахĕсем шап-шурă кăпăка ӳкеççĕ. Акă Асамат шыврисен вун икĕ юсманне пештĕртен кăларать. Вырăспа чăваш виçшер юсман çиеççĕ, икĕ урхамаха та виçшер юсман чăмлаттараççĕ. Чăвашпа вырăсăн та, урхамахĕсен те хал хушăнать. Икĕ паттăр каллех çапăçма тытăнаççĕ. Хура çĕленсен çарĕ ним юлми пĕтет.

Çавна курсан Аçтахан пичĕ-куçĕ татах та тискерленет. Çĕлен-калта патши тилпĕрен вăрри çинĕ пек тилĕрсе каять, хурчăка хунчăкамĕ пек хыпăнать. Хăй пуринпе те хăлăхсăрла харкашать, хирĕçет, хăлтă хăйматлăхне те хăмсарать. Хурахран та хурах хуçăк хурама хыçĕнче хурланать-хуйхăрать, хăнкăла ернĕн хыçаланать. Хăйĕн хăмпăланнă хырăмĕнче хăнтăрамак хускалать. Хăй çапах хастарланма хăтланать. «Вырăспа чăваш ачи-пăчине халĕ хам ачашлама шутлатăп. Пĕлсех тăччăр: вĕсем пеккисене кăна эп куркаланă ĕнтĕ!» — лапчăк кăкăрне çунаттипе çапать çав çатăлти. Хăпартланасси хăпартланать, çапах тăр-тăр чĕтрет.

Хайхи хăямат чăнах та çапăçма хăй тухать — икĕ паттăрпа вĕсен урхамахĕсене çăтса ярасшăн хăтланать, шăлĕсемпе шаккать, çуначĕсемпе май мар çатăлтатать. Çав йĕксĕке Влас вырăс сăнăпа тирет те çӳлтипе аялти ирсĕр тутине уçăлми çыпăçтарса хурать. Асамат чукмарпа ик çунатне те çапса хуçать, пуçне хĕçпе татать. Хура юн пĕрĕхтерекен хурахран Асамат пăрăнса каясшăн пулать.

— Э, çук, хапинчен каллех тепĕр пуç ӳссе ларать, — чарать ăна Влас. Икĕ паттăр Аçтаха хапине татса-касса ваклаççĕ, татăкĕсене унталла та кунталла ывăтаççĕ.

Çав самантрах аслати кĕмсĕртетет, ялтăртатса çиçĕм çиçет, ăшă çумăр çума тапратать. Паттăрсен çĕнтерĕвĕшĕн сар хĕвел те хĕпĕртет. Аçтаха шăпи тулнăшăн пĕтĕм çут çанталăк савăнать. Çапла çав, вăкăр кукалет-кукалет те хăй çинех сирпĕтет. Аскăн Аçтахан та çапла пулса тухрĕ: пĕр ĕмĕр иртĕхрĕ, икĕ ĕмĕр алхасрĕ, халăха инкек çине синкек кӳчĕ, виççĕмĕшĕнче хăй ĕмĕрлĕхех кăнчĕ.

Аҫтахана тӗп тунӑ хыççӑн халӑх çӑмӑллӑн сывласа ячӗ. Асаматпа Илемпи савӑк туй туса пӗрлешрӗç. Иккӗшӗ тем тери килӗштерсе пурӑнаççӗ, куçран куçа пӑхса йӑл кулаççӗ, сак тулли ача-пӑча ӳстереççӗ.

Асамат унчченхи пекех тимӗрçӗ лаççинче вӑй хурать. Сывлӑхӗ çирӗп, кӑмӑлӗ хаваслӑ. Пӗлет: чи пысӑк телей, чи пысӑк савӑнӑç халӑха усӑ кӳме пултарнинче. Илемпи ку таврара чи ӑста тӗрӗçӗ те чӗнтерӳçӗ. Вӑл та телейне ытти çынсемшӗн усӑллӑ ӗçре тата савса пурӑнан çемьере тупнӑ. Нимӗн те калаймӑн, хӑюлӑхпа паттӑрлӑх, туслӑхпа таса юрату темле инкекрен те хӑтараççӗ-хӑтараççех, çутӑ телей кӳреççӗ-кӳреççех.

Власпа Асамат пӗр-пӗрин патне хӑнана çӳреççӗ, пӗрне-пӗри хурӑнташ пек те тӑван пек хакла хураççӗ. Тӗрӗсрех калас тӑк, вырӑспа чӑваш яланлӑхах тетӗшӗпе шӑллӗ пулса тӑчӗç. Килен-каяна кирек хӑçан та таравать: шӑнса килекене ӑшӑтаççӗ, выçса килекене тӑрантараççӗ. Ачисемпе мӑнукӗсем те вӗсене пӑхнӑ: пуринпе те туслӑ пурӑнаççӗ.

Чун-чӗререн çапла сунам: ӗмӗрӗсем пурин те сурпан пек вӑрӑм пулччӑр, хушпу кӗмӗлӗ пек çутӑ пулччӑр! Турӑ тутӑлӑха та тӑнӑçлӑха тивӗçлӗ тутӑр, Пӳлӗхçӗ пехетлӗ пурнӑç пӳртӗр.

Халап халапах ӗнтӗ. Чӑна пурте мухтаççӗ, суяна кирек кам та ӗненмест. Эпир каласа пани вара пӗтӗмпех чӑн.

*Патӑрьел районӗнчи Алманчӑри*
*А.П. Чихина халапӗ тӑрӑх хатӗрленӗ.*



# Эмир нумай калаҫмасть

Каласан та ӗненес ҫук, каласа памасӑр та чун чӑтмасть. Мӗн пулни пулнах ӗнтӗ. Унран тӗтрепе тӗтӗм ҫеҫ мар, юмаххалап кӑна мар, ҫухалми йӗрсем тӑрса юлнӑ.

Те хӑй теветкел пулнӑран, те чӑнласах маттуртан, Амалах чӑваша шӑпа тем те курма пӳрнӗ. Аслӑ та чаплӑ Пӑлхар хулинче ӳссе ҫитӗннӗ ҫав харсӑр ҫын. Хулана сыхласа хӑварассишӗн монголсене хирӗҫ паттӑррӑн ҫапӑҫнӑ. Ӑна тӑшман кӗле ҫаврӑнсан Амалах хӑйӗн ҫемйипе, ратни-тӑванӗсемпе Хырла тӑрӑхне куҫса килнӗ. Вӑрман хӗрринче, хӑйӑрлӑрах вырӑнта, таса та тирпейлӗ ял пуҫарса янӑ вӑл. Кунта пуҫ усма хӑнӑхман манӑҫ ҫынсем пурӑннӑ.

Темиҫе ҫултан Хусан ханӗ хӳхӗм ял пуҫаракана, хӑйне кирлӗ ҫынна тӳре ят панӑ, таврари ялсене пӑхӑнтарса тӑма, хан валли куланай пуҫтарма хушнӑ. Каярахпа ку ял ятне хут ҫине Амалах ячӗпе Шӑмалак (Шемалаково) тесе ҫырса хунӑ. Ун ҫемйинче ҫичӗ паттӑр ывӑл ӳснӗ. Вӗсем пурте кӗрнеклӗ, вӑйлӑ, хастар. Кӗҫӗн ывӑлӗ Тайман та ҫӳллӗ пӳллӗ, сарлака хул-ҫурӑмлӑ. Амӑшӗ вӗсем ҫине пӑхса тӑранаймасть, ҫавӑнпа пӗрлех хӗр ҫуралманшӑн пӑшӑрханать.

Тайман пӗр хӗвеллӗ кун Хырлана пулла кайнӑ. Кунти пулӑсен хӳри кӗскерен нумай тытайман. Хӑвалӑх хӳттипе кайӑк кӑвакал ҫичӗ чӗппипе ишсе ҫӳренине курать те вӗсене атмапа ҫаклатса илсе килне таврӑнать. Кӑвакалӗ килти евӗрех, пӗчӗкрех кӑна. Сӑмси тӑрринче тем шурри пур. Ытла та канӑҫсӑр хӑй: кил картинче пӗр вӗҫӗмсӗр нартлатрӗ. Чӗпписем те чарӑна пӗлми какӑлтатрӗҫ.

Пĕр кунхине тӳре килне курпун карчăк Тухантей пырса кĕрет. Хăй карта урлă каçаймасть ĕнтĕ, пурпĕр теме те пултарать: чĕлхе пĕлет, куçăхнă ача-пăчана юман кăмпипе тĕтĕрет. Кашнинчех ăна сурпан е урăх япала параççĕ.

— Ман килес! Тайманпа калаçмалли пур, — тесе карчăк сĕтел хушшине ларать. — Куккук мал енче авăтнине илтсессĕн лайăха теççĕ. Эпĕ куккук кай енче авăтнине илтрĕм — ку аван мара пĕлтерет, — васкамасăр пуплет Тухантей.

Ку карчăка тухатма пĕлет теççĕ. Кĕçĕн çимĕк каç пăсăмçă ĕçне тума кушак пулса çӳрет имĕш. Кушак пулнă тухатмăша тытсан вăл лаша пулса тапать тет, ĕне пулса сĕкет тет, вут пулса çунтарать тет, анчах хăраман çынна нимĕнле сиен те тăваймасть тет.

— Эпĕ сан патна сиен тума килмен, ырă канаш пама килтĕм, — тăсать сăмахне хайхи карчăк. — Ку кăвакал чĕпписене пăхса ӳстерме юрамасть, вĕсен варĕнчен çип-çинçе çĕленсем йăшăлтатса тухма пултараççĕ. Эсир амăшне те, чĕпписене те йыт-качкана çитерĕр е мана парса ярăр. Çавăн пек тумасан шар куратăр: çемйĕрте инкек кӳрен хĕр ача çуралĕ. Канаш патăм, халь парне кирлĕ.

Карчăк канашне Тайман йышăнмарĕ, парне пирки вара хирĕçлемерĕ: пĕр кĕмĕл тенкĕ хĕрхенмерĕ.

— Пӳлĕхçĕм, паракана укçа-тенкĕрен татăк ан ту, — хĕпĕртерĕ Тухантей. — Эпĕ мĕн калани хамăр хушăмăрта юлтăр, çын çине сăмах ан кăларăр.

Карчăк пуçне сĕлтрĕ те тухах кайрĕ. Йăмăк курас ĕмĕтлĕ Тайман пачах пӳлев каланă пек тумарĕ: кăвакал чĕпписене чиперех пăхса ӳстерчĕ. Кăвакал амăшне Кукша пуç ят пачĕ. Пĕр вăхăт тĕкĕ тăкăнчĕ те — çакăн ятлă пулса юлчĕ. Кĕр çитсен йĕкĕт кайăк кăвакалсене ирĕке вĕçтерсе ячĕ.

Çулталăкран Тухантей карчăк сăмахĕ çиеле тухрĕ: тӳре çемйинче çĕнĕ кайăк тупăнчĕ.

— Ылтăн-и, кĕмĕл-и? — ыйтрĕ ашшĕ.

— Кĕмĕл... — хуравларĕ тем тери савăннă амăшĕ.

— Ĕмĕрлĕ пултăр, кунлă-çуллă пултăр! — хĕпĕртерĕ ашшĕ те.

Хĕр ачана Нарпике ят пачĕç. Ытарайми илемлĕ ӳссе çитĕнчĕ пуçлăх хĕрĕ. Амалах тӳре ялĕнчи — Шăмалакри —

йёкётсем пурте ун ҫине ăмсанса пăхаҫҫĕ: кама телей кӳрĕши ку пике?

Хĕр вара унта-кунта питех тухса ҫӳремест. Йĕкĕтсенчен вăтанать, пĕри-пĕри килсен павара кĕрсе пытанать. Нарпикене ҫĕвĕҫ ывăлĕ Аванкка килĕшет. Вăл сăхман та, кĕрĕк те ашшĕ пекех ятуллă ҫĕлет. Йĕкĕт юрла-юрла ҫĕвĕ ҫĕлесе ларнине итлеме те, курса тăма та кăмăллă. Нарпикене вăл килти тăларан мĕн тери хӳхĕм шурă сăхман ҫĕлесе пачĕ. Аршăн патакĕпе виҫнĕ чухне йĕкĕт аллине хĕр пилĕкĕ ҫине хучĕ кăна — лешĕн пĕтĕм кĕлетки сăрăлтатса илчĕ. Нарпикепе курнăҫса пуплесен йĕкĕтĕн чун ҫунаттине пĕтĕм анлăшĕпе сарса ярас килет, пуҫĕнче вара ҫуркунне ейĕве тухнă Хырла пекех анлă юрă ҫуралать.

Амалах тӳре кăмăлĕ урăхла: вăл Нарпикене ҫамрăк ҫĕвĕҫпе явăҫма чарать, тивĕҫлĕрехчи тупăнасса шантарать.

— Эпир атте-анне ачисем, Турăпа Пӳлĕхĕн чунĕсем. Турăпа Пӳлĕх ямасан пирĕн телее таптамĕҫ. Турă ҫырнă пулсан, Пӳлĕх пӳрнĕ пулсан иксĕмĕр мăшăрланăпăрах, — ляпплантарать йĕкĕт Нарпикене.

— Турă, лайăха ҫырсам, Пӳлĕхҫĕ, пархатар пӳрсем! Пӳлĕхҫĕ, ан пăрах! Пӳлĕхҫĕ Амăшĕ, ĕмĕтĕмĕре пурнăҫа кĕртме пулăшсам! — тилмĕрсех Турра кĕлтăвать тӳре хĕрĕ.

Анчах пĕр-пĕрне савакан икĕ ҫамрăка арлă-арăмлă пулма Турă ҫырман, Пӳлĕхҫĕ пӳрмен пулмалла ҫав. Хитре пулни лайăх, тепĕр чух ҫакă телей вырăнне инкек кӳме те пултарать. Лăпах ҫавăн пек пулса тухрĕ Нарпикепе.

Хусан ханĕн эмирĕ пĕр туменпе Мускав еннелле кайма тухнă-мĕн. Ҫула май хăйĕн тӳри Амалах патне хăнана кĕрет.

— Хапăл тăватпăр! Иртĕр тĕпеле! Ларăр кĕрекене! — йăтса илесле кĕтсе илет эмира Амалах.

— Ку таранччен сана курманччĕ, курасса та сунманччĕ. Акă курнăҫрăмăр... — йĕрĕнӳллĕн йăсларĕ хăна йĕпренчĕк тутипе.

Йĕрĕнчĕкрен йĕрĕнме шутламарĕ тӳре — ăна тараватлăн чысларĕ, паха ҫимĕҫсемпе сăйларĕ.

Тӳре хĕрĕ паварта амăшĕ хушнипе йӳҫĕ чустаран ҫатмапа кӳптĕрме пĕҫеретчĕ, пиҫсен ăна сарă ҫу сĕретчĕ. Чĕнмен хă-



насене тăрантармалла вĕт. Çавăн чухне эмирăн шанчăклă çынни — чапа тухнă нукер — павар алăкне уçрĕ ячĕ, вут умĕнче хĕрелсе кайнă хĕр çине пăхрĕ-пăхрĕ те каялла пӳрте кĕчĕ, эмира хăлхинчен пăшăл-пăшăл тем каларĕ.

— Хисеплĕ тӳре, хĕрне мĕншĕн пиртен пытаратăн? Килтĕрха, курар ăна... — кулянçи турĕ эмир.

Пысăк хăна ыйтнине ашшĕн тивĕçтермеллех пулчĕ. Нарпике пӳрте кĕчĕ те хăнасене именсе пуç тайрĕ. Эмир хĕр çине купăстана кăмăллакан качака куçĕпе пăхать: çӳллĕ мар, вăтам пӳ-силлĕ темелле, куçĕ хура мар, тĕксĕм çӳçĕ те хура мар, çырă. Эмир хĕре ылтăн манит парнелерĕ те кайма ирĕк пачĕ.

Ирпе эмир ĕне суса кĕрекен Нарпикене тепре курчĕ. Хĕр сĕт лакăмне тĕрленĕ пит шăллипе витнĕ, çинçе пилĕкне ярапаллă пиçиххипе туртса çыхнă. Шап-шурă кĕпепе. Кĕпи умне хăмаçпа кӳнчĕк тытнă. Сăнĕ çурхи хĕвел пек йăлтăрать. Çăварне курак вĕçсе кĕмелле карса пăрахрĕ эмир. Эй, Çӳлти

Танкăр! Ытарайми хитре тӳре хĕрĕ! «Ман гаремра лăпах çак хĕр çитмест...» — çуралчĕ шухăш эмир пуçĕнче.

Хĕр эмир çине куç хӳрипе кăна пăхса илчĕ. Ку арçыннăн тути кăвас икерчи евĕр хулăн, куçĕ пӳрт тĕнни пекех хĕсĕк. Кăмăла килмен çынран хĕр хăвăрт пăрăнса иртрĕ.

Ирхи апата эмир нихăçан та хальхи пек кăмăлласа çимен пулĕ. Сарăхнă шăлĕсемпе авăртрĕ кăна.

— Çăкăр-тăвартан аслă пулма хушман. Ырă апата сая яриччен усал хырăма тултарас! — палкать хăй чăваш шăрттанне чăмланă май кăкшăмран тухнă пек хулăн сасăпа. Унтан тултармăш паккама пикенчĕ. Кăçал тӳре садĕнчи пан улми те курăмлă, хăна умне лартма кăмăллă. Тăранми хырăм ку çимĕçе те курманла чыхать.

Кăшт каярахпа Нарпике кил картинче тетĕшĕнчен шăппăн çапла ыйтрĕ:

— Усал эмир текенни çакă-и ĕнтĕ?

— Çакă, çакă... Хусан ханлăхĕн чи хаяр эмирĕ, сĕмсĕрри те тискерри. Кĕтӳçĕ пулнă вăл. Пуçтахскер кĕрешнĕ чухне урине хуçнă, çавăнпа тимĕр ура лартма тивнĕ, — йăмăкĕ пекех шăппăн хуравларĕ тетĕшĕ.

Тайман татах та тем каласа парасшăнччĕ, анчах сăрапа тата сим пылпа ӳсĕрĕлнĕ эмир кил картине тухни чăрмантарчĕ. Тетĕшĕ те, йăмăкĕ те хăвăрт куçран çухалчĕç.

Тӳрен улма сачĕ варринче, вар хĕрринче, чаплă мунча пур. Эмира Амалах мунча хутса кĕртрĕ, ун каçанне хурăн милĕкпе хăй хĕртрĕ. Пит кăмăлларĕ чăваш мунчине мăнаçлă эмир. Сăрапа сим пыл лĕрккесен-лĕрккесен вăл Тайманăн купăсне ярса илчĕ. Уксах эмир тутарла кĕвĕ калать, Амалах тӳре чăвашла ташлать. Чаплăран та чаплă хăнана вăл кӳшелккене тӳнккесе тултарнă кучченеçпе, лакăм тулли сим пылпа ăсатрĕ.

Аслă хир варринчи тӳпемре Хăлат вăрманĕ кашлать. Унта хăлатсем йăва çавăрнăран çавăн пек ят панă. Ку вĕçен кайăк хăйĕн йăвине шăши сĕтĕрет. Мăн хăлат мулкача та ансат çаклатать. Уксах эмир хăйĕн тĕкĕртне тапăра тăратма çак вăрмана, ун çумĕнчи улăха кăмăлларĕ. Хăлат вăрманĕнчен çурçĕрелле, Аслă Пăла айлăмĕнчи Тури Туçа еннелле, çырма

шăнкăр-шăнкăр юхса выртать. Тутарсем учĕсене унта шăвараççĕ. Кунтан Шăмалак та инçе мар, çичĕ-сакăр çухрăмра кăна. Кунсăр пуçне таврари ялсем çук мар, хырçăпа ытти тӳлевсем пуçтарма май пур.

— Вырăссен улусне кĕрсе кайиччен малтан куç-хăлха ярса пăхар. Утсене кантарар, пушаннă лавсем çине типĕтнĕ ашпа пулă, сĕлĕпе пăри тиер, — пĕлтерчĕ эмир хăйĕн шухăшне нукерсене. «Çав хушăра Нарпикене çураçар!» — тухмарĕ асĕнчен вăрттăн ĕмĕт, анчах ун пирки тĕкĕрт ертӳçисем умĕнче нимĕн те шарламарĕ.

Нукерсемшĕн рехет пурнăç пуçланчĕ: çивĕч учĕсене Пӳле авăрĕсенче шыва кĕртеççĕ, таврари ялсенче йытăсем пек кăйăн-кайăн пăхкаласа çӳреççĕ. Мĕнле килчĕ çапла хуçаланаççĕ. Вĕсен пĕр тĕллев: ăçта мĕн çаратма май пур — унталла. Вырăхсене кĕтӳрен те, картаран та çавăта-çавăта каяççĕ. Кил-çуртра мĕн лайăххи кураççĕ, çавна сĕлĕ хутаçне чикеççĕ. Вĕрлĕк хапхасене тапа-тапа ватаççĕ те хуралтăсенчи чаплă япаласене тăсмака урапасем çине кăлараççĕ, ылтăн-кĕмĕле хăйсенчен хăвармаççĕ. Мĕн каламалли, тем те хăтланаççĕ нукерсем ялсенче.

Пĕр çар пуç темиçе нукерпа вăрманта пăши тытнă, ăна вĕренпе мăйкăчланă та пар утлă урапа хыçне кăкарнă. Тепĕр урапа хыçĕнче йăлмакланă ула ĕне пырать.

Хĕрсемпе арăмсене ăçта тĕл пулсан та — хирте-и, улăхра-и, вĕсем çине нукерсем кашкăрла тапăнаççĕ: хурах кăшкăртса тӳрех çĕре йăвантараççĕ. Унта мĕн пулса иртнине вара пăвăннă сасăсем тăрăх кăна тавçăрма пулать. Кăмăлне тултарсан çавскерсем хĕрсемпе çамрăк арăмсене мăшăрăн-мăшăрăн çыхса хăрхăм тума е чуралăха сутма ăсатаççĕ. Килĕнче пĕр хĕр кисĕппе тăвар кăлтăртаттарса тĕветчĕ. Нукер ун аллине хыçалалла çавăрса çыхрĕ те кисĕпне мăйĕнчен çакрĕ, унтан сĕтĕрсе тухса йĕнерĕнчен кăкарчĕ.

Хăйсене хирĕç тăракансене намăссăрсем йыт çимен патак туянтараççĕ. Пĕр çамрăк нукер Тухантей пӳлеве те хĕрхенмен — саламатпа хĕртнĕ. Те Тухантей тухатнăран, те урăх сăлтавпа — çавăн хыççăн ку нукерăн сăмси чалăшса ларнă.

— Эккей, хир варринчи вăрманта çунатлă хăлатсем иртĕ-

хетчӗҫ, халӗ унта ҫунатсӑр хӑяматсем пуҫтахланаҫҫӗ... — пӗҫҫисене шарт ҫапаҫҫӗ чӑвашсем.

Кунти вӑрмантан тӑрри кӑна юлчӗ ӗнтӗ. Нукерсем йывӑҫ касса ҫӗр пӳртсем турӗҫ, ҫунтарма та нумай касса вакларӗҫ. Чипер ларас йывӑҫах тӗтӗме, кӑмрӑка ҫаварӑҫҫӗ.

Пӑри хылчӑкӗ куҫа кӗрсен час кӑлараймӑн. Эмир пуҫне вара шухӑш пырса кӗрсен кӳсекпе ҫапса та кӑлараймастӑн. Вӑл миҫемӗш кун ӗнтӗ Нарпикене арӑм тӑвас ӗмӗтпе йӑпанать. Хӑйӗн пӗр паскакне хӗр ҫураҫмашкӑн яма шут тытрӗ.

— Пӳкле каякан пӳлӗнет, ҫавра каякан ҫу ҫиет теҫҫӗ. Эсӗ те кӑштах чеелен, ҫавра ҫулсем шыра. Ашшӗне тӳререн ӳкерессипе хӑрат, хӗрне чаплӑ эмирӑн мӑшӑрӗ пулассипе илӗрт, — ӑс пачӗ эмир паскака.

Амалах ӑс-хакӑлне кирлӗ пек витӗм кӳме, эмир вӗрентсе каланине шута илсе, паскак катаран пуҫларӗ:

— Аллах кӑнтӑрла ҫутатма хӗвел тунӑ. Хӗвел ҫут тӗнчере кӑнтӑрла хуҫа. Ҫӗрле хуҫа пулма Аллах уйӑхпа ҫӑлтӑрсем туса ҫакнӑ. Хӗвелӗн хӑйне кура мухтав, уйӑхпа ҫӑлтӑрсен урӑхла чап. Ку енӗпе ҫӑлтӑр та ҫӑлтӑртан уйрӑлса тӑрать. Эмир чапӗ анчах урӑхла. Ҫӳлти тӗнчерине, пӗлӗт ҫинчине Аллах тытса тӑрать, ҫӗр ҫинче вара чӑн-чӑн хуҫасем ханпа эмир. Вӗсен кӑмӑлне пӳлме никам та хӑяймасть: кӑнтӑрла та, ҫӗрле те!

Тӳре итлессе итлет, анчах пуҫне пурпӗр енчен енне сулласть.

— Пӳлӗх хӗре ирӗксӗрлесе качча пама хушмасть. Эппин, хӑйӗнчен ыйтӑр.

Хӗрне пӳрте чӗнсе кӗртсен ашшӗ тӳрех ҫапла пӗлтерчӗ:

— Хӗрӗм, акӑ мӗн: паскак пирӗн пата евчӗ пулса килнӗ. Сана эмир качча илесшӗн. Паллах, вӑл пирӗн ҫемьепе хурӑнташлӑ пулма шутлани пысӑк чыс. Евче мӗн каласа ярасси хӑвӑнтан килет. Каласам тӳррине: эмир мӑшӑрӗ пулма килӗшетӗн-и е ҫук-и?

Ашшӗ сӑмахӗсене илтсен Нарпике хӑранипе, тарӑхнипе кӑвакарса кайрӗ, чӗтрене ерчӗ, ҫапах чӗри мӗн хушнине калама хӑюлӑх ҫитерчех:

— Пысӑк чыс тунӑшӑн эмира тавтапуҫ! Анчах ун мӑшӑрӗ

пулма тивӗҫӗм ҫук. Тата, аттем, ҫакна калам: хуть касăр, хуть ҫакăр — ҫӗвӗҫӗ Аванккасăр пуҫне эпӗ никама та качча тухмастăп! — Хӗр вăрт ҫаврăнчӗ те тухса кайрӗ.

— Эппин, хӗр хăй каланă пек пултăр, ун сăмахӗнчен иртмӗп. Ҫăхан хăҫан кăвак пӗлӗте ҫитсе ҫуначӗпе ҫапать, ҫавăн чухне тин урăхла тăвăп, — татăклăн хуравларӗ евче тӳре.

Паскак ҫаплах Амалаха ӳкӗте кӗртесшӗн:

— Эмир ҫиллине хăвăн ҫине кӳрес мар тесен чаплă сӗнӳпе килӗшмеллех сан... — Тӳре кăмăлне ним каласа та ҫавăрай-марӗ хайхискер, юлашкинчен юнаса хăварчӗ: — Манран каласа пултăр: сан Нарпикене гарема памаллах. Унсăрăн тем сиксе тухӗ. Асту, вӗре пӗлмен йытă кашкăр кӳнӗ тет!

Амалах пуҫне хыҫса тăрса юлать, ҫапах хӗрӗ пирки шухăшне улăштармасть.

Ҫав кун эмир тапăҫакан ăйăрла шăмарса кăна ҫӳрерӗ — ăш-чикӗ пӳлӗнсе тăрать, ним туса лăпланаймасть. Сăр леш енчи даругăна эмир ҫилхăван утсемпе куҫ-хăлхасем янăччӗ. Вӗсене вырăс князӗ йӗрлесе тытни ҫинчен пӗлтерчӗҫ паян эмира.

— Вăл ман нукерсемпе ҫапла хăтланать-и-ха? Йӗксӗк вырăс ман ҫула пӳлесшӗн... ăна хайне тытăр, хупса лартăр тимӗр читлӗхе, вара ман пата илсе килӗр! — хушать эмир пӗр ҫар пуҫне.

Ҫавăн хыҫҫăнах эмира тепӗр усал хыпар пӗлтереҫҫӗ: Хырла хӗрринче хăвалăхра тăвакă нукер виллине тупнă. Вӗсен кăкăрӗсене чăваш ҫӗмренӗсем шăтарнă.

— Сехмет килсе ан ҫакăнтăр! Сыхла пире, аслă Аллах! — пăшăлтатать эмир тути. Шăмалакран евчӗ таврăнасса чăтăмсăррăн кӗтет.

— Ну, кала, тӳре еплерех калаҫать: хӗрне парас пек-и е ҫук-и? — ыйтрӗ вăл евчӗ Шăмалакран килсе ҫитсенех.

Леш ырă мар хыпар пӗлтерсен эмир пушшех шăртланса кайрӗ, кӳпшек пичӗ ҫинчи шăнăрсем тăлт-тăлт сикме пуҫларӗҫ.

— Хăямат! Мӗнпур ӗҫе эсӗ пăсатăн! — тăрст тапрӗ вăл урине. Паскак ыйтуллăн пăхса илчӗ ун ҫине.

— Эсӗ ҫав! Эс пулмасăр кам пултăр!

— Хисеплӗ эмирӑм, кӑлӑхах пӑшӑрханатӑн. Хӗрӗ сана тивӗçли мар: пирӗн чӗлхене пӗлмест, Аллаха ӗненмест...

— Çитет! Хӑвӑн шухӑшна хӑвӑнтах тыт! Аслисем калаçнӑ чух вӗсен сӑмахне ан пӳл, вӗсен кӑмӑлне ан тат... — хӑтӑрса калать эмир паскака. — Кала-ха: мӗн пур çав мӗскӗн çӗвӗç çумӗнче? Катӑк çур пуслӑх хурçӑ? Килттӗм-кайттӑм кӗвенте кӑна вӗт. Таяпари яма илсе кайӑр та шатӑрт тутарӑр унӑн çурӑм шӑммине. Тӑхта, Арскри касамата ӑсатӑр, унта ман нукерсем валли тум мӗн виличченех çӗлетӗр. Тен, хӗрхенекен Аллах каçарӗ ӑна.

Пысӑк çылӑхлӑ çынна Аллах шуйттана кӑларать тенине илтнӗ-ха эмир. Анчах вӑл хӑй çылӑхран хӑрамасть, шуйттан пуласран та шикленмест.

— Амалах тӳрепе тепре калаç. Ӑслӑ-тӑнлӑ хӗр нихӑçан та ашшӗ-амӑшӗ ирӗкӗнчен тухмасть. Иккӗшне те темӗн тӗрлӗ асла хурать. Ашшӗ-амӑшӗ те итлеттерейместен Нарпикене ирӗксӗрлесе, çыхса пӑрахса илсе килӗр! — тӑрст тапать уксах урине эмир.

Паскак ӑнланать: эмир чӑваш пикине юравлӑ упӑшка мар. Пӗри ватӑ, тепри çамрӑк. Пӗри хыт хура, тепри ешӗл курӑк. Çапах усал çынпа хӑй урапи çине ларса кустарас пулать. Хӗр çураçасси ӑнӑçсан, тен, паскак аслӑраха тухӗ.

— Ырӑ ут такӑнмасӑр пулмасть, ырӑ çын йӑнӑшмасӑр пулмасть. Эсӗ каланӑ пекех тӑвӑпӑр! — тесе тухса каять вӑл эмир патӗнчен.

Чипер çӗртенех Аванкка çӗвӗç çухалать. Ӑçта кайса кӗнӗ — ялта пӗлекен çук. Нарпикепе курнӑçма вӑл вӑрман хӗррине кутамас юман патне тухмаллаччӗ. Унта темччен тӑрсан та хӗр йӗкӗте кӗтсе илеймерӗ. Юманӗ хӑй вырӑнӗнчех ларать, Аванкка вара ун патне текех килмерӗ. Нарпике кулянма пуçларӗ. Ӑçта Аванкка? Инкеке лекмен-ши вӑл? Йӗкӗт хыпарне пӗлме ун килне хӗр тетӗшне Таймана ячӗ, анчах усси пулмарӗ: вӑл ӑçтине килтисем те пӗлмеççӗ.

Кӗтсе илме те пултарайман çав. Тӳрен вӑталӑх ывӑлӗ тепӗр кун пӗр нукертан акӑ мӗн пӗлнӗ: Аванкка çӗвӗçе такам вӑрман хӗрринчи кутамас юман патӗнче çапса ӳкернӗ. Çитменнине тата, кӑкӑрӗ çине хӑпарса сикнӗ. Çакӑн хыççӑн чӗрӗ

юлайӗ-ши? Нукерсем ăна пĕтрене — пысăк чăпта миххе — пуçхĕрлĕ чикнĕ те Аслă Таяпари яма илсе кайнă.

— Мĕнле пурăнас, епле кун курас? — чун-чĕрипе хуçăлса хуйхăрать хĕр усал хыпара илтнĕренпе. — Кăкăртан чун тухиччен эп ăна манас çук... — ĕсĕклесех йĕрсе ярать Нарпике.

— Уксах çичĕ ют пире хур кăтартать. Пăхма çын пекех, ăшĕ-чикки — хура юн... Хăйсен Аллахĕ каçарсан та пирĕн Турăпа Пӳлĕх каçармаççех ăна, — тӳсеймерĕ ăшри шухăшне каламасăр Амалах. Ырă мара сиссе тӳре ывăлĕсем çиччĕшĕ те тăван йăвана пуçтараннă.

Вăрăм хӳреллĕ чакак чӳрече умнех ларчĕ те чакаклатма тытăнчĕ.

— Ырра мар ку... — Чĕтренсе илчĕ хĕр кĕлетки.

Кĕçех çулпа юлан утсем тапăртаттарса килни илтĕнчĕ.

— Нарпикене вăйпа илсе кайма килеççĕ. Эпĕ икĕ ывăлпа алăк умне тухам, иккĕн икĕ чӳрече умне ухăсемпе тăрăр, виççĕн хăртсемпе хапхана сыхлăр. Вăйпа илсе кайма памастпăрах! — хушрĕ ашшĕ ывăлĕсене.

Эмир эшкерĕ чăнах та тӳре çурчĕ çывăхнех пырса чарăнчĕ.

— Хисеплĕ тӳре, эмиртан салам! Вăл сан çемйӳпе хурăнташлă пуласшăн. Эпир Нарпикене пар ут кӳлнĕ сăран кӳмепе лартса каятпăр. Хирĕçлеме юрамасть! Тем курăн — тӳререн ӳкерĕ! — мĕкĕрчĕ хулăн сасăпа паскак.

— Хăçан та хăçан пĕлĕт çĕр çине йăтăнса анать, çавăн чухне хĕр сирĕн пулать! — илтрĕ тӳре хуравне паскак.

Çавăн хыççăнах çичĕ ют эшкерĕ Амалах килне вăр-хурахла тапăнчĕ. Кăнтăр кунĕ лайăхчĕ, тавралăхра уярччĕ, анчах халĕ пĕтĕм тĕнче тĕттĕмленчĕ. Нукерсем пӳртелле те картишнелле сĕкĕнеççĕ. Пӳрт чӳречисенчен ухă йĕпписем вăшик! вăшик! вирхĕнме тытăнчĕç. Алăк умĕнчисем виççĕн виçĕ нукера хăртсемпе çапса йăвантарчĕç. Амалах çемйи арăсланла çапăçать: алăк умĕнче те, хапха тĕлĕнче те нукерсем пĕрин хыççăн тепри çĕре кӳплетсе ӳкеççĕ. Нарпике айпăлти тытнă та хăяматсене хирĕç тетĕшĕсемпе пĕрле хапха умĕнче тытăçать. Анчах йышлă эшкере пĕр çемье мĕнех тăвайĕ. Пĕртăван хӳтĕлевçĕсем çиччĕшĕ те чунĕсене Пӳлĕх аллине пачĕç. Тискер нукерсем çӳçĕ кăвакарнă Амалаха та çапса ӳкерчĕç.



Мĕскĕн Нарпике ним тума пĕлмесĕр пӳрт тăррине тарса хăпарчĕ.

— Çунатăмсем пулсан вĕçĕттĕм те кайăттăм, Аванккана шырăттăм! — кăшкăрса ячĕ вăл хыттăн. — Ăçта эс, тусăм?

Ăна аса илсенех хĕр питне уçă сывлăш килсе çапать, вăл çăмăлраххăн сывлама пуçлать. Анчах Аванкка вырăнне кайăк кăвакал вĕçсе килчĕ те хĕр ури çумне ларчĕ. Тетĕшĕ Тайман каласа панине астунă тăрăх, Нарпике ăна тӳрех палласа илчĕ: Тайман пăхса ӳстернĕ кăвакалсен амăшĕ, Кукша пуç ятли...

— Санăн васкас пулать, — çынла сăмах хушрĕ кăвакал. — Паян санăн тăван ялпа уйрăлма тивет...

Нарпике Кукша пуç çине пăхрĕ те — чĕри йĕппе чикнĕ пек ыратса кайрĕ. Тӳсеймерĕ вăл, чунне пусарас тесе тăсăмлăн, хурлăхлăн юрласа ячĕ:

Çӳлелле пăхрăм — тĕлĕнтĕм
Кайăк хурсем епле вĕçнинчен.
Шухăшларăм эп — тĕлĕнтĕм
Çамрăк ĕмĕр иртсе кайнинчен.
Утайăттăм эп сукмакпалан —
Чăрмав кӳрен пысăк чулсем пур.
Пурăнăттăм савнă туспалан —
Ура хуран усал тăшман пур.
Шывра ишсе савăнасси
Çăка пылĕ пекех лайăхчĕ.
Чун юратнă туса курасси
Çутă тĕнче пекех хаклăччĕ.
Эсĕ халĕ мĕншĕн, хурлăхан,
Пит салхуллă пуç пĕксе ларан?
Тăрса юлтăм эп те хурлăха,
Татрĕ манăн ĕмĕте тăшман.
Çыр хĕрринчи ай хурлăхан,
Унăн хураласси паян кун.
Тăван ялăм, ай Шăмалак,
Уйрăласси çитрĕ паян кун.
Арман шывĕ, ай хура шыв,
Хура кĕпӳсене çуса юл.
Эп каятăп, тăван ял-йыш,
Ăраскалсăр хĕрне курса юл.
Çитрĕ хăвăрт ай кĕркунне,
Маншăн пулмĕ текех çуркунне.
Сывă пулăр, ай пур пулăр,
Мана тăрук манса ан кайăр.

Хěр чěри ыратмаллипех ыратать. Пуçěнче шухăш хыççăн шухăш пăтранать: телейсěр хěр пулса ӳсиччен çăрттан пулă пулса шыва чăмас-мěн. Юратман çынна качча кайиччен кайăк кăвакал пулса вěçсе каяс-мěн.

Çанталăк лăпланайми тулашать: çил вăйланса кайрě, йывăççем хуçăласла авăнаççě.

— Санăн васкас пулать, — каллех астутарчě хěре кăвакал. — Пěтěм чěр чуна пăхса тăран Пихампар мăшăр çунат патăр...

Нарпике чěркуçленсе ларчě те хăватлă Пихампара пуççапрě:

— Эй, Çӳлти Турă Пихампар, мăшăр çунат пар мана — тусăма шырама каям!

Çапла каланă-каламанах хěр кайăк кăвакал пулса тăчě. Вăл Кукша пуçпа пěрле çӳле-çӳле çěкленчě, таçта аякка-аякка вěçсе кайрě. Паллах, Аванккана шырама. Нукерсене хăюллăн хирěç тăнă тӳрене, унăн паттăр ывăлěсене пěтěм Шăмалак пысăк чыспа пытарчě, ӳсекен ăрăва Амалах çемйи пек пулма сунчě.

Шăмалакри юнлă тытăçу çинчен каласа парсан эмирăн куçпуçě алчăрасах каять. Кăшт лăплансан аллине кăна сулать:

— Мěнех вара... Кăкшăмне кура пăкки, ялне кура тӳри! Халиччен ман валли хырçă-марçă Амалах тӳре пуçтаратчě, халě ăна Мачар Упи урлă пуçтармалла тăвăпăр. Шăмалака тěппипех çунтарса ярăр! — хаяррăн çиçтерет куçне эмир.

Нукерсем хан хушнипе Шăмалака тěпě-йěрěпех çунтарма килсен ял çыннисем вăрмана, Хырла енчи тарăн варсене тарчěç. Çакăн хыççăн Шăмалакран кěл пулать, хан валли хырçă-марçă Мачар Упире пуçтарма пуçлаççě.

— Ăçта каятăр? — ыйтаççě çав яла каякансенчен.

— Упие: патша валли хырçă тӳлеме! — хуравлаççě чăвашсем.

— В Убеево едем — на царя платить дань! — хуравлаççě вырăссем.

— На чар платить дань! — ăнлантараççě вырăсла пěлсех кайманнисем.

— Начар Упие! — кěскетеççě сăмаха хăшě-пěрисем. Çапла ял ячě Начар Упи пулса тăрать. Тěрěссипе, ку яла Аранспик

турханăн кĕçĕн ывăлĕ Мачар никĕсленĕ, çавăнпа ăна Мачар Упи тенĕ. Саманине кура вара Мачартан Начар пулать. Хырçă тӳленине чăвашсем тĕвĕ туса е карт картса палăртнă, ăна «Начар Упи çыххи» е «Начар Упи карчĕ» тенĕ.

Ялсенче пурнăç татах та тăварлăрах пулса тăрать. Хырçа пысăклатса Хусан ханлăхĕ çын тирне çичĕ хут сĕвет, унăн юлашки сĕткенне сăрăхтарса илет.

— Эх, пурнăç! Ытла та арăш-пирĕш эсĕ! — ассăн сывлаççĕ чăвашсем.

Кам çав арăш-пирĕше тӳсеймест, çав шăмалаксем патне вăрмана тарать.

— Хăравçă мулкачсем эпир. Хамăр çĕр çинче хамăр пытанса пурăнатпăр. Кăшкăрнипех кăшкар çаврăнмасть. Таçтан хăяматран килнĕ хĕсĕк куççене сăмса урлă çапар мар-и? — чĕнет халăха таврари паллă кайăкçă — кашкăртан та хăраман, упана та парăнман Ишпаттăр.

Тухантей карчăк ассăн сывласа та кулянса Ишпаттăра çапла евитлет:

— Кăлăхах тăнламарĕç вĕсем ман сăмаха! Çавна пулах çемйипех пĕтрĕç! Пĕтĕм яла инкек кӳчĕç!

— Камсем?

— Камсем, камсем... Амалах çемйи пирки калатăп. «Кайăк кăвакал чĕпписене пăхса ӳстерни сире инкек кӳрĕ — çемйĕрте хĕр çуралĕ. Кăларса ярăр вĕсене йыт-качка патне», — тесе систернĕччĕ. Ăçта унта?! Итлемерĕç...

— Çук, йăнăшатăн эсĕ, Тухантей аппа! — хуравларĕ ăна Ишпаттăр. — Пусмăра парăнма шутламан çемьен харсăрлăхĕ, Нарпике теветкеллĕхĕ тĕлсĕр-йĕрсĕр çухалмарĕ. Ку çемье паттăрлăхĕ пире хăюлăх пачĕ, вăй-хал хушрĕ. Пусмăра хирĕç эпир те кĕрешме пуçлатпăр!

Нукерсемпе çапăçма кăмăл тăвакансене вăл Шăлан сăрчĕ çине ертсе каять. Кунта талккăшĕпех шăлан тĕмĕсем ӳснĕ. Çавăнпа ăна Шăлан сăрчĕ тенĕ. Ку ят яланлăхах çирĕпленеймен. Нумайранпа ăна Чакăрчек теççĕ. Вăл Тимĕрлепе юнашарах. Çакăнта нукерсенчен вăрттăн каç сĕмĕнче пырса кĕрейми хӳтлĕхсем тутарать Ишпаттăр, çирĕплетнĕ çĕр пӳртсем чавтарать. Уйăха яхăн ĕçлесен Шăлан сăрчĕ нукерсен сăмси

умӗнчех ҫирӗп карман-ту пулса тӑрать. Ҫакӑнтан каҫсерен кая-кая тапӑнма пуҫлать те Ишпаттӑр хӑйӗн пысӑк мар тӗкӗрчӗпе Тимӗрле енне. Нукерсем тӗкӗрте Шӑлан сӑртне ҫитиех хӳтерсе килеҫҫӗ, анчах ӑспа-тӑнпа ҫирӗплетнӗ хӳтлӗхе нимепле те ҫӗмӗрсе кӗреймеҫҫӗ.

Ишпаттӑр пусмӑрҫӑсемпе чӑрсӑррӑн ҫапӑҫать. Нукерсен ҫар пуҫӗнчен туртса илнӗ йывӑр ҫавра хӗҫпе темле хирӗҫ тӑрана та чӗркуҫлентерет. Ухӑпа та питӗ тӗл перет вӑл.

Паян тытӑҫу ытла та хаяр пулчӗ. Кӑкӑрӗ тӗлӗнчи питлӗхне ҫӗмренсем ҫине-ҫинех киле-киле тӑрӑнчӗҫ, ҫавӑнпа ӑна виҫӗ хут ылмаштарма тиврӗ. Виҫҫӗмӗш хут ылмаштарнӑ чухне ӑна нукер ҫӗмренӗ кӑкӑрӗнчен амантать, харсӑр йӗкӗт пурпӗр ҫапӑҫма пӑрахмасть.

Йӑлӑхтарсах ҫитерет уксах эмира йӗп пек ыраттарса тӑрӑнакан тӗкӗртпе кӗрешесси. Ҫитменнине тата, Шӑлан сӑртне ҫӗнӗ вӑйсем киле-киле хушӑнаҫҫӗ. Таврари ялсем ханлӑх хурлӑхне тӳсесшӗн мар. Тимӗрлере эмир ҫар пуҫӗсен аслӑ канашне пухать.

— Упа тытма кайнӑ чухне ҫерҫипе аппаланма вӑхӑт ҫук пирӗн. Эмир нумай калаҫмасть. Калассине каларӑм, инҫе ҫула пуҫтарӑнӑр! — тӑн пачӗ вӑл ҫар пуҫӗсене.

Нарпике кайӑк кӑвакал пулса вӗҫсе кайнӑ хыҫҫӑн ханлӑх ҫарӗ Тимӗрлере вӑрах тӑмасть. Выҫӑ кашкӑрла хаярланнӑ уксах эмир хӑйӗн ҫарӗпе Мускав ҫывӑхнех ҫитет тет, анчах вырӑс дружинисем хӗснипе каялла таврӑнма тивет.

Пӗлтӗмӗр: Шӑлан сӑрчӗ Тимӗрлерен хӗвелтухӑҫнерех. Каярахпа хӑйӗн кӑкӑрӗ ҫинче ҫав сӑрт — Ишпаттӑр хӳтлӗхӗ — тепӗр маттура ҫунат сарма май парать. Ун ҫинчен кӗскен ҫеҫ калам. Алманчӑри Юман ҫемйи нумай ҫул ачаллӑ-пӑчаллӑ пулайман. Пурӑнсан-пурӑнсан, Шӑнкӑртампа Хырла тӑрӑх шыв юхсан-юхсан, ача туман хӗрарӑм пысӑк савӑнӑҫ кӳрет: ывӑл ҫуратать. Куҫӗ тӗсне кура Чакӑр чечек тесе савса ӳстерет ӑна ашшӗ-амӑшӗ, ял-йышра вара Чакӑрчек ят илет. Ҫитӗнсен ҫак хӑюллӑ та шиксӗр йӗкӗт аллине кӑрал тытса пусмӑрҫӑсене хирӗҫ Ишпаттӑр пекех хастар кӗрешет. Ахальтен мар ӗнтӗ Шӑлан сӑртне Чакӑрчек ят параҫҫӗ. Ку ят халиччен сыхланса юлнӑ.

Уйăхлă каçсенче Шăлан сăрчĕ çине унччен çивĕч çавра хĕç тытнă Ишпаттăрпа Чакăрчек юлташĕсемпе пĕрле тухса тăнă тет. Çын пырса тухас пулсан, хăратас мар тесе, паттăр çар куçран çухалнă тет. Халĕ Ишпаттăрпа Чакăрчек курăнмаççĕ, юлташĕсем те вăрăм ыйхăран вăранса чăрманмаççĕ.

Юлашкинчен Нарпике пирки. Çĕнĕрен чĕрĕлнĕ Шăмалакра маттур хĕрсем татах та пулнă, анчах Нарпикене çитеймен. Кайăк кăвакал пулса тăнăскер, вăл савнă тусне Аванккана тупайнă-ши, тупайман-ши — çакă халиччен нехĕ паллă мар. Ялти хĕрсем унăн юррине маннă ĕнтĕ, уйрăм сыпăксене кăна асра тытаççĕ. Начар Упие вара ку саманара Красномайск теççĕ. Шăмалак Елчĕк районне, Красномайск Патăрьел районне кĕреççĕ.

Ну юрĕ. Тен, малтан калас сăмах кая юлчĕ пулĕ, кайран каласси малтан пулчĕ пулĕ — ан ӳпкелĕр, ан ятлăр. Ерçӳ пулсан татах мĕн те пулин каласа парăп.

*Елчĕк районĕнчи Шăмалакри шкул директорĕ пулнă М.А. Васильев педагог 1940 çулта каласа пани тăрăх çырнă.*




Турхан нукерĕсем Вăрăм юхан шывĕ хĕрринчи Вăрăмпуçне Таяпа хулашĕнчен кăнтăрла килсе çитрĕç. Хулашпа ял хушши инçе теме çук, çапах çăмарта пек яп-яка самăр утсем шапшурă кăпăка ӳкнĕ. Васкавлă ĕçпе килнĕ пулмалла. Нукерсем хăртсемпе — вăрăм авăрлă, çур уйăх евĕрлĕ пуртăсемпе. Хăшĕ-пĕрин — пырса ан перĕн! — вăрăм кĕпçеллĕ кĕрĕс-мерĕс йывăр пăшал. Вутпа перекенни, пищаль текенни. Ăна кĕпçин вĕçĕ енчен авăрламалла, тарне кĕпчĕк енчи шăтăкран чĕртсе ямалла. Тем тери хаклă тăракан çак тĕлĕнтермĕше турхан шанчăклăраххисене хан хушнипе парнеленĕ.

Хусан ханĕ Ибрагима аслă улпут туса турхан ят панă. Паллах, сăлтавсăр мар. Вăл ханăн шанчăклă çынни, пăлхавçăсене тыта-тыта парать, маттур йĕкĕтсене — вуннăран пĕрне — хĕсмете ярать, чи хитре хĕрсене Хусана ăсатать. Ĕлĕкрех ку таврара ханшăн алманчăпа (алманч пуçтаракан ĕнтĕ) мăрсана пулăшакан паскак та тăрăшнă. Халĕ вĕсем кирлĕ мар пулса тăнă. Кирех хăш ĕçе тума та, унта-кунта çитме те Ибрагим турхан хăех ĕлкĕрет. Пĕрмаях Хусан куçĕнчен пăхса тăрать, унпа пĕр сăмах тупма тăрăшать.

Эшкер пуçĕ — çын пĕтермĕш хайван — Вăрăмпуç арçыннисене хурал пӳрчĕ патне пуçтарма хушрĕ. Хăй чăваш пулин те хутлă-хутлă сăмахсемпе тутарла-вырăсла çăрса ятлаçать. Те чăвашсен ун пек сăмах çук, те эшкер пуçĕ вĕсене пĕлмест. Вăл ял-йышпа тăктăмал хирĕçет, пĕр çын юлми çаппа-çарамаса хăварма хатĕр.

— Хусантан приказ килнĕ: паянах Таяпана кашни килтен

пĕрер лав тырă тиесе леçмелле. Хан çарĕ валли. Кам та кам тырă леçеймест, çав çемьерен вăйпитти арçын хĕсмете тăмалла. Мускавран вырăссем хĕссе килеççĕ. Пурин те вĕсене хирĕç тăмалла... — пĕлтерчĕ ял халăхне эшкер пуçĕ. Вăл пĕр çўллĕ нукере чĕркуçленсе ларма хушрĕ, урипе ун çурăмĕ çине пусса утне утланчĕ.

Хайхи эшкер тусан кăларса ялтан кĕçех тухса кайрĕ. Кăтăр-кăтăр ĕнсе хыçрĕç хресченсем. Эшкер пуçĕн хушăвĕ ăçтан кăмăла килтĕр-ха? Хан ячĕпе каласан та вырнаçуллă мар. Тырă пўлмисене шăпăрпах шăлса тасатнă.

— Ай-яй, пурăнма май çук кунта... Çĕнĕ çĕре куçса каймалла мар-ши? — хăюсăррăн сĕнчĕ хуйхăллă Туш. Унăн ани çинче палламан çыннăн виллине тупнă та, эшкер пуçĕ ана хуçине айăпласшăн ăшталанать.

— Капла пурăнса пулмасть, чăнах та тухас та тарас ялтан, — шăппăн каларĕ сап-сарă сăнлă Аксарин.

Эшкер пуçĕ питĕ хаяр сăнлă. Турхан çавăншăн ăна асли туса хунă, хăйĕн шанчăклă тарçи пулма хушнă. Çав чăваш халĕ ханпа турханăн пичеври лаши вырăнĕнче, вĕсемшĕн чунне парса тăрăшать. Халăхри хавха тăрăх, хăй чăвашне мансa кайнă ĕнтĕ пăр чĕреллĕ этем. Тăван халăх туррисене хисеплеме вуçех пăрахнă, киремете пуççапмасть. Турхан хистенипе мăсăльман тĕнне йышăннă. Пихампара мар, Мăхамета кĕлтăвать. Уншăн тăван халăхăн ырă туррисем мар, чăваш пĕлмен-туман Аллах хаклăрах. Ашшĕ-амăшĕ пилленĕ ята мулла панипе ылмаштарнă. Тăван ялĕнче ăна Илтемен ятпа пĕлеççĕ, çурăмĕ хыçĕнче чышкă кăтартаççĕ. Хан тарçисем вара Исмаил тесе чĕнеççĕ, Ик айкки те тăвайкки тесе витлеççĕ. Киремете исламра ылмаштарнăран ĕнтĕ.

Капăр тумлă Исмаил çўçне мăрса евĕр шакла кастарнă. Хăй лутака кăна, хырăмĕ вара арпа кунтăкĕнчен те сарлакарах. Пĕрре ларсах çур така çисе ярать. Унăн тăранми хырăмĕ пирки халăх хушшинче çакăн пек сăмах çўрет: «Астăвăр-ха хăлата, чăх чĕппине сĕтĕрет. Астăвăр-ха Исмаила, сăхăм пуçне сĕтĕрет». Сăхăмĕ ашлăх пусакан лашана пĕлтерет. Исмаил нукерсем пекех лаша ашне кăмăллать. Тата ăна тутар хĕрарăмĕсем хатĕрлекен çимĕç — кăрт уйрăмах килĕ-

шет. Кăрт пĕçерекенсене хăйсене те тиркемест. Мулла пек виçĕ катынпа (арăмпа) пурăнать. Пĕр арăмĕ — асли — чăваш, иккĕшĕ кĕçĕннисем — тутар.

Исмаил хăйĕн эшкерĕпе Таяпана тухса кайнă-кайманах Вăрăмпуç хĕвĕшме тытăнчĕ. Çĕрле ял пушансах юлчĕ. Пайтах çемье çурт-йĕрне пăрахсах ялтан тухса тарчĕ.

Тепĕр кун Исмаил хурчкалла йышĕпе Вăрăмпуçне ир-ирех вĕçтерсе килчĕ. Ял пушанса юлнине курсан тем тери тарăхса вĕриленчĕ, каллех хăр-хар кăшкăрашма тытăнчĕ:

— Чăваш йăваш теççĕ. Çук, вăл хăлăхсăр иккен. Хан ырлăхĕ çине сурать, унăн хĕсметĕнчен пăрăнать. Аякка каймĕç, тытатпăр, сутăнчăксене каялла таварăтпăр!

— Кам сутăнчăкне тавçăраймăн кунта... — шахвăртуллăн пăшăлтатаççĕ куçса каймасăр тăрса юлнă вăрăмпуççем.

Таркăнсене хăваласа тытма Исмаил икĕ ушкăн нукер кăларса ярать. Çак ушкăнсем хыçĕнче тусан çĕкленессе çĕкленет, анчах пĕри те таркăнсен йĕрĕ çине ӳкеймест. Çăпата сырнисем çулпа йышлăн тапталла кайнă, пушăт сĕвемĕн урлăпирлĕ ӳкерчĕкĕсем тусан çинче уçăмлăнах курăнмаççĕ, анчах ут е ĕне йĕрĕсем çукрах. Мĕн тесен те таркăнсем лашасăр кайман ĕнтĕ. Ĕнисемпе пăрушĕсене те çавăтнă пулĕ-ха. Пуçĕсем ĕçлемен мар нукерсен, çапах куçса каякан чăвашсен чеелĕхне пушкарайман: лешсем утсене те, ĕнисене те çăпата сыртарнă иккен. Çакна тавçăрса илейменнипе нимĕнсĕрех таврăнма тивнĕ нукерсен. Ăслă-тăнлă вăрăмпуççем çапла сенĕкпе çил хăвалаттарнă вĕсене.

— Ватă йывăçа куçарса лартмаççĕ. Тăван кĕтес ăшши кирлĕ ватлăхра. Куçса кайнисем ак, амутке, вăрах кĕттермĕç — каялла персе çитĕç, — хăйне хăй лăплантарнă эшкер пуçĕ. Пăртакран каллех хĕремесленсе те юнаса хушса хунă: — А-а-а! Пурпĕр лекеççĕ-ха вĕсем, амутке. Пире мар тăк — вырăс улпучĕ аллине. Шăпи тулать.

...Таркăнсем: тăлпан Яман, кăлкан çӳçлĕ Аксарин, хăюсăр Туш виççĕш пĕрле виççĕмĕш кунне хăтлă вырăн тупрĕç. Çĕнĕ вырăнта кама хăçан пӳрт лартса парассине татса пама шăпа ячĕç. Малтан Аксарин, унтан Яман, юлашкинчен Туш валли лартмалла пулса тухрĕ. Шăпа епле тухнă çапла турĕ виçĕ

чăваш. Чи малтан Аксарин валли пӳрт лартрĕç, анчах ăна пусахласах Яман йышăнчĕ. Хирĕçлеме хăнăхман Туш çакăнтан шалт тĕлĕнчĕ, çапах çăварне шыв сыпнă пек нимĕн те шарламарĕ. Алли хăпарса тухса хăмпăланнă Аксаринпа усал Яман тӳпелешсе те илчĕç, пĕр-пĕрне самаях лăскарĕç. Ăçта унта Ямана парăнтарма! Сарлака хул-çурăмлăскер, упа пек вăйлă. Кӳреннĕ Аксарин куç умĕнче урăх вырăна куçса кайрĕ. Вăл чарăннă вырăнта Çăлпуç (Аксарино) ятпа ял хунама пуçларĕ.

— Сан валли пӳрт лартма кăштах тăхтăпăр, хальлĕхе ман çуртăмра пурăн-ха, — сĕнчĕ хурчăкалла хăтланакан Яман хапсăнусăр Туша.

Туш килĕшессе килĕшрĕ, анчах çакă ӳкĕнмелле пулса тухрĕ. Ун валли пӳрт лартасси пирки Яман кайран çăвар та уçтармарĕ. Хайхи Туш майĕпен-майĕпенех Яман тарçи пулса тăчĕ. Тарçăн акмалла та вырмалла, тырра çапса типĕтмелле те авăртмалла. Çиессе хуçа çемйи çиет. Тарçăнах утă çулмалла, пуçтарса купаламалла. Хуçа выльăхне те унăнах тăрантармалла, шăвармалла. Куллен çапла тĕпĕр-тĕпĕр. Паян та, ыран та ĕç мăй таранах. Кирек мĕншĕн те ăна хăтăраççĕ, кашни сăлтăкшăн ăна ятлаççĕ. Çаран ути купине çил лăскаса тӳнтернĕ — çакăншăн хуçа Туша айăплать. Тына пăру тем шыраса пăлтăра кĕнĕ — сăрана тăкса янă. Куншăн та тарçă яваплă иккен. Ял кулли çеç мар, тĕнче кулли ку.

Хуçа тарçа темшĕн çын вырăнне хумасть. Унăн ялан пĕр сăмах: апла ĕçле те капла тар юхтар, кĕтме пĕл те чăтма хăнăх. Хăй вара урлă выртаканнине те тăрăх çавăрса хумасть. Янттине çав тери юратать. Хăй çăкăр мурĕ кăна, пурпĕр кăшкăрма, хушма, мĕн тумаллине кăтартма яланах хатĕр.

Туш мăшăрĕ Туйнепи — тĕрĕ ăсти. Вăл тĕрленĕ пуç тутри улăхри чечек пекех хитре. Мăшăрĕ тĕрленĕ шурă кĕпине тăхăнсан Туш çамрăкланнă пек пулса каять. Туйнепин кăткăс ĕçĕ кирек кама та килĕшет, кашнин чунне çĕклентерсе ярать. Анчах выçă куçлă Яман тĕрĕçĕ Туйнепие те хăйĕн чури вырăнне хурать, вăл мĕн тĕрленĕ — çавна пурне те хăй валли илет.

Туш ывăлĕ Темен çурт-йĕре чăваш эрешĕпе илемлетме хăнăхнă. Тăван халăх тĕррипе кантăк хашакĕсене пăхса хĕпĕртемелле капăрлатать, лаша пĕккисене ăмсанмалла хитрелетет.



Несĕпсĕр Яман Темене те тарçă вырăнне хурать, хăйĕн хуçалăхĕнче кăна ĕçлеттерет.

Тем пулчĕ Ямана, юлашки вăхăтра саççим хаярланса кайрĕ. Кирлĕ-кирлĕ маршăн пăскăртать, пуршăн-çукшăн тулхăрса хăр-хар кăшкăрать. Нимрен те ытларах чĕрене ыраттараканни — Туша хăй çемйишĕн нимĕн те тума паманни. Унăн пурнăçĕ питĕ йывăрланса çитрĕ. Яман кил-çуртĕнче вăл хăйне тăвăр пичкери пек туять. Хăй кунта — Ямanкассинче, ĕмĕчĕпе, чунĕпе урăх çĕрте ĕнтĕ вăл. Хуçа чышкăпа хăмсарма тытăнсан кăптăрмăш Туш та текех тӳсеймерĕ: хăла ут кӳлсе çемйине урапа çине лартрĕ, хурахсенчен хӳтĕленме ухăпа йĕпписене илчĕ, куç ăçталла курать — çавăнталла çул тытрĕ.

Темиçе кунран лав сарăрах шурă хăйăрлă вырăнта чарăнать. Туш ута тăварса апат парать. «Ку ахаль хăйăр мар, акшар, тепĕр тĕрлĕ каласан, шурă чул пулма кирлĕ. Ăна вăрăмпуççем çип пĕçернĕ çĕре яратчĕç, çунтарнă акшара кив çарана тăкатчĕç. Мăрье шуратма та юравлă вăл», — шухăш хыççăн шухăш çуралать кукша пуçра. Акшарпа пĕрлех вак

чул, тăм курчĕ Туш. Кирлĕ чухне кусем усă кӳме пултараççех. Тĕрлĕ вырăнта тăпра тытса чăмăртаса пăхрĕ: тăпри япăх мар, тыр-пул лайăх çитĕнĕ. Пуçне вăшт çĕклесе Туш çулсăрмĕнсĕр малалла утать, пысăк мар вашмăк çыран хĕррине пырса тухать. Шывĕ ун кашăкпа ăсмалăх кăна. Туш урине йĕпетмесĕрех васкамасăр çырма урлă каçать. Вăл тĕшмĕртнĕ тăрăх, ку çырма Хырлана, Хырли вара Сĕвене юхса кĕрет. Чăнах та кăшт утсан пĕр-икĕ çухрăмра тикĕссĕн юхса выртакан юхан шыв курăнса кайрĕ. Шывĕ тулăх унăн. Вăрман симĕс çулçисемпе шĕпĕлтетет. Йывăççем ӳкерекен мĕлке сулхăнĕнче икĕ тĕлте икĕ çăлкуçĕ тапса тăрать. Тăрна куçĕ пек тăрă шыв мăкланса симĕсленнĕ çавракa чулсем хушшипе ятарласа саваланă евĕр яп-яка лаптăк чулсем çине юхать. Анлă улăхра кăкăр таран ӳснĕ курăк çийĕн варкăш çил хумсем чуптарать. Çава тĕкĕнмен мăн улăха, çуллахи çӳллĕ кăвак тӳпене, кăтра пĕлĕтсем хăйсен кӳлеписене Хырлара тӳлеккĕн чӳхенине Туш чун-чĕререн кăмăлларĕ.

Ку вырăна килсе тухнăранпах тавралăха пăхса тăранаймасть вăл. Çав вăхăтра акăшсем унран инçех те мар вĕçсе анчĕç те шыв тăрăх ярăнса ишме тытăнчĕç. Кăшт анатараххра, тарăн аварти шывра, пулăсем шăпăл-шапăл сикеççĕ — кунта пулла çӳреме пулать.

— Çакăнталла вырнаçас! — сасăпах татăклăн каларĕ хăй мĕн шут тытнине çĕнĕ вырăн шыракан Туш. Вăл савăккăн чĕркуçленсе ларчĕ, ырăлăх кӳрекен пур турăсене те пуççапрĕ, унтан пулăхлă çĕре чуптурĕ те кĕлтума пикенчĕ:

— Эй, аслă Туррăмăр — ырă Пӳлĕх! Эпĕ атте-анне ачи, Çӳлти Турă чунĕ! Мана атте-анне çуратнă, Çӳлти Турă пăхса ӳстернĕ. Эй, аслă Пӳлĕхĕмĕр, илтсем ман кĕлле — сана тархаслатпăр. Пире çĕнĕ çĕрте сывă усра. Уйри тыр-пула лайăх ӳсмелле ту, картара выльăх-чĕрлĕхе ăнтарса пыр! Эс те пулăш, хăватлă Пихампар, кашкăрусене выльăх патне ан яр. Ĕнтĕ тăшман вĕçĕмсĕр шăл хăйрать. Ырă Пӳлĕх, эсĕ ямасан тăшман мана тивеймĕ. Калани пур-тăр, каламанни пур-тăр, пĕлменни пур-тăр — кĕлтăватăп ăшă питпе, тутлă чĕлхепе. Ырă Турă! Манăн кĕлле хапăл илсем! Урăх сана нимĕн те кала пĕлместĕп, манăн кĕллĕм çак таран анчах.

Хăйне Пӳлĕх телей пӳрменшĕн Яманкассинче чунтан тарăхатчĕ Туш, халĕ çак туйăм ирхи тĕтре пекех сирĕлсе кайрĕ. Ыр курас вăхăт уншăн та çитрĕ иккен. Халĕ вăл тарçă та, чура та мар. Çемйипе ирĕклĕн савăнса пурăнма хăтлă çурт лартрĕ. Эппин, çĕнĕ йăва çавăрчĕ, ял никĕслерĕ.

Хаяр Иван ĕмпӳ Сĕве крепоçĕ тутарни çинчен хыпар çак Туш хăлхине те кĕчĕ. Вырăссем чăвашсемпе пĕрле Хусан хулине пăхăнтарни çинчен те пĕлчĕç ялтисем кăштахран. Туш хăла утне кӳлчĕ те катана-катана — Сĕве хулине çул тытрĕ. Унта çар пуçлăхне тупса ăна пуç тайрĕ:

— Сирĕн тĕне йышăнатăп, вырăс çынни пулма килĕшетĕп!

Çар пуçĕ Туш çине сăнарах пăхса илчĕ. Туш та ун çине куç сиктермесĕр тинкерет. Пуçĕ çине пусса лартнă çăм калпак айĕнчен унăн хуп-хура мăшăр куçĕ ăшшăн йăлтăртатать. Хĕрарăмăнни пек вăрăм та кăпăш куç харпăкĕсем ку çын ырă кăмăллă, çавăнпа пĕрлех хăюллă утăмсем тума пултаракан хастар арçын пулнине палăртаççĕ.

— Ку çын — хамăрла çын. Эппин, пирĕн пултăр! — татăклăн калать çар пуçĕ. Ларнă çĕртен тăрса вăл Туша çурăмĕнчен лăпкаса илет.

Туш хыççăнах Сĕве хулине Яманпа Аксарин пырса çитнĕ.

— Якши — Яман, клади в карман! — тăрăхласа шӳтленĕ çар пуçĕ, Яман хыт кукарлăхĕпе çăткăнлăхĕ çинчен халапсем унччченех илтнĕскер. Чăвашсем вырăс патши енне куçни ăна питĕ килĕшнĕ. Вăл пичет пусса вĕсене виççĕшне те грамота пама кăмăл тунă, виçĕ çуллăха тĕрлĕ тӳлеврен хăтарнă.

Ытарма çук ырă кăмăллă, ĕçчен Тушран Яман чури ят нумайччен хăпман. Çĕр виçсе çӳрекен мишавай хăйĕн хулăн кĕнекине ял ятне Яман чури ялĕ — Яманчурел, вырăсла Яманчурино тесе çырса хунă. Пултăрах! Ку яла пурпĕр Туш никĕсленĕ. Кунта унăн ачин ачисем, унăн несĕлĕсем пурăнаççĕ.

Тĕрĕсех çав. Хальхи Яманчурелĕнчи Рахмуллинсем, Комиссаровсем, Тижанкинсем тата ыттисем те Тушпа пĕртăван. Вĕсен тĕп аслашшĕ çав харсăр чăваш пулнă. Ку вăл хĕвел тухăçран тухать тенĕ пекех тĕрĕс.

*Елчĕк районĕн Яманчурел ялĕнчи Е.А. Тижанкина*
*каласа панине никĕсе хывса хайланă.*



# Шурук йăхĕ ял никĕслет

Ĕмĕртен ĕмĕре юлса пынă сăмах тăрăх, ĕлĕк-авал ку тавраpa этем пырса кĕрейми вăрмансем кашланă. Ку вырăнта халĕ Шупашкар районĕнчи Ишек ялĕ. Ăна Шурук йăхĕ пĕр 200 çул каялла никĕсленĕ. Вăрманлă, шыв-шурлă, пĕчĕк çырмасемлĕ ку тавралăх. Çурчĕсем лаштра йăмрасем айĕнче лараççĕ. Ĕçчен те пултаруллă халăх ĕçлесе пурăнать ку енче.

Ункă юхан шыв хĕрринчи Ишекре пурте Шурука сума сунă. Ваттисем те, çамрăксем те. Шăпăр ăста каланăран, янкăс юрăсем юрлаттарнăран, ура тупанĕ хĕриччен ташлаттарнăран. Хĕр упраç ăна ачашшăн Шурукка тесе чĕннĕ. Шур çилхеллĕ кăвак урхамахĕ акатуйра кашни çулах мала тухнă.

Мăнукĕ Шÿреке Пухтилĕ аслашшĕн аслашшĕ пекех чыс та мухтав курайман. Хăмла шалчи пекех çÿллĕ те çинçескер виçĕ хĕр пăхса ÿстернине, çамки çине çĕр улми хурса ташласа тĕлĕнтернине шутламасан ыр сăмах пит илтмен вăл.

Ватлăха парăнман арăмĕ хăйĕн çулĕсене шутлассипе тăваттăмĕш теçеткене куçсан упăшкине — Пухтиле пĕрин хыççăн теприне икĕ ывăл парнелет. Вĕсене Тяпук тата Минюк ятсем хураççĕ. Тĕрлĕ йывăçăн çимĕçĕ те, ĕмĕрĕ те тĕрлĕ çав. Пухтил ывăлĕсен те шăпи пĕр мар килсе тухнă. Минюк хăй евĕрлĕ çын пулнă, хăй пĕлнĕ пек пурăннă. Ача чухне те, ÿссе çитĕнсен те вăл пĕрмай пулла çÿренĕ. Унăн арăмĕ хĕр ачасем çеç мар, ывăл та çуратасшăн çуннă — тивĕçтереймен Минюк мăшăрĕ мĕн ыйтнине. Кил тĕтĕмĕ сÿннĕрен ăна ялйыш хăвăрт манса кайнă.

Шурук тăрăхĕнчи Тяпук ратни паянчченех халăх асĕнче.

Унашкал лайăх çын ялта тупма йывăр. Çав тери ăслă-тăнлă, тӳлек те лăпкă пулнă вăл. «Ĕç тухрĕ — аван. Ĕç тухмарĕ — ан кулян, тепĕр хут пуçла», — ăс панă вăл кӳршĕ-арша. Çĕçĕсене, çавасене хăйраса çивĕчлетме арçынсем унран вĕреннĕ: мăкалнăскерсене малтан пĕр вăхăт тăварлă шывра тытаççĕ, çавăн хыççăн хăйрама самай çăмăлрах. Пӳртре шăнасенчен епле хăтăлмаллине те пĕлет Тяпук: ăвăс çурта çутать те — лешсен сĕрлевĕ кĕçех илтĕнми пулать. Вĕсем карас ăвăсĕн шăршине чăтма пултараймаççĕ, пӳртрен хăвăрт вĕçсе тухса тараççĕ.

Ял-йыш Тяпукпа килĕштерсе, çураçуллăн пурăнать, мĕншĕн тесен вăл кашнинех пулăшма хатĕр, пулăшать те. Тяпук пур чух халăх аптрамасть теççĕУнкă хĕрринчи ялта. Ĕçчен çын çулне никам та татмасть. «Ку таранччен мана ватти те, çамрăкки те хур туман-ха, малалла мĕнле пулать, пĕлме çук», — тет Тяпук.

Никам çине те мар, ĕçчен Тĕрнеçе куç хывать вăл. Çак пике тĕрĕллĕ, питĕ çыпăçуллă çĕленĕ кĕпе тăхăнать. Ир-ир тăрса каç выртиччен ĕçпе тĕрмешет.Ункă тăрăхĕнчи ялсенче унран ĕçченрех, унран илемлĕрех хĕр тупма пулнă-ши? Ахальтен мар Тяпук ăна Хитрепи тесе чĕнет. Мăшăрлансан Тĕрнеçе виçĕ ывăл çуратрĕ, ашшĕ-амăш вĕсене Курак, Шахман, Иштерек ят пачĕç.

Ишек ялĕнче тем тĕрлĕ ратне те пур. Альпуханпа Салихван, Камильванпа Алентей йăхĕсем — чи йышлисем. Илтиярпа Алихван ратнисем — хаяррисем, чи хăюллисем. Ялта вĕсем вырăс тĕнне чи малтан йышăнчĕç. Майсенчен пăхăр хĕрес çакса çӳреме тытăнчĕç. Илтияр ратнинче сывлăх енчен катăккисем пайтах: пĕри кĕçĕллĕ, теприн куçĕ витĕр мар, виççĕмĕшĕ кукша... Хĕреспе çӳреме тытăнсан та вĕсен сывлăхĕсем аванланни курăнмарĕ. Алихван ратнинче сывмаррисем пачах çук темелле, пурте таса сывлăхпа çӳреççĕ. Укахви вара çилçунатлă пекех — вĕçнĕ евĕр утать-чупать. Хăюллă ку хĕр: нимрен те хăрамасть, эрешмен курсан çеç сехĕрленет.

Шуруксем — тӳлек йăх. Вĕсем ку таранччен киремете пуççапаççĕ, пупа хăйсен яхăнне те ямаççĕ. Тяпукăн аслă ывăлĕ Курак хăй пекех авалхи тĕне пăрахман Илпинесе качча илчĕ,

иккӗшӗ уйрӑм йӑва ҫавӑрчӗҫ. Тяпукӑн вӑталӑх ывӑлӗ Шахман та авланчӗ, сӑмах тӑрӑх, ӑна качча тухма Хаврима хӑй пит тӑрӑшнӑ. Пӗлме йывӑр, кирлех те мар. Килӗштерсе пурӑнаҫҫӗ.

Тяпукӑн кӗҫӗн ывӑлӗ Иштерек ҫаплах хусахсен шутӗнче. Авланас шухӑшӗ пур, анчах савнӑ хӗрӗ ӑна качча тухма васкамасть.

— Юрату — питӗ ырӑ туйӑм, — кӗрхи палан пек хӗрелсе каять хӗр. Унтан вӑтанараххӑн ҫапла хушса хурать: — Ӳсентӑран туни темиҫе сыпӑклӑ та пулать. Юрату сыпӑкӗсем вара тӑваттӑ ҫеҫ: паллашу, туслашу, юрату, ҫирӗп ҫемье...

— Эппин, юрату мӑшӑрлану ыйтӑвне татса парас умӗнхи тапхӑр... — хӗрпе килӗшет каччӑ. Хӗрӗн кӑвак куҫӗнчен тилмӗрсе пӑхать те малалла калать: — Мӑшӑрланассине иксӗмӗр мӗншӗн вӑраха тӑсса ятӑмӑр-ха? Килӗшсемччӗ мана качча тухма, тӳпери мӗнпур ҫӑлтӑра илсе килсе парнелӗп!

— Пӳлӗхҫӗ пире юратӑвӑн малтанхи виҫӗ сыпӑкне кӑна тутанса пӑхма хушнӑ, тӑваттӑмӗшне пӳрмен... — ассӑн сывлать хӗр. — Урӑх тӗн тытакана качча каятӑн — тамӑк хуранне лекетӗн! Пӗлетӗн-ҫке: атте чарать. Пирӗн ратне Христос тӗнне йышӑнчӗ. Мана пуп Агафи ят пачӗ, эсӗ пур — Укахви те Укахви тетӗн...

Иштерекпе Укахви ачаранах пӗрле ӳснӗ, пӗр-пӗринчен уйрӑлман. Каҫсерен иккӗшӗ улах вырӑнта ҫӑлтӑрсем шутланӑ. Ҫав каҫсем нивушлӗ манӑҫа юлчӗҫ?

Ҫӳлти Пӳлӗхҫӗ кӑҫал ҫумӑр памасӑр тарӑхтарчӗ. Ункӑ тӑрӑхӗнчи чӑвашсене Христос та пулӑшаймарӗ. Кӗркунне кӗлетсен пӳлмисем пуш-пушах юлчӗҫ. Халӑх пурнӑҫӗ хурӑн хуппи пек тӗрӗлчӗ. Выҫӑ пурнӑҫран епле хӑтӑлмаллине старикçем тӗрлӗрен калаҫҫӗ. Пӗри те уҫӑмлӑн татса калаймасть.

Тыр-пул ӑнманни пурне те пӑшӑрхантарать, Тяпук Куракӗн те ялан пӗр шухӑш — мӗн пулать ӗнтӗ? Пушӑтпа аппаланакан Курак шухӑша кайса тӑсӑмлӑн юрлама пуҫларӗ:

И ҫилсем вӗрет, вичкӗн ҫил вӗрет,
Хаяр аслати капланса килет.
Пурнӑҫӗ хӗсӗк, йывӑр самана,
Хуйхӑ-суйхӑ килет пӗр пасмана.

Пиҫсе ҫитсен хӗп-хӗрлӗ пӗрлӗхен
Вӑрман витӗр таҫтанах курӑнать.
Кӗрсе ӳкрӗмӗр эпир хӗнлӗхе,
Кил-йышӑм манӑн тертлӗ пурӑнать.

Вун иккӗлле явнӑ чӗн саламат
Сӳтӗрӗлчӗ вӑрмана ҫитиччен.
Йывӑрланчӗ пурнӑҫ пурӑнма
Ачам-пӑчам ҫитӗнсе ҫитиччен.

Ешӗлех те хурӑнӑн ҫулҫисем
Шӑпах патша укҫийӗн тӗррисем.
Эпир хамӑр патшанӑн тарҫисем
Пулатпӑр тинех пилсӗр лашмансем.

Сирӗн хапхӑрсене кам тунӑ-ши —
Ик юпи те чалӑшма пуҫларӗ.
Пурӑнма пире кам ӑс парӗ-ши —
Хевтемӗр йӑлтах пӗтме пуҫларӗ.

Кӑвак кӑвакарчӑнӑн кӑвак ҫук,
Шурӑ кӑвакарчӑнӑн тӗпек ҫук.
Пире Пӳлӗхҫӗ телей паман,
Хӑех тупӑнасса кӗтме ҫук.

Курак кӑкӑрӗнчен сывлӑш вӗрин тухать.

— Пӳлӗхҫӗ пире тыр-пул мар, мӑян ҫеҫ парать. Ҫитменнине, ани-ҫаранӗ ытла та хӗсӗк, кӑштах пек кӑна... — лаш хуйхӑрать вӑл. — Аттене вӑн лашман пулма илсе кайрӗҫ. Мана та, Шахмана та ҫав шӑпах кӗтет...

— Кӑнтӑралла ик-виҫ талӑк кайсан, Аслӑ Пӑла тӑрӑхӗнче, ҫӗрсем хура тӑпраллӑ тет. Унта Камильван хӑй кайса ҫӳренӗ, — пӗлтерет хӑй мӗн пӗлнине Шахман.

— Эпӗ те илтнӗ ун ҫинчен, — хутшӑнать калаҫӑва Иштерек. — Выҫӑ лариччен куҫса каяр ҫавӑнталла. Укахвие хамӑрпа пӗрле пыма чӗнер. Тен, ҫӗнӗ ҫӗрте мана качча тухма килӗшӗ...

Ҫырма хӗрринчи ҫӗмӗрт ҫумӗнче ҫӑлтӑр шутлама хӗрпе каччӑ ҫаплах пӑрахман-ха. Хӑнӑхнӑ вырӑнта тепре тӗл пулсан Иштерек хӗре куҫса кайма хӗрӳллӗн ӳкӗтлет: «Иксӗмӗрӗн пӗр ҫулпала утасчӗ!» «Шур акӑшӑн ҫуначӗ иккӗ, эпӗ вара пӗччен», — тӗвӗленет шухӑш хӗр пуҫӗнче. Юратӑвӑн тӑваттӑмӗш сыпӑкне ҫитесси пирки хальхинче вӑл хирӗҫлемест, куҫса кайма килӗшет. Туйне вара хӗр ашшӗнчен вӑрттӑн турӗҫ.

Инçе çула виçĕ çемье ирпе ирех хускалчĕ. Икĕ талăкра çĕр çухрăм ытла кайрĕç. Виççĕмĕш кун кашкăр иртсе çӳрейми, упа пуçне чикейми чăтлăх вăрмана çитсе кĕчĕç. Кураççĕ Тяпук ывăлĕсем: кунти вăрман — сĕм чăтлăх, çапах унта уçланкăсем те курăнкалаççĕ. Тĕпек теççĕ вĕсене. Çырмара пулă çатăлтатать. Айлăм вырăна каскăн çил те лăскамасть. Виçĕ çемье тулăх шывлă çырма хĕрринче чарăнать. Çырми тăрăх тĕтре явăнать, шывĕ вара тăрă, таса.

— Килтĕмĕр, килтĕмĕр, тĕнче вĕçне çитеймерĕмĕр. Çакăнта чарăнар. Тĕнче тытан Аслă Турă ирĕкĕпе çакăнта пурăнар!

Çапла каласан пăхаттир пек патвар кĕлеткеллĕ Курак хĕвелтухăç еннелле çаврăнса тăчĕ.

— Эй, шăпа пӳрен Пӳлĕхçĕ! Эй, выльăх пăхан Пихампар! Пире хăвăн ырлăхусăр ан хăвар! — Хăй пĕлекен ырă-хаяр турăсене пурне те асăнчĕ Курак, пĕшкĕнсе çĕре виçĕ хут чуптурĕ, унтан хирĕçлеме юраман сасăпа пурне те пĕлтерчĕ: — Пирĕн асаттесен тĕп аслашшĕ Ишек ятлă пулнă. Çĕнĕ яла та ун ятнех хурар. Ишек асаттемĕр пире усал-тĕселтен сыхлатăр!

Хĕвел пек çутă Илпенес те упăшки пекех турĕ: чĕркуçленсе çĕре чуптурĕ, çемйи валли Пӳлĕхçĕпе Пихампартан ырлăхпурлăх ыйтрĕ.

Тăн-тăн кĕлеткеллĕ, вăтам пӳллĕ Шахман тӳрех тăван ашшĕне Тяпука аса илчĕ, унран сывлăхпа ырлăх пиллеме ыйтрĕ, хĕвелтухăçнелле пăхса пуççапрĕ. Тулли уйăх евĕр çаврака питлĕ Хаврима хăйне Турă пӳрнĕ упăшки пекех турĕ: пурнăçра мĕн кирлине хуняшшĕнчен ыйтрĕ.

— Ку юхан шыва ман ята парар — Шахман пултăр! — сĕнет Тяпукăн вăталăх ывăлĕ.

— Тăван аннем, пире хĕвел ăшши пар! Укахвипе иксĕмĕре пехилсĕр ан хăвар! — кĕлтурĕ Иштерек пĕшкĕнсе те тайăлса, кашни сăмахне уçăмлăн каласа.

Çав сăмахсенех упăшки хыççăн Укахви янравлă сассипе каларĕ. Кăкăрĕ тĕлне хĕрес хурасшăнччĕ, унтан тем шухăшласа темиçе хут çĕре çити тайăлчĕ.

— Вăн çав çырмара хăй тĕллĕн ӳснĕ ыхра нумай. Ăна Ыхра çырми ят хурăпăр! — сассине хăпартать Иштерек.

Виçӗ çемье виçӗ тӗпеке-уçланкăна йышăнать. Çанă таварса вăрман кăклама пуçлаççӗ.

Яштака Иштерекпе çăлтăр куçлă Укахви те пӗри вăрмана, тепри армана çӳремеççӗ. Юратаççӗ вӗсем пӗр-пӗрне, вӗри юрату иккӗшне те телей илсе килет. Чăн ӗнтӗ, тепӗр чухне тавлашса та илеççӗ, çапах пӗри тепӗрне сив сăмах каласа курман.

Пурнăçра лайăххи те, усалли те пӗрлех çӳреççӗ çав. Пӗрре çапла Шахман çырми хӗррине таçтан хăяматран мишерсем килсе вырнаçаççӗ. Мишерсемпе чăвашсем килӗштерсех пурăнатчӗç, пӗр ялсемех тесе шутлатчӗç. Урамне Мишер анаткасӗ ят панăччӗ. Пурнăç йӗркеллӗччӗ, анчах инкек ура айӗнченех сиксе тухать иккен. Пулать вӗт! Пӗр кунхине мишер йӗкӗчӗ Хайрулла ывăлӗ Нибулла — унаса çитерейммен юсман — çаранта Укахви сулăна-сулăна утă çулнине аякран нумайччен сăнаса тăрать. Халиччен ача çуратман чиперккен йăрăс кӗлетки ытла та илӗртӳллӗ-мӗн. Хан гаремне тивӗçлӗскерӗн мӗншӗн-ха чăвашпа пурăнмалла?

— Аллах акбар, алла бирзен! — мăкăртатать Нибулла тути. Вăт йӳплешке хăраххи! Йӳплешкерен те япăхрах этем! Чиперккене вăл урхамах урлă çавăрса хурать те вӗçтере парать таçталла вăрман çулӗпе. Юрать-ха Иштерек аякра пулман. Ашкăнчăк мӗн хăтланнине курах каять, çурăмӗ çине сивӗ тар персе тухать. Икӗ çын лартнă урхамаха хăваласа çитме пулатех иккен. Вăр-хурах урхамахне Иштерек ухă сăннипе уринчен перет те, лешӗ такăнса йăванса каять. Нибулла утне пăрахсах вăрман чăтлăхне тарать, лашапа хуса çитес çук чупать. Хăтаратех упăшки арăмне ют çын тыткăнӗнчен.

Пуçланса каять вара мишерсемпе чăвашсем хушшинче тăнăççăрлăх. Пӗрин ӗни çухалать, теприн кӗсри хăм пăрахать. Пӗр каçхинеултă сурăх харăсах пăчланать. Чăваш Ишекӗнче выльăх çухални час-часах пулкалать, анчах тупăнни сайра. Сыснисене кăна тивекен çук. Мишерсем Шахман çырми тăрăхне хăйсен çӗрӗ тесе тавлашаççӗ. Тяпук ывăлӗсем хăйсем малтан вырнаçнăран пирӗн теççӗ. Çак тавлашу-харкашу мишерсем Шахман хӗрринчен Ыхра çырми тăрăхне куçса кайнипе вӗçленет. Вӗсем тепӗр çӗрте те хăйсен урамне Мишер анаткасӗ ятпах хăвараççӗ. Нибулла иптеш таçта тӗнче

касса ҫӳреме каять. Чӑвашра та, мишерте те пур ҫав ӑссӑр-тӑнсӑр сӳтӗксем.

Чӑвашсемпе мишерсем хушшинчи тавлашу чиперех вӗҫленет, анчах Иштерекпе Укахви хушшинче хура кушак чупса иртет. Укахвие киле илсе таврӑнсанах Иштерек чӗрине темле сирсе сирӗлми кӗвӗҫӳ туйӑмӗ кӑшлама пуҫларӗ. Вӑйлӑ та пиҫӗ хӗрарӑма ҫав путсӗр Нибулла урхамах урлӑ епле йӑтса хума пултарнӑ-ха? Хӗрарӑмӗ хирӗҫлемен ӗнтӗ. Кирлӗ ҫӗртен тапмалла ҫеҫ пулнӑ вӗт. Ҫук ҫав, хирӗҫлемен те, тапман та, аллине те ҫыртман, кӑшламан. Кӗвӗҫӳ вӑйланса пынӑҫем вӑйланса пычӗ. Упӑшки кӗҫех арӑмӗпе пуплеме пӑрахрӗ. Уйрӑм ҫывӑраҫҫӗ.

Укахвие тӗнче пӗтсе килнӗнех туйӑнма пуҫларӗ. Питне куҫҫульпе ҫӑвать, пурпӗр нимӗн те шарламасть. Упӑшкин ҫилли иртсе каясса кӗтет. Мӗншӗнне-мӗнне пачах ӑнланмасть Укахви: кунӗн-ҫӗрӗн тӑпра ӑшӗнче чакаланнӑран юратми, савми пулчӗ-ши упӑшки? Иккӗшӗ хушшинче харкашу асӑрханмасть, анчах килӗштерӳ те ҫукрах. Укахви вир ани ҫине ҫум ҫумлама пӗччenex каять. Иштерек мунча пури тума тӑрса юлать. Хӑйӗн ӑшӗ хыпса ҫунасла вӑркать. Пуртӑ тытмасӑр каллӗ-маллӗ уткалать. Ҫав вӑхӑтра ан пулччӑр куҫӗ тӗлне йытӑ та, кушак та. Кӗтсех тӑччӑр — лекет. Чӑх-чӗп те лупас тӗлнеллеваскать.

Таса чунлӑ Укахви ассӑн сывласа кулянать. Унӑн чунне хуйхӑ пӑвать. Упӑшки мӗн те пулин каласа ятлатӑрччӗ хӑть, чышкӑлама та чармӗччӗ. Тулхӑрса ҫӳреме кӑна пӑрахтӑрччӗ.

Иштерек мӑшӑрне асӑрхамасть, курмасть. Ҫук, суккӑрланса ларман вӑл. Ҫук, туйӑмӗ-сисӗмӗ ҫухалман унӑн — ҫапах хӗвел ӑшшине туйма пӑрахрӗ. Ура такӑнсан — чӗркуҫҫи ыратать. Хуйхӑ килсе тухсан — сӑлтавпа-и, сӑлтавсӑрах-и — пуҫа лекет. Упӑшкипе арӑмӗ хушшинче тӗр-тӗр тухманни кӑна.

Куракӑн аслӑ ывӑлӗ Ӑҫакка сунара ҫӳреме хӑнӑхнӑран кӗтӳ урӑх кӗтесшӗн мар. Тата вӑл ӗнисене тырӑ ҫине кӗртсе таптатнӑ. Курак, Шахман тата Иштерек кама кӗтӳҫӗ тӑвасси пирки халӗ пӗрле ларса канашлаҫҫӗ. Ку ӗҫе хӑйсенчен пӗрне шанса парас — арҫын алли вӑрман хӑртса кӑкланӑ ҫӗрте кирлӗ. Анасене те, ҫарансене те анлӑлатмаллах. Арҫынсен калаҫӑв-

не Укахви вăрттăн итлесе тăрать. Кĕтмен çĕртен вĕсем умне тухать те татăклăн çапла калать:

— Кĕтÿçĕ эпĕ пулатăп!

Мĕнех калăн, арçынсем виççĕшĕ те килĕшрĕç. Мăшăрне Иштерек вăрăм пушă явса пачĕ. Укахви хĕвелпех тăрса кĕтÿ хăваларĕ. Кĕтÿ кĕтесси ăнăçлăнах пулса пычĕ. Пĕр синкерлĕ кунччен... Кăнтăрла кĕтÿ Шахман çырми хĕрринче тапăрта тăнă чухне Укахви тутлăн çывăрса кайнă. Вăрмантан çăмламас упа килсе тухнă та Укахвие малти лаппипе çупкă хыççăн çупкă пама тытăннă. Унран вĕçерĕнсе Укахви салтса хунă çăпатипе юнашар выртакан чукмара ярса тытать, тÿплеттерет упана пуçран. Пĕрре, тепре... Шак! туни кăна илтĕнет. Çирĕп иккен хăяматăн пуç шăмми. Вăл кĕтÿçĕн аяк пĕрчине хуçать, питĕнчен, кăкăрĕнчен чăрмаласа юн кăларать. Укахви питĕнчен вут-хĕм сирпĕнет, куçĕ умĕнче тĕрлĕ тĕслĕ ункăсем выляма пуçлаççĕ.

Ак хайхи, кавлесе выртакан ĕнесем хыттăн макăрса ура çине тăраççĕ, хăйсен кĕтÿçне тăрмалакан упана пур енчен те хупăрласа илеççĕ. Ула вăкăр та, ĕнесем те шĕвĕр мăйракисене хаяррăн хăй еннелле тĕлленине курсан упа-утаманăн та сехри хăпать, ункăран аран-аран тарса тухать. Шăв-шав тапраннăран Шахман çырми хĕррине Иштерек пырса тухать. Аяк пĕрчине хуçнă, юн юхтаракан Укахвие курсан чутах кутăн кайса лармасть. Тавçăрулăскер тарма шутланă упана ухăран персе ÿкерет.

Иштерек мăшăрне асăрхануллăн килне йăтса таврăнать. Илпинес вĕрентнĕ пек, Иштерек арăмне эмел курăкĕсемпе сиплет. Унăн кĕвĕçÿ туйăмĕ ирхи тĕтре пекех сĕвĕрĕлсе çухалчĕ. Часах упăшкипе арăмĕ каччăпа хĕр чухнехи пекех вĕрин юратма пуçларĕç. Çемье пурнăçĕ каллех килĕшÿллĕн ăнăçса пычĕ. Хăйсен йăнăшне хăйсемех тÿрлетекенсене ырламалла та мухтамалла.

Пурнăç урапи хăш çулпа пырассине малтанах пĕлсе тăма йывăр. Çапах иккĕленмесĕр калама пулать: Иштерекпе Укахвин юрату тĕнĕлĕ урăх авăнмастех. Вĕсен ыран утас çулĕ ик енне уйрăлмĕ.

Çĕнĕ çĕре килнĕ çемьесем виççĕшĕ те хастар тата харсăр

пулнӑ. Хӑраман аякри ҫула тухма, пултарнӑ ҫӗнӗ ҫӗрте малтан ҫӗр пӳрт, унтан хӑтлӑ ҫурт лартма, хӗсӗк уҫланкӑран анлӑ ана тума. Виҫӗ ҫемье пӗрле никӗсленӗрен яла виҫӗ тӗрлӗ тивлет пӗрмай килсе тӑрать.

Хӗрлӗ питлӗ мӑшӑрне Илпенесе Куракран Хӗвелпи тесе чӗннӗ. Вӗсем иккӗшӗ те ҫав тери ӑслӑ-тӑнлӑ та ӑш пиллӗ пулнӑран, яла Куракпа Илпинес-Хӗвелпи никӗсленӗрен Чӑваш Ишекӗ ҫине хӗвел ылтӑн пайӑркисене вӗҫӗмсӗр сапалать. Ял никӗсӗн чулӗсене Шахманпа Хаврима купаланӑран, упӑшки савнӑ мӑшӑрне Уйӑхпи тесе чӗннӗрен Чӑваш Ишекне ҫӗрле тунсӑх уйӑх хӗпӗртӳллӗн ҫутатать. Ял пулас вырӑнти вӑрман чӑтлӑхӗсене чи малтан касса уҫнӑ Иштерекпе Укахви ҫав тери ӗҫчен те хастарлӑ пулнӑран, упӑшки мӑшӑрне Ҫӑлтӑрпи тесе чӗннӗрен Чӑваш Ишекне ҫӑлтӑрсем кашни каҫ куҫ хӗсеҫҫӗ, ырлӑхпа пурлӑх сӗнеҫҫӗ. Яла никӗсленӗ виҫӗ ҫемье ӗҫченлӗхпе хастарлӑха, пӗр-пӗрне чун-чӗререн юратас та савас туйӑма ырӑ кӑмӑлпа парса хӑварнӑ. Ҫавӑнпа хальхи яш-кӗрӗм темле ӗҫе те пултарать, ҫавӑнпа ялта кил хыҫҫӑн кил хушӑнать, ҫемье хыҫҫӑн ҫемье чӑмӑртанать.

Ҫапла, Шурук йӑхӗ Чӑваш Ишекӗнче хунав хыҫҫӑн хунав ярать. Арӑслан амӑшӗн ратни 1756 ҫултанпа паллӑ. Ҫав ҫул ку ратнере Алексей ҫуралать. Унтан Кузьма, Дмитрий, Ефим, Конон, Иван ратне йывӑҫӗн турачӗсене пӗрин хыҫҫӑн теприне ӳстереҫҫӗ. Иван турачӗсем — Николай, Агафия тата Федор. Тимофей, Александра, Феврония, Мария, Татьяна, Клавдия тата икӗ ят — Федор ачисем. Татьяна Федоровна 1918 ҫулта, Клавдия Федоровна 1920 ҫулта ҫуралнӑ.

Курак Арӑсланӗн кӑк-тымарӗсене йӗрлесе тухар. Макар, Ермолай, Дмитрий, Андрей тата Прокоп ачи-пӑчи пилӗк сыпӑка тӑсӑлать. Прокопран Захар, Тимофей, Мария, Петр ҫуралса ӳсеҫҫӗ. Петр вара сакӑр ача пӑхса ӳстерет: Пантелей, Василий, Иван, Елена, Мария, Евгения, Римма тата Антонина. Пантелей Петрович 1917 ҫулта ҫуралнӑ, ӳссе ҫитӗнсен механизатор, трактор бригадин бригадирӗ пулса тӑнӑ.

Шахман ҫырми хӗрринче ӗҫчен чӑваш ҫемйинче 1943 ҫулта ылтӑн кайӑк ҫуралнӑ. Амӑшӗ Арӑслан ывӑлне юратса шурӑ пир тӑрӑхӗпе чӗркенӗ, ӗмӗрӗ ҫав пир тӑрӑхӗ пек вӑрӑм пултӑр

тенĕ. Çăварне пыл-çу хыптарнă — чĕлхи пыл пек пылак, çу пек çемçе пултăр тенĕ. Ылтăн кайăк çунат сарма пуçласан çырмашкăн ăна хур шăмми панă — хур тĕкĕ тытакан хур курман тесе.

— Çĕр çинчи пурнăçпа ĕмĕр савăн. Кама пулăшу кирлĕ — ан пăрăн! — çапла ăс парса ӳстерет Хĕветĕр Татюкĕ тăван ывăлне. Амăшĕ вăй-хал кӳнипе, хăй тăрăшнипе кайăк чĕппинчен хăватлă ăмăрт кайăк пулса тăчĕ. Чăваш Ишекĕн ахахмерченĕ те, чи çутă çăлтăрĕ те вăлах.

Курак Арăсланĕ Шурук йăхĕнчи Тяпука хывнă: пĕтĕм яла пулăшать. Кураков пулăшсан Чăваш Ишекĕ пĕтмест теççĕ Шахман çырми хĕрринче пурăнакансем. Шурук Куракĕ йăхĕн тăсăмĕ Курак Арăсланĕ — Лев Пантелеймонович Кураков — хăйĕн ырлăхне пĕтĕм яла парать.

Çутă куçлă Укахви юрланă юрра ирпелен, шуçăм çути килнĕ чухне, Шахман çырми хĕрринче халиччененех илтме пулать.

Ишек çырма хĕрринче,
Симĕс вăрман çумĕнче.
Манăн телей ăçта-ши?
Тăван ялăн йышĕнче.
Чăн, чăн иккен, чăн иккен,
Пĕртте суя мар иккен.
Яш-кĕрĕм тăван ялтах
Турă çырнине тупать.
Тĕпĕр-тĕпĕр туй килет.
Ишек хĕрĕ — сарă хĕр,
Ял илемне вăл кӳрет.
Ĕçре малта пыракан —
Ялан тутă пулакан.
Пĕрмай килте ларакан —
Çатма тĕпĕ çулакан.
Çич ют пирĕн тăван мар,
Пĕрле ӳснĕ турат мар.
Тĕпелерех килсем те,
Алăк патнереххĕн лар.
Ялăн урамне тухсан
Кирек кам та савăнать.
Тус-тăванпа тĕл пулсан
Юрламасăр кам чăтать!
Çутă тĕнче хĕсĕр мар,
Çын ĕмĕрĕ иккĕ мар.
Юратар, чунтан савар,
Килĕштерсе пурăнар!

...Çулталăкра пĕрре, çимĕк каç, Чăваш Ишекне никĕслекенсем леш тĕнчери çăтмахран тăван яла килеççĕ, урамсем тăрăх пăхса-сăнаса çӳреççĕ. Хăйсен ратнин пурнăçĕпе, ĕçĕхĕлĕпе паллашаççĕ. Вĕсем килсен тухатмăшсем алхасма чарăнаççĕ, усал-тĕсел тарса пытанать.

Çуллахи каç кĕске, çерçи сăмси тăршшĕ çеç. Шуçăм çути килеспе хаклă хăнасем, çырма хĕррине пырса, тухас хĕвеле хирĕç тăраççĕ: Курак Илпинеспе-Хĕвелпипе юнашар, Шахман Хавримапа-Уйăхпипе алла-аллăн тытăнса, Иштерек Укахвипе-Çăлтăрпипе ыталанса. Илпинес çаплах хĕвел пек çутă сăнлă, Хавриман куç харшисем çĕнĕ уйăх евĕр çавракa, Укахвин мăшăр куçĕ çăлтăрла çунать.

Курак тăван ял çыннисене мăн сасăпа çапла ăс парать:

— Эй, тăвансем, хурăнташсем! Сиртен ытла савнă çынсем çук! Эпир сиртен маларах çăкăр çинĕ, çимĕкчен çиччĕ шыва кĕнĕ, çимĕкрен вăййа тухаттăмăр, çимĕк иртсен хыт суха тăваттăмăр. Сирĕн çиес çăкăр пурах. Хытă çĕре кăпăк тăвăр. Пур ĕçсене те вăхăтра ĕлкĕрĕр. Ĕçчен çын кирек хăçан та хисепре. Çăкăр-тăварлă пурăнăр! Çитес тенĕ çĕре çитме тăрăшăр!

Тяпукăн вăталăх ывăлĕ Шахман тăван ялĕн хаклă çыннисене кăмăллă сасăпа çапла тума хистет:

— Эй, хаклă çыннăмăрсем! Тӳрĕ пурăннине ним те çитмест теççĕ ваттисем. Ача-пăчана хăвăр куçăр умĕнче тытăр. Йывăççинчен çимĕçĕ аякка ан ӳктĕр!

Тяпукăн кĕçĕн ывăлĕ Иштерек мăшăрне çупăрласа ыталать те ачаш сасăпа хисеплĕ ентешĕсене çапла сĕнет:

— Эй, ентешĕмсем! Килĕштерсе пурăнăр! Çу пек чĕлхепе, пыл пек тутлă сăмахпа калаçăр. Нумай пĕтет, сахал çитет, пĕрле пурăннине нимĕн те çитмест.

Тухан хĕвел пуçне кăтартсанах Тяпукăн ывăлĕсем мăшăрĕсемпе пĕрле хăвăрт куçран çухалаççĕ. Тепĕр çимĕкчен.

*Я.З. Сорокин тĕпчевçĕ Чăваш Ишекĕнчи*
*йăх-несĕл тымарĕсене «Ревизские сказки»*
*текен хырçă-куланай тӳлеме*
*тивĕçлисен переписĕн хучĕсем тăрăх ширанă.*



# Патша йăхĕнчи манашкă

Илемлĕ тӳпемре ларатчĕ авал Шупашкарти хĕрарăмсен авалхи мăнастирĕ. Йĕри-тавра вăрман. Çӳллĕ йывăçсем тӳпенелле кармашаççĕ, пĕлĕтсемпе пĕрмаях тунсăхлăн пуплеççĕ. Юнашарах Атăл ывăна пĕлми хумĕсене хăвалать.

1601 çулхи çĕртмен 2-мĕшĕнче капмар кӳмеллĕ урапа мăнастирĕн хапхи умне çитсе чарăнчĕ. Ăна кӳлнĕ утсем йывăррăн хашлатса сывлаççĕ. Кӳмене пур енчен те тусан сăрса илнĕ. Пăхсах курăнать: вăрăм çул тунă утсем, куçĕсем урмăш-тилмĕш пăхаççĕ.

Кӳмерен ĕлккен тумланнă хĕрарăм тухрĕ. Ун çинче чĕнтĕрленĕ аркăллă пурçăн кĕпе, пуçне ылтăнланă-кĕмĕлленĕ калпак тăхăннă. Алăри пӳрнисенче хаклă чулсемпе капăрланă çĕрĕсем.

— Пĕр-пĕр улпут мăшăрĕ пулма кирлĕ! — тавçăрулăхне кăтартрĕ хапха уçакан пĕр манашкă.

— Пĕлмесĕр калаçатăн, бояр йăхĕнчен вăл! Романовсен çемйинчен! — чышкă кăтартса юнарĕ манашкăна хуралçă. Хăй ытлашши сăмах персе янине самантрах ăнкарчĕ, хĕçне йĕнинчен кăларса сывлăша касса çурчĕ, кăшкăрса ячĕ: — Эй, сирĕлĕр! Çул парăр!

Документра кăтартнă тăрăх, хĕрарăмăн ячĕпе хушамачĕ Федора Ткачева. Вăл пĕр алă çула çитнĕ теме пулать. Хальлĕхе манашкă евĕр кастарман çӳçĕ пăхăр укçа тĕслĕ, икĕ çивĕчĕ вăрăммăн выртса питне çупăрлать, çурăмне хупăрлать.

— Турăçăм, мĕн тери йывăр мана! — ассăн сывларĕ хĕрарăм çӳçне кастарсан.

Тепĕр кун ир-ирех Федора манашкă игуменья патне пычĕ.

— Перасковья йăмăкăм, калăр-ха, ăçта хăямата килсе ячĕç мана? Путлĕ çынсемех пурăнаççĕ-и кунта? Йĕри-тавра шыв, çĕрле шапасем çывăрма памаççĕ.

— Христос Туррăмăр сăваплатăр сире, боярыня! — васкамасăр хуравларĕ игуменья. — Шантарсах калатăп: сире кунта никам та кўрентермĕ... Пирĕн хула Турă хал панипе лăпкă пурăнать. Çамрăках теме çук. Кунта çынсем виç çĕр çул ытла пурăнаççĕ ĕнтĕ. Асамлă Микулай — Николай Чудотворец ячĕпе чиркў лартма ĕмĕтленетпĕр, укçа-тенкĕ уйăракан шыратпăр. Мăнастир тўпемне салтаксем купаланă теççĕ. Кунта ĕлĕкрех çар çыннисем тăнă. Василий Петрович Борисов вайпут тата Федор Михайлович Нагой окольничи çинчен сăмах çўрет. Хам курман вĕсене. 1555 çулта Хусана кайнă чух архиепископ Гурий кунти крепоçпа тĕп чиркў вырăнĕсене палăртма кĕрсе тухнă.

— Каçарăр та, çакăнти шуйттан шăтăкĕнче хăçанччен пурăнмалла пулать манăн?

— Хăçанччен... Хăçанччен... Каçарăр та, Федора манашкă, çакăн пирки эпĕ хăвăртан ыйтасшăн-ха. Патшанах кўрентермерĕр пулĕ те?

Федора шăлне çыртрĕ, урăх нимĕн те шарламарĕ.

— Çулсем шучĕпе эсир маншăн аппа пулатăр. Çăмарти чăххине вĕрентмест. Çапах ăс парам-ха: пуçăра усса ан хуйхăрăр, апатран ан пăрăнăр. Хуйхă ырă тумасть, пуçри çўçе кăвакартать кăна... Ырă Турă, пулăшсам пире! — çине-çинех сăхсăхать игуменья.

Кунти мăнастир сарлака çунатлă теме çук: унта пурĕ те 25 келья, 37 манашкă çеç. Келйăсем тăвăр, нўрлĕ, чухăн. Çĕнĕ манашкă пытарса илсе килнĕ енчĕкĕнчен хаклă йышши чулсене пурне те кăларчĕ, алăри бриллиант эрешсене, пўрнисем çинчи ылтăн çĕрĕсене хыврĕ. Çак пысăк мула пĕтĕмпех игуменйăна пачĕ, мăнастир валли усă курма хушрĕ. Çапла туни унăн чысĕпе сумне самаях ўстерчĕ.

Игуменья манашкăна хăй çинчен каласа пама ыйтмасть, унсăрах пĕлет: ку хĕрарăм чаплă йăхран. Мăнастиртен тух-

са çӳреме чарни ăна кунта ирĕксĕрлесе янине пĕлтерет. Темиçе кунран çапах хăюсăррăн ыйтрĕ унран:

— Мускавсем парса хăварнă хут тăрăх, эсир Федора Ткачева... Ятăра тĕрĕсех кăтартнă-ши е ылмаштарнă-и?

Пуçне çатăрласа тытса пайтах вăхăт шухăшласа ларнă хыççăн манашкă пĕлтерме шутлать:

— Чăн ят манăн — Мария Шестова. Çакна никама та ан пĕлтерĕр. Хут çинче кăтартнă пек чĕнĕр...

Игуменья шухăша кайса çамкине картлантарать, манашкăран тĕлĕнсе çапла ыйтать:

— Эппин, эсир Захарьинсен-Романовсен йăхĕнчен? Федор Романов мăшăрĕн Ксения Ивановнăн амăшĕ пулатăр?

Манашкă нимĕн те каламасть, хăй хирĕçлеменнине пĕлтерсе пуçне кăна суллать. Мĕн пулнă, çав пулнах ĕнтĕ. Кăштахран леш хĕрарăм çапла калать:

— Вĕсем, Романовсем, пурте маншăн хаклă. Вĕсене пурне те юрататăп, саватăп!

Çĕнĕ манашкă келйине игуменья тимĕр кăмака ларттарчĕ. Шăнса ан пăсăлтăр! Хурăн вутти çăтăр-çăтăр туса çунни унăн чунне лăплантарать, именинчи хăтлăха аса илтерет. Хĕвел çутин пайăркисем келйăна кĕрсе унăн кĕскетнĕ çӳçне вут тĕсĕ кӳреççĕ.

Романовсен династийĕнчи пĕрремĕш патша кукамăшне Мария Шестовăна Борис Годунов патша указĕпе Мускавран Шупашкара ăсатнă, хĕрарăмсен Микула мăнастирне хупнă. «Патша ывăлĕн Дмитрийĕн шăпи» («Житие царевича Дмитрия») ячĕллĕ турăша хăш-пĕр тĕпчевçĕ Мария Шестовăн Шупашкарти ăраскалĕпе çыхăнтарать. Патша ывăлĕн вилĕмĕшĕн Борис Годунова айăпа хурса турăша трагедиллĕ пулăмсен сценисемпе ӳкернĕ. Ку турăша Республика тӳремĕнче часавайра кашниех курма пултарать. Унăн айккисенче Годунов вĕслетсе янă каварçăсем Хаяр Иванăн ывăлне епле вĕлернине кăтартакан ӳкерчĕксем пур.

Углич, Атăл хĕрринчи хула, Мускавран 230 çухрăм çурçĕререх ларать. 1584 çулта Хаяр Иван вилсен Борис Годунов патшан тăлăха юлнă Мария Нагая мăшăрне Дмитрий ывăлĕпе пĕрле шăпах çав хулана леçет. Çичĕ çултан, 1591 çулхи çу

уйăхĕн 15-мĕшĕнче, вырсарни кун кăнтăрла иртсен, Угличра собор чанĕ инкеке пĕлтернĕн çапма пуçлать. Хула çыннисем патша мăшăрĕн кил картине чупса пыраççĕ те синкерлĕ ўкерчĕк кураççĕ: патша ывăлĕ Дмитрий вилĕ выртать, такам ăна çĕçĕпе чиксе вĕлернĕ. Ку нехекле вилĕм-ши е тăшманĕсем вĕлернĕ — историксем ку таранччен те çирĕплетсе калаймаççĕ. Халăх хушшинче пăшăл-пăшăл сăмахсем сарăлаççĕ: патша ывăлне Борис Годунов хĕтĕртнипе вĕлернĕ. Çак пăшăлтатăва вăл ниепле те сирсе ярайман. Угличри синкер хыççăн Мария Нагая Иван ĕмпу арăмне таçти хăяматри мăнастире кайса хупнă, унăн шăллĕсемпе пиччĕшĕсене пуç янă е вĕлернĕ.

Çапла ĕнтĕ Хаяр Иван патшан ывăлĕ вунă çулти Дмитрий ăнланмалла мар сăлтавпа вилет. Ку вилĕм Борис Годуновшăн, паллах, çав тери усăллă пулнă, мĕншĕн тесен саккунлă йĕркепе престола Федор Иванович хыççăн Дмитриййĕн йышăнмалла пулнă. Тĕпчев комиссийĕ патша ывăлĕ нехекрен вилнĕ тесе çирĕплетнĕ пулин те Дмитрие Годунов хушнипе вĕлернĕ текен сас-хура çаплах лăпланман. Чăнлăхпа суяна уйăрма ансатах мар çав. Унашкал хавха саракансен чĕлхине касни те пулăшайман.

Шупашкарти хĕрарăмсен мăнастирĕ хăйне хупнă кĕтес Мария Шеставăна тĕнче хĕрри пек туйăнать. Çĕрле, улăм тўшекĕ çинче выртуçăн, вăл шыв шăмпăлтатнине илтет. Вăхăт-вăхăтăн сĕм çĕрле, мăнастире тĕттĕмлĕх чаршавĕ хупласан, тискер пĕчченлĕх туйăмне парăнтарма вăл ниепле те хал çитереймест. Акă вăл вырăнĕ çинчен шиклĕн çĕкленет, чĕтрекен аллипе çурта çутать, келйăра каллĕ-маллĕ урмăшса утма тытăнать.

Вăхăт иртсе пынă май манашкă пĕчченлĕх туйăмне çĕнтерме хăнăхрĕ-хăнăхрех. Çакна тума ăна игуменья хăй пулăшрĕ. Шупашкарти мăнастирте Мария малтанхи кунсенче никампа чунне уçса калаçма аптрарĕ. Унăн чĕрине хурт кăшланăн туйăнчĕ. Пуçĕ такам чукмарпа çапнăн шăтса тухасла ыратрĕ. Ăна Атăл хĕрринчи хулана патша çывăхĕнчисем ăсатнăран игуменья та унпа мĕн çинчен те пулин пуплеме иккĕленсе тăчĕ. Манашкă куççуль тăкса куляннине асăрхасан мăнастир пуçлăхĕ çăка пылĕпе курăк чейне хăй илсе пычĕ, Мускавра

Борис Годунов Захарьинсене-Романовсене еплерех хёсни ҫинчен мӗн илтни-пӗлнине каласа пачӗ. Ҫакӑнтан пуҫланчӗ икӗ хӗрарӑм пӗр-пӗрне шанса калаҫасси.

— Сирӗнпе пӗрле пулма кӑмӑллӑ! — ҫапла каласа тав турӗ манашкӑ игуменйӑна. — Сирӗнпе тӗл пулса пуплесен чун лӑпланать.

Хуллен пулин те — вӑхӑт шав малалла шӑвать. Ёмӗр тӑршшӗпе Шупашкарта пурӑннӑн туйӑнать Марийӑна, иртнӗ пурнӑҫ те тӗлӗк, те суя.

Мӑнастир тавра ҫӑра вӑрман. Хулара нумай кӑвакарчӑн. Мария вӗсене сехечӗ-сехечӗпе кӑсӑкланса сӑнать. Манашкӑ кӑвакарчӑнсем кӑвӑлтатнине кӑмӑлласа итлет. Эх, мӗн тери ырӑ та чӗтревлӗ, ачаш та килӗшӳллӗ вӗсен кӑлтӑртатӑвӗ! Ахальтен мар ёнтӗ ҫамрӑк мӑшӑра — упӑшкипе арӑмне — кӑвакарчӑнсем пек ҫепӗҫ пулма, пӗр-пӗрне тӳрӗ кӑмӑлпа шанса пурӑнма пехиллеҫҫӗ ватӑсем.

Ҫурхи кунсем ҫитсен игуменья Марийӑна темле арҫын, Евстратий ятлӑскер, унпа питӗ тӗл пуласшӑн килнине пӗлтерет. Тахҫан вӑл сад пахчинче ёҫлесе пурӑннӑ тет, халӗ темле хыпар пӗлтересшӗн тет хӗрарӑма.

Темиҫе хут сӑхсӑхса пуҫҫапнӑ хыҫҫӑн Евстратий манашкӑна хурӑн хуппи татӑкне тӑсса пачӗ. «Сирӗн тӑшмана Турӑ хӑй патне чӗнсе илчӗ», — тесе ҫырнӑ унта.

Ҫӗртме уйӑхӗнче Евстратий каллех мӑнастире ҫыру пама пырать. Хурӑн хуппи ҫине: «Борис ывӑлне Федора престол ҫинчен туртса антарнӑ, ҫӗр пичӗ тасалса юлнӑ!» — тесе ҫырнӑ.

Пӗлетпӗр: Годунов ывӑлне II Федор ятпа Раҫҫей патшине лартаҫҫӗ, амӑшне унӑн регентши пулма уйӑраҫҫӗ. Анчах Федорӑн патшара вӑрах ларма май килмен. Мускав ҫыннисем 1605 ҫулхи ҫӗртмен 1-мӗшӗнче Суя Дмитрий хӗтӗртнипе Кремле хӑйсен аллине илеҫҫӗ, II Федорпа унӑн амӑшне леш тӗнчене ӑсатаҫҫӗ.

Хыпар пӗлтерӗшне ӑнкарса илсен манашкӑн сарлака пичӗ ҫуталса кайрӗ.

Вӑхӑт вара хытса ларнӑн туйӑнать. Мӑнастирти пӗр ҫулталӑк ёмӗр тӑршшӗн тӑсӑлать. Пӗррехинче игуменья Марийӑна тӗлӗнмелле хыпар пӗлтерчӗ:

«Турра шĕкĕр! Нарăсăн 21-мĕшĕнче Михаил Романов патша престолне йышăннă!» Игуменья çапла каларĕ те виçĕ хут сăхсăхрĕ. Ырă хыпар пĕлтерĕшне ăнкарса илсен манашкă куçĕ çăлтăрла çунма пуçларĕ, пичĕ çуталса кайрĕ.

Михаил Романов çав кунсенче Кострома хулинче Ипатьев мăнастирĕнче Турра кĕлтунă. Земство соборĕн посольстви ăна çавăнта пырса патша пулса тăни çинчен пĕлтернĕ.

Раççейре чапа тухнă бояринăн Никита Романович Романăн пилĕк ывăл çитĕннĕ: Федор, Александр, Михаил, Иван тата Василий. Пурнăçĕн юлашки сехетĕнче вăл Годунова ывăлĕсен ашшĕ вырăнне пулма тархаслать. Чунĕ туртмасть пулин те патша Федорпа Александра боярин ячĕсем парать, Михаила окольничий тăвать, хăйĕн çывăх çыннине Иван Иванович Годунова вĕсен йăмăкне Иринăна качча илтерет.

Романовсемпе Годуновсен хирĕçтăрăвне Семен Годунов пуçласа янă. Вăл Романовсен казначейне хăй майлă çавăрнă та ăна курăк-тымар тултарнă хутаç парса ăна Александр Никитич кĕлетне вăрттăн кайса хума хушнă. Кайран кĕлете пырса тĕрĕслеççĕ те курăк-тымар хутаççине тупаççĕ. Патшана тухатласа вĕлересшĕн пулнă тесе Романовсене айăплама сăлтав тупăнать. Семен Годунов хĕтĕртнипе боярсен сучĕ Романовсене явап тыттармалла тăвать. Боярсен йышăнăвĕ 1601 çулхи çĕртме уйăхĕнче пурнăçланать.

Авалтан килекен сăмах тăрăх, Борис Годунов Ф.Н. Романăн (1619 çултанпа — Филарет патриархăн) хунямăшне (мăшăрĕн амăшне) Мария Шестовăна Улатăрти хĕрарăмсен мăнастирне яма шут тытать, анчах шухăшне улăштарать те Шупашкара ăсатать.

Шупашкарти мăнастирпе чиркӳ çинчен Введени соборĕн пупĕ, уезд училищинче Турă саккунне вĕрентекенĕ Андрей Кроковский çапла çырни сыхланса юлнă:

«Эпĕ тупнă документсем тата çыръннă кăтартусем тăрăх, Микула соборĕ малтан хĕрарăмсен мăнастирĕ пулнă... Турă çурчĕсене хăш çветтуя халалласа е хăш уяв тĕлне туса лартнине шута илсе ят парасси йăлана кĕнĕ пулин те Шупашкарти иккĕмĕш мăн чиркӳ Микулай соборĕ ята тивĕçнĕ... Владимирти Турă Амăшĕ ячĕпе туса лартнă пулин те. Асамлă

Микулай ячĕпе чиркĕвĕн сылтăм хĕрринчи хыçлăхне çеç тунă, кайран ăна П. Жуков купца çĕнетнĕ».

Çав пупăн тата çакнашкал çырса хăварни пур: «Асамлă Микулай чиркĕвĕн хыçлăхĕнче тупăксем лартма çĕр айне чавса тунă вырăн (склеп) пур. Унта икĕ вилтăпри. Пĕри тăпрапа пĕр шайра, тепри тăпра шайĕнчен хăпарарах тăрать, кăштах ишĕлнĕ ĕнтĕ. Çак вилтăприсем çинчен нумай тĕрлĕ сăмах çӳренĕ, халĕ те çӳрет. Пĕрисен сăмахĕсем тăрăх, кунта темле вайпутсене пытарнă, теприсем чиркӳ тăвакансене пытарнă тесе ĕнентересшĕн. Мана урăххи тĕрĕссĕн туйăнать: Федор Никитич Романовăн, Турă халалланă Раççей императорĕсен тĕп аслашшĕн хунямăшĕ Шестова дворянка ĕмĕрлĕхех канлĕх тупнă вилтăпри ку».

Хусанти тĕн академийĕн профессорĕ Иван Покровский «Казань и казанцы в истории воцарения Дома Романовых на русском царском престоле» статьяра çапла çырнă: «Марийăна Борис Годунов Шупашкарти хĕрарăмсен Микула мăнастирне янă, çакăнта ăна 1601 çулхи çĕртмен 2-мĕшĕнче манашкă туса хунă, унтан кунтах пытарнă. Михаил Федоровичăн кукамăшĕн, Федор Никитич Романовăн хунямăшĕ Мария Шестовăн (е Шестуновăн), çĕрми ӳчĕ ку таранччен упранать. Ăна ăçта пытарнине, ăçта хупса усранине Хусан епархийĕнчи Шупашкарта Микула соборĕн пĕр склепĕнче халĕ те кăтартаççĕ. Ĕлĕк унта хĕрарăмсен Микула мăнастирĕ пулнă, ăна 1764 çулта пăрахăçланă».

Историксем XVII ĕмĕрти çынсен ячĕсене пăтраштарнине асăрхатпăр. Пĕрисем Ф.Н. Романов хунямăшне Шестунова хушаматпа аса илеççĕ, Ксения Ивановнăна вара Филаретăн амăшĕ тесе ĕнентересшĕн. Андрей Кроковский йăнăшмасть: хĕрарăмсен Шупашкарти мăнастирне ирĕксĕрлесе янă дворянкăна Шестова хушаматпа кăтартать, унăн хĕрне Ксения Ивановнăна Ф.Н. Романовăн мăшăрĕ тесе палăртать. Чапа тухнă историк Н.М. Карамзин та Шупашкар манашкине Мария Шестова тесе кăтартнă.

Çакă çутă тĕнчере этем нумай та, çын сахал. Патшана лартмалли çын та тăруках тупăнмасть.

Романовсем XIV—XVI ĕмĕрсенчи боярсен йăхĕнчен. Вĕсен

тĕп аслашшĕ — Андрей Иванович Кобыла. Çак ратне XIV ĕмĕрччен Кошкин, XVI ĕмĕрте Захарьин хушаматпа çӳренĕ. 1613 çулта патша династийĕ, 1721 çулта император династийĕ пулса тăрать. Романовсен йăхĕнчен пĕрремĕш патша — Михаил Федорович, юлашки император — II Николай.

Раççейĕн малтанхи патши Михаил Романов (1596—1645) — Федор Никитич Романов боярин (вăлах Филарет патриарх) ывăлĕ. Амăшĕ, Ф.Н. Романов мăшăрĕ — Ксения Ивановна Шестова. Мария Шестова Михаил патшан кукамăшĕ пулать. Романовсен династийĕ патшара 304 çул ларнă. 2013 çулта династи 400 çул тултарать. Çак чаплă юбилей тĕлне Шупашкарта Мария Шестова ячĕпе часавай лартма шутлаççĕ.

Раççей патши хăйĕн кукамăшне манман. Ăна мăнастирте шыраса тупнă-тупнах. Анчах Мария пĕр хăнăхнă çĕртен Мускава таврăнма, шурă Шупашкарпа сывпуллашма килĕшмен теççĕ.

Пурнăç кирек камăн та пĕрре кăна. Унăн пуçламăшĕпе вĕçĕ пур. Вăхăт иртсе пынă май Мария Шестова манашкăн та пурнăç вĕçĕ курăнма пуçлать.

Çапла, çăмăл килмен Мария Шестовăн шăпи. Вăхăт шăвать, сехет çумне сехет, кун çумне кун хушăнать. Хуйхă-суйхă пĕччен çӳремест. Инкек хыççăн синкек килет. Ниепле те иртсе кайми типĕ ӳслĕк çывăрма памасть манашкăна. Марийăн пит çăмартисем путса кĕчĕç, пит çинчи йĕрĕсем тарăнланчĕç. Йывăррăн сывлакан пулса кайрĕ.

Кĕçех яланлăхах куçне хупать Мария. Вăл çут тĕнчерен лăпкăн-лăпкăн уйрăлса каять. Мухтав Турра! Сăваплă манашкăна мухтав!

Шестова хăçан вилни паллă мар. Историксем шутланă тăрăх, вăл пурнăçран 1631 çулта уйрăлнă. Апла пулсан вăл хăй пурнăçĕн вăтăр çулне Шупашкарти хĕрарăмсен мăнастирĕнче irттернĕ.

Ятлă-сумлă манашкăна хĕрарăмсен Микула мăнастирĕ çумĕнчи чиркĕвĕн хушма пайĕнче пытарнă. Мăнастире 1764 çулта хупнă. Никольский соборĕ 1928 çулччен ĕçленĕ. Собора тата ун çумĕнчи çурт-йĕре 1934 çулта тĕпĕ-йĕрĕпех салатнă.

Пирĕн пата çитнĕ документсем тăрăх, «Микула соборĕнче, унччен хĕрарăмсен Микулай мăнастирĕ пулнинче, халĕ чиперех патшара ларакан Романовсен çурчĕн амăшĕсенчен пĕрне Мария Шустовăна пытарнă».

Капла çырнинче икĕ тĕрĕсмарлăх асăрханать. Унта Мария Шустовăна мар, Мария Шестовăна пытарнă. Çав чыслă хĕрарăм патша амăшĕ мар, патша кукамăшĕ пулнă.

Документсенче çирĕпленсе юлнă тăрăх, Романовсен династийĕ 300 çул тултарасси умĕн 1913 çулта Шупашкар хулине Хусан кĕпĕрнаттăрĕ М.В. Стрижевский, Чистополь епископĕ Анастасий тата кĕпĕрне архитекторĕ килеççĕ, сăваплă манашкăн вилтăприне чавса уçаççĕ, каска тупăк кăлараççĕ. Вилнĕ хĕрарăм ӳтĕнчен мĕн юлнине çĕнĕ тупăка хураççĕ, çав вырăнтах пытараççĕ. Мĕн туни çинчен ятарласа акт çыраççĕ, ăна II Николая ярса параççĕ. Çапла майпа кĕпĕрнен сумлă комиссийĕ кунта Романовсен династийĕн пĕрремĕш патшин кукамăшне Мария Шестовăна чысласа пытарнине çирĕплетет.

Тĕрĕслев комиссийĕ акă мĕн-мĕн палăртать. Пĕрремĕшĕнчен, ят-сум енĕпе палăрса тăман манашкăсене чиркӳ тулашĕнче пытарнă, ку манашкăна вара чысласа, сума суса чиркӳре шалта, ятарласа чавса тунă вырăнта (склепра), ĕмĕрлĕхе канлĕх панă. Иккĕмĕшĕнчен, тупăкне юман каскан тăтăшла катраменчен тунă, икĕ хысаллă хупăпа витнĕ. Ун чухнехи тапхăрта чаплă йăхри çынсене кăна çавнашкал тупăксенче пытарнă. Виççĕмĕшĕнчен, тупăкри хĕрарăм сăн-сăпачĕн кĕрнеклĕхĕ те ку çын ятлă-сумлă пулнине çирĕплетет. Манашкăн ятарлă тумĕ чиперех сыхланса юлнă. Унăн çутă хăмăр çӳçне икĕ хулăн çивĕт туса пуçĕ тавра çавăрса çыхнă, сулахай алă лаппинче Турра кĕлтунă чухне усă курмалли шăрçасем упранса юлнă. Слюдан виçкĕтеслĕх евĕр темиçе пайрăшĕ мăйĕнчен усăннă. Çакă пĕчĕк турăшран е хĕресрен юлнă пулĕ.

Комисси членĕсем пĕрешкел пĕтĕмлетӳ тăваççĕ: çак склепра пытарнă хĕрарăм чăннипех те Раççейĕн Романовсен династийĕнчи пĕрремĕш патшан кукамăшĕ Мария Шестова пулни пирки иккĕленмелле мар.

Интернет сайтĕнче ку пулăм пирки çапла çырнă:

«Чăваш Енре Романовсен династийĕнчи пĕрремĕш патша кукамăшне асăнса часавай лартма хатĕрленеççĕ... Ун çинчен Чăваш Республикин Президенчĕ Николай Федоров 2008 çулхи утă уйăхĕн 9-мĕшĕнче республикăри Министрсен Кабинечĕн анлă ларăвĕнче хыпарларĕ. Унта депутатсем, хуласен тата районсен ертӳçисем, предприятисен пуçлăхĕсем пулчĕç. Федоров çакна палăртрĕ: часавая Раççей патшалăхĕн историне тата чысне хисеплесе тăваççĕ. Ăна туса лартассине Романовсен çурчĕ 400 çул тултарнипе çыхăнтараççĕ. Çакна 2013 çулта уявламалла пулать (пуш уйăхĕн 5-мĕшĕнче; кивĕ стиль тăрăх нарăсăн 21-мĕшĕнче). «Чăваш Енре Романовсен династийĕпе çыхăннă пĕртен-пĕр хаклă палăрăм упранать: ку вăл династин пĕрремĕш патшин кукамăшĕн Мария Шестовăн асран тухми, çĕрми ӳчĕ», — терĕ Федоров.

Шупашкарта çуртсене иртнĕ ĕмĕрсенче йывăçран тунă, çавна май вĕсем темиçе хут çунса кĕлленнĕ. 1755 çулхи çу уйăхĕнчи пушар хулан тĕп пайĕнчен нимĕн те хăварман. 1758 çулта 692 кил тата чиркӳсемпе хысна çурчĕсенчен пайтахăшĕ çунса кайнă. 1773 çулта каллех нимсĕр хăваракан пушар алхаснă. Шел пулин те, Мария Шестовăн пурнăçĕпе çыхăннă документсем çав пушарсенче упранса юлман.

Хĕрарăмсен Микула мăнастирĕ вырăнĕнче хальхи вăхăтра К.В. Иванов скверĕ.

Мĕн калани çумне çакна хушар. 2008 çулхи утă уйăхĕн 26-мĕшĕнче Шупашкара Раççейри Император çурчĕн пуçлăхĕ Аслă княгиня Мария Владимировна килсе кайрĕ. Вăл Мария Шестовăна пытарнă вырăна çитсе курчĕ. Аслă княгиня арçынсен сăваплă Троицки мăнастирне те кĕрсе тухрĕ. «Патша ывăлĕн Дмитрийĕн пурнăç çулĕ» тураша сĕртĕнчĕ.

*В.С. Эзенкин*
*ăсчахăн тĕпчевĕсем тăрăх хайланă.*

# Сайра тĕл пулакан сăмахсен словарĕ

**Алман** — хырçă, куланай.
**Алманч** — хырçă пуçтаракан, куланайçă.
**Багатур** — пăхаттир.
**Баскак** — хан чăвашран уйăрса лартнă пуçлăх.
**Даруга** — халăх пурăнакан ен, тăрăх.
**Еш** — йыш.
**Кан** — Атăлçи Пăлхар патши.
**Капмар, кепмер** — чаплă, пуян, мăнă.
**Кар** — тĕреклетнĕ хурал, хула, крепость.
**Карман** — хулаш, крепость, хӳтĕлев.
**Кăрал** — хĕç-пăшал, хастарлăх, вăрçăлăх.
**Кервен** — лайăх, тĕреклĕ.
**Кулан, куланай** — çĕршĕн памалли тӳлев.
**Кунак** — хăна.
**Курултай** — мăн канаш, аслă пуху.
**Кӳпе** — тимĕр кĕпе (кольчуга).
**Нукер** — салтак.
**Пайцза** — ятарлă тăмха.
**Пӳ** — çар пуçлăхĕ. Ёмпӳ тесе тĕм (тьма) пуçлăхне е патшана калать.
**Пӳлев** — юмăç.
**Пӳхӳ** — çар пусĕ вырнаçнă карман.
**Сĕнтĕр** — çирĕплетнĕ сăнав вырăнĕ.
**Су, сă** — тĕрĕк чĕлхисенче шыв пĕлтерĕшлĕ.
**Танкăр** — пăлхарсен турри.
**Тепер** — пуçлăх.
**Тĕкĕрçĕ** — ухăпа перекен.
**Тĕкĕрт** — отряд, эткер.
**Тик** (*перс сăмахĕ*) — хĕç.
**Тикеш** — хĕçлĕ йыш (*çын ячĕ*).
**Турул** — башня (Çулăмпи турулĕ).
**Хавха** (*халăх сăмахĕ*) — сас-хура, хыпар-хăнар.
**Хайман** — мăнă сăран кушел.
**Хулаш** — карман, крепость, хӳтĕлев.
**Хӳ** — хӳтĕ, хӳме, карман.
**Шупаш** — шыв пусĕ.
**Эл** — ял, çĕршыв, тăрăх.
**Эткер** — халăх хӳтĕлевçисен тĕкĕрчĕ.
**Эшкер** — çынсен ушкăнĕ, çар отрячĕ.
**Ямахат** — тĕкĕртри пысăк мар ушкăн.
**Ясак** — тупăшăн вуннăмĕш пайне тӳлемелли хырçă.

# Усă курнă тата вулама сĕннĕ литература

*Абайдаров Акпарс.* Авалхи чăваш хулисем. Шупашкар: «Пике» журнал б-ки, 1993.

*Айдаров С.* Башня Сююмбеки: буклет. Казань, 1964.

*Александров Д.А.* Алманч ялĕсен историйĕ. Красноармейски, 1995.

*Александров Д.А.* Алманч ялĕсен историйĕ. Иккĕмĕш кĕнеке. Красноармейски, 1999.

*Багадерова В.* Камай кам-ши? // Хыпар. 2010. Юпа, 23.

*Бушканец Е.Г.* Казань: путеводитель. Казань: Таткнигоиздат, 1964.

*Васильев В.* День города искал удобное время // Советская Чувашия. 2006. 24 августа.

*Димитриев В.Д.* XIV ĕмĕр вĕçĕнче тата XV ĕмĕр пуçламăшĕнче Атăлçи Пăлхар çĕрне çаратса тустарни // Хыпар. 1997. Çĕртме, 21.

*Димитриев В.Д.* Тутар-мишерсем Раççейре 550 çул пурăнаççĕ ĕнтĕ//Советская Чувашия. 2001. Çĕртме, 8.

*Димитриев В.Д.* Чăвашсен иртнĕ пурнăç шăпи тата наци аталанăвĕн паянхи çивĕч ыйтăвĕсем. Шупашкар: ЧПУ изд-ви, 2001.

*Зимин А.А., Хорошкевич А.Л.* Россия времен Ивана Грозного. М.: Наука, 1966, 1982.

*Иванов Л.И.* Чуваши: формирование этнографических групп и подгрупп (на территории Чувашии). Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2012.

*Каховский Б.* Сколько же лет Чебоксарам? // Чăваш тĕнчи. 2008. Юпа, 3.

*Кириллов Анатолий-Тикешри.* Чăваш историйĕн çĕнĕ чăнлăхĕсем // Хыпар. 2001. Çĕртме, 23.

*Кириллов А.* Тикешре сăваплă вырăн пулĕ // Хыпар. 2001. Чӳк, 10.

*Краснов Георгий, Желтухин Герман.* Пурнăç иккĕ килмест. Шупашкар: ЧПУ изд-ви, 1995.

*Кузин А.* С лошадиной силой // Российская газета. 2009. 9 июля. — 20 с.

*Кузнецов Г.* «Камай улăхĕ» уяв ытамĕнче // Хыпар. 2011. Çĕртме, 28.

*Липинский А.* Материалы для географии и статистики России. Симбирская губерния. СПб., 1886.

*Мадуров Ф.* Кто мы? // Молодой коммунист. 1990. 8 марта.

*Мареева Ю.* Çирĕп тымар — малашлăхăн çирĕп палли // Хыпар. 2009. Нарăс, 3.

*Мультиерсем Петӗр.* Халӑх ячӗ — XIII ӗмӗрте // Чӑваш тӗнчи. 2005. Юпа, 6.

*Неберинг В.* Ҫулӑмпи керменӗ// Хыпар. 2006. Пуш, 3.

*Никифоров А.* Миҫе ҫулта-ши Шупашкар? // Хыпар. 2005. Юпа, 25.

*Никифоров А.* В летописи упоминаются Чебоксары // Советская Чувашия. 2006. 18 января.

*Одюков И.И.* Авалхи тата Атӑлҫи пӑлхарсем ҫинчен калакан истори халапӗсем (I—XV ӗмӗрсем): вӗренӳ пособийӗ. Шупашкар: ЧПУ изд-ви, 1984. — 80 с.

*Тизенгаузен В.* Сборник материалов, относящихся к истории Золотой Орды. Пб., 1884.

Хӑнтӑрча тавращӗнче... Ялти шкул ачи авал Тимурпа Тохтамыш ҫапӑҫнӑ вырӑна тупнӑ // Хыпар. 2004. Ҫӗртме, 19. («Российская газета» хаҫатран кӗскетсе куҫарнӑ.)

Чӑваш сӑмахлӑхӗ: X класс валли кӑларнӑ кӗнеке. Шупашкар: Чӑваш кӗнеке изд-ви, 1993. — 223 с.

Чӑваш халӑх поэчӗ Н.И. Полоруссов-Шелепи. Шупашкар: Чӑваш АССР ӑслӑлӑх институчӗ, 1982.

Чӑн пысӑк мул//Ялав. 1998. 7№. 76—82 с.

Шурук йӑхӗ ял никӗслет. Аслӑ Пӑла тӑрӑхӗнче, ҫутӑ ҫӑлтӑрсен ялӗнче. Эпир Патӑрьел районӗнчи Чӑваш Ишекӗнче. Шупашкар: ЧПУ изд-ви, 2005. — 96—110 с.

*Юхма Мишши.* Упи ялӗсем пулса кайни // Ялав. 1994. 12 №.

*Юхма Мишши.* Сто великих болгар-чуваш. Чебоксары: Всечувашский общественно-культурный центр, 2004.

*Юхма Мишши.* Эпир — чӑвашсем... // Хыпар. 2012. Ака, 3.

# Тупмалли

Истори урхамахӗ малалла талпӑнать. *В.Д. Димитриев* . . . . . . 3

**Сӑваскар паттӑрӗсем: Сӑвас тата Нарпи** . . . . . . . . . . 6
**Пичке сӑртӗнче** . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 24
Артакпа килнӗ е вӑрҫӑпа? . . . . . . . . . . . . . . . —
Юрату ҫапла пуҫланать . . . . . . . . . . . . . . . . 28
Пӳлев тӗрӗсех каланӑ . . . . . . . . . . . . . . . . 33
Этеме кӑралпа кӑна пӑхӑнтараймастӑн . . . . . . . . . 35
Кӑнар вӑхӑтра килсе ҫитет . . . . . . . . . . . . . 41
Вырӑс — шанчӑклӑ тус . . . . . . . . . . . . . . . . 44
**Чӑваш Чиканӗпе чӗвӗл-чӗвӗл Чӗкеҫ** . . . . . . . . . . 50
**Алманчӑ паттӑрӗ** . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 62
**Хырла хӗрринче туслашнӑ** . . . . . . . . . . . . . . . 74
Ула вӑкӑр хыҫҫӑн . . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Кайӑк хур санӑн пултӑр! . . . . . . . . . . . . . . . 77
Пӗр туслашсан сивӗнес мар! . . . . . . . . . . . . . . 80
Икӗ тусӑн ик тӗрлӗ шӑпа . . . . . . . . . . . . . . . 82
**Камай ячӗ паян та асрах** . . . . . . . . . . . . . . . 84
Халап малалла, вӗҫне тухмаллах,
Хусана парӑнтармаллах! . . . . . . . . . . . . . . . . 86
Камай уйӗ — туслӑх кӗперӗ . . . . . . . . . . . . . . 89
**Ҫулӑмпи — ытараймӗ чӑваш пики** . . . . . . . . . . . 90
**Чӑн пысӑк мул** . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 98
**Таяпа тата Сарпи, Акташпа Элбану** . . . . . . . . . . 110
Вӗсем пӑлхар-чӑваш ятне ҫӳле ҫӗкленӗ . . . . . . . . —
**Патӑрьелсем паттӑрпа тӑван** . . . . . . . . . . . . . 118
**Кӗлӗм, Энтри тата Чӑрӑш** . . . . . . . . . . . . . . 136
**Йӗпреҫпе Шемек** . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 138
Каччӑпа хӗр мӗн ҫинчен юрлаҫҫӗ? . . . . . . . . . . . —
Шемек евчӗ ярать . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 143
Кирек ӑҫта кайсан та пӗр хӗвел . . . . . . . . . . . 147
Шывӗ сивӗ те — тути лайӑх . . . . . . . . . . . . . 150
**Турайпа Чӗкеҫ** . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 155
**Сӗт кӳлли** . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 166
**Асаматпа Илемпи** . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 175
**Эмир нумай калаҫмасть** . . . . . . . . . . . . . . . . 192
**Яман чури ял никӗслет** . . . . . . . . . . . . . . . . 208
**Шурук йӑхӗ ял никӗслет** . . . . . . . . . . . . . . . 215
**Патша йӑхӗнчи манашкӑ** . . . . . . . . . . . . . . . 226

*Сайра тӗл пулакан сӑмахсен словарӗ* . . . . . . . . . . 236
*Усӑ курнӑ тата вулама сӗннӗ литература* . . . . . . . 237

*Литературно-художественное издание*

Для детей среднего и старшего школьного возраста

**Тенюшев Иван Яковлевич**

# ПӐЛХАР-ЧӐВАШ ПАТТӐРӖСЕМ

# БОЛГАРО-ЧУВАШСКИЕ БОГАТЫРИ

**Исторические предания**

*На чувашском языке*

Редактор *В.В. Степанов*
Художник *П.Н. Сергеев*
Художественный редактор *И.Е. Калентьева*
Технический редактор *Е.Е. Фомина*
Корректоры *Н.Г. Герасимова, Е.П. Казакова, З.И. Гаврилова*
Компьютерная верстка *М.В. Филипповой*

12+ Информаци продукцийӗн палли (436 № ФЗ. 29.12.2010)
Знак информационной продукции
согласно ФЗ от 29.12.2010 г. №436–ФЗ.

Общероссийский классификатор продукции ОК 005-93—95 3003. Подписано к печати 28.01.13. Формат 70х90 1/16. Бумага офсетная. Гарнитура Школьная. Печать офсетная. Усл. печ. л. 17,55. Тираж 1000 экз. Заказ № К-10203. Изд. № 13.

ГУП Чувашской Республики «Чувашское книжное издательство»
Мининформполитики Чувашии, 428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13.
www.chuvbook.ru, e-mail: chuvbook@mail.ru, chuvbook@cap.ru
Тел./факс (8352) 28-85-51.
Отпечатано в ГУП Чувашской Республики
«ИПК «Чувашия» Мининформполитики Чувашии,
428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13.

Чӑваш кӗнеке издательстви